С 89
4-35996

Михаил Сунт



# ÇА ÇАПНĂ ЧУП

Национальная библиотека ЧР
4-035996

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Михаил Çунтал



# Аçа çапнă чух

Повеçсем
Калавсем
Юмахсем

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1997

Обязат' экз.
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

ББК 84 Чув 7-4
С 89

**Хаклӑ вулаканӑм,**

кӗнеке вуласа ларма вӑхӑт та ҫуккӑ пулӗ ӗнтӗ санӑн, ҫапах та алла илтӗн пулсан сентре ҫине тепӗр май ҫавӑрса ан хур эсӗ ӑна, унта кашни йӗркере аҫа ҫапнӑ чӑвашӑн чунӗ ҫырмари вутчуль пек пытанса упранать. Пӗрре кӑна сулса яр ҫулу ҫумне ҫапӑнтарса, ҫавӑнтах ҫулӑм сирпӗнсе тухать. Чӑваш ахальтен мар пуль пирӗн ӑшра вут ҫунать, ҫулӑм тухни курӑнмасть тет. Йывӑр пурнӑҫра ӳссе ҫитӗннӗ ҫын чӗрн вутчуль пек, чӑн та. Каҫса кайса савӑнма та, ҫав вӑхӑтрах ытлашши пит кулянма та пӗлместпӗр эпир. Сӑпайлӑ, тӳлек, пытанчӑк туйӑмлӑ чӑваш юрату ҫинчен те пит калаҫса каймасть. Хӑй юратӑвне чӑваш хӗрарӑмӗ ҫын сисмелле мар кӑтартса парать. Кулленхи ӗҫре-и унта, ҫипуҫне епле тӑхӑннипе-и е тата мӗнле те пулин урӑх мелпе, мӗнлине чӑннипе хӗрарӑм хӑй ҫеҫ пӗлет.

«Ҫула тухнӑ кун», «Турилкке ҫинчи чӗре» повеҫсенче амӑшӗпе ывӑлӗн пурнӑҫӗ. Амӑшӗ ачишӗн тем тума та хатӗр. Ҫавна пулах пуль ывӑлӗ ачаш та усал пулса ӳсет. Тӗнче пуласлӑхӗ, ман шутпа, хӗрарӑмран нумай килет тата вӑл епле ача ҫуратса ӳстернинчен те, паллах...

Пӗр пӗтӗмӗшле илсен, ку кӗнекери хайлавсем — автор ҫак пурнӑҫра хӑй мӗн курнӑ — ҫавсем. Енчен те манӑн аҫа ҫапнӑ чунӑм сире те ҫывӑх курӑнса кайсан эпӗ питӗ савӑннӑ пулӑттӑм.

*Автор*

ПРОВЕРЕНО
2010 21 СЕН 2017
Ч-35996
Национальная библиотека Чувашской Республики

С $\frac{4803710201 - 40}{М 136 (03) - 97}$ 35-97

ISBN 5-7670-0849-3
© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1997



# ПОВЕÇСЕМ

## Ашшĕпе амăшĕ

Чÿречерен сăрхăнса кĕнĕ каçхи сĕмлĕхре шуррăн курăнакан телефон сиксе чĕтренĕ пекех туйăнса кайрĕ килтисене.

— Алло, алло... анне!

— Эпĕ ку, аçу! Ăçтан шăнкăравлатăн?

— Хусантан. Эпир кайр...

— Алло, алло, Петĕр!

Çыхăну татăлчĕ. Пик-пик-пик! тенине пĕр вăхăт итлесе тăчĕ-тăчĕ те Дмитрий Петрович трубкине телефон çине хучĕ. Арăмĕ çине, вăл та чупса пынăччĕ, хĕрхенÿллĕн пăхса илчĕ.

— Автоматран пулмалла. Тен, вокзалтан, — лини татăлнăшăн хăй айăплă пек калаçрĕ ашшĕ.

— Ыйтмаллаччĕ! — тарăхнине пытараймарĕ ывăлĕпе калаçаймасăр юлнă Наталья Петровна.

— Татăлчĕ вĕт-ха. Телефонĕсем те пирĕн, хăвах пĕлен...

Чăнкăрр! янăраса кайрĕ çав самантра телефон. Карт! туртса илчĕ трубкăна хăй патне Наталья Петровна.

— Петяня, эсĕ? Ăçта илсе каяççĕ?

— Анне, эпĕ ку! Казахстан. ПВО. Васк...

Телефон каллех татăлчĕ. Аппарат умне пĕшкĕнерех тăнă арçынпа хĕрарăм вăл тепĕр хут сас парасса кĕтрĕç-кĕтрĕç — кĕтсе илеймерĕç. Шăнкăравламалли вăхăчĕ те тухрĕ пулас... поезд тапранса кайнă-и-ха, юлташĕсем васкатнă-и — пĕлме çук.

Ывăлĕ Совет Çарне ăçта кайни паллă пулни ашшĕпе амăшне лăплантарчĕ, иккĕшĕ те çăмăллăнрах сывласа ячĕç. Пĕр-пĕрин çине ÿпкелешсе те хĕрхенсе мар, савăнăçлăн та кăмăллăн пăхса ларчĕç диван çинче.

— Мĕн вăл ПВО тени? Парашютнăй-и?

— Тĕрме мар, амăшĕ, тĕрме мар, ан хăра! Противовоздушнăй тени вăл. Ракетчиксем, урăхла каласан.

— Хăрушă мар-и вăл?

— Кăмака çинче ларни мар ĕнтĕ, тепĕр тесен, унтан та ÿкме пулать.

Наталья Петровна тинех лăпланса çитрĕ. Чăн та, халĕ кăшт сывласа илме те юрать. Атту эрне каялла ниçта кайса кĕме çукчĕ вĕт. Повестка килчĕ те, пуçланчĕ тĕпĕртетӳ. Укçа, ăсатма килекен халăха хăналамалăх апат ăçтан тупмалла? Магазинсенче нимĕн те çук. Пасарта хаклă. Паллакансем те çук иçмасса. Петянăн юлташĕсем вара йышлă. Уйрăласса сиссе ĕнтĕ кашни кун килме пуçларĕç. Тăватшарăн-пилĕкшерĕн кĕре-кĕре тухаççĕ. Зала хупăнса ларсах тем пăшăл-пăшăл калаçаççĕ. «Тем курса ларас пур», — шухăшларĕ Наталья Петровна ун чухне.

Питĕ ыйтса пĕлес килет амăшĕн, алăк кутне пырса итлес кăмăл та пур. Ывăлĕнчен, вăл вăрçса тăкасран хăрать. Пулкаланă-ха ун пекки...

Кĕсйисене тĕрĕслесех тăнă. Ухтарнин усси те пур. Пĕрре шăрпăк, тепре пирус пачки тупнăччĕ. Пиçиххипе çапа-çапа хĕненĕччĕ ун чухне. Шкул ачи вĕт, мĕнле намăс мар сана табак туртма, экзаменсене хатĕрленмелле, мĕн минрететĕн пуçна — темтепĕр каласа пĕтернĕччĕ. Ара, вăтам шкул пĕтерсен института кĕме хатĕрлентĕр тенĕччĕ. Пулмарĕ. Кун хыççăн кун иртрĕ. Ача япăхлансах кайрĕ. Мĕн кăна туса пăхмарĕ пулĕ Наталья Петровна. Вăрçса та, хăваласа та, ӳкĕтлесе те пăхрĕ — усси пулмарĕ. «Чутах тĕрмене лекетчĕ вĕт. Ых! Çав ашшĕне пулах», — мăкăртатрĕ вăл. Упăшка ăçта-ха тесе ун-кун пăхкаларĕ те çывăрмалли пӳлĕме çăмăллăн утса кĕрсе кайрĕ. Дмитрий Петрович çывăрма майлашса кĕрсе выртнăччĕ ĕнтĕ. Яланхи йĕркепе алла кĕнеке тытнăччĕ.

— Мĕн каллех кĕнеке вуласа выртатăн çак эсĕ? Урăх ĕç çуким санăн? Чашăк-тирĕк çăвасчĕ хуть. Çиеççĕ те лартаççĕ, çиеççĕ те лартаççĕ. Мĕн эпĕ кунта сирĕн тарçă вырăнĕнче-им?

Тин кăна савăнăçлă калаçса ларакан арăмĕн кăмăлĕ мĕншĕн пăсăлнине Дмитрий Петрович пĕлеймерĕ, пĕлес те темерĕ. Вырăн çинчен кăштăртаткаласа тăчĕ те кухньăна кĕрсе кайрĕ. «Мĕнма çумалла мар вара, çăвас пулать, хăвах вараланă», — шухăшларĕ вăл чашăк-тирĕке тыткаланă май. Кун пекки пĕрре кăна пулман унпа. Пĕрре кăна тăман вăл çакăнта. Мĕн чухлĕ çĕрулми шуратнă, купăста, сухан туранă. Мĕн хушнă, çавна тунă. Кирлĕ чухне кĕпе-йĕм те, урай та çунă. Çук, пурпĕрех юраймарĕ вăл. Пурпĕрех çырлахмарĕ арăмĕ. Тем кĕтрĕ, тем тулашрĕ ун чунĕ. Такампа аташтарчĕ-ши? Тен, ăна питĕ ăста алăллă слесарь кирлĕ пулнă. Çурт-йĕр çавăрма ун пек çынпа пит лайăх. Дмитрий Петровичăн алли вара, ăна вăл хăй те пĕлет, ĕç патне пымасть. Мĕн тытать — тухса ӳкет, мĕн юсама тăрать — пăсăлать. Турă паманнине вăйпа илеймĕн. Тăрăшать-ха вăл, тăрăшмасть мар. Килти ĕçсене — лайăх-и, начар-и — туса пырать. Сантехник те вăл, электрик те, строитель те... Акă миçе çул çитрĕ-ха çĕнĕ хваттер илни? Виçĕ çул-и? Пырса кĕме

хăрушăччĕ вĕт. Стена тăршшĕпех тем пысăкăш çурăк, мачча панелĕ картлашкаллă, чӳречисем ванчăк, алăкĕсем хупăнмаççĕ. Шывĕ юхмасть, кухньăра сивĕ. Урамра вара ноябрь хуçаланатчĕ. Эх, тăрмашрĕç те вара. Савăнăçĕ те, хурлăхĕ те — пурте пĕрле пулчĕç. Çулталăк пуль аппаланчĕç. Мĕн кирлине пĕтĕмпех туса çитерчĕç. Яп-яка та тап-таса халь. Çитерессе çитерчĕç те çав вăхăтрах чи кирлине, ывăлне — Петяня тетчĕ амăшĕ — çухатмарĕç-и вĕсем? «Кансĕрлен», — тесе ăна пĕрмаях урама кăларса яратчĕç. Уроксем тума мар, лайăххăн ларса апат çиме те вăхăт пулман ун. Чиперех вĕренсе пыраканччĕ-ха вăл. Çиччĕмĕш класс таран ударникре те çӳрерĕ, шкул ĕçĕнчен те ютшăнмарĕ. Мĕн те пулин кирлĕ пулсан ыйтсах тăратчĕ.

...Хурăнсем тата. Епле ӳссе кайрĕç вĕсем. Дмитрий Петрович кухня чӳречинчен пăхса илчĕ. Тăвата хурăн лартрĕç вĕсем ывăлĕпе пĕрле. Акă епле ӳссе кайнă вĕсем! Çартан таврăннă çĕре виççĕмĕш хута çитеççех...

Хĕрарăм ĕçĕпе аппаланма хăнăхнă арçын кăштăртатрĕ те кăштăртатрĕ. Чашăк-тирĕке çуса типĕтсе хучĕ, сĕтелпе пукансене, газ плитине тусантан тасатса сăтăрса тухрĕ, унтан чей вĕретме лартса ячĕ.

«Таçта ĕнтĕ вăл, пирĕн Петĕр-çатăр, — шухăшларĕ Дмитрий Петрович чейник епле чашкăрма пуçланине пăхса ларнăçемĕн. Пырать пуль-ха поездпа. Ничаго, пĕччен мар».

— Амăшĕ, чей ĕçме кил, — сас пачĕ вăл кăмăлĕ таврăннă пек пулсан.

— Çĕлесе пĕтерем-ха!

— Мĕн çĕлен вара?

— Михĕ. Посылка валли.

— Пар, пулăшам!

Арăмĕ çапла ывăлĕ салтака кайнă-кайман посылка хатĕрлеме пуçланинчен упăшки тĕлĕнмерĕ. Алă çинче йăтса çӳременни кăначчĕ ĕнтĕ килте чухне, халĕ пушшех. Çĕлесе пĕтерсен сĕтел хушшине ларчĕç. Вĕре-вĕре вĕри чей ĕçрĕç. Чĕнмерĕç, иккĕшĕ те пĕр шухăшпа асапланчĕç.

— Халь, Петĕр килте пулнă пулсан, кунта чей ĕçсе ларман пулăттăн-ха эсĕ. Çĕр чавтарсах ывăлна шыраса хула тăрăх чупăттăн. Кĕмен шăтăк хăвармăттăн, — те мухтаса, те питлесе илчĕ Дмитрий Петрович, чăтаймарĕ курăнать.

— Эс, паллах, ним пулман пек, кĕнеке вуласа выртнă пулăттăн. Мĕнле чунпа тулькkă?

— Ывăлна хула тăрăх йытта тенĕ пек хăваласа çӳрени те... илемлех мар. Мĕн чухлĕ каланă пулĕ сана! Ун пек тунин усси çук тесе мĕн чул вăрçнă!

— Эс калани! Мĕн эс, милици-и, учитель-и! Кам эс? Никам та мар! Кĕнеке вуласа выртакан, акă кам!

— Эсĕ ху кам вара, пĕлӳç-и? Пурне те пĕлен.

— Эпĕ амăшĕ.

— Амăшĕ-ĕ-ĕ! Ачи те пур-и вара ун, çав а-а-амăшĕн? Мĕнма вара ун ывăлĕ пĕр сăмах та итлемест, ĕçлемест, вĕренмест, киле те килмест тата. Амăшĕ те пур-и вара çав ачан? Тĕлĕнтеретĕн те... амăшĕ мар эсĕ, тамашĕ!

— Эс ашшĕ пуль? Ашшĕ пулсан ма тыткаламарăн хытăрах. Пĕр сăмах та каламарăн вĕт.

— Сăмахпа ăса кĕртеймĕн. Хăвăн тĕрĕс пурăнмалла. Ан вăрла, анултала, ан суй... И все!

— Ну, ну, ну!

— Вăт сана ну! Ашшĕпе вăрçакан амăшĕ ачине те телей кӳмест.

— Хăçан вăрçнă вара сана?

— Хăçан-хăçан? Пĕрмаях вăрçатăн эсĕ, сисетĕп. Пĕринче мĕн каларăн, астăватăн-и?

— Мĕн вара?

— Эс вилсенех кĕнеке те хăвармастăп, пĕтĕмпех кăларса пăрахатăп терĕн.

— Эс, Митяй, ан суй. Пулман ун пекки. Эп ун пек каламан.

— Каланă çав.

Арăмĕ чĕнмерĕ. Калаçу çапла чĕрре кĕрсе кайма тытăнсан вăл, чеескер, çăвара шыв сыпать те темле йывăр лару-тăруран та хăтăлса тухать. Митяй тет тата! Тепĕр чух пĕр сехет кăна мар, талăкĕпех чĕнмест. Халĕ те акă тутине тăп тытнă. Куçĕ сивĕ-сивĕ. Пырса ан кĕр. Пĕр сас та кăлармасть. Кушак пек. Шăшийĕ вара кам!

Дмитрий Петрович кулса ячĕ. Кулăшла терĕ-ши? Çук пулĕ. Ăна та тăвăр, ăна та йывăр. Ывăлĕ лайăх вĕренсе пыманшăн вăл та айăплă. Тăван чĕлхесĕр, кĕнекесĕр ӳсрĕ. Ни калаçма, ни вулама... Телевизор тесен вара каççах каятчĕ. Амăшĕ те! Питĕ кăмăллă, питĕ çăмăл вăл экран çинчен куç илмесĕр пăхса ларма. Ĕçрен килен те килте ĕç çук пек, çемçе кресло çине персе анатăн, аппарата хута яратăн. Алли те хăех пырать вĕт! Чисти чир! Кĕрешсе те пăхнă унпа Дмитрий Петрович. Пĕрмай пăхсан куç вăйсăрланать тесе те хăратнă. Ăçта унта? Пĕр виçĕ-тăватă кун тытăнса тăнă-и, çук-и — каллех кĕрлеттернĕ. Çур çĕрччен, мĕн йăванса кайиччен ларнă.

Ыйхăпа супнă сăнсене сенкер çутă темле улăштарса кăтартнă, хăлхана ютă сасă хупласа тăнă, хăрушă вырăнсенче алă-урана хутлатсах лартнă, чăмласа панă идейăсене çăта-çăта ухмаха тухнă, хăв камне те, мĕн тăвас тенине те йăлт маннă.

Çавă аса килчĕ халĕ кухньăра чей ĕçсе ларакана. Чашăктирĕкпе аппаланнăçемĕн хĕрарăмлансах кайнă-ши вара вăл? Кама кӳренсе ларнă вăл?

...Чăваш кĕнекине ача аллинчен туртса илсе çавăрса çапни те пулнă. Мĕнле-ха вăл çапла хăтланма пултарнă? «Инженер», — тесе те мăшкăллатчĕ. Ку мĕне пĕлтернĕ-ши? Укçи сахал ĕнтĕ, чăнах та. Укçи çук та — ăсĕ пур. «Рабочи, рабочи!» — терĕ. Хăй кантурта ларать-ха. Тухса пăхасчĕ пĕрре стройкăна — апла каламĕччĕ. Сăмахĕ вара кунĕн-çĕрĕн янăрарĕ, юна кĕчĕ. Акă халĕ пыр та кур. Вĕренме кирлĕ мар терĕ ачи те. Вунтăххăра çитсе те кĕнеке тытса курмарĕ. Вунă класс пĕтерчĕ. Ни института кĕреймерĕ, ни ĕçе вырнаçаймарĕ. Çул çитмен терĕç. Çу тăршшĕпех йытă хăваларĕç вара: пĕри тарать, тепри хăвалать. Вăт сана рабочи! Рабочи пулма та талант кирлĕ çав. Ал пымасан хăлăп та лартаймăн. Заводра вара тем тума та тивет...

Шари-и çухăрса ячĕç çав вăхăтра урамра. Унтан тем кĕмсĕртетни, хăвăрт чупни, усал сăмахсемпе вăрçса тăкни илтĕнсе кайрĕ. Дмитрий Петровичпа Наталья Петровна иккĕшĕ те пĕр харăс ура çине сиксе тăрса чӳрече умне ыткăнчĕç. Хулара темле вулкан вăраннă тейĕн. Урамсем тăрăх хуп-хура лава пек лăк-тулли халăх чупать. Кашнин аллинче мĕнле те пулин патак е кирпĕч. Вăхăт-вăхăтран хăрушшăн кăшкăрса яраççĕ хăйсем, çул çинче кама тĕл пулнă, çавна çапа-çапа пăрахаççĕ. Тарма пăхакансене хыçалтан хăваласа çитсе тӳпелеççĕ. Унччен те пулмарĕ — милици машинисен тĕрлĕ тĕслĕ çути, сирена улани илтĕнсе-курăнса кайрĕ. Акă вĕсем пĕр ушкăн ачана çавăрса илчĕç те ярса илнисене машина ăшне пеме тытăнчĕç.

Чӳречерен пăхса тăракансем хăраса ӳкрĕç. Вĕсен ывăлĕ те çак тытăçура пек. Ăна та таптаса кайрĕ пек çакă хура лава.

— Пăх-ха, пăх! Игорь мар пулĕ те çав?

— Ăçта?

— Петяня юлташĕ вĕт-ха! Курмастăн-им?

— Ха, парăнмасть...

Икĕ милиционерпа кĕрешекен Игорь çав вăхăтра тепĕр мел шыраса тупрĕ. Парăннă пек пулса хăйне машина патне сĕтĕрттерсе пыртарчĕ, унтан сасартăк çĕкленсе илчĕ те кузовран икĕ урипе харăс тапса ячĕ. Кăна кĕтменскерсем ачапа пĕрле асфальт çине ыткăнса кайрĕç, меллĕрех ӳкес тесе аллисене вĕçертрĕç. Шухă каччăна çакă кирлĕ пулчĕ те. Вăшт! тăчĕ те айккинелле мулкач пек якăлт! сикрĕ. Сикессе сикрĕ те, анчах çавăнтах тепĕр çын ытамне кĕрсе ӳкрĕ. «Валамов сержант аллинчен вара вĕçерĕнеймĕн!» — каласа хучĕ хайхи. Игоре вăл пĕчĕк ачана çĕклесе илнĕ пек çĕклесе илчĕ те кузов ăшне вăркăнтарчĕ. Каялла тухма памарĕç. Машина тапранса кайрĕ.

— Ах, турă çырлахтăрах! Игорĕн те çак кунсенче салтака каймаллаччĕ вĕт-ха! Повестка панă терĕç. Халĕ акă...

— Ничаго, ыранччен тытаççĕ те кăларса яраççĕ. Пĕрремĕш

хут мар. Мĕн эс çын ачишĕн пăшăрханса тăратăн? Манса кайрăн-им хăв епле мăшкăл тӳснине?

— Эпĕ курнине курма турă ан хуштăр. Ывăлпа упăшка пур çĕртех тăлăха юлтăм. Пĕри кайрĕ, тепри, юнашар тăрать пулсан та, ют. «Куккукран чăпар кайăк çук, тăлăхран хурлăхлă çын çук», — тенĕ.

— Ан кулян, Петровна. Упăшка пур хĕрарăм упаран та хăраман тет.

— Каларăн та, упа курсан — эсĕ ху та урăх. Шăнкăравлас пуль Игорьсем патне. Амăшне шел.

— Шуйттан ачисем мар-и вĕсем. Пĕлтерес пулать ĕнтĕ. Игорех пулчĕ пулмалла.

— Час ыйтса пĕлетпĕр, — Наталья Петровна телефон дискне çавăрма тытăнчĕ. Вăрăммăн пиклетнисĕр пуçне трубкăра урăх нимĕн те илтĕнмерĕ. — Çук пулас. Чупса кайса килем-и?

— Лар кутна хĕссе. Пуçа пур çĕре чикмесен те юрать ăна. Сансăр пуçне пĕлекен çук пек.

— Эсĕ хуть те тем шутла та, çав урамра чупса çӳрекенсем хамăн ачасем пекех туйăнаççĕ мана. Те çапса пăрахас пур Игорьне те.

— Хăвна çапса пăрахĕç. Курмастăн-им, никама та уяса тăмаççĕ. Эсĕ тухса кайсан, мĕн, ман саншăн пăшăрханса лармалла тетĕн-и? Неччу унта урам тăрăх чупса çӳреме. Çитмест-им?

Çак сăмахсемпе Дмитрий Петрович арăмне пилĕкĕнчен ыталаса илчĕ те спальнăна уттарса кайрĕ. Паппа тума вăхăт текелесе те илчĕ. Наталья Петровна хирĕçлемерĕ. Çук, парăнмарĕ-ха вăл. Ним тума аптраса выртрĕ кăна. Упăшки вара, çĕнтертĕм терĕ-ши, шăхăркаласа ваннăйне кĕрсе çухалчĕ. Питне-куçне çукаларĕ пулас та арăмĕпе юнашар пырса тăчĕ. Выртас тесе утиялне сирнĕччĕ кăна, сисмерĕ те, пăнкăлт! çеç тухса ӳкрĕ урайне. Кам тĕртсе янине те ăнкарса илеймерĕ-ха вăл. «Мур япали, мĕне пĕлтерчĕ ку?» — чашкăрса хăпарчĕ çилĕ. Хăпарса çитеймерĕ, пăшăл-пăшăл туса хăмпи шăтрĕ-и, пĕтрĕ. Урайĕнче çапла йăванса выртни кулăшла пек туйăнчĕ ăна. «Мĕн çилленмелли пултăр. Ывăнсан кун пек кăна мар кăшкăрса пăрахаканччĕ-ха. Диван çинче те лайăх», — Дмитрий Петрович чĕнмерĕ, пĕр сăмах каламасăрах хăйĕн çитарне ярса илчĕ те зала лаплаттарса тухса кайрĕ.

Арăмĕ епле куçпа пăхса выртса юлнине те, ăшĕнче мĕнле сăмахсемпе вăрçнине те пĕлмерĕ вăл. Савăнчĕ кăна. «Выртăтăр-ха пĕччен. Асаплантăр», — терĕ.

Чăн та, Наталья Петровна хăй мĕншĕн çапла хăтланнине сиссе ăнлансах çитеймерĕ. Ун пек тăвас теменччĕ вăл! Пуçра та пулман. «Мĕн туса хутăм? Мĕн эп?» — ӳкĕнчĕ вăл.

Ывăлĕ çула тухнă кун çапла хирĕçсе каясса, паллах, шутламан та. Сăлтавĕ те çук. Йĕркеллĕ, таса, кăмăллă пурăннă вĕсем ку таранччен. Пĕр усал сăмах каласа курман. Калас килни те пулман мар-тăр. Ывăлĕнчен вăтаннă. Ял ачисем вĕт, ялта ӳссе çитĕннĕ... Çук, Петровсем çынна култармĕç. Ахальтен мар виç хут Петĕр вĕт. Петĕрсен ачисем — хăй те, упăшки те. Ачи те Петĕр...

Ăш вĕçсен çапла вăл, шухăш хыççăн шухăш. Тем пек сывăрса каяс тесен те çывăрса каяймастăн вара, çаврăнкалатăн та çаврăнкалатăн вырăн çинче. Ăçта кăна çитсе тухмастăн шухăшпа. Наталья Петровнăпа та çавăн майлă килсе тухрĕ. Малтан ăна Петяня шкулта вĕренни аса килчĕ.

«Епле савăк вăхăтчĕ.« Тăваттă», «пиллĕк» паллăсем кăначчĕ вĕт дневникре. Тем пулчĕ кайран? Елена Александровна вĕсен класс руководителĕччĕ. Пĕрре килсе каларĕ, тепре... Чăтса тăраймарăм — пиçиххи тытрăм. Кӳтсе çитнĕ чунăма кантарам терĕм-ши. Çавăн хыççăн ача писрĕ. Шкултан килетчĕ те вăшт! кăна тухса вĕçетчĕ урама. Чарма та çук. Кунĕпе вĕренсе пуçĕ те минретчĕ пулĕ те-ха? Тухса каять те уçăлма тесе киле килсе те курăнмасть. Хуть те ăçта кайса кĕр, хуть темĕн шутла ун пек чухне. Тухса шыранисем те пулнă. Пĕрре кăна мар вăрçнă, хăлхаран пăрнă, хĕненĕ те. Такки парăнмарĕ, хăй мĕн тăвассине такки турĕ. Хам та çав! Кӳренсе лартнă та хамăн айăпа туймасăр-пĕлмесĕр пурăнтăм. Упăшка чарнине те пăхмарăм, шăмарсах кайрăм. Халĕ вара вăйпа вĕрентĕн? Ăçта унта! Ачи футбола çӳретчĕ. Уншăн мĕн чул тарăхрăм пуль? Ухмах вĕт эпĕ, ухмахран та ухмах», — вăрçрĕ хăйне хăй Наталья Петровна. Вĕриленсех çитнĕ çитарне тепĕр майлă çавăрса хучĕ, утиялне тапса ячĕ те лăпланнă пек пулса каллех тĕлĕрме тытăнчĕ. Çывăри-çывăрми выртнă хушăра тем тĕрлĕ шухăш та пырса кĕрет пуçа. Йĕркелесе кăна пыр. Митяй çав, пĕрмай хирĕç. Хăйĕншĕн кăна! Ним те тумасть вĕт кил хушшинче! «Çĕрулми шурат», — тетĕп. Шуратмасть. «Урай çу», — тетĕп. Çумасть. Ман ăçтан ĕлкĕрсе пымалла-ха? Апатне те пĕçермелле, кĕпине те çумалла, магазинне те чупмалла... Япали пулсан юрĕччĕ-ха хуть. Ĕçлен-ĕçлен, çиме вăхăт çитсен пӳрне ĕмен. Ăçта пыран — дефицит. Тата блат. Юрать инке пур. Вăл пулмасан тахçанах выçса вилмелле. Пичче хăш чухне мĕн те пулин тупса парать. Вĕсен завод территорийĕнче тем те сутаççĕ. Пире те леккелет çавăнтан. Аптрамастпăр. Юр-варĕ вăл çук мар-ха, çителĕклех! Тупасси кăна. Талон йăтса чупса çӳретĕн вара хула тăрăх. Чупатăн, чупатăн — урасăр тăрса юлатăн. Тăхăнмалли те çук. Атă халĕ те тупса илеймерĕм вĕт. Кĕркунне те çитрĕ, хĕл те ларчĕ... Эп — атăсăр! Çитмен пасар хăвармарăм пулĕ. Магазинĕ çинчен калаçмастпăр та. Çынна ĕретлĕ япала унта нихăçан та пулса

курман. Кооперативсем асса кайрĕç, ах турах! Пĕтĕм япала çавăнта каять теççĕ. Хакĕ вара? Хитре атă икçĕр тенке яхăн. Пуçа килсен пушмак тенĕ евĕр, ниçта та кайса кĕрейместĕн, илетĕн те яратăн. Пурри пуçтарать, çукки çарататать. Чуна хытаратăн та пасара çул такăрлататăн. Майра пек пуçа каçăртса пыратăн. Кĕсьери укçи тăрна пек кăшкăрать. Çухатасран та, çаратасран та, япăх атă лекесрен те хăратăн. Мĕн кăна курмастăн пуль кун каçа, кам кăна килсе пăчăртамасть пуль чунна? Ах турух! Çавăн майлă, ни унталла, ни кунталла иртсе каять ĕнтĕ манăн ĕмĕрĕм. «Ним те пĕлместĕн!» — тесе вăрçать Митяй. Ăçтан пĕлĕн? Кĕнеке мар, хаçат вулама та вăхăт çук. Ачи те... ăшăрхантарсах тăратчĕ. Пĕтĕм шухăш ун çинчеччĕ. Вăл килте çук чух ал пыран ĕç те ăнмасть. Мĕн калăн, хамăн пурнăçпа мар, ывăлăннипе пурăннă. Улпут вăл пĕр килсен темле те пăхăнтарать. Тĕпĕртетрĕмĕр, кускаларăмăр ун тавра. Чир-чĕрĕ тата? Çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупман. Ыйхă çăмăлччĕ ман. Ӳсĕрес-тăвас пулсан яшт! çеç сиксе тăраттăмччĕ. Митяй çывăратчĕ. Вăл илтет-и вара? Хыт хăлха! Ясли те çукчĕ. Садикне кайран кăна пачĕç. Юрать хваттерпе ăнчĕ. Мĕн чухлĕ çын, çемье асапланаççĕ? Пуçĕсене ниçта та пырса чикме çук пуль çав, хваттер янăшăн уйăхра аллă тенке яхăн тӳлеççĕ. Урамра выртса тăраймастăн вĕт, тӳлен. Эпир çамрăкрах чух ун пек марччĕ. Пирĕн ура çине те ĕне пусман мар, паллах. Çырмараччĕ, астăватăп. Ни анма, ни улăхма. «Шанхай» теттĕмĕр. Хура-шурра чылай кăтартрĕ вăл. Пĕтеретпĕр тетчĕç. Пăхатăп та — пирĕн хыççăнхисем те çаплипех упаленеççĕ. Пурăнасшăн, мурилесшĕсем! Тем хăвалать вĕсене ялтан? Кермен пӳрчĕсене пăрахсах çырма тĕпне куçса килеççĕ. Мунча евĕр çурт лартаççĕ те пуçлаççĕ пурăнма. Хула çынни теççĕ хăйсене тата! Хамăр та çапла турăмăр мар-и-ха? Кур та тăр. Мĕн пуррине йăлт çухатрăмăр. Ырă кăмăллă атти-анни пурччĕ пирĕн, тăван пекех çывăх ял-йыш çумраччĕ, ăçта вĕсем халь? Турă хушнă пуль пĕр çуралсан вилме. Ватă çын ретлĕ тумалла-çке ăна та! Йĕм тĕп çĕре лекиччен çӳрекен пулмарĕ те. Вăхăт çитмесĕрех автан сассисĕр яла пурăнма куçрĕç. Тăр-ха, тăр! Автанĕ кунта та авăтмасть-иç? Пире те ăсатрĕç мар-и автан сассисĕр хулана. Епле хуçăлса юлчĕç пулĕ тăвансенĕн чунĕсем, епле йĕчĕç пулĕ? Пăхха, тахçан чунсăр пулни чул кăларать. Петяня та çаплах турĕ вĕт! Ашшĕ те, амăшĕ те кирлĕ мар. Юлташĕсем тесен юрĕ! Эрех, сăра, пирус тесен тата лайăхрах! Ывăл ман киле анкă-минкĕ тавăрăннине пĕрре кăна мар асăрхарăм-ха. Кĕнĕ-кĕмен пĕр сăмах чĕнмесĕр вырăн ăшне чăматчĕ. Тем ĕçнĕ пуль тетчĕ ашшĕ. Мур пĕлет? Темле хытарса ыйтсан та — чăнне пĕлеймерĕмĕр. Ушкуйниксемпе явăçса кайнă пулех. Хăйсем епле пурăнни çинчен калама юрамасть тет вĕсен. Камран-мĕнрен сас-хура тухас-тăвас пулсан — лекет. «Козел» теççĕ. Питĕ хытă хĕнеççĕ. Пĕрре кăна

мар ватса ячĕç пулмалла халĕ те. Пĕр-икĕ эрне кăн-кăвак çӳрерĕ. Кам çапла хĕнеме хăйнă-ши? Пĕлес-тăвас пулсан никама та шеллесе тăмăттăм. Тĕрмене хуптараттăмах! Кайран кăна тухрĕ сăмахĕ. Кăнтăртисем кусенчен кашнинчен вунă тенкĕ ыйтнă тет, агрегаткăрисем килĕшмен. Туса пачĕç те çав! Мĕншĕн вара пирĕн ачасен практикăна трактор заводне çӳремелле пулчĕ. Çывăхра çук-им? Хамăр хутшăннă-вăрçăннă хыççăн тин пĕр учитель уйăрса пачĕç. Ушкăнпа çӳреме тытăнчĕç. Лешсем те ухмах мар, тытрĕç-тытрĕçех. Завода кĕрсе ярса илчĕç. Пирĕнне тивеймен, турра шĕкĕр. «Футбол, футбол, футбол», — тетчĕ. Акă кирлĕ пулчĕ те. Ахалех вăрçнă-мĕн. Тек тивместĕп ĕнтĕ. Службăран чипер таврăнтăр кăна. Мĕн кирлĕ, пĕтĕмпех илсе паратăп. Вăйпа та пулин хăратса тăтăр çав шуйттансене. Ашшĕ пек ан пултăр...

Дмитрий Петрович та ачипех аташса выртрĕ. Арăмĕпе вăрçса кайни аса килчĕ ăна. Аса килчĕ кăна, каллех вĕриленсе кайрĕ.

«Мĕне пула вăрçса кайрăмăр çак? Мĕн каларĕ вăл мана, нимĕн те астумастăп. Ялан çапла. Тутине çăт тытать те çӳрет вара таплаттарса, пĕр сасă та кăлармасть. Пурпĕрех илтĕнет! Хусканăвĕпе те, куçĕпе те — тем те калать пек. Куçĕ кăвак пăр. Пăхма та... Ача чухне кĕркуннепе пăр ларсан шыв ăшĕнче мĕн пулса иртнине пĕве çинчен пăхса выртма юрататтăм. Пулăсем ним хăрамасăр ишсе иртетчĕç, шыв курăкĕ юхăмпа вылянатчĕ... лăпкăччĕ. Арăм куçĕнчен пăхма вара хăрушă. Темле айăп туятăн. Ывăл пиркиех пуль? Арăм-парăм тесе мар ĕнтĕ.

Эх, мăнтарăн ачисем те çав! Пур енчен те пурте хĕстереççĕ вĕсене. Килте вăрçаççĕ, урамра хĕнеççĕ, шкулта хытараççĕ... милиционерĕсем те халь-халь тытса кайма хатĕр тăраççĕ. Халăхĕ те çав: пĕрисен шухăшĕпе, урамра çапкаланса çӳрекенсене пурне те персе пăрахмалла имĕш. Хаçатра пĕрре кăна мар çырчĕç. Теприсем тĕрмепе хăратма пăрахмалла теççĕ. Ачасене ирĕклĕ аталанма кирлĕ таран хутлăх çуккине палăртаççĕ. Çавна пулах пур-çук театрĕсемпе дискотекисене пайласа пĕтерчĕç. Тăшмансем пулса тăчĕç. Территоришĕн çапăçаççĕ халĕ! Пурнăç-и вара вăл? Ăна пуçлăхсем хăйсемех йĕркелесе ячĕç пулмалла, тĕрĕссипе каласан. Хулана районсене уйăрма тăхтамаллаччĕ. Кашни районăн хăйĕн пулмалла-мĕн, вĕсен шухăшĕпе. Кинотеатрĕ те, диско та, видео та...

Пĕр-пĕрин патне ан çӳреччĕр тесе турĕç пулĕ те-ха, пурнăçра вара пачах урăхла килсе тухрĕ. Ăнсăртран кам та пулин агрегаткăна килсе тухрĕ тĕк — лекет. Лешсем те кĕртмеççĕ. Пуçланать вара кĕрешӳ! Ни автобуспа, ни çуран, ни хĕр ăсатма, ни тăвансем патне кайма çук. Вĕренме кĕме те çук. Аслă шкулсене те уйăрса пĕтернĕ, мурилесшĕсем!

Кам айăплă? Çав вунтăватă-вунпилĕк çулхи ачасем е ашшĕ-амăшĕ! Тен, урăх вăйсем те хутшăнаççĕ çак кĕрешĕве?» — тупсăмне ниепле те тупаймарĕ Дмитрий Петрович. Çав пăшăрханулла шухăшсемпех тĕлĕрсе кайрĕ.

«Вăл — ача. Шăп та лăп вунçиччĕре. Шкултан таврăннă та урок туса ларать. Темле теоремăсем, конгруэнтнăçсем... Тем пек тăрăшсан та пуçа кĕмест. Ларчĕ-ларчĕ те ача урама чупса тухрĕ.

Унта ăна кăна кĕтнĕ тейĕн. «Митяй та Митяй», — теççĕ. «Октябрь» кинотеатр умне хурала кайма хушаççĕ. Мĕн тăвас тетĕн, итлемесен самантрах ĕнсе чикки лекет, каймах тивет. Пĕлет-ха вăл, ютсем те пырса тухма пултараççĕ. «Ăçтан? Камсем? Хăш районтан?» — ыйтусем парса хăшкăлатăн вара. Хăш чухне хăваласа та яратăн. Пĕччен мар, паллах. Паян Угорь, Сега, Гол тухнă. Пурте спортсменсем. «Кăнтăртисене хăйсем ăçта пурăннине ним те мар кăтартса яратпăр», — хăпартланаççĕ вĕсем. Пирус хыççăн пирус мăкăрлантараççĕ. Çапла килсе тухрĕ те. Тăваттăн çĕмĕрттерсе пыраççĕ. «Как три мушкетера» кино курма килеççĕ. Мĕн, хăйсен çук-им?

Ачасем ют ушкăн çине сиксе ўкрĕç. Кăтартатпăр эпир сире «Три мушкетера», эпир хамăр мушкетерсем! теççĕ пек. Çĕнтересси-мĕнни пулмарĕ, паллах. Милици килсе тулчĕ. Кăптăр-каптăр пуçтарса кайрĕç.

«Мĕн тăвĕç ĕнтĕ манпа? Мĕн калĕç аттепе анне, Елена Александровна?» — пĕтнĕ çын пек пăшăрханчĕ Митяй. Темле тем пысăкăш тĕрмене хупса лартнă пек хăйсене. Персе пăрахма хатĕрленеççĕ пек. Митяй юлташĕсемпе сывпуллашрĕ... Унччен те пулмарĕ, камера алăкĕ хўрине хĕстернĕ кушак евĕр çухăрса уçăлса кайрĕ. Унта...»

Дмитрий Петрович шартах вăранса сиксе тăрса ларчĕ. Тĕлĕкре иккен! Петĕр мĕн тўснине тўссе курчĕ вĕт. Вăт япала! А, мĕнле каяс килместчĕ хурала, епле кичемччĕ, епле пĕчченччĕ вăл çав ушкăнра. Хўтлĕх шырасах пуль, юлташĕсемпе шўтлерĕ ун чухне, харсăрланчĕ. Арăслан пек çапăçрĕ. «Ну, Митяня-Петяня, — кулкаласа илчĕ Дмитрий Петрович тĕлĕке аса илкеленĕçемĕн. — Ĕне ури таптарĕ-и? Кулач çитерчĕç-и?»

Ывăлĕн пурнăçĕ епле йывăр пулнине тин туйса илчĕ ашшĕ. Ыйхă тахçанах вĕçсе кайнă ĕнтĕ ун. Диван çинче пăхкаласа ларчĕ-ларчĕ те ват çын пек кăштăртаткаласа спальнăна кĕрсе çухалчĕ.

— Мĕн, шăнса кайрăн-им?

Выртма тесе урине çĕкленĕ арçын шаках хытса тăчĕ. Арăмĕ те çывăрмасть иккен.

— Тĕлĕкпе супса пĕтрĕм те. Эс мĕн тата?

— Ывăл пуçран тухмасть. Урамри пăтăрмах чуна пăлхатса ячĕ пулмалла та, ниепле те лăпланса çитейместĕп.

— Ан пăшăрхан. Пирĕн ывăл милици аллине лекес çук текех. Астăватăн-и Валамов сержанта? Мĕнле пăхса тăрса юлчĕ вăл?

— Çисе яратчĕ пуль. «Татах лекен, асту!» — тет. Манăн Петяняна хăратасшăн пулчĕ, çĕр çăтман!

— Юрать пулăшрĕç. Скворцов майора тав ту. Вăл пулман пулсан...

— Эпĕ ывăл тем персе ярать пуль тесе питĕ хăранăччĕ.

— Ухмах мар пуль вăл?

— Ара, тем те ыйтать те. Пурне те папкăна çырса хурса пырать тата. Мĕн чухлĕ документ унта. Учета хăçан тăратни те пур.

— Вунтăваттăрах лекрĕ вăл унта.

— Тăмпуçсем мар-и?

— Ах, намăс пулчĕ ун чухне. Ах, намăс! Ĕçе ячĕç вĕт хучĕсене. Халăх умĕнчех пăхса тухрĕç. Чутах çĕр айне анса каяттăм.

— Ан та кала. Кĕтмен çĕртен пулчĕ те. Ларап пуçлăх патĕнче. «Мĕн тума чĕнтерчĕç-ши?» — тетĕп. Туймастăп та вĕтха. Хайхи пĕри кĕчĕ, тепри... Темле канашлу пулать тесе. Пуçлăх темле хутсем туртса кăларчĕ. Вулама пуçларĕ. Пĕрремĕш сăмахне илтсенех куç-пуç алчăрса кайрĕ. «Ку ман ывăлăм çинчен вĕт!» Пуçа çулăм сыранчĕ пуль. Хама çын пекех тыткалама тăрăшатăп-ха. Тарăхни те, вăтанни те унта пĕтĕмпех пăтрашăнать. Ну пачĕç те вара пĕçеркке! Нихăçан та манас çук.

— Манпа та çавах. Инженер пуçпа çапла намăс курма тиврĕ. «Ну кăна киле çитсен тăн кĕртетĕп», — тетĕп.

— Ара, ачи ун чухне килте çукчĕ. Ĕçрен таврăнтăм та ниçта кайса кĕрейместĕп. Вăл пур видеосалонра ыр курса ларать-мĕн! Фильмне астăватăп: «Король лордов». Тупăннă лорд?

— Çапла. Шыра-шыра ăçта кăна пулмарăмăр пулĕ ун чухне. Ну, хăрамастăн та эсĕ! Хĕрарăм темерĕн?

— Хăраса тăнă пулсан пирĕн ывăл тахçанах тĕрмере ларнă пулĕччĕ. Хăю çитерсех майор патне кĕтĕмĕр, шикленмесĕрех тĕттĕм кĕтессене хулипех тустарса тухрăмăр. Хăрушă пулмасăр! Путвалĕсем кĕме-тухма çук. Хĕрĕсем те каччисемпе пĕрле çавăнтах картла выляса лараççĕ вĕт-ха! Фу, намăссăрсем!

— Кам хăваласа антарса ячĕ-ха пирĕн ачасене çав путвалсене? Районĕпе те пĕр кинотеатр, пĕр видеосалон — урăх нимĕн те çук. Ăçта кайса кĕмелле тетĕр-ха?

— Килте лармалла! Акă мĕн! Кĕнеке вулаччăр, телевизор курччăр. Ашшĕ-амăшĕ те кăмăллă, урамра та шăп.

— Çумра пулсан лайăх ĕнтĕ, мĕн калăн. Лăпкăрах. Анчах эсĕ пĕр япала çинчен манса каятăн. Сан ачу текех пĕчĕккĕ мар,

вăл вунтăххăрта. Ун чунĕ те, пуçĕ те, кучĕ те пур. Урама тухмасăр епле чăтăн? Тухрăн кăна — ярса та илчĕç. Акă мĕн!

— Тухмалла та мар апла пулсан!

— Вăт, каллех хăвăннех эс. Тĕнче тĕрме мар пуль? Тем пек питĕрсен те — çăрапа питĕрсе илеймĕн, киле те хупса лартаймăн. Ача ачах вăл! Тухать те тарать. Акă аса ил-ха Натăна. Епле хитре хĕрччĕ. Мĕн туса хучĕç, мĕн туса хучĕç унпа? Пĕтерчĕç вĕт. Хупса хурсах пĕтерчĕç. Çакăнса та пăхрĕ. Халĕ ПТУна вĕренме каясшăн тет-ха.

— Ашшĕ-амăшĕ тимĕр пăрçа евĕр хытман пулсан, тен, ун пек килсе тухмастчĕ те. Чисти «домострой». Нивушлĕ тăван хĕр те юта тухать?

— Пĕлменни пĕтерет мар-и? Хăрани тата. Хĕрачапа аптратăн. Ӳссе çитсен пуринчен ытла. Тем курса ларас пур...

— Курса лартăмăр та ĕнтĕ. Ăнланмастăр эсир, чăваш хĕрарăмĕсем, нимĕн те ăнланасшăн мар. Эс ачасене айăпласа выртиччен кала-ха пĕр пытармасăр: «Мĕншĕн эсир хăвăр ачăрсене çуратнă-çуратманах пăрахатăр?»

— Патшалăха параççĕ тетĕн-и?

— Çук, эпĕ урăххи çинчен. Вăл та пур, паллах. Вăл та йăнăш. Мĕн астăвассах патшалăх ача пăхса ӳстерессине хăй çине илет тетчĕç те. Халĕ акă пыр та кур: ача сачĕсем çитмеççĕ, ача çурчĕсем те. Ку та тĕрĕс. Анчах эп урăххи çинчен каласшăн. Мĕншĕн эсир ача çуратнă-çуратман унпа вырăсла калаçма пуçлатăр? Мĕнле чун вăл? Ашшĕпе амăшĕ чăваш пулнă çĕртех вырăс çурататăр. Тĕлĕнсе каймалла тĕслĕх? Хăвăртан уйăратăр вĕт, нивушлĕ сисместĕр?

— Ухмах пулса ӳстĕр тетĕн-им ачу? Вырăсла пĕлмесен института епле кĕтĕр вара вăл?

— Ик хут иккĕ — пиллĕк! Пиллĕк мар — тăваттă! Ăçтан шутласа кăларнă эсир кăна? Тăван чĕлхене пĕлмен çын ăçтан аслă шкула вĕренме кĕтĕр? Ни чунĕ, ни пуçĕ, ни чĕлхи çук çын специалист пулать тетĕн-и? Пулман ун пекки нихăçан та! Мĕн, французпа вырăс хăйсен тăван чĕлхине манса çын пулчĕç-им? Сан ывăлу кĕчĕ-им? Çук ун пекки! Санăн ывăлу калаçма мар, вулама та пĕлмест. Вырăс çуратнăран пуль? Усси пулчĕ пуль?

— Эпĕ айăплă мар. Шкулта çапла япăх вĕрентеççĕ.

— Шкулта-а! Çын пулас пулать, акă мĕн! Вара институт çинчен те шутлама юрать. Вĕренни ним тума та кирлĕ мар тесе хăвах калаттăн мар-и-ха эсĕ? Хăçан улăштартăн вара шухăшна?

— Эй, санпа! Çывăр, çитет калаçса, — ним хуравлама аптранă Наталья Петровна тепĕр енне çаврăнса выртрĕ. Шăпланчĕç. Будильник уксахлани кăна илтĕнет халĕ...

# Петĕр

«Эх, ăнман, калаймарăм!» — вăрçса илчĕ Петĕр. Трубкăра пиклетнине итлесе тăчĕ-тăчĕ те телефон автомат патĕнчен пăрăнса утрĕ.

Темле çĕтĕлсе пĕтнĕ кроссовкипе шалпар шăлавар тăхăнса янă хăй. Шакла пуçлă. Тăрăхла питлĕ. Куçĕ вагонсем хушшинчен тапса тăракан çутă çинче тем пысăкăш курăна-курăна каять. Чупса тенĕ пек пырать Петĕр. Поезд халь-халь тапранса каяссăн тăрать. Пĕр-икĕ хутчен турткаланса та илчĕ.

Акă вагонĕсем, юлташĕсем... Пĕри, Вова, кăнтăр район ачи. Тепри Çĕнĕ Шупашкартан, Юра.

Вăшт сиксе хăпарчĕ Петĕр тамбура. Вовăпа Юра та пăшăрханаççĕ-мĕн. Вăн епле паклаттарса тăраççĕ. Петĕр те пирус хыпрĕ. Шăрпăкпа аппаланнăçемĕн поезд тапранса кайнине те сиссе юлаймарĕ. Акă юнашарти темле хуралтăсем мĕлтлете пуçларĕç, вагон пĕр вунă хут уксахласа илчĕ-и — çухалчĕç. Хăлхара халь — состав шавĕ.

«Яратчĕç-ха пĕр-пĕр вырăна. Армение унта е... ВВ», — пăшăрханма пăрахмарĕ Петĕр. Шалти чаçсенче службăра тăракансене вăл салтак вырăнне хумасть. Техника тесен вара каçсах каять. Мĕн пĕчĕкрен вăрçăлла выляса ӳснĕ те... юна-мĕне кĕнĕ. Хĕпĕртесе кăна пырать вăл халĕ. Вăл — ракетчик.

— Ну, ăçта янине пĕлтертĕн-и? Тытайрăн-и Шупашкара? — татрĕ Петĕр шухăшне пирусне пăравус пек мăкăрлантарса тăракан Вова.

— Ăхă! — авăкран тин сас пачĕ Петĕр.

«Ара, мĕн чухлĕ тӳпелешмен пуль кăнтăртисемпе, халĕ акă вĕсенчен пĕринпе пирус туртса тăратăн, çывăх юлташ пек туятăн, — тĕшмĕртме тăрăшрĕ вăл çак çул çинче пулса иртекен улшăнусене. — Апла, тен, пирĕн тытăçусем те пĕтĕмпех пустуй. Территори те кирлĕ мар. Вĕсен пĕр вырăн — Чăваш çĕршывĕ. — Петĕр каллех тĕлĕнсе кайрĕ. — Чăвашра пурăнатăп тесе те каласа курман вĕт-ха эпĕ».

— А помнишь, Петух. Помнишь, тракторный? — шăл шуррине кăтартрĕ Вова.

— Практикăна çӳреме пăрахмалла пулчĕ вĕт пĕр вăхăт. Эсĕ те хутшăннă-и унта?

— А леш пĕчĕкки пурччĕ сирĕн. Ăçта вăл халь?

— Ялта таçта. — Петĕре хăйĕнпе пĕр çуртра пурăннă Володьăн шуранка пичĕ аса килчĕ.

Хĕнерĕç çав вĕсене ун чухне. Юлташне, тен, ытларах та лекрĕ. Йăвашрахчĕ.

Кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче бытовкăра хупăрласа илчĕç те хире-

хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫрӗҫ вара. Петӗре пӗчӗкреххи лекрӗ. Володьӑн «тӑшманӗ»— пысӑкрахчӗ. Футбола ҫӳрени пулӑшрӗ пулӗ, хӑйне хирӗҫ тӑракана патне те пыртармарӗ вӑл. Урипе тапа-тапа ывтӑнтарса ячӗ. Кайран, паллах, пурпӗрех лекрӗ. Ах, пӑшӑрханса ӳкрӗҫ те килтисем пирӗн «хунарсене» курсан. Пӗрле пухӑнса ҫӳремелле. Учитель ертсе кайтӑр, килтӗр теҫҫӗ. Суда пама та хатӗр.

— Эсир пӗр-пӗрне тахҫанах пӗлнӗ апла? — Юра тепӗр пирус чӗртсе ячӗ. — Эпӗ, Шупашкарпа Ҫӗнӗ Шупашкар хушшинче ҫапӑҫусем хӗрсе иртрӗҫ пулин те, сирӗнтен нихӑшне те астумастӑп. Хутшӑнман пуль эсир?

— Эпӗ юта кайса хӗнесе ҫӳренине ырламастӑп. Хамӑрӑнне сыхласан та ҫитет. Хӗрсем патне килекенсене те тивмен, — Петӗре Натӑна ӑсатнисем аса килчӗҫ. Хӗр ҫумне «кӑнтӑр каччи» пит ҫыпӑҫатчӗ. Ӑна хӗнесе яма та хатӗрччӗ — Петӗр чарчӗ. Ун пек туни тӗрӗс мар. Ната хӑй суйласа илтӗр терӗ. Ыйту хӑй тӗллӗнех татӑлчӗ. Пӗр-икӗ хутчен ахалех сӗтӗрӗнсе килнӗ хыҫҫӑн пӑрахрӗ, тек килмерӗ. Мӗн калана ӑна Ната — Петӗр пӗлмест.

Калаҫу вӗҫленчӗ. Вагона кӗчӗҫ. Кунта кам мӗне пултарать, ҫавӑнпа аппаланать. Пӗрисем картла ҫапаҫҫӗ, теприсем кулӑш кустӑрми кустараҫҫӗ. Петӗрсемпе юнашар гитара янӑрать. «Ты не ангел, но если ты...» юрра пӗри, юлташӗсем ыйтнипех пуль, шӑрантарать те шӑрантарать. Чылай тӗрӗс кӑларать. Петӗре ку кӗвӗ Шупашкара Натӑпа пӗрремӗш хут савӑшнӑ вӑхӑта ҫавӑрса илсе кайрӗ. Тӑххӑрмӗш класраччӗ ун чухне Ната. Вӑт, айван, вуннӑмӗшсем тухасса коридортах кӗтсе тӑратчӗ. Кам шутланӑ пулӗ Петӗре кӗтет тесе. Пуҫа та пырса кӗмен. Ну чиперччӗ те вара! Чисти пирӗшти! Каҫӑхсах каятчӗҫ. Салтакран тин таврӑннисем те ҫаврӑнкаласа пӑхрӗҫ ун тавра, Петӗр юлташӗсем те. Май килтереймерӗҫ. Ах, мӑнтарӑн хӗрупраҫ! Такки упранса юлаймарӗ. Шуйттан Маняги! Сыхласа ҫӳренӗ вӗт-ха вӑл ҫавна, путсӗр! Петӗр хӑй те айӑплӑ. Хӑвармалла пулман ӑна пӗччен. Хӗрпе юлма тем аван мар пек пулчӗ те ун чухне, юлташӗсемпе пӗрле тухса кайрӗ. А вӑл , мӗн, таврӑнать-ха ку тенӗ. Кӗтнӗ. Чӑн та, вӑхӑт нумай та иртмен, алӑкран шӑнкӑравланӑ. Ната ним ыйтса тӑмасӑрах уҫса янӑ. Унта-мӗн кӗтнӗ хӑна мар, Маняга тӑра панӑ. Хупса та ӗлкӗреймен вӑл алӑкне... Вӑт, шуйттан! — хурланса та тарӑхса илчӗ Петӗр. — Ҫухӑртнӑ тет вара. Кайран мӗн, кайран тытса тӗврӗмӗр, паллах, Маняга-мӗнне пӑхса тӑмарӑмӑр. «Эп тӗрме ҫынни!» — тесе сӑмса каҫӑртса ҫӳретчӗ-ха. Хӑйне майлӑ авторитет та пурччӗ унӑн. Ҫав пӑтӑрмах хыҫҫӑн пӗтрӗ. Усаллӑхӗ хӑйнех пырса ҫапрӗ: ӗҫке ерчӗ, ҫапкаланчӑк хӗрарӑмсемпе асрӗ... Ната, Ната вара ютшӑнчӗ. Таҫта вӗренме каять тет-и, повестка илсен илтнӗччӗ. Хӑйне курман. — Петӗр ҫак хӑрушӑ япаласем ҫинчен шухӑшланӑ ҫӗртех йӑлл! кулса ячӗ.



4-35996
Национальная библиотека
Чувашской

Натăпа тытнăччĕ ăна амăшĕ пĕрре. Уроксем хыççăн çапла иккĕшĕ кăшт уçăлса çӳренĕ пек тусан ăшăнма тесе киле чупса кĕчĕç. Пĕрремĕш хут пулса иртни мĕншĕн халĕ те чуна кăтăклать-ши? Кĕтесре кивĕ диван пурччĕ. Хĕрлĕпе сăрнăччĕ. Петĕр хĕрачан сăмсине ăшăтам пекки туса малтан питçăмартинчен, кайран хăй те ăнкарса юлаймарĕ, темле килсе тухрĕ, тутинчен чăпăрт! чуптурĕ. Натăн туп-тулли тути чĕтренсе илчĕ. Тутлă пулчĕ-и вăл е çук, астумасть халь, чĕтренĕвĕ вара тута çинчех, тем тусан та манăçа тухмĕ... Кĕлетки тата епле тăпăлккаччĕ. Çитĕнсе çитнĕ хĕр çав. Ăна ман йышши йĕпе сăмса мар, аслăрах арçын кирлĕ пулнă та. Шел, таса çын тĕлне пулаймарĕ. Кайран ăна ушкăнпах сĕтĕрме пуçларĕç пулмалла. «Ах, Петĕр, Петĕр! Петяня та мар эсĕ, Петух кăна!» Чуптуса илни çитмерĕ çавăн чухне, кăштах тĕрткелешсе илнĕ хыççăн хĕре хĕрлĕ диван çинех йăвантарса ятăм. Ку хăй тĕллĕнех килсе тухрĕ. Ара, чуптăвăшакансем ăçта тăнă çавăнтах йăванса кайнине кинора пĕрре кăна мар курнă та-ха. Урăхла килсе тухасси пирки шутламан та. Иккĕшĕ те пысăккисем пек туса пăхас тенĕ. Пылак туйăм ăшĕнче чӳхенекен чунсем пĕр-пĕрин патне туртăннă, аллисем тĕртем пекки туса та пулин пĕр-пĕрне ачашланă, тути кулнă, вăхăт-вăхăтран ихиклетни те илтĕннĕ. Çемçе кăкăрĕ халĕ те алăра пек, — чипер ларнă çĕртех темле пылаккăн çӳçенсе пĕтĕм кĕлеткипе туртăнкаласа илчĕ Петĕр. Хăй çапла ашкăнса ларнине ăнкарчĕ пулсан та çак тутлă тĕлĕкрен тухма хăват тупаймарĕ. Пуçĕпех путрĕ вăл тĕттĕм авăра. Пулнипе пулманнине те хушса пычĕ, хĕрпе мĕн тăвас тенине пурне те турĕ. — Майĕпен, питĕ майĕпен шуса анчĕ сулахай алли хĕр пĕвĕ тăрăх. Пĕç тĕпĕ тĕлĕнче пĕр вăхăт чарăнса тăчĕ, унтан шап-шуррăн курăнакан чĕркуççине ачашлама пикенчĕ. Çав çавра вырăнсем... Пĕрре кăна мар курнă, пĕрре кăна мар ĕмĕтленнĕ... Епле яка та тулли вĕсем! — пĕр хускалмасăр ларакан ача хăй те сисмерĕ, тарăннăн сывласа илчĕ, чĕри сиксех тухатчĕ пулĕ, алли те чĕтрерĕ. — Кăтăклантарчĕ пулмалла — хĕр савăклăн кулса ячĕ, ача аллине сирсе яма пăхрĕ — пулмарĕ. Петĕр тата чăрсăрланчĕ. Ара, вăйă выляççĕ те-ха. Вăйăран вăкăр тухасса мансах кайнă. Каччă хĕр аллине сылтăм аллипе ярса илсе кăкăрĕ умне хуçлатса хучĕ, сулахайĕ вара хăй ĕçне турĕ. Малалла мĕн пулса иртнине Петĕр халĕ лайăххăн астумасть. Алли кăна пĕлет, халĕ те пĕçерет. Пичĕ те çунса тухас пек... Тĕлĕкĕн хăйĕн вĕçĕ. Алли малалла мĕн тумаллине пĕлетчĕ те пулĕ, анчах çав самантра алăка уçни, алкумĕнче такам йывăррăн сывлани илтĕнсе кайрĕ. Тип аçа çапнă евĕрех пулчĕ ку. Якăлт! сиксе тăчĕ хĕр диван çинчен. Петĕр те тытăнса юлаймарĕ, урайне ӳкрĕ. «Анне килчĕ. Мĕн калас? Пытанмалла вылярăмăр теес-и?»

Хускалмасăр ларма хал çитерeймерĕ Петĕр, яштах тӳрленсе тăчĕ, пуçĕпе çапăнчĕ, пĕр кана сăтăркаласа тăнă хыççăн ыратнисем иртсе кайрĕç пулмалла, кӳрше гитара калакансем патне каçрĕ.

«Ты не ангел, но для меня ты стала святой...» юрлама пăрахмарĕ ушкăн. Гитарçă, темле çавракa питлĕскер, хĕлĕхĕсене вырăн-вырăнпа пит меллĕн пăнтăртаттарса илет, чун таçтах кайса кĕрет. Эх, çамрăклăх! Çăварĕсене карсах пăрахнă хăйсем. Иртнĕ пурнăçри асамлă хĕрсемпе шанчăклă юрату çинчен юрлаççĕ те юрлаççĕ. Амăшĕсем те аса килеççĕ, ахăртнех. Петĕр те тахçан путвалсенче ларнă чухне вĕреннĕ кĕвĕсене ыттисемпе пĕрле ĕнĕрлем пекки турĕ. Пуçран амăшĕ туха пĕлмерĕ.

«Мĕншĕн çапла килсе тухрĕ-ха? Мĕнрен пуçланса кайрĕ çав курайманлăх? Мĕн, ман кашни каçах ватă çын евĕр килте кăштăртатса лармаллаччĕ-и-ха? Ну, анне! Эпĕ ун чухне, чăнах та, кая юлса килнĕччĕ ĕнтĕ. Мĕнех, ун пекки пĕрре кăна пулман вĕт. Ман хыççăн урам тăрăх чупса çӳренĕ те вăл, тарăхса çитнĕскер, пиçиххи ярса илнĕ. Кашни тĕттĕм кĕтесе кĕрсе çӳремесен те юрĕччĕ. Туссем кулма пуçларĕç вĕт. Хăшĕ-пĕри «маменькин сыночек» тесе те пăхрĕç. Пĕр-икĕ хутчен тута урлă хурсан чарăнчĕç. Кăтартăп сире!»

Йĕркеллĕ килсе тухмарĕ çав ун чухне. Анне вăрçнă хушăра чĕнмесĕр ларакан атте, темле ăс пырса кĕчĕ, питрен çутăлтара-çутăлтара ячĕ. Çавăн хыççăн пуç анрасах кайрĕ. Атте сасси таçта-таçта кайса çухалчĕ, илтĕнми пулчĕ. Темле çемье, тăванлăх, чăвашлăх, ят яма юраманни çинчен калаçатчĕ вăл. Пуç вара, пуç анаша туртса пăхнă хыççăнхи пек. Дуб панăччĕ, çав хистерĕ. Пуç кăмпа пек шӳсе кайрĕ. Чутах хăсса пĕтеттĕм. Киле епле çитрĕм тулькка. Атте тем асăрхарĕ. Танкăлтатса, мĕкĕлтетсе кĕнине пит пăхрĕ. Хам та ухмах мар, тӳрех вырăн ăшне чăмрăм. «Куçĕ тем пысăкăш», — тет атте. «Каçхине хăй çапла», — текелерĕ анне. Çапла сана? Тутанса пăх, вара курăн. Е клей ĕç! Ха-ха-ха! Тепринче эрех ĕçсе килнĕччĕ. Тикĕт курăк вăррине чăмласа янăччĕ те — сисмерĕç. Атте тем пĕлнĕн кулкаласа ларчĕ-ха. Суйтăрах терĕ пуль. Суйма вĕрентрĕç вара, чăнах та. Шкулта чирлерĕм, çавăнпа килеймерĕм тен. Килте уроксем пулманни çинчен калаçан. Урамра? Урамра унта урăх тĕнче. Паттăрăн курăнмасан самант çăтса яраççĕ, — Петĕре Дуб ертсе кайнă пĕрремĕш «ĕç» аса килчĕ. — Ун чухне пĕр гаражран мопед çаклатса тухнăччĕ. Хамăр валли машина тăватпăр тесе ухмахланнă мар-и? Милици шырани çинчен те шутлама пĕлмен вĕт, тăмпуçсем. «Преступник» тесе шута илчĕç вара. Шкула, атте-аннене пĕлтерчĕç. Хут ячĕç. Пуçланчĕ çавраçил. Хăш енчен пырса çапнине те, ăçталла илсе кайнине те пĕлместĕп. Урамра паттăр, килте шăши.

— Ухмах эс! Ах, ухмах! — каллех аса килчĕç ашшĕ

сăмахĕсем. — Эрех ĕçсе, урам тăрăх чупса, тĕрмере ларса паттăра тухап терĕн-им? Ах, ăнман! Ни çырма, ни вулама пĕлместĕн вĕт. Тĕрмере ларса тухсан пушшех те йывăр. Вĕсем ĕçе вырнаçаймасăр асапланаççĕ. Ун пек пулас тăк эп пурăнмастăп та, санăн мар, манăн пурнăç сая кайнине пĕлтерет ку!

— Ну, хватит балдеть! Дай сюда гитару! — илтĕнсе кайрĕ çав вăхăтра хăлхаранах такам хăрăлтатса кăшкăрни.

Юрă хыççăн çӳренĕ ушкăн шарт! сикрĕ. Вĕсен çулĕ çинче хурчăка пек хăлаçланса, еркĕн пек йĕлпĕрсе тем пысăкăш яшă тăра парать. Петĕр ăна военкоматрах курсаччĕ. Улатăр вырăсĕ. Куштанскер. Мăйĕнчен темле шуйттан мăйраки çакса янă. Хырăнман, çăварĕнчен пăрака шăрши перет.

— Если хочешь, подождешь, — çухалса каймарĕ çавра питлĕ гитарçă.

— Что, алатырских не знаешь? — пуçтах ача улатăртисем еплине кăтартас терĕ пулмалла, ушкăн варрине çĕмĕрсех кĕрсе кайрĕ. Анчах гитара калакан патне çитеймерĕ вăл. Петĕр ăна чĕркуççи айĕнчен тапрĕ те — лешĕ урайне персе анчĕ.

— Наших бьют, — кăшкăрса ячĕ ача. Сысна çури витене хăваласа кĕртнĕ чухне çапла çухăрса яраканччĕ. Мăнă çын çинçе саслă пулать тесе кам шутланă. Тин кăна хăрăлтиччĕ. Пурте кулса ячĕç. Иртерех савăнчĕç. Сĕтел çине туртса çапнă гитара чăл-пар саланса кайрĕ.

— Шупашкарсем, кунта! — кĕрлерĕ тепĕр йыхрав. Кĕпĕр килсе тулчĕç. Улатăрсене пыма памарĕç. Лешне вара лайăхах лекрĕ, нихак. Петĕр футболист пулнине пĕлмен ĕнтĕ вăл, мăнтарăн. Юрăпа Вовăн аллисем те... мамăк мар.

Туссем тамбура кăмăллăн кулкаласа тухрĕç. Табак туртса ячĕç.

— Ха, тупăннă герой! — Сега пек каласа хучĕ Петĕр. Юлташĕ çак самантра Шупашкарта милици уйрăмĕнчи хытă сак çинче выртнине вăл, паллах, пĕлмерĕ.

— Ну, патăмăр та! — савăнчĕ Вова.

Сăмах унта та кунта мĕн пулса иртни, кам кама тӳпелени çинчен пычĕ. Хĕрсене те аса илчĕç. Хăшĕ-пĕрисене хулипех пĕлеççĕ иккен. Ку Петĕре кăна мар, пурне те тĕлĕнтерчĕ. Чăн-чăн çăлтăр, калăпăр, Марина. Тăхăнасса та вăл вĕсене пăхса тăхăнатчĕ пулĕ. Сăрланса лартатчĕ вара! Вунçиччĕре мар, çирĕм çиччĕре тейĕн. Арçынсем, чăнах та, хăпма пĕлместчĕç. Е Кити, Шупашкар «Интердевочки». Ай, усалччĕ. Укçаллăччĕ. Пляжра пĕринче çарапакка чупса кăтартрĕ. Эх, чутах вилеттĕмĕр. Ватăраххисем тĕнче пĕтрĕ тесе сăхсăхаççĕ. Çамрăксем каçса кайса кулаççĕ. Катăкрахчĕ ĕнтĕ хĕрачи те.

Пурне те аса илчĕç. Сегăна та. Бочкăна та. Угоре те пĕлеççĕ-мĕн. Туслашсах кайрĕç. Халĕ кунта, республика тулашĕнче, пĕр

çын пулса кар тăчĕç. Никам вĕрентмесĕрех хăйсем пĕр йăхран пулнине туйса илчĕç. Акă епле тĕрткелешсе, кĕпĕрленсе тăраççĕ вĕсем халĕ.

Тамбуртан та çавăн пекех кĕчĕç. Купесенче шăп. Пĕрисем çывăрма выртнă, теприсем хатĕрленеççĕ. Петĕр те утиял айне чăмрĕ. Куç хăех хупăнчĕ.

«Районĕпех йăтăнса килчĕç. Анне ним тума пĕлмест. Шыв çук тата. Атте те çук. Повестка вара тăхтама памасть. Ирхине тăхăр сехетре военкоматра пулмалла. Куккасемпе тете килчĕç. Кӳршĕрен Людăпа Валя каçрĕç. Ната пымарĕ... Пуçланчĕ вара! Чашăк-тирĕк çума мĕн чухлĕ вăй кирлĕ пулчĕ пулĕ? Анне уяв тумне халатпа улăштарчĕ. Хĕрсем аялтан бачокпа шыв йăтаççĕ. Залра гитара кĕрлет. Туссем юрă хыççăн юрă шăрантараççĕ. Ташлас тенĕччĕ, вырăн çук. Ун-кун сиксе тухать тесе хăранăччĕ. Ахалех пулчĕ. Дисциплина пирĕн çирĕп. Йĕркене пăсакана хăйне лекет. Çарта та ун пек мар пуль. Яшсем чинлă, хĕрсем хитре! Юрлаççĕ кăна... Шел, чăвашла пĕлмеççĕ. «Кукаçипе кукамие пĕлĕм пĕçереççĕсĕр» пуçне хам та урăх ним те кăлараймастăп та... Ялта салтак юрри юрласа, тутăр сулласа çӳренине те курнăччĕ. Илемлĕ йăла. Хĕрсем тутăр парнелеççĕ. Тăванĕсем килтен киле чĕнеççĕ. Çапла пĕр эрне хушши çара каякан тăванĕпĕтенĕпе сывпуллашать те повесткăпа чĕннĕ кун килтен тухса каять. Ăна ăсатма укăлча умне пĕтĕм ял халăхĕ пухăнать. Хурлăхĕ те, савăнăçĕ те — пурте пĕрле унта. Эпĕ апла тăваймарăм...

Ирхине сакăр сехет тĕлне каллех пухăнчĕç. Петĕр тухасса кĕтрĕç. Вăл вара, темле кивĕ кутамкка çакнăскер, çула тухас умĕн хĕрлĕ диван çине самантлăха та пулин, йăла тăвас тесе ĕнтĕ, амăшĕпе юнашар пырса ларчĕ.

— Асту унта, хăвна ху йĕркеллĕ тыт. Ятна ан яр. Командирсене итле, — ăс пачĕ амăшĕ.

Куçĕсем шывланнă хăйĕн. Çĕрĕпех çывăрман пулас та, сăнĕ темле тĕксĕм.

— Юрать, анне. Пĕччен мар вĕт, халăхпа. Пурте йĕркеллĕ пулать. Ан хăра! — мăкăртаткаларĕ вăл ун чухне.

Петĕр ӳкĕнсе илчĕ. Мĕн тума пит тарăхтармалла-ха ун? Миçе çĕр çывăрттармарĕ амăшне? Миçе çул пурăнассине катрĕ? Шкула кайманни те, киле таврăнманни те тем чухлех пулнă. Анне, паллах, пурне те чĕри витĕр кăларнă. Ахальтен мар пуль çӳçĕ кăвакарнă. Çамрăк вĕт-ха вăл. Хĕрĕхре кăна!

Нихçан та кун пек хĕрхенменччĕ вăл амăшне. Ыталаса чуптăвас та килсе кайнăччĕ, тем чарса тăчĕ, пултараймарĕ. Амăшĕ вара чăтса тăраймарĕ, ыталаса илчĕ те йĕрсе ячĕ. Йĕпе пичĕ халĕ пит çинчех...

Петĕр куçне сăтăркаласа илчĕ. Куççулĕ юхса аннă — сисмен

те. Чĕри те ун, поезд такăлтатăвĕпе пĕр пулчĕ пуль, диван ҫинче ларнă чухнехи пекех тапса илчĕ.

«Эх, анне, анне! Автобус ҫине лартса кайнă чухне те ал сулса кăна хăвартăм эпĕ сана... Ни пырса ыталаймарăм, ни ăшă сăмах калаймарăм. Эсĕ ĕҫри юлташусемпе пĕрле пăхса тăраттăн. Пĕр хускалмасăр тăраттăн. Юпа пек. Туссем мана ҫĕклесе илчĕҫ те «Петух! Петух!» тесе кăшкăрса автобус патне йăтса кайрĕҫ. Пырасшăнччĕ эпĕ сан пата, пырасшăнччĕ — май килмерĕ! Йĕри-тавра халăх. Хĕстерсе лартрĕҫ те — ни тухма, ни кĕме. Автобусĕ те кĕрсе ларнă-ларман тапранса кайрĕ. Ал султăм эпĕ, ал кăна султăм, анне...»

Петĕр каллех кусне сăтăрса илчĕ. Ун пек ҫемҫе тесе шутламанччĕ вăл хăйне. Миҫе ҫапăҫура пулман пуль, мĕн чухлĕ хĕнемен пулĕ ăна, вăрҫман пуль — чăтнă. Хытса кăна пынă. Шкулта та, килте те, урамра та ҫăмăл пулман — чăтнă. Пур ҫĕртен те хĕстеретчĕҫ. Тем ыйтатчĕҫ, хистетчĕҫ, ӳкĕтлетчĕҫ... Ăнланмастчĕ вĕсене Петĕр. Халĕ ăнланчĕ... Халĕ пулсан-и, ҫав вăхăта каялла тавăрма май килнĕ пулсан-и — тем пек каҫару ыйтнă пулĕччĕ, киле те вăхăтра килĕччĕ...

— Эх! — саспах каласа ячĕ Петĕр. — Чавса ҫывăх та — ҫыртма ҫук.

Ҫывăрса кайнă юлташĕсем вăл канăҫсăрланса выртнине курмарĕҫ. Вĕсен хăйсен тĕлĕкĕсем... Юра акă тем мăкăр-таткаласа илет. Вăл та амăшĕпе сывпуллашать пуль. Вова аллисене сарса пăрахнă... Чисти пĕчĕк ача! Петĕр йăл кулса илчĕ. Ара, амăшĕ ăна «ушатик» тетчĕ. Ҫывăрас умĕн вăл ашшĕпе амăшĕ хушшинче хăлхисене икĕ алăпа тытса выртатчĕ. Темле асамлăх ҫав ҫыхăнура... Тепре тытасчĕ, пĕрре те пулин пĕчĕк пуласчĕ...

Вагон кустăрмисем пĕрре, тепре уксахласа илчĕҫ, тепловоз кăшкăртса пăхрĕ. Ку сасăсем аякра-аякра пулчĕҫ. Петĕр ҫывăрса кайрĕ. Поездăн тикĕс шавĕ сăпка юрри пек. Купе — сăпка. Салтакĕсем — ача.

## «Агрегатка»

Дежурство яланхи пекех пуҫланчĕ. «Агрегатка» тавра ҫаврăнса килчĕҫ, ҫурт ҫумĕсемпе иртрĕҫ, подъездсене кĕре-кĕре пăхрĕҫ — пурте йĕркеллĕ. Ытти районсенчен пухăнса килекен ачасен ушкăнĕсем те, унта та кунта хирĕҫсе тăракансем те курăнмарĕҫ. Эрех магазинĕ патĕнчен анчах икĕ ӳсĕре тытса кайма тиврĕ. Валамовпа Петров милиционерсем пырса кĕнĕ ҫĕре вĕсем пĕрре черетпе, тепре сутуҫă хĕрпе хирĕҫсе тăратчĕҫ. Пуҫтах ҫамрăксене

кирлӗ вырӑна ӑсатнӑ хыҫҫӑн «Октябрь» патӗнчи дежурнӑйпа тӗл пулса калаҫрӗҫ: унта паян пӗчӗк ачасен кӗсйисене тасатнӑ, унтан темле цыгансем хӗрлӗ «Жигулипе» хула тӑрӑх ярӑнса ҫӳрени ҫинчен хыпар илчӗҫ, вӗсене тахҫанах шыраҫҫӗ иккен. «Хӗҫпӑшаллӑ пулма пултараҫҫӗ!» — пӗлтерчӗҫ хула уйрӑмӗнчен.

Агрегат завочӗпе юнашар паркра пухӑнаканччӗ ку кварталти ҫамрӑксем, вӗсем те курӑнмарӗҫ. Вӑтӑр пиллӗкмӗш шкул умӗнче те ҫук. Видеосалона кӗрсе пӑхрӗҫ. Унта темӗнле хӑрушла кино кӑтартаҫҫӗ-мӗн. Хула масарӗнчи вилесем чӗрӗлсе тӑнӑ та ҫынсене тапӑннӑ. Ҫавсене курса лараҫҫӗ сержантсен «пӗлӗшӗсем».

— Аха, пурте кунта. Лар! — сӗнчӗ Валамов.

— Пӑхар-и вара? — килӗшрӗ Петров. «Ларса-тӑма вӑхӑт ҫук», — теесшӗнччӗ вӑл. Юлташӗ ҫавӑн йышши киносене курма юратнине пӗлнӗрен-и, хирӗҫлемерӗ. Меллӗн вырнаҫса ларчӗ те экран ҫине пӑхма тытӑнчӗ. Унта вара — пӑтӑрмах. Ҫын скелетсем пӗр чиперкке хӗрпе арҫын ачана халь-халь ярса илес пек хӑвалаҫҫӗ. Май килмест. Лешсем темле йывӑр лару-тӑруран та хӑтӑлса тухаҫҫӗ. Ҫук, чӗррисем вилесене парӑнас ҫук теесшӗн пулмалла кино лартакансем. Е виле тытать теесшӗн-и? Кашни кадр — чун илли! Ҫавӑ килӗшет пулмалла та речӗпе ларса тухнӑ шӑкӑр-макӑрсене. Куҫ илмесӗр пӑхаҫҫӗ, чунӗсене те пама хатӗр! Сержантсем пырса кӗнине те, юнашар ларса кино курма пуҫланине те сисмерӗҫ вӗсем.

Анчах ку вӑл туйӑнать анчах. Валамовпа Петров сержантсене пӳлӗме кӗнӗ-кӗмен асӑрхарӗҫ. Пӗр енчен, ку пӑшӑрхантарчӗ, тепӗр енчен, лӑплантарчӗ те. Патруль кунта пулни урамра та йӗркеллӗ пулнине пӗлтерет. Кашни хӑй шухӑшӗпе ларчӗ, картинӑпа кӑсӑкланчӗ.

Унта вара чӑннипех те ахӑрсамана пуҫланчӗ. Вӗлернӗ пӗр хула ҫыннисем те ыттисемпе пӗрле чӗррисене тапӑнаҫҫӗ. Пӗрре ҫапса яни те, пӗрре ҫыртса илни те ҫителӗклӗ иккен вупӑра тухма. Хулипе халь ҫав ҫапӑҫу. Пурте скелет халь. Чиперккепе каччӑ анчах чӗрӗ. Вӗсене те пулин темле путвала хӑваласа кӗртнӗ. Акӑ вӗсем пӗртен-пӗр алӑка баррикадӑласа хучӗҫ. Ӑна та ҫӗмӗреҫҫӗ. Ҫук, ҫӑлӑнаймаҫҫех!..

Петровӑн пуҫӗ ҫаврӑнса-ҫаврӑнса кайрӗ, вар хытрӗ, хӑсас килчӗ. Экран тӑрӑшшӗпех хӗп-хӗрлӗ юн юхса ансан сержант тек чӑтса лараймарӗ — урама сирпӗнсе тухрӗ. Тӑрр-тӑрр! чӗтрерӗ хӑй, уҫӑ сывлӑша ҫӑтрӗ те ҫӑтрӗ. Ура ҫинче йӗркеллӗ тӑма та вӑй юлман-мӗн, машина ҫумне таянчӗ, пирус туртса ячӗ. Пӗр-икӗ хутчен кӑна ӗмме ӗлкӗрнӗччӗ — раци сас пачӗ. Кӑнтӑртисен пӗр ушкӑнӗ 5-мӗш номерлӗ троллейбус ҫинче. Кӗтсе илме хатӗрленӗр, — терӗҫ. Пӗлтерӳ вӗҫленчӗ кӑна — Валамов сержант сиксе тухрӗ. Кӑнтӑртисем килес-тӑвас пулсан саккӑрмӗш ПТУ патӗнче анма кирлӗ тесе засадӑна

милиционерсем унта тума шутларĕç. Хăйсем кая юлнине пĕлмерĕç-ха вĕсем.

Патруль машини тапранса кайсанах видеосалона Креп вирхĕнсе кĕчĕ. «Полундра!» ПТУ ачи хыççăн çур зал хăпăнса тухрĕ, ыйтса-туса тăмарĕç, «Октябрь» кинотеатр еннелле чупрĕç. Вăхăтра çитрĕç.

Валамовпа Петров хăйсем шуçса юлнине пĕр пилĕк минутран тин ăнкарса илчĕç. ПТУ тавра пĕр ача та çук. Ăçта вĕсем? Иккĕленсе тăма памарĕç. «Октябрь» патĕнчи дежурнăй çамрăксем килсе тулни çинчен пĕлтерчĕ.

— Кайрăмăр! — приказ пачĕ Валамов. Хăй асли пулнине кăтартас терĕ пуль, кăмăлсăррăн пăхса илчĕ.

— Пулăшу ыйтасчĕ, — пăшăрханчĕ Петров.

— Сансăрах пĕлеççĕ. Лар хăвăртрах!

Машина каçхи урампа вĕçтерчĕ.

* * *

Çук, ниепле те лăпланаймарĕ Игорь. «Каллех, унчченхи пекех!» — тарăхрĕ вăл.

Чиперех тăратчĕç вĕсем. «Октябрь» тавра халăх çукпа пĕрех. Ютсем те курăнмаççĕ. Ку каç та малтанхисемлерех, чиперех иртсе каяссăн туйăнатчĕ. Çук, май килмерĕ.

Тин кăна пулса иртнĕ тытăçу, усал сăмахсем каласах çапса пăрахни, милици машини ăшне тытса ывăтни ача чунне халĕ те тăвăрлантарса тăчĕ-ха. Сегăпа Олег та кунтах. Кăмăлĕсем пусăрăнчăк. «Ăçтан, мĕнле мур шăтăкĕнчен йăтăнса тухрĕç çав кăнтăртисемпе милицисем? — юлташĕсем çине пăха-пăха илсе шухăшларĕ Игорь. Лĕнчĕр кайнă хăй. Нумай мар, пĕрер сыпкăм кăна ĕçнĕччĕ вĕт-ха...

Çӳрерĕç-çӳрерĕç те вĕсем кинотеатр тавра ывăнсах çитрĕç. Шăнчĕç те пуль. Ăшăнсан та аптрамасть терĕç. Такамăн пулчĕ вăл, çав шухăш? Тен, тахçанах кашнин пуçĕнчех выляса тăнă вăл, вăхăтне кăна кĕтнĕ? — халь никам та калаймĕ ĕнтĕ.

Пурнăçа кĕртекенсем те тупăнчĕç. Олег килĕнчен пĕр кĕленче шурă эрех, амăшĕннех пуль, илсе тухрĕ. Кинотеатр хыçне кайса тăчĕç те янк! кăна тутарчĕç. Хĕрарăм контролер патĕнче мĕкĕлтетсе тăракан милиционер, паллах, çакна курмарĕ.

Кашнине пĕрер сыпкăм кăна лекрĕ пулин те, выçварла çав, ӳсĕрĕлсех кайрĕç вĕсем. Юрласа ямалли кăна юлнăччĕ. Пулмарĕ. Шăкăл-шăкăл калаçса ларакансене кĕтмен хыпар ура çине кăпăр! тăратрĕ.

«Кăнтăртисем чикĕ урлă каçнă, çул çинче кама тĕл пулнă, çавна çапса пăрахаççĕ».

Пĕлтерӳçĕсем ача пухма чуптарчĕç, юлнисем унта та кунта сапаланса выртакан кирпĕч катăкĕсемпе хăма татăкĕсене пуçтарма тытăнчĕç. Нумай та вăхăт иртмерĕ — кăнтăртисен малти ушкăнĕ курăнса кайрĕ. Васкаççĕ хăйсем. Агрегаткăрисем сиссе-писсе юличчен çĕмĕрсе тухса каясшăн ĕнтĕ, паллă. «Эх, пухăнса ĕлкĕреймерĕмĕр», — пăшăрханчĕ Игорь аллинчи чул катăкне чăмăртанăçемĕн.

* * *

Кăнтăртисен пĕр ушкăнĕ ăçтине «Октябрь» кинотеатр патĕнче çапăçу пуçлансан тин пĕлчĕç. Хула тăрăх çаврăнса çӳрекен патруль машинисем маршрутне самантрах улăштарчĕç. Пулăшу пама васкарĕç. Валамов ушкăнĕ чи çывăхри пулчĕ. Çул çинче сержант хăй те сисмерĕ, вăрçма тапратрĕ.

— Çав шанкуйсене пĕрре тапса сирпĕтмелле те — ĕçĕ те пĕтнĕ!

Юнашар ларса пыракан Петров илтмĕш пулчĕ, чĕнмерĕ.

Машина хула килкартисем хушшипе, газонсем тăрăх вĕçтерсе пычĕ. «Тӳртен каякан ăш хыпнă теççĕ. Кама та пулин таптаса ан пăрахтăр ку», — пăшăрханчĕ вăл.

* * *

Тинĕс хумĕ хысака çапăннă евĕр килсе çапăнчĕç кăнтăртисем. Агрегаткăрисем чакмарĕç. Алла мĕн лекнĕ, çавăнпа çапрĕç. Юн тухнине те пăхмарĕç. Чышрĕç, çыртрĕç, çурчĕç... Йывăр килетчĕ пулĕ Игорьпе юлташĕсене, видеосалонта ларакансем кăнтăртисене хыçалтан пырса çапрĕç. Ункăна лекнисем ним тума пĕлмерĕç. Вĕлеричченех хĕнетчĕç-ши пĕр-пĕрне, милици килсе çитрĕ. Машинăсем ӳлени, тĕслĕ çутатни хăратрĕ пулас. «Атас!» Самант та иртмерĕ, кăнтăртисем çаврăнчĕç те каялла тарма тытăнчĕç. Май килмест терĕç пулмалла. Хăпартланса кайнă Игорьсем вĕсене хăвалама пуçларĕç. Çурхи çăра шыв юхать тейĕн çакă ушкăн ача çине пăхсан. Темле çӳп-çапа та тупăн унта. Кил хушшисемпе, хутлăхсемпе чупса иртрĕç вĕсем, вырăн-вырăнпа каллех тытăçса ӳкрĕç, çăмха пек куса-куса кайрĕç.

Хăрушшăн кăшкăрашни, хăрăлтатса сывлани, пĕр вĕçĕмсĕр усал сăмах каласа вăрçни кăна илтĕнсе юлчĕ.

Шоссе хĕрнех тапса тухнăччĕ çак хура хумлă юхăм, çула пӳлнĕ пирки пĕчĕк юханшывсене пайланчĕ кайрĕ, куçран çухалчĕ. Милиционерсем çавăрса илнĕ ушкăн вара ланкашкана пухăнса юлнă шыв пек чӳхенчĕ. Игорьпе ун юлташĕсем пулчĕç вĕсем. Тем пекех хирĕç тăрсан та Валамовсене çĕнтерейменĕç.

* * *

«Пĕрерĕн-пĕрерĕн тыта-тыта печĕç вĕт!» — çул тăрăшшĕпех тарăхса пычĕ Игорь. Пăшăрхануллă шухăшсене вĕçне çитиччен йĕркелесе çитерейменрĕ — машина чарăнчĕ. Яри уçăлса кайрĕ алăкĕ. «Тыткăна» лекнĕ ачасене пĕр тăхтаса тăмасăр милици уйрăмне тĕке-тĕке кĕртсе ячĕç, камерăна хупса хучĕç.

* * *

Çывăхра пурăнакансем çак пăтăрмаха пурте тенĕ пекех хутшăнчĕç. Пĕрисем чӳречерен пăхса тăчĕç, пĕрисем хăлха тăратсах итлерĕç, виççĕмĕшсем урама та сиксе тухрĕç. Игорь амăшĕ те урамра пулчĕ. Упаран хăранă пек кăшкăра-кăшкăра таракан ачасенчен аран-аран пăрăнса тăрса юлчĕ Анфиса Андреевна. «Пăрăнман пулсан, чăн та, сысна кĕтӳ евĕр таптаса каçса кайнă пулĕччĕç, — пĕр пăшăрханса, пĕр хавасланса шухăшларĕ хĕрарăм. — Игорь ăçта-ши?» Пĕр авăк иккĕленсе тăчĕ-тăчĕ те ачасем хыççăн лăпăстатса чупса кайрĕ. Ывăлне çав хура юхăм юхтарса илсе кайнăнах туйăнчĕ ăна. «Хăваласа çитес те хăвăрт туртса кăларас, киле чĕнсе кĕртес те пĕрре лайăх кăна пĕçеркке парас», — терĕ. Хĕнесрен те, таптасран та хăрамарĕ вăл — чупрĕ те чупрĕ. Ăçта ĕнтĕ! Куç умĕнче мĕлтлеткелерĕç-ха вĕсем, пĕр-икĕ минут иртрĕ-и, таçта кайса кĕчĕç. Каç сĕмлĕхĕ çăтрĕ пуль, пăхкаларĕ-пăхкаларĕ Анфиса Андреевна — никама та курмарĕ. Хула урамĕсем, кунта хăрушă пăтăрмах пулса та иртмен тейĕн, пуш-пушах, шăп. Квартал тавра çаврăнкаланă хыççăн ывăлĕ килте пуль терĕ, хваттерне кĕчĕ. Çук иккен. Ним тума аптрарĕ хĕрарăм. Чӳрече умĕнчен хăпма пĕлмерĕ. Пăхрĕ те пăхрĕ. Каçхи урампа чупса килекен ачине курасса шанчĕ.

Вунпĕр сехет те иртрĕ. Юпа пек хытса тăракан хĕрарăм тин хускалчĕ. Сарлака çунатлă сăмси чылай вăхăт кантăка перĕнсе тăнă пирки лапчăнсах ларнă, кантăкĕ те тарланă. Питĕ пăшăрханулла хăй. Çĕр тĕрлĕ шухăш çавăрттарса пăх-ха, пĕкĕрĕлсех ларăн. Анфиса Андреевна тек чăтса тăраймарĕ, урама тухрĕ. Утнă чух утрĕ, чупнă чух чупрĕ. «Агрегатка» тавра тепре çаврăнасах терĕ. Пуçĕнчен хăйĕн пĕр çурт — милици уйрăмĕ — туха пĕлмерĕ. «Милициех лекнĕ пуль?» — ăшăрхантарчĕ шухăш.

* * *

«Одиссея вĕçленчĕ!» — çурма хурлăхлă, çурма савăнăçлă кулса ячĕ Игорь алăк хупăннă-хупăнманах. Унтан тем пулчĕ — йăкăлт-якăлт! сиксе кайрĕ камера тăрăх. Сегăпа Олежка та, пуçа

пĕксе тăракансем, хаваслăнрах пăхкалама тапратрĕç. Милици уйрăмĕнче мар, килте тейĕн. Тенкел çине саркаланса ларчĕç те ахăрма тытăнчĕç.

— Ха, ну, патăмăр та паян. Катрăмăр сăмсисене! Тек килсе чикмĕç, нихăçан та, — паçăрхи пек вĕриленсе илчĕ Сега.

Ну, паттăр! Çамки хăмпăланса тухнă-ха хăйĕн, алли ваннă, вăл вара ăна-кăна сисмест, каллех çапăçăва кĕрет. Хĕрлĕ шатраллă пичĕ каллех хĕремесленнĕ.

— Кăнтăртисене кантăр пек тылларăмăр! — лăстăр-лăстăр силленсе кулам пекки турĕ Олег. — Эпĕ вĕт Шавкăпа тĕл пултăм. Ну, тавăртăм та вара. Хама та лекрĕ, паллах.

Игорь чĕнмерĕ. Ун куçĕ умне паçăрхи çапăçу тепĕр хут тухса тăчĕ. Кăнтăртисене чылайăшне паллать пулин те, кампа çапăçнине астуса юлайман иккен вăл. Темле сăнсăр çынпа çыхланса ӳкнĕччĕ те, леш, те вăйлăрах пулчĕ, ун çине хăпарса ларчĕ, мăйран пăвма тытăнчĕ. Ăçтан вăй тухрĕ — пĕлмерĕ. Мĕнле тапрĕ чĕркуççипе — çăмха пек ывтăнса кайрĕ лешĕ. «Хыçса çӳрет пуль-ха купарчине?» — ăшра кăна кулса илчĕ Игорь. Унтан тăруках: «Ах, ухмах! Ыран шкула каймалла вĕт! Елена Александровна вăрçса вĕлерет ĕнтĕ», — тесе хушса хучĕ.

— Ха, учительсем курнă пулсан йăвансах каятчĕç пулĕ? — мăнкăмăлланчĕ Сергей.

— Астăватăр-и, епле тытрĕ пире пĕринче Елена Александровна? — ихĕлтетрĕ Олег. — Дискотекăна каятпăр тесе аран-аран улталаса хăвартăмăр вĕт. А, вăл пур: «Эсир çапăçма каятăр пуль?» — тет. — Вăт училка, нимрен те хăрамасть!

— Вăл пирĕн класнăй вĕт. Мĕнрен хăрамалла пултăр ун? — сасси Игорĕн хăрăлтатса тухрĕ. Лайăх мар туйрĕ ахăртнех.

— Ха, отличник тесе хĕрхенсе тăраççĕ тетĕн-им? Кĕтсех тăр. Ыран ак çатăрласа ярса илĕç те чун тухиччен силлĕç — директорĕ те, класнăйĕ те...

— Ыр кутлă пулма тăрăшакансем çинчен те манса ан кайăр. Пуху пухаççĕ те ак ăс пама тытăнаççĕ. «Эсир класа каялла туртатăр. Хулигансем эсир!» Тутисем вăрăм вара.

— Эпир хамăр территоришĕн çапăçатпăр. Ютсенне хапсăнмастпăр.

— Ха, ĕлĕкрех пурăннă пулсан алă çинче йăтса çӳремелле те пире, паттăрсене.

— Вĕсен умĕнче эпир нимĕнле паттăрсем те мар, Сега. Бандитсем эпир. Пирĕн пеккисене тахçанах шута илнĕ. Мĕн, эс хаçат вуламастăн-им?

— Пирĕн вăй, вăй! Эпир хамăр диктатура! Эпир рабочи класс!

— Кам юррине юрлан, Сега? Вĕренмесĕр вăйлă пулаймăн.

— Эп тек вӗренместӗп, Угорь. Хуть те мӗн тӑвӑр. Аслӑ пӗлӳ илни мана ним тума та кирлӗ мар. Эс те ытла мухтанса ан ҫӳре отличник тесе. Лекет аттун.

— Мӗн эсир, атьсем? Эпӗ кӗнеке вулама кӑна юрататӑп. Ытти енчен эпӗ те сирӗн пекех. Пит кирлӗ пулӗ мана ҫав математикӑпа физика. Унсӑрах лайӑх.

— Ӑт, ҫапла пултӑр та. Неччу унта ыр кутлӑ пулса ҫӳреме.

— Юрӗ, юрӗ! Елена Александровна ыйтсан та каламӑп.

— А, астӑватӑр-и Петӗре?

— Петух ҫинчен калатӑр-и ҫак?

— Ӑхӑ!

— Ну, култарса вӗлеретчӗ вӗт хӗрсене. Лешсем те урок пӗтессе алӑк кутӗнчех кӗтсе тӑратчӗҫ ӗнтӗ. Чӑхсем темерӗн.

— Ман гарем, ман гарем! — тетчӗ вара.

— Ӑх, маначчӗ вӗсем, ҫав хӗрсем. Эпӗ вӗсене...

— Каларӑн та! Сан пек пичкене кам юраттӑр?

— А, сана мӗншӗн? Ясар шатрисемшӗн-и?

— Иртсе каять!

— Ӑх, туртса ярасчӗ хӑть, — тип ҫӑварпа чаплаттарса илчӗ Олег.

Туртма хӑнӑхсан ҫапла ҫав вӑл. Ҫур сехет те иртмест, алӑ хӑех пырать. Ҫӑтса ятарӑн та ҫав ҫӑра тӗтӗме, пурнӑҫ йӑлтӑрсах каять. Ҫук чухне вара чӗтретсех пӑрахать. Ачасем те, мӗн пӗчӗкрен туртма хӑнӑхнӑскерсем, чӑтӑмне ҫухатрӗҫ пулмалла, пӳлӗме хутлама пуҫларӗҫ.

— Веҫех кӑларса илчӗҫ вӗт, — мӑкӑртатрӗ Игорь.

— Пӑхӑр-ха, пӑхӑр, Петух та пулса курнӑ кунта! — кӑшкӑрса ячӗ Сега.

Туссем Сергей ларнӑ тенкел патне пуҫтарӑнчӗҫ. «Леша, козел», «Вера-долбежка», «Это я, Петух!» — тенине вуласа илчӗҫ. Ачасене ку килӗшрӗ. Сӑмсапа тенӗ пек сухаласа вулама тытӑнчӗҫ. «Катя-шлюха!», «Я — молодец!», «Нет, ты, дубина!»... тата ытти темтепӗр ҫырса пӗтернӗ.

— Атьӑр, эпир те алӑ пусса хӑварар! — хавхаланса кайрӗ Сергей.

Ку шухӑшпа иккӗшӗ те килӗшрӗҫ. Кӗсьере камӑн мӗн пуррипе ҫуккине шыраса пӑхрӗҫ. Нимӗн те тупаймарӗҫ. Камерӑна кӗртес умӗн тӗплӗн ухтарнӑччӗ вӗсене. Мӗн пурри — Валамов аллинче.

— Час тупатпӑр! — ҫухалса каймарӗ Игорь. Куртка ҫӑрине туртса кӑларса илчӗ те ҫивчӗ хӗррипе «Петух + Угорь = Дружба» тесе ҫырса хучӗ. Юлташӗсем те юлмарӗҫ. «Это я, Бочка», «И еще Сега» сӑмахсем кукӑр-макӑр килсе тухрӗҫ пулин те килӗшрӗҫ. Унтан ҫав тенкелсем ҫинех тӑсӑлса выртрӗҫ те тӗлӗрме пуҫларӗҫ.

* * *

Анфиса Андреевна килтен тухни çур сехет çитрĕ ĕнтĕ. Чĕтресе, хăраса пычĕ вăл касхи урампа. Çур сехет мар, виçĕ сехет утнăн туйăнчĕ. Милици уйрăмĕ патне çитиччченех çапла пулчĕ. Патруль машинисем ĕретĕн ларнине курсан лăпланчĕ. Çак пăтăрмахлă вăхăтра вĕсем анчах хӳтĕлессĕн туйăнчĕç. Дежурнăй пӳлĕмĕнче те çутă пур. «Кунта çĕрĕпех çывăрмаççĕ-мĕн! — савăнчĕ хĕрарăм. — Кунта мĕн те пулин пĕлеççех». Алăка шаккаса-туса тăмарĕ, яри уçса ячĕ те çутă коридора хăюллăнах кĕрсе тăчĕ. Кĕрсе тăчĕ те шикленсе ӳкрĕ. Коридор тăршшĕпех халăх.

Дежурнăй пӳлĕмĕ умĕнче виççĕн тăраççĕ. Çаврăнса та пăхмаççĕ. Пĕр-икĕ сăмах хушаççĕ те шăпланаççĕ. Тем кĕтеççĕ курăнать.

Анфиса Андреевна аптраса тăчĕ. «Такамран ыйтмалла ĕнтĕ. Тахăшĕ асли?» — шухăшларĕ вăл. Чылай асапланчĕ çапла. Çăмарта тума хатĕрленнĕ чăхăн кăтиклесе ямалли кăна юлнăччĕ ун.

— Гражданка, сире кам кирлĕ? — янăраса кайрĕ çав вăхăтра пĕр мăнă сасă. Сержант иккен. Çӳллĕскер.

— Эпĕ мĕн-ха, Иванова эпĕ. Ман ывăл кунта мар-ши тесе килтĕм те, — темле айăпа кĕнĕн хуравларĕ Анфиса Андреевна. Çĕр тĕпне анса каясси кăна юлчĕ.

— Мĕн ятлă?

— Игорь, Игорь Иванов.

— Пур, пур ун пекки.

Сержант сăмах вакласа тăмарĕ. Коридорпа кĕрслеттерсе утса кайрĕ. Хĕрарăм та унран юлас темерĕ, хыçран вĕтĕртеттерсе пычĕ. «Мĕнле хытă пусса утать ку!» — хăра-хăра шухăшларĕ килте пĕр сассăр çӳреме хăнăхнă Анфиса Андреевна. Милиционер тимĕрленĕ пĕр алăк умĕнче чарăнчĕ, çăрапа аппаланма пикенчĕ.

— Иванов, к выходу! — хаяррăн илтĕнчĕ сасси.

Коридора йăпăр-япăр сиксе тухрĕ ача. Амăшĕн куçĕпе пĕрре кăна тĕл пулчĕ — тартрĕ. «Каллех пуçланчĕ», — кăмăлсăрланчĕ вăл.

Вĕсене пĕрле тăма памарĕç. Сержант Игоре çурăмран тĕкрĕ те — виççĕшĕ пĕр тан танклаттарса утса кайрĕç. Вăтăр иккĕмĕш пӳлĕм патне çитиччченех пычĕç çапла.

— Эсир кĕтĕр, — кĕскен кăна хушрĕ ертсе пыракан.

Анфиса Андреевна ним калама пĕлмерĕ. Шалкăм çапнă чухнехин хытса тăрса юлчĕ. Кушак кĕрсе тухмалăх уçă хăварнă алăкран сĕтел хушшинче тем çырса ларакан майор лайăххах курăнать. Юнашарах ачи, сержант...

«Мĕн тăваççĕ-ши ĕнтĕ ман ачапа, мĕн тăваççĕ-ши?» — ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр ăшталанса тăчĕ хĕрарăм уçи-уçми алăк кутĕнче.

— Эсир хăраса ан тăрăр, кĕрĕр. Эсир ăна пулăшма пултаратăр, тен?

Шарт сикрĕ Анфиса Андреевна. Ун çумĕнчех тепĕр милиционер. Пĕр сас кăлармасăр пырса тăнă.

Амăшĕ, хăйĕн ачи тесен, авăра та чăмĕ. Пĕр сăмах каламасăр кĕрсе тăчĕ çав пӳлĕме. Майор пуçĕпе сĕлтрĕ. «Иртсе ларăр!» — тенине пĕлтерчĕ ĕнтĕ ку.

Майорпа сержант темле хут çыраççĕ иккен. Ачан ятне, хушаматне, ăçта пурăннине, мĕнле шкулта вĕреннине тепĕр хут ыйта-ыйта тĕрĕслеççĕ. «Хут яма хатĕрленеççĕ. Коллектив умĕнче пăхса тухтарасшăн», — ăшăрханса ӳкрĕ Анфиса Андреевна. Вăл пĕрре ывăлĕ çине, тепре майор çине пăхса илчĕ, пĕри те чĕнмерĕ. Кашни хăйĕн шухăшĕпе пулчĕ.

«Ку пăтăрмахран мĕнле те пулин хăтăлса тухмаллах. Ача милицие лекнине пĕлсен ĕçе епле пырса кĕмелле, урама епле тухмалла, кӳршĕсем мĕн калĕç. Ай, намăс!»

«Ку хĕрарăм чипер çынах пулмалла. Ывăлĕ те пит ухмах курăнмасть. Ĕçре сӳтсе явмалла тăвăпăр та, çиттĕр».

«Власть хамăн пулнă пулсан ку шанкуя эпĕ тахçанах тĕрмене лартмалла та. Майора та çапла ытла интеллигентла тыткалама пăрахтарăттăм».

— Валамов сержант, Иванова епле тата ăçтан тытса килни çинчен çырнă хута парăр-ха. Тепре пăхса илер. Ăхă, йĕркене пăснă, усал сăмах каласа вăрçнă, милиционера хирĕç тăнă.

Анфиса Андреевна канăçсăррăн хускалса илчĕ. Куçĕ путса кĕрсе кайнăран-и — хуран курăнать. Тĕпсĕр кӳлĕ тейĕн. Унта ывăлĕ, сержант, майор, сĕтел, пукансем... Пĕр путаççĕ, пĕр тухаççĕ... Тем тĕрлĕ тĕкĕрленеççĕ. Майор çырчĕ те çырчĕ. Унтан вĕрентме тытăнчĕ. «Вунă сехетре килте пулмалла. Тĕрĕслесе тăмалла...» Таçта темиçе хут илтнĕ сăмахсем Игорь пуçне кĕмерĕç. Хăлхара янăракаланăçемĕн пач çухалчĕç. Калаçура вăл пуçĕпе сĕлтсе, аха! текелесе, ăнланман чухне темле ăнланнă пек пăхса ларчĕ. Ку пӳлĕмрен ун мĕн май килнĕ çавăн чухлĕ хăвăртрах тухса тарас килчĕ.

Çавă халĕ пĕтĕмпех çитрĕ.

Урама тухнă ывăлĕпе амăшĕ çăмăллăн сывласа ячĕç.

«Ирĕкре, эпĕ ирĕкре!» — савăнчĕ арçын ача.

«Чутах тĕрмене лартатчĕç вĕт», — хĕпĕртерĕ хĕрарăм ĕç çапла ăнăçлă вĕçленнĕшĕн.

Кĕçĕнни маларах, асли каярах юлса пыратчĕç çапла.

— Асту, Иванов, тек лекнĕ ан пултăр! — кĕрлесе кайрĕ каçхи урам тăрăх Валамов сасси.

Крыльца çине тухса тăнă та вăл аялтан пăхса тăракансене темле мăннăн курăнать. Пичĕ-куçĕ темле кӳренӳллĕ хăйĕн.

Амăшĕпе ачи хуравласа тăмарĕç. Çаврăнчĕç те утрĕç. Йăлтах

тĕттĕмленсе пушанса ҫитнĕ хула урамĕ вĕсене пĕр вунă-вунпилĕк метр кайсанах хăйĕн ытамне илчĕ, ҫăтрĕ тейĕн. Ура сассисем кăна халь, часах вĕсем те илтĕнми пулчĕҫ.

Ҫакна курса-илтсе тăракан Валамов сержант хăйĕн тата юлташĕсен пурнăҫне питлесе-тиркесе тăчĕ. «Ҫак ачасене хăваласа ҫӳресех иртсе каять ĕнтĕ пурнăҫ. Хирĕҫ тăраççĕ тата! Эп вĕсене! Милици ҫинчен ҫĕнĕ закон тухтăр-ха. Вара кăтартăп. Пире пур енчен те правасем параççĕ пулать. Тен, укҫа та хушăнĕ?»

Ҫапла канăҫсăрланса шухăшлакансем милици уйрăмĕнче татах пулчĕҫ.

«Ахалех пĕтеççĕ ҫак ачасем, — тахҫанах тĕвĕленме пуҫланă шухăшне малалла тăсрĕ Скворцов майор. — Пĕтĕмпех ухмахла килсе тухать вĕсен. Кăна хăть упраса хăвартăмăр пулмалла-ха. Тек килсе ҫакланас ҫук пек. Амăшĕ те пит хаяр пăхса ларчĕ. Хытаратех ачине. Хытарса та усси ҫук-ха. Унсăрăн та пит усал. Темле чир ернĕ тейĕн ҫынсене. Пĕр-пĕрне, мĕн те пулин сиксе тухтăр кăна, самантрах туртса ҫурма хатĕр. Ун пек чухне пулăшас тесен те пулăшаймăн. Вăй хума тивет. Милици те милици теççĕ вара. Усал теççĕ».

Камерăра ларса юлнă ачасем те чылайччен лăпланаймарĕҫ. Темле тăлăххăн курăнчĕҫ вĕсем. Пӳлĕмĕ те пушăрах...

— Ну, Угорь тухса шурĕ вĕт! — йĕрсе ярас пек каласа хучĕ Олег.

Ăна ҫав вăхăтра, ахăртнех, ҫеп-ҫемҫе те таса ăшă вырăн аса килчĕ. Тутлă апат тата! Амăшĕ вăрҫни-мĕнне пăхса тăмасăрах ҫăвар тулли ҫийĕччĕ вăл. Яшкине те сыпĕччĕ.

— Пире пĕрле илсе тухма ăс ҫитереймерĕ, — хушса хучĕ Сергей.

— Амăшĕ килĕшмерĕ пуль?

— Пулĕ те, — хăйĕн амăшĕ ҫапла ҫĕр хута килсе ҫӳрессе ĕненмерĕ Сергей. «Ĕҫсе лартнă пулĕ те-ха аттепе иккĕшĕ — выртаççĕ пуль юрă юрласа... Машина япалисене кăна кăларса ан пăрахчăр».

— Эх, хĕрсемччĕ халь! — каллех ĕмĕтленме пуҫларĕ Олег. Ăна Креп патĕнче улах ларни аса килчĕ. Унăн ашшĕпе амăшĕ, ачасен телейне, яла кайнăччĕ. Эх, тустарчĕҫ те вара ҫав йĕпĕлккесене. Кашни пӳлĕме пĕрер йăтса кайрĕҫ те алхасрĕҫ кăна. Хĕрĕсем те ĕнтĕ, кăчăк кăна турт. Эрехе-мĕне ярса панă пĕрне ĕҫсех тăраççĕ, табак туртаççĕ...

— Ха, каларăн та! Ăçта хĕрсем, унта укҫа. Эсĕ вара «Жигулин» кантăкне кăларма пымарăн, астăватăн-и?

— Ун чух эп мĕн пуль? Укҫа кирлех пулман пуль?

— Ха, укҫа вăл пурне те кирлĕ. Кунтан тухар-ха акă. Вăйлă ĕҫкĕ-ҫикĕ туса ирттерĕпĕр.

— Ун пек тăвас тесен тепĕр кантăк тупмалла. Ку вара хăрушă, лекме те пулать.

— Ха, шикли шикленет, кĕрĕк пĕркенет. Эпир ун йышшисем мар. Эпир пасар енчисем! Пире хирĕç пулакан пылчăк пулĕ таптанма, — ашшĕ сăмахĕсене каласа хучĕ Сергей. Ашшĕ ун шофер. Сергей те машин тесен вилсех каять. Курнă пĕрне, хĕре хывăнтарнă пек, хывăнтарас килет унăн. Ашшĕ руль тытма парсан вара: «Ах, ты моя любимая!» — тесе илет. «Жигули» вĕсен. Çĕнĕ марка. Эх, сăтăрать вара! Эх, тасатать! Эх, вĕçтерет те вара ашшĕ ирĕк парсан урам тăрăх. Хĕрсем те юратаççĕ ун пек чухне. Мана та мана ларт теççĕ. Пĕринчен-пĕри чипер. Мĕнле юратмăн ĕнтĕ. Ах, йĕреççĕ вара хăйсем кайран. Чавса çывăх та — çыртма çук.

Пĕринче çапла Натăна та лартса кайса пăхнăччĕ. Чавсине тулькка хăйĕннех шырама тиврĕ. Çыртасчĕ те... «Эх, май килмерĕ çав ун чух!» — сасăпах каласа хучĕ Сергей.

— Мĕн эс?

— Ним те мар. Хам тĕллĕн эп, тĕлленеп.

— Эпĕ те.

«Хула хĕрринчи вăрмана чиперех çитрĕç вĕсем. Чечек татма тухма та килĕшрĕ Ната. Хĕр Петĕрпе çӳренине пăхмасăрах тапăнчĕ ун чухне. Мĕнле питпе тулькка. Çук, май килмерĕ. Ната ыттисем пек мар, мăн кăмăллă, патне те пыртармарĕ. Мĕнле çупса ячĕ! Чутах кайса ӳкеттĕм. Вăт, ухмах, пĕрре туянни çитмерĕ пулмалла, тепре пырса кĕтĕм. Чутах çăмартасăр тăрса юлаттăм. Петуха каласа паратăп тесе те хăратрĕ тата. Хăратрĕ-хăратрех. Пĕлес-тăвас пулсан Петух тӳрех çакатчĕ те-ха! Юрать Ната сутмарĕ. Кайран шоколад илсе парса çырлахтарма тиврĕ мур хĕрне. Ну, лекет-ха вăл ман алла. Маняга хыççăн мана та черет çитĕ».

— Сега, Дуб мĕн тăвать-ши халь?

— Ларать, урăх мĕн тутăр! Вăт халь эпир ларнă пек.

— Юрать ун чухне сутса ятăмăр çав кантăка. Тупнă пулсан пире те лекетчĕ.

— Эпир Дуб пек ухмах мар вĕт. Мĕн тесе упрамалла пулнă унăн çав аккумуляторпа глушителе? Пĕлтĕр тăпăлтарса илнĕ радиоприемник те çапкаланса выртнă ун...

— Алăран ярса тытсан тунаймастăн. Явап тытмах тивет. Эпĕ ун пек ĕçе тек хутшăнмастăп, хуть те мĕн тăвăр.

— Ха, хăраса ӳкрĕн-и? Шампански ĕçсе тăрантăн-и? Хăвăн ирĕк. Эпир никама та вăйпа пусахласа ĕçлеттерместпĕр. Анчах эс парăму çинчен те манса ан кай. Икçĕр тенке яхăн пухăнса кайнă унта сан. Парса татмасан сăмсуна катăпăр. Дуб валли те кирлĕ. Пĕрмаях ыйтса çырса ярать. Колонире унта килте мар, хăв пĕлетĕн.

Олег чĕнмерĕ. «Ăçтан пĕлес ман?» — тесшĕнччĕ, чарчĕ хăйне хăй, чĕрре кĕрес темерĕ. Вăрттăн шухăшне, пуçа тахçанах пырса кĕнĕскере, малалла сыпса пычĕ. «Вĕренсе тухатăп та путевкăпа

пĕр-пĕр укçаллă çĕре ĕçлеме кайăп. Шупашкара тек нихăçан та каялла килмĕп. Мĕн шыраса çӳремелли пултăр кунта, патак-и? Мĕн пĕчĕкрен мăшкăллама пуçларĕç те — халь чарăнмаççĕ. Лекет тесе хăратать тата! Эпĕ те халĕ ыттисенчен юлмастăп. Кино курма е магазина çăкăр илме пыракан йĕпе сăмсасенчен вунăçирĕм пус шаккасах тăратăп. Тăрăшсан хăш чухне эрех илмелĕх те пухăнать. Табак туртма та çитет. Пĕр пайне Сега туртса илмесен тем тума та çитмелле те!

Теме те ăмсанать Олег, теме те тутанса пăхасшăн. Çукки пĕтерет. Килте вăхăтран-вăхăта çимелли те çук. Каккуй тăхăнма! Вăт Петух мĕнле яка çӳретчĕ. Хĕрсем те ăна, тен, çавăнпах юрататчĕç. Ман çине кам пăхтăр? «Фу, Бочка!» — теççĕ те çаврăнса утаççĕ. Юрать çав «долбежкăсем» пур.

«Ку ачана кăштах тăн кĕртсе илмелле пулать-ха. Ытла ирĕкленсе кайнă. Дуб çук та, чаракан та çук теççĕ пуль. Кăтартăп эп сана пĕчĕккисем хыççăн епле чупса çӳремеллине ак, вĕрентĕп. Асли вырăнне халь эпĕ юлнă. Дуб киличчен. Угорь та юлма пултарнă, паллах. Ачасем ăна юратарах параççĕ. Ăслă тата. Анчах вăл кунта тытăнса тăрас çук. Вунă класс пĕтерĕ те акă пĕр-пĕр института кайса кĕрĕ. «Пиллĕк» паллăсемпе кăна вĕренсе пырать, мур илесшĕ! Хамăрпа пĕрле хăварас тесен ăна пĕр-пĕр таса мар ĕçе явăçтармалла. Пĕр варалансан вара час тасатаймăн. Ĕмĕрлĕхе юлать. Ничаго, тытатпăр Угорьне те, Пичкине те», — пĕр пусăрăнса, пĕр хăпартланса ларчĕ Сергей. Шухăшпа вăл Наполеон та, Крез та пулса пăхрĕ. Камерăра ларни çинчен те, ыран епле килсе тухасси пирки те шухăшламарĕ. Ĕмĕтленчĕ те ĕмĕтленчĕ. Çывăрса каяс патнех çитнĕ хăй, пурпĕр, темле тискер кайăк евĕр, сисчĕвлĕ.

Милици уйрăмĕнче хушăран тем кĕмсĕртеткелет, аякра дежурнăй калаçни илтĕнет. Сайра хутра машина иртсе каять. Хула та темле çывăри-çывăрми.

Игорьпе амăшĕ, çав вăхăталлах пулĕ, апат çисе ларчĕç. Пăтăрмахсем иртсе кайнăран-и е тин кăна ăшаланă çĕрулми тутлă пулнăран ача кăмăлĕ уçăлса кайрĕ. Çул тăршшĕпех амăшĕ хытă ятларĕ пулин те, ним чĕнмесĕр пынăскер, халĕ шкулта ĕнер мĕн пулса иртни çинчен каласа кăтартма пуçларĕ. Лайăххи те сахал мар иккен унта! Елена Александровна пуçарнипе шкул ачисем «Царь Салтан» юмах лартма тытăннă. Игорь — Бабариха. Хĕрарăм рольне выляма интереслĕ пулнă пулмалла та, сарафана епле тăхăннисене, хăй епле кулăшла курăннине аса илчĕ. Анфиса Андреевнăн чунĕ те вырăнта. Ачи мĕн туни пĕтĕмпех килĕшет теха ăна! Хăйне тӳрккесрех тыткаланăшăн ятласа та илчĕ. «Милицие лекни ыр япала мар та, мĕн тăвас тен, чăтмаллахчĕ çав», — ӳкĕнчĕ вăл ывăлĕ çине ытарайми пăхса ларнăçемĕн.

— Уроксене тунă-и эсĕ? — ыйтрĕ Анфиса Андреевна.

— Тунă, — хуравларĕ Игорь. — Эпир шкултах тăватпăр.
— Мĕн пĕрмай шкулта? Килте ларма юрамасть-им? Мĕн...
Хĕрарăм каллех кăтăрса кайрĕ. Иртмен-мĕн çилĕ. Юрать телефон пур. Çав чарчĕ. Калама пуçланă сăмахне те каласа пĕтереймерĕ Анфиса Андреевна, кухньăран пушар чухнехи пек васкаса чупса тухса кайрĕ, çула май сĕтел кĕтессинчен çапăнса стакансене йăвантарса хăварчĕ, аякĕ ыратнипе айлатса та илчĕ. Ывăлĕ куç айĕн пăхса ларса юлнине те асăрхамарĕ вăл. Чăх чĕппи евĕр сарă телефон трубки çине хурчка пек ӳкрĕ. Игорьтен маларах ярса илес терĕ ĕнтĕ.
— Угорь! — хăрăлти сас татăлчĕ. Лини тепĕр енче трубкăна урăх çын ярса илнине сывланинченех уйăрса илчĕç пулмалла. Тек чĕнмерĕç.
— Нет его! — тесе хучĕ ним тума аптăранă Анфиса Андреевна халь-халь сиксе тăма хатĕр ывăлĕ çине шиклĕнреххĕн пăхса. «Каллех тĕрĕс мар турăм. Килте, тухмасть тесе каламаллаччĕ те — ĕçĕ те пĕтнĕ, — аванмарланса шутларĕ вăл Игорь юлташĕсем çинчен. Çав ачасемех пĕтереççĕ вĕт ман ывăлăма. Çавсем пулман пулсан кăвакарчăнсем пек чипер кăвăлтатса пурăннă пулăттăмăр та... Çавсем астараççĕ!»
Игорь кухньăран тухма васкамарĕ, телефон тепре сас парасса шансах ларчĕ. «Юлташсем пулчĕç ĕнтĕ, урăх кам пултăр? Çавсем пăшăрханаççĕ. Эпĕ килтине пĕлтермеллеччех. Кинотеатр умĕнчи телефонпа шăнкăравлаççĕ пуль? Тепĕр икĕ пус те пурха, те çук... Урама кăна тухмалла!
Çапла шухăшласа ларакан ача майĕпен тăчĕ те алкумне тухрĕ, пушмак тăхăнса ячĕ. Алăка уçма та ĕлкĕреймерĕ, амăшĕ паçăрхи пекех хăвăрт сиксе ӳкрĕ, ачана тĕрте-тĕртех çывăрмалли пӳлĕме кĕртсе ячĕ.
— Парап сана урам. Кайтарап сана час! — тӳпелесе илчĕ вăл ывăлне.
Игорь кӳренмерĕ. Амăшĕ çапла хăтланни килĕшрĕ те. Вăл кулса: «Каймастăп, ан хăра!» — терĕ те тап-таса вырăн ăшне урине çумасăрах кĕрсе выртрĕ. Ахаль чух лекетчĕ-ха, паян вара — шарламарĕç.
Тепĕр авăкран телефон каллех чĕтренсе илчĕ. Игорь хускалмарĕ те. Хуть те мĕн калаçчăр терĕ. Тăни те усси пулмастчĕ. Тем вăрçрĕ амăшĕ, тем пĕлтерчĕ — илтĕнмерĕ. Куç хăех хупăнчĕ. Телефонпа темле мăкăртатни ачашăн сăпка юрри пулчĕ. Вăл çывăрса кайрĕ...
Çур çĕр çапрĕ. Хулара халĕ Валамовпа Петров сержантсемсĕр пуçне куç хупман çын урăх юлмарĕ те пулĕ. Патруль машини «Агрегатка» районĕпе майĕпен ярăнса пычĕ. Нумай хутлă çуртсем те куçĕсене хупнă пек. Шоссе те пушă. Сержантсем мĕн те пулин кĕтмен çĕртен сиксе тухсан мĕн кирлине тума пурпĕр

хатĕр пулчĕç. Хăнăхнă мар-и? Опыт та пур. Çакăн пек шăп та пушă пек хулара çуралаççĕ чи хăрушă та усал ĕçсем. Милицире пиллĕкмĕш çул ĕçлесе Валамов ун пеккине нумай курнă. Петров та иккĕмĕш çул туртать ку туртана.

— Тăн кĕртсе тухас та ĕçĕ те пĕтнĕ! — паçăрхи шухăшах малалла тăсрĕ Валамов.

— Эсĕ каллех хăвăннех, — хирĕçлерĕ руль тытса пыракан Петров. — Мĕн тăн кĕртмелĕх пулччăр вĕсем? Хĕрхенме пĕлес пулать. Йĕпе тутасем вĕсем.

— Во! Йĕпе тутисем урлă пĕрре парас пулать те...

— Халĕ те леккелет пулмалла-ха. Хăвах шутласа пăх. Агрегаткăрисене паян, эпĕ ăнланнă тăрăх, кăнтăртисем такки тапкă çитерсе хăварчĕç вĕт. Çийĕнчен тата эпир тытса килтĕмĕр. Пур енчен те лекрĕ.

— Ăхă, эсĕ тата шеллесе пыр. Çавă кăна çитмест. Ахаль те йывăр. Мĕн эсĕ, эпĕ хирĕç тесе шутлатăн-и? Лайăх, кăмăллă, чипер ачасене эпĕ те юратăттăм. Кусене вара çапсах пăрахас килет. Мент тесе мăшкăлласшăн тата. Мусор текелеççĕ. Хăйсем камсем-ши?

— Эс順 уншăн ан ӳпкелеш. Ача-пăча вăл хушма ятсăр пурăнмасть. Хăйсем хушшинче те, асăрха, мĕнле кăна ят çук. Чмо, чувак, кент, чувиха тенисем кăна мĕне тăраççĕ. Козел е долбежка тата. Яланлăха çыпăçса лараççĕ те пĕтĕм пурнăçа пăсса хураççĕ. Çапла мар-и вара?

— Çаплине çапла та-ха. Пурпĕрех юратмастăп. Темле пакăç япала та кĕтме пулать вăл шанкуйсенчен. Хăшĕ-пĕрисем кайăкласнсах кайнă. Çынсем касхине урама тухма пăрахрĕç вĕт. Учительсем макăрас патнех çитрĕç. Мĕншĕн тетĕн?

— Кашни пулăмăн хăйĕн сăлтавĕ. Пĕри те хулиган çуралман. Кам пăснине шута ил.

— Кам вара?

— Ара, кам пултăр? Шкул, урама тухма хăракансем...

— Мĕнле апла?

— Çуралнă-çуралман çухалаççĕ те-ха вĕсем, куккук чĕпписем. Яслире, садикре иртет вĕсен пурнăç пуçламăшĕ. Талăкĕпех пурăнаççĕ унта. Агрегат заводĕнче ĕçлекенсем, эпĕ пĕлетĕп, ачисем патне эрнере пĕрре кăна пырса каяççĕ. Шкулта та çавах. Каллех продленкăсем, мероприятисем... Курмаççĕ те вĕт хăйсен ачисене çав апăрша амăшĕсем. Ăс паратпăр теççĕ тата!

— Эс ăçтан пĕлетĕн кун пек япаласене? Милицире ĕçлекенсем кун пек калаçнине илтмен-ха эпĕ. Хăвăн ачу çук-ха сан, пĕлетĕп.

— Вуланă, шухăшланă. Вăт воспитани тетпĕр. Ăçтан ăслă тăнлă-пуçлă ачасем çуралса ӳсчĕр ĕнтĕ пирĕн, енчен те вĕсем амăшĕн юрри-ташшине те, чĕлхине те пĕлмеççĕ пулсан? Кун

çинчен никам та шутламасть пулмалла. Тăрантса кăна пултăр. Урăхла тăвас текенсем те пур. Ача хăй камран çуралнине те ан пĕлтĕр теççĕ хăшĕ-пĕрисем.

— Кăна суеçтерен вара. Ун пекех мар ĕнтĕ.

— Ытлашши калап тетĕн-и? Ну, итле, манпа кӳршĕллĕ пĕр хĕрарăм ачине кам тесе çыртарчĕ тетĕн?

— Кам çуралнă, çавăн пек пуль.

— Çук çав! Вырăс çыртарчĕ. Вăт халь шутла. Кам пулать унран ӳссе çитсессĕн. Каламасăрах паллă. Сутăнчăк. Вăн мĕн чухлĕн чупса çӳрерĕç вĕсем паян урам тăрăх. Пĕри те хăйсене чăваш тесе йышăнмаççĕ. Чăвашла пĕлмеççĕ. Мăн аслашшĕсене кăна мар, ашшĕ-амăшĕсенне те илтмен вĕсем. Лешсем те вырăсла вĕрентеймесрен хăраса ӳкнĕ те ачисемпе тăван чĕлхепе пуплеме тетĕн-и, хăйсем чăваш пулнине те кăтартма именсе тăраççĕ.

— Тем эс аташса кайрăн пулмалла. Кун пек калаçнăшăн сана пуçран шăлас çук. Шкула каймалла сан. Милицире ĕçлемелли çын мар эс. Вăт унта пуçран лăпкаса йăпатăн та хăвăн шанкуйусене, шухăшусене те тĕрĕслесе пăхăн. Кунта вара çирĕпрех пулмалла. Хăш чух хаяр та. Кунта чукмарпа ĕçлемелле, акă мĕн.

— Çук, хаярланма кирлĕ мар. Ăслă-пуçлă çынсем чукмарĕсене пур пулсан та нихăçан та çĕклес çук.

— Мĕнпе чарасшăн вара эс çав преступниксене? Кирек кампа калаç, кирек мĕнле коллективра пул — пур çĕрте те çирĕп йĕрке ыйтаççĕ. Тек кун пек пурăнса пулмасть теççĕ. Çав йĕркесĕрлĕхе пула мар-и вара эпир çука тăрса юлтăмăр. Урам кăна мар, магазинра та пушă. Кĕсьере те çӳхерех!

— Кала, тата кала! Пирĕн хĕçпăшал сахал, машин çитмест, закон çемçе... Илтнĕ, пĕрре кăна мар илтнĕ. Йăлăхтарнă та. Ункун çине йăвантарма кирлĕ мар. Пĕр пытармасăрах каламалла кунта, — Петров темле ыйтуллăн пăхса илчĕ ĕçтешĕ çине. Иккĕленчĕ, ахăртнех. Çул хура лента май çаврăнса пыни е мотор пĕр тикĕс шавлани лăплантарчĕ, сăмахне малалла тăсрĕ. — Ман шутпа, айăп хамăртах! Милицире ĕçлекенсенчен чылайăшĕ никам та хирĕç тăманнине пула иртĕхсех кайнă. Вăрăсемпе, спекулянтсемпе çыхланнă. Ку пĕрре. Тепре — çак ачасене пăрахнă, ăна каларăм.

— Ну, çаптаратăн та эсĕ! Ăста, питĕ ăста! — темле пăхса каласа хучĕ Валамов.

Петров чĕнмерĕ. Хăйне темле тăруках çав паçăр тытса кайнă ача пек туйса илчĕ. Ăна та акă ярса илчĕç те... сержант кулса ячĕ.

Çул, хура лента евĕр, машина урапи çине чĕркенчĕ те чĕркенчĕ. Чĕркенĕ пĕр сӳтĕлсех пычĕ пуль — пĕтмерĕ... малаллах йыхăрчĕ. Таçта çутă кун пур пек. Çакна кĕтсе илмелле пек.

# Ната

Ҫав кун Ната шкула каймарӗ. Килтен портфель йӑтсах тухрӗ-ха вӑл. Амӑшӗпе те сывпуллашрӗ... Анчах ҫулӗ кукӑр пулчӗ, кайсан-кайсан Петӗр пурӑнакан ҫурт патне ҫаврӑнса ҫитрӗ.

Подъезд умӗнче кӗпӗрленсе тӑракан яшсене Ната пурне те паллать. Сегӑпа Угорь та унтах — у-шу кӗрешӳ мелӗсене вӗренкелем пекки туса тӑраҫҫӗ. Ҫӑварӗсенче пирус хӑйсен. Тӗтӗмӗ куҫа кӗрет пулмалла та, пуҫӗсене пӑркаласа каҫӑрткалаҫҫӗ. Шалпар кӗпе-йӗмсене вӑйлӑ ҫил хӑмпӑлантарать. Ната ихиклетсе илчӗ. Ҫӑварне лӑп хупларӗ ал лаппипе, таҫта тарса пытанас килчӗ. Такам курать пек, вӑрҫать пек. Урамра никамах та ҫук. Тантӑшӗсем шкулта, пурне те асӑрхаса тӑракан вӗтшакӑрсем ҫывӑраҫҫӗ е садикре.

Хӗрача хӑйне икӗ аллипе ытамлакаласа тӑчӗ. Шӑнса кайнӑ хулпуҫҫийӗсене сӑтӑркаларӗ. Тӑпӑр-тӑпӑр тусах ура айне лартнӑ портфельне йӑвантарса ячӗ. Шухӑ ҫил юбкине пилӗк таранах ҫӗклесе ярсан вӑтаннипе тӗм хыҫне кукленсе ларчӗ, аллипе пусарчӗ. Чылай сивӗ иккен!

Ҫулҫӑ тӑкса пӗтереймен тӗм вуллисем витӗр ача ушкӑнӗ чиперех курӑнать. Акӑ Ольгӑпа Таня ҫавтӑнса пырса тӑчӗҫ. Йӑлл! та йӑлл! кулаҫҫӗ. Пичӗ-куҫӗсем писевлӗ хӑйсен. «Ах, чӑх чӗпписем! — вӑрҫса илчӗ Ната. — Ҫӑвӑр автан патне килтӗр-иха? Ӑт кӑтиклеҫҫӗ!» Чӗри патӗнче тем пӗҫертрӗ те пӗҫертрӗ. Кукленсе ларнӑ хӗрача чӑтма хал ҫитереймерӗ, вӑшт! тӳрленсе тӑчӗ те урипе тӑрс! тапрӗ. Чупса тухса ҫулса илӗччӗ те ҫӳҫӗсенчен, ним те тӑваймӑн, ҫурт кӗтессинчех тӑпӑртатса тӑма тивет. Намӑс, ай, намӑс ӑна халӗ халӑх умне тухма та. Петӗре курӑнма та. Пӑрахрӗ ӑна Петӗр, пӑрахрӗ! Натӑн тӑртанса кайнӑ куҫне куҫҫуль хупларӗ. Тӑлӑххӑн пурӑнни — куҫҫуль тӑкни. Мӗн тӑвӑн, ӑҫта кайса кӗрӗн юлташсӑр-мӗнсӗр тӑрса юлсан? Ҫакӑнса вилме те тӑнӑччӗ вӑл. Амӑшӗ сыхласа тӑнах пуль — памарӗ. Петӗре пурпӗрех тавӑрап тесе арҫынсемпе те ҫыхланса пӑхрӗ — ҫук, лӑплантараймарӗ кӳтсе ҫитнӗ чунне. Петӗр патнех туртӑнчӗ вӑл, ӑнах кӗтрӗ. Кӗтсе илеймерӗ. Хӑй те ютшӑнчӗ ӗнтӗ. Петӗр тавра ҫаврӑнакан ют хӗрсем ҫывӑрса тӑмарӗҫ вара, савнийӗн пуҫне ҫавӑрсах ячӗҫ. Ҫыру ҫырса ярасчӗ хӑть! «Суккӑр, чӗресӗр ҫын эсӗ! Автан эсӗ!» — каллех вӑрҫма пуҫларӗ Ната. Ачасем вара шӑпланчӗҫ. Тин ҫеҫ кайӑк пасарӗ пек чӗвӗлтететчӗҫ вӗт-ха. Халӗ ҫывӑхри тенкелсем ҫине ҫерҫисем пек ларса тухнӑ та темле кӗрхи шухӑша путнӑ. Пирӗн те часах салтака кайма вӑхӑт ҫитет теҫҫӗши? Уйрӑлу саманчӗ чӗрисене хурлантарчӗ-ши? Ольгӑпа Таня та пуҫӗсене уснӑ. Чисти картин!

— Петух, Петух! — кӑшкӑрса ячӗҫ ҫав вӑхӑтрах арҫын ачасем.

— Петя, Петяня! — чĕвĕлтетеççĕ хĕрсем.

Подъездран йăтăнса тухнă Петĕр темле юттăн курăнать. Юлташĕсем евĕрлех шалпар тăхăннă-ха хăй. Кивĕрех тум анчах! Кутамкка! Акă мĕн. Амăшĕ темтепĕр чиксе тултарнă та — халĕ вăл çурăм хыçĕнче тем пысăкăш мăкăртса тăрать. Ывăлĕ çумĕнчех тăрать-ха вăл, Наталья Петровна. Шăп тăрать. Пуçне пĕкнĕ... Петĕр тавра вара явăнаççĕ кăна. Кутамккине самантрах хывса илчĕç. Хăйне те йăтса кайма хатĕр. Çапла хĕвĕшнĕ хыççăн пĕр-пĕрне çапкаласа, ытамлашкаласа аслă çул çине тухрĕç. Машина-мĕн килнине те пăхмарĕç. Клаксонсемпе çухăртни, пиклеттерни авăклăха пулин те — хăйне майлă оркестр. Ачасене ку килĕшрĕ, кулкаласа кăна пычĕç. Тен, вĕсене çапла ушкăнăн çӳренисем аса килчĕç. Каçпулттипе, юрттипе...

Ната ушкăн ача курăнми пулсан тин хускалчĕ. Асăрхасран хăрарĕ. Йăпшăнарах, аякран кăна пăхса пычĕ. Наталья Петровна симĕс плащĕ çул маякĕ пулчĕ. Вăл та юларах панăмĕн. Лешсем вашлаттараççĕ кăна. Васкамасăртарах утма юраман пулĕ? Ват çын вĕт! Çапла пăрахса хăварма начар çын та мар вăл, Петĕр амăшĕ. Пĕринче питĕ аван мар килсе тухрĕ. Тавах ăна уншăн. Хăй те халĕ акă тăлăх. Натăн çав симĕс плащлă хĕрарăма хăваласа çитес те хулран тытас, çума-çумăн утас килчĕ. Çапла пулмаллаччĕ те. Çук çав, шăпа пӳрмен.

Военкомат умĕнче халăх лăках. Ашшĕ-амăшĕсем, юлташĕсем, призывниксем хăйсем ушкăнăн-ушкăнăн тăрса тухнă. Тахçанах пуçланнă калаçăвĕсем, паянах вĕçленес пек тăкăнаççĕ сăмахĕсем...

Уйрăлу хăй çапла хавхалантарать-и е çын хăй çапла хăвăрт калаçса çак саманта тăсасшăн — паллă мар. Пур çĕртен те: «Мама! Папа! Сынок!» — тенисем илтĕнеççĕ. Çамрăксем пĕр-пĕрин адресĕсене çыра-çыра илеççĕ, ĕмĕр туслă пурăнма тупа тăваççĕ, шарт! çаптарса ал параççĕ. Хăйсем темле аслăланса кайнăн курăнаççĕ. Ара, пулас салтаксем вĕт!

Ната Петĕр тавра пухăннă ушкăна паçăрхи пекех аякран пăхса сăнаса тăчĕ. Пĕр хурланчĕ, пĕр савăнчĕ. «Куç умĕнчен тасални те паха, аса илтерсе тăмĕ хăть!» — шухăшларĕ шухă хĕр. Тепре тĕл пулса куçа-куçăн тăрса калаçасса, паллах, шанмарĕ. Петĕр кăна мар, вăл хăй те çула тухма хатĕрленет. «Мускава ПТУна вĕренме каятăп, — тахçанах çуратнă ĕмĕте тепĕр хут çавăрттарса ӳстерсе тăчĕ Ната. — Сывă пул, савниçĕм! Тен, тек тĕл пулаймăпăр та».

Ăна Петĕр, паллах, курмарĕ. Ната килмен-и тесе çаврăнкаласа пăхкаларĕ-ха, анчах ăçтан асăрхăн ĕнтĕ ăна çакă ярмăрккара. Юлташĕсем те ун-кун шутласа тăма памаççĕ. Тем ыйтаççĕ, тем калаççĕ... Амăшĕпе пĕрле тăма та вăхăт çук унăн. Ната Наталья Петровнăна та куçран вĕçертмерĕ. Ывăлĕ патне

пыма темиçе хутчен те аппаланса пăхрĕ хĕрарăм — пулмарĕ. Ача ушкăнне татса кĕреймерĕ. Ĕçтешĕсем пулмалла, тем кала-кала лăплантарчĕç.

Хушаматран чĕнсе кăларма тытăнчĕç. Ачасем Петĕре алă çинчех йăтса кайрĕç. Йăттарасшăн мар хăй. Анма хăтланкалать. Алне сулам пек тăвать. Питĕнче темле айăплă кулă. «Эпир каятпăр, ятласа ан юлăр!» — тет пек. Кутамкки автобуса кĕме памасть. Темиçе хутчен туртăнсан тин вĕçерĕнчĕ. Петĕр пушăрах вырăн тупса вырнаçса тăчĕ. Тепĕр хут сывпуллашас тесе алне çĕклерĕ, Ната куçĕпе тĕл пулчĕ. Шарр! çурăлса кайрĕ хĕр чĕри, куçĕ хуралса килчĕ. «Курчĕ, курчĕ!» Темле куç айĕн пăхать пек Петĕр, шухăшлă темле. Кăлăхах савăнчĕ хĕр. Палласа-туса мар, ахальтен кăна ун еннелле пăхса илнĕ-мĕн вăл. Çавна ăнланса илнĕ хĕр чĕри тепĕр хут çурăлса кайрĕ. Мĕнле чăтрĕ-ши, мĕнле чарăнса лармарĕ? Капланса килнĕ куççуль витĕр автобус тапранса кайнине те, Петĕр чӳречерен пăхса юлашки хут ал сулнине те вĕçне çитиччен курса пĕтерейменрĕ. Темле вăй хăваларĕ ăна ку вырăнтан, чупрĕ те чупрĕ урам тăрăх. Киле çитсе ӳксен тин сывлăш çавăрса ячĕ. Йĕре-йĕре чупакан хĕр çине иртен-çӳренсем ним ăнланмасăр пăхса тăрса юлчĕç. Никама та кирлĕ пулмарĕ вăл. Никама та!

Хваттер алăкне хупнă-хупман, хывăннă-хывăнман йăванса кайрĕ хĕр хăйĕн кравачĕ çине. Татăла-татăла йĕчĕ. Куççулĕ минтер витĕр те тухрĕ пулĕ. Чылайччен выртрĕ çапла. Пĕр хускалмасăр выртсан-выртсан тăчĕ те чӳрече умне пычĕ. Урамра каç хуçаланма пуçланă. Кĕрхи кун кĕске. Тĕксĕм хутлăхра пĕртен-пĕр çутă — хурăн çулçи çути. Çунать вăл, пĕрре сарă, тепре хĕрлĕ тĕспе хĕмленет, чуна сиплет. Хĕр хурлăхлăн кулса илчĕ. Хăйне кĕрхи хĕрӳллĕ, кĕрхи куççуллĕ çулçă терĕ пуль, шухăшпа кăна тăваттăмĕш хутран татăлса ӳкрĕ. Ярăнса-ярăнса кайрĕ, чунĕ çӳçенсе-çӳçенсе килчĕ. «Çук, çук! — пăшăлтатрĕ хĕр тути. — Хам çине тек нихăçан та алă хурас çук». Ната кантăк патĕнчен чакса-чакса пычĕ те кĕнеке шкафĕ çумне çапăнчĕ, алăкĕ уçăлса кайрĕ. Кунта пĕтĕмпех Ната кĕнекисем. Альбом, альбом та кунтах. Унта ун тантăшĕсен фотоӳкерчĕкĕсем. Петĕр те пур унта. Асăрхануллăн, темле шанмасăртарах антарчĕ Ната çӳлĕкри альбома. Уçкаласа пăхма пуçларĕ. Акă вăл. Пĕчĕккĕ, çарапакка Ната. Акă ача садĕнче. Аялта «Теремок» тесе çырса хунă. Çуркунне ун çумĕнче курăк чи малтан тухатчĕ. Ем-ешĕлччĕ. Мĕнччĕ-ха тата? А-а, çавăнта мар-и-ха тăпăлтарчĕç ун çӳçне чăн малтан. Çав пĕчĕксем те пĕр-пĕрне пĕтерме пултараççĕ тесен халь кам ĕненĕ? Ăна валли вара теттесем те памастчĕç. Вырăсла начартарах пĕлетчĕ те ĕнтĕ, чăнах та, ыйтма та тавçăрса илейместчĕ. Эх, кӳренсе лартрĕ те вăл ун чухне, усаллансах кайрĕ. Амăшĕ те, воспитательница та: «Мĕн пулчĕ те мĕн пулчĕ?» — теççĕ.

Унпа çак пурнăçра пĕрремĕш хут чи хăрушă япала пулса иртнине пуçа та илмеççĕ. Пĕр сас та кăлармарĕ вăл, пĕчĕккĕ пулсан та ăнланчĕ: «Кусем ютсем!» Чĕлхесĕрленчĕ. Тетте ыйтма пăрахрĕ. Кирлĕ чух карт! кăна туртса илетчĕ... Лешсем те Ната хăйсем пекех харсăрланса кайнине кура тек тивмерĕç. Каккуй тивме, туслашма тăрăшрĕç. Вырăсла та калаçма вĕреннĕ хыççăн воспитательницăна сывлăх сунма пăрахрĕ вара, амăшне те итлеми пулчĕ. Вĕсене çĕнтерме ним те мар иккен, пĕлмĕше пер кăна!

Петĕрпе çӳретчĕç вĕсем çав ача садне. Акă вăл! Мулкач хăлхаллă ача. Мĕн чухлĕ вылянă пуль, мĕн чухлĕ хирĕçнĕ — шутласа та кăлараймăн. «Я — невеста! Я — невеста!» — текелесе сиккелесе çӳретчĕ вăл ун чухне. Каччи Петĕрех пулнă-ши, астумасть. Шкула та пĕрлех кайрĕç вĕсем. Петĕр ашшĕ фото çапса илнĕччĕ. Ольгăпа Таня та çавăнтах. Чечек пуххи йăтнă хăйсем. «Каллех кусем! — тарăхса илчĕ Ната. Ӳкерчĕке тепĕр май çавăрса хучĕ. Ку пĕрремĕш класра пĕрле ӳкерттерни, ку иккĕмĕш, виççĕмĕш... тăваттăмĕш класра чирлесе ӳкрĕ. Хĕлĕпех выртрĕ. Тантăшĕсенчен юлчĕ. Тепĕр вĕренӳ çулĕнче кĕçĕнреххисемпе ларма тиврĕ вара. Те хăй ӳссе кайнăран, те аслăрах пулнăран пĕр класрисене килĕштерсех каймастчĕ. Айванрах пек курăнатчĕç вĕсем. Чунĕ ун Петĕрсен класĕ патнех туртăнатчĕ.

«Вăт айван! Тăххăрмĕш класс таран вĕт пытарса пурăнтăм хамăн юратăвăма! Пурпĕр пытараймарăм. Елена Александровна, вуннăмăш классен руководителĕччĕ, асăрхарĕ. Ара, пĕрмай Петĕр тăхтава тухасса кĕтсе çӳреттĕмччĕ те. Алăк кутĕнче Петĕрпе ыталанса тăнине те пĕрре кăна мар курнă пуль. Ах, кураймастчĕ те вара! Математик темерĕн. Питĕ тăнлă тыткалатчĕ хăйне хăй. Мĕн чухлĕ амантмарĕ пуль вăл ман чĕрене? Ольгăпа Таня тата! Вĕсем те хăпма пĕлместчĕç вĕт. «Петя, Петя, Петушок!» — тесе çеç тăратчĕç.

Пĕринче тӳпелешсех кайрăмăр. Шкулта дискотека пыратчĕ. Халăх зал тулли. Музыка мĕкĕрет. Тĕттĕм. Стена çинчи хĕрлĕ, сарă, симĕс лампочкăсем кас-кас ялтăрса илеççĕ те çавра тăрса тухнă ачасен сăнĕсене темле виле кăтартаççĕ. Лешсем те — чисти робот. Пĕр шухăшсăр питсем, пĕр майлă, йăлăхтармăш хусканусем... Темле сомнамбула, темле тĕлĕк. Авалхи сунарçăсем çапла хăтланнă теççĕ. Ӳкерчĕк те курăнчĕ. Вĕсене ăнланма пулать. Кусене? Е кусем те сунара кайма хатĕрленеççĕ? Тем юрласа тем чӳклеççĕ. Ача вăййи те мар ку. Тем ку? Тен, пулккăн-пулккăн çӳрес йăла та çавăнтанах тухнă? Кирек епле чĕрчунăн те хăйĕн ушкăнĕ, чĕлхи, территорийĕ, йĕрки. Ним тĕлĕнмелли те çук. Елена Александровна çакна ăнланмастчĕ пулмалла. Ах, вăрçатчĕ! Хам та тин ăнланса илтĕм мар-и? — Ната хăй çапла ăсланнăшăн савăнам пекки турĕ — тухмарĕ.

Хурлăх ăна паçăрхи пек мар пулин те самаях пусăрласа тăчĕ-ха. Арçын ачасем хăйсене мĕншĕн çапла тыткаланине ăнланса илни пулăшрĕ пулмалла, Ната çăмăллăн сывласа илчĕ. — Айăплă мар вĕсем! Тĕнче тытăмĕ çапла. Ун серепине лекрĕ те вăл хăй те... туалета кайнăччĕ ун чухне. Унта... Ольгăпа Таня. Табак туртаççĕ. Куçĕсем темле урмăш. Кăшт янă пулмалла. Ахальтен ун-кун тайкаланса тăрас çук. Тен, чиперех тухса каятчĕ вăл? Кăмăллăнах калаçатчĕç.

— Ната, может, дернешь? — теççĕ.

— Çук, çук! —тенипех хăтăлса юласшăнччĕ — пулмарĕ. Тарма та памарĕç. Ольга алăк ани урлă ура ячĕ. Сирес тесен те сирейменĕн, сиксе те каçаймăн.

— Тен, туртса яратăн? — сĕнеççĕ хайхи. Таня аллинче сигарет.

— Тавай! — терĕ Ната хăйĕнчен хăй тĕлĕнсе. Класри хĕрсем турткалатчĕç çав. Ку ĕçе хăй хутшăнман, питлени те пулман. Хăйсенне хăйсем пĕлеççĕ тенĕ. Акă халĕ тем пулчĕ? Парăнчĕши, пĕрре ĕмсе пăхрĕ, тепре — сывлăшсăр тăрса юлчĕ. Ольгăпа Таня пулăшам пекки туса çурăмран кӳпкеççĕ. Хытах параççĕ. Чăтса тăраймарĕ Ната.

— Мĕн эсир? Вĕлеретĕр вĕт! — терĕ чыхăна-чыхăна кайса.

— А, çавă кирлĕ те! — йĕлпĕрчĕ Ольга. Çӳçĕ-пуçĕ сапаланчăк хăйĕн.

— Хĕрсем, — йăлăнса пăхрĕ Ната. — Мĕн усалпа эсир?

— Неччу Петĕр çумне çыпçăнма! — чăн сăлтавне пĕлтерчĕ Таня. Çăмăл пулмарĕ пулмалла ăна çак сăмахсене калама, хĕремесленсех кайрĕ. Чипер тăнă çĕртех, Натăран пысăкрах пулас терĕ пулмалла, сиккелесе илчĕ, пит-куçне пĕркелерĕ. «Чăх чĕппи!» — пырса кĕчĕ пуçа. Çавă тухрĕ те чĕлхе вĕçне.

— Ах, чăх чĕппи! Мĕн сиккелен кунта! Петĕр вăл нихăçан та сан пулман, пулас та çук.

— Мĕн, лайăх таптать-им? — чарăнмарĕ Ольга.

— Сан ĕç çук унта!

Ната тухса тарма тăчĕ. Ăçта унта? Çатăрт! турĕ кофта çанни. Ăнланса та ĕлкĕреймерĕ — питрен çутăлтарса ячĕç. Леш тахçан ача садĕнче хĕненĕ пекех туйăнса кайрĕ Натăна. Ун чухне те хăйĕн йĕркине пăхăнманшăн лекрĕ, халĕ те. Анчах Ната унчченхи мар ĕнтĕ. Пĕчĕк мар. Пĕррех тапрĕ. Çул уçăлчĕ. Таня вара ывтăнса кăна юлчĕ.

— Шалава! — кăшкăрса ячĕç хăйсен усал кăмăлне çырлахтарайман хĕрсем.

Таçтан ахрăммăн çĕкленсе килчĕ çав сăмах. «Шалава, шалава, шалава!» янăраса кайрĕ хăлхара. Пырса çапăнмассерен ыраттарчĕ. «Эпĕ шалава, — пăшăлтатрĕ хĕр. — Анчах пурпĕрех сирĕн пек пулмастăпах!»

Шкаф умӗнче альбом пăхкаласа тăракан хӗр хашш! сывласа илчӗ, ниҫта кайса кӗреймен пиркиех пуль пӳлӗм тăрăх урлă-пирлӗ уткаларӗ те вырăнӗ ҫине кайса ӳкрӗ. Куҫҫулӗ таврăнса тухрӗ. Йӗмерӗ. Альбома уҫкаларӗ.

...Атăл леш енчи пляжра ӳкерттернӗччӗ. Ах, лайăхчӗ сар хăйăр ҫинче выртма, шыва кӗме, тытмалла выляма... Петӗрпе пӗрле ӳкерттернӗччӗ. Адампа Ева пек, — ăнланса илчӗ Ната, — ҫылăха кӗртекен панулми ҫиййччен. Петӗр куҫ айӗн пăхса тăрать. Футболист темерӗн. Пӗрмай мечӗк шыраса чупаҫҫӗ те... Ҫавăнпа пулӗ вăл? Сыхă тăрать. Халь-халь сиксе ӳкес пек. Куҫӗсем, те хӗснӗрен, те хӗвеле хирӗҫ тăнăран, сивӗрех пăхаҫҫӗ. Пӗвӗ-сийӗ — Аполлонăн. Ҫав илеме тепӗр хут курнă хӗрачан ӳт-пӗвӗ савăклăн ҫӳҫенсе илчӗ. Петӗрӗн вăйлă аллисене, ҫав хумлă-хумлă хытă мускулсене ачашласа чуптăвас килчӗ. Чармарӗ хăйне хӗр, ӗмӗтленчӗ те ӗмӗтленчӗ. Акă вӗсем Атăл хӗррипе ҫил кăларса чупаҫҫӗ пек. Натăн ҫăра ҫӳҫӗ хыпса илнӗ вутпуҫҫи пек. Вӗҫсе кайма та хатӗр халӗ вӗсем. Петӗр ăна тытать те ҫӳле-ҫӳле ҫӗклет. Ҫавăрттарать кăна. Тытман вырăн хăвармарӗ пуль. Алли хытă. Ыраттарать. Пурпӗр савăк. Татах вылятчӗҫ пулӗ, темле сасă, темле аслати кӗрлесе кайрӗ пуҫ ҫийӗн. Темле хăрушă вăй кӗрсе тăчӗ хӗрпе каччă хушшине. Кӗрсе тăчӗ те уйăрчӗ. Пӗри военкоматра халь, тепри — вырăн ҫинче урамри шăв-шава итлесе выртать. Унта вăйлă ҫил тухса кайнă-мӗн. Балкон ҫиттине кӗмсӗртеттерет. Пӗлӗтленнӗ.

«Ҫав Манягăна-и? Ал айӗнче мӗн те пулин пулнă пулсан эпӗ ăна ҫапсах пăрахнă пулăттăм, чиксе вӗлерӗттӗм. Ах, ҫак вырăн ҫинчех вӗт мана мăшкăлларӗҫ!» — Хӗр хăй те сисмерӗ, такамран хӳтӗленнӗ пек туса, аллисене ҫӗклерӗ, кравать ҫитти тăрăх куса-куса кайрӗ. Карланкинчен темле хăрăлти сасăсем тапса тухрӗҫ. Пуҫра тахҫан илтнӗ сăмахсем янăрама тытăнчӗҫ.

— Ан тив, ан тив мана, Маняга? Эпӗ хӗр вӗт! Ан тив.

— Хах-ха-ха! — ахăрчӗ аслати пек сасă.

— Ман Петӗр пур, эпӗ Петӗре юрататăп.

Ши-ши-ши! шăхăрчӗ сивӗ ҫил.

— Ҫакăнса вилетӗп. Ан тив! Хӗрхен...

А-а-у-у-й! явăнчӗ хура пӗлӗт.

Лӳчӗркенсе пӗтнӗ ҫитти ҫинче сарăлса выртакан хӗрне курсан амăшӗ вăрҫас тенӗччӗ. Альбомри сăнӳкерчӗксене те сапаласа пӗтернӗ... Ната пӗр хускалмасăр, пӗр сывламасăр тенӗ пек выртни чарчӗ. «Чирлемен-и ку?» — пăшăрханчӗ амăшӗ. Хӗрне ҫамкинчен асăрхануллăн чуптуса пăхрӗ. Пӗҫерет пек. Шăнса ан кайтăр тесе кравать ҫиттипех витме тăчӗ. Те аллипе лектерчӗ, те сивӗ ҫапрӗ? — Ната шарт! сиксе вăранса кайрӗ.

— А-а-а! — кăшкăрса ячӗ вăл. Пӗшкӗннӗ амăшне такам терӗ пуль, тӗртсе ячӗ.

— Мĕн эс, ухмаха тухрăн-им? — çухăрса ячĕ амăшĕ.

— А-а-а! Кай кунтан, кай!

Хĕр сиксе тăчĕ те пӳлĕмрен такамран хăранă чухнехи пек кăшкăрса тухса тарчĕ. Çула май шкул сумкине те ярса илнĕччĕ вăл. Тем ăнкарчĕ, алăк кутне ывăтса хăварчĕ. «Ăçта каян?» — тесшĕнччĕ амăшĕ — ĕлкĕреймерĕ. Тĕпĕр-тĕпĕр, тĕпĕр-тĕпĕр чупса анса кайрĕ хĕр. Подъездран тухрĕ кăна — сивĕ çил ярса илчĕ.

А-а-у-у-ай!

Кăмпăр-кăмпăр-кăмпăр!

Ха-ха-ха! кулса ячĕ пĕтĕм тĕнче. Тĕнче мар-мĕн, çамрăксен ушкăнĕ. Угорь, Сега, Бочка унта. Вĕсемпе хутшăнас темерĕ Ната. Утрĕ те утрĕ, ăçталла куç курнă — çавăнталла, васкамасăр, хурлăхлă утрĕ. Хура кĕркунне унпа пĕр кĕвĕллĕ пулчĕ. Çил пулчĕ-и вăл, ăна та пĕлмерĕ, хĕр чунпа ярăнчĕ те ярăнчĕ. Пĕр çирĕм минут утсан шоссе хĕрне тухрĕ. Машинăсем пăвансем пек пăнлатса ирте-ирте каяççĕ унталла-кунталла. Натăна кашнинчех хăйне пырса çапăнассăн туйăнать, кĕлетки кашнинчех каялла ывтăна-ывтăна илет. Темрен те хăрать хĕр. Машинăран та хăрать. Хула хĕрĕ пуль? Чай-н-н! тутарса тормозне пусса лартрĕ пĕри. Ната умнех чарчĕ.

— Что стоишь, поехали! — мăйăхлă хăй. Пĕр хĕрĕхре пуль. Куçĕ ыйтуллă. Те кулаççĕ, те хĕрхенеççĕ.

«Каллех, каллех çыпçăнаççĕ мур арçынĕсем! — таçтан шалтан вăйсăррăн çĕкленсе хăпарчĕ тарăху. — Çул хĕрринче тăма юрамасть теççĕ. Ку вăл шоферсен чĕлхипе каласан хăвна сутма хатĕр тени. Ăт, шухăша кайса тăр. А, тепĕр тесен, мĕн çухататăп вара? — темле çилленсе шухăшларĕ хĕр. — Ларатăп та каятăп. Мĕн çухатас тенине тахçанах çухатнă. Кам эпĕ халь? — Хĕр тути мăкăрăлса, кукăрăлса илчĕ. — Шалава кăна!»

— Не бойсь, не пожалеешь! — хĕр çапла шухăша кайса тăнине шофер хăйне майлă ăнланчĕ пулмалла. — И вообще, во всем твоя воля!

Хăй ватăрах курăннине те, хĕр ытла та çамрăк пулнине те ăнланса илчĕ ĕнтĕ вăл ку темĕн. Май килмест тесех шутланăччĕ. Хистени пулăшрĕ-и е хĕр кăмăлĕ пач палламан çын енне туртăнчĕ — паллă мар.

«Мĕнех, вăл та пĕччен, эпĕ те тăлăх. Пĕрле пулăпăр та... Çын çынах. Машина пур, лайăх тăхăннă, укçаллă пуль-ха!»

— Атя! — килĕшрĕ хĕр. Вăшт! кăна кĕрсе ларчĕ. Кĕрсе ларчĕ те çын курчĕ пулĕ тесе питĕ хăраса ӳкрĕ. Тухмах тăнăччĕ. Вырăнтан тăрук тапранса кайнă машина ăна кресло çине йăвантарса ячĕ, май памарĕ. Ната алăк авăрне тепĕр хут хыпашласа шыраса тупрĕ.

— Лайăхрах хуп! — хушрĕ шофер.

Çапла тума тиврĕ те. Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçсе кайрĕ çул хĕрринчи

хурӑн ҫулҫи. Пӗри кабина кантӑкӗ ҫине пырса ҫапӑнчӗ. Сарӑ-сарӑ хӑй. Такам саламӗ пулчӗ ӗнтӗ вӑл?

— Ӑҫталла ҫул тытатпӑр, чиперккеҫӗм? — ыйтрӗ арҫын.

— Хӑвӑрӑн мӑнтӑр кӑмӑлӑр.

— Хм, кӑмӑлӗсем вӗсем пур-ха. Эп ун ҫинчен мар! Тен, сирӗн ӑҫта та пулин васкамалла?

— Ҫук, васкамастӑп.

Паҫӑр кӑна хӑратчӗ вӗт-ха вӑл ҫав арҫынтан. Мӗнле ҫын-ши тесе шухӑшласа пыратчӗ. Халӗ хӑйӗн вӑйне туйса илнӗ хӗр курнӑҫланма тытӑнчӗ. Кулкаласах пирус ыйтрӗ. Туртам пекки туса ларчӗ. Туртма пӗлмен ҫын пӗрре пӑхсах курӑнать. Ҫакна шофер та асӑрхарӗ пулмалла, тута хӗррипе кӑна кулкаласа пӑхса ларса пычӗ.

— Мӗн ятлӑ эсӗ?

— Ната.

— Лайӑх ят. Наталья апла!

— Ӑхӑ, эсир вара?

— Мана Михалч теҫҫӗ. Иван Михалч.

— Эрех ӗҫетпӗр-и, Иван Михалч?

— Эрех? Кам калаҫать ун ҫинчен? Ҫав усал япалана ӑша ямастпӑр. Атя пӗрер курка кофе тутанса пӑхар...

Ната чӗнмерӗ. Пуҫӗпе кӑна сӗлтрӗ. Ку арҫын усал тӑвас ҫук пек туйӑнчӗ ӑна. Ун патӗнче вӑл вӑхӑтлӑха та пулин хӳтлӗх тупӗ, канса илӗ. Халӗ те хӑрушӑ тӗлӗкӗн курӑнакан пурнӑҫа манӑҫа кӑларӗ. Урӑх нимӗн ҫинчен те шутламарӗ Ната. «Тарас, ӑҫта та пулин аяккарах тарас килет килтен. Ан курччӑр. Шыраса хӑшкӑлччӑр. Ман пекех выртса макӑрччӑр». Ҫав шухӑш пулчӗ.

Машина пӗр палламан урама пӑрӑнса кӗчӗ. Унталла-кунталла ҫаврӑнкаланӑ хыҫҫӑн пӗр подъезд умӗнче чарӑнчӗ. Иван Михалчпа Ната хӑйсене тахҫанхи пӗлӗшсем пек тыткаларӗҫ. Ҫын ан систӗр, ан куртӑр, хӑйсем тин кӑна паллашни, вӑрттӑн шухӑш тытни ан палӑртӑр терӗҫ.

Виҫҫӗмӗш, тӑваттӑмӗш... шутласа пычӗ хӗр, пиллӗкмӗш хута та хӑпарчӗҫ, Иван Михалч вара чарӑнса та тӑмарӗ. «Мачча тӑрне каять-и?» — чутах кулса яратчӗ Ната. Улттӑмӗш хута ҫитрӗҫ. Унта-мӗн виҫӗ алӑк. Нихӑшин ҫинче те номер ҫук. Иван Михалч уҫӑпа аппаланнӑ хушӑра хӗрача шухӑшӗ улшӑнчӗ. «Епле пырса кӗрес-ха палламан ҫӗре пӗр палламан арҫынпа? Тем туса хурӗ? Тата кусем ҫынсем пурӑнакан хваттерсем те мар пулас. Темле учрежденисем-и-ха? Тарас пулать! Анчах тарса пулмарӗ. Алӑк уҫӑлса кайрӗ. Чӗннӗ ҫӗре кӗмех тиврӗ. Пӗр-икӗ утӑм тусанах чарӑнса тӑчӗ. «Вӑт тӑмсай, ҫавна та тавҫӑрса илеймерӗм. Сухалӗ-мӗнӗ те ҫавсенни пекрехчӗ вӗт-ха!»

— Ой, эсир художник-и? — ӗненмерӗ-ха вӑл.

— Паллашӑр, Иван Михалч Ковский.

— Ой, мĕнле интереслĕ. Чăвашра кун пек вырăнсем те пур-и вара? — хальхинче хĕр кăлтăртаттарса кулса ячĕ. Ĕненчĕ пулас.

— Пур, чиперкке. Пур! Вырăнсем кăна мар, хĕрсем те пур.

Хăйне мухтанине хĕр ăнланчĕ. Килĕшрĕ ку. Стена ҫинчи ӳкерчĕксенчен самантлăха та пулин хăпса Иван Михалч ҫине пăха-пăха илчĕ. Лешĕ темле пĕчĕк пӳлĕмре кофе хатĕрлет. «Ивашка!» — ят хучĕ хĕр, вăл ҫав пӳлĕмре апат пĕҫермелли хатĕрĕсене кăна мар, диван ларнине те асăрхарĕ. Тахҫан курнă кино аса килчĕ. Унта та ҫаплаччĕ... Натăн пуҫне шухă шухăш пырса кĕчĕ, куҫне-пуҫне вылянтарса Иван Михалч патне кĕрсе кайрĕ.

— Ну, что ты, милый? Дай помогу! — килти пекех хуҫаланма пăхрĕ вăл.

— Эпĕ хамах, — хĕр аллине сирчĕ хуҫа. — Эпĕ пĕлнĕ пек тăваймастăн эсĕ.

Художник хăйне ҫапла ҫирĕп тытни, пĕр енчен, килĕшрĕ, тепĕр енчен, кăмăлсăрлантарчĕ. Ната пейзажсемпе портретсем патне таврăнчĕ. Акă Атăл! Хура пĕлĕт айĕнчен шăтса тухнă хĕвел ури хуҫăк пек. Ку тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Хĕвел те уксахласа анма пултарать иккен, хĕвеле те ҫакса хума пулать. Атăлĕ те... хура хĕрес пек. Ку мĕнле Швейцари тата? Ту ҫинче хĕр. Ҫарапакка хăй. «Каларăм вĕт! — ҫирĕпленчĕ шухăш. — Ну, эпĕ ăна!» Темле орденсем ҫакса тухнă ҫынсен портречĕсене вăл куҫ хӳрипе кăна пăхса илчĕ. Кофе те пиҫрĕ.

— Кăмăл туса пăхсамăр!

Сĕтел ҫине хырăма тăрантармалли кăна мар, пуҫа анратаканни те кăларса лартнă-мĕн. Ну, маэстро! Хăй темле вăрттăн кулăллă. Хĕр мĕн каласса кĕтет пулмалла.

— Ой, эпĕ юратнă коньяк! Армянский! — ялкăшса илчĕ хăна. Мана кăшт, рюмка тĕпне кăна ярса пар.

Хĕр хăраса ӳкрĕ. Кунта суя туйăм кăна мар, кунта чăнни те пур-мĕн. Пыр ярăнать. «Куҫа хупса, пĕр сывламасăр, йăванса кайиччен ĕҫесчĕ», — ĕмĕтленчĕ вăл. Кăмăлĕ палăрчех пуль. Иван Михалч туп-тулли ярса пачĕ.

— Пурнăҫ тулли пултăр. Ĕҫ!

Ната хирĕҫлемерĕ. Ĕҫсен мĕн пуласса пĕлет-ха та, ĕҫмесен те темле шкул ачи пек.

— Тавсье! — терĕ те шалт! хучĕ.

Маэстро вара тутанса кăна пăхрĕ.

— Эсĕ мĕн?

— Пĕвер ман...

— А, с кем связалась! — кĕтмен ҫĕртен каласа хучĕ Ната. — Налей еще.

Иван Михалч пăшăрхануллăн пăхса илчĕ. Аллă грамм

ĕçнипех йăванса каймĕ-ха терĕ пуль, татах ярса пачĕ. Ната рюмкăна çутă çине тытса çавăркаларĕ. Тĕнче кантăк витĕр йăлт урăхла курăнать. Тĕтреллĕ темле. «Ах, ты милашка-Ивашка!» — мăрăлтатма тытăнчĕ хĕр хăй тĕллĕн. Ăшă ăна халь. Тутлă. Кунĕпех чĕптĕм яманран хырăм хыр тăрнех кайрĕ.

Иван Михалч хĕр хăтланăвĕсене пĕрре тарăхса, тепре хавасланса пăхса ларчĕ. Ара, çакăн пек чиперккепе юнашар пулма начар-им? Ӳкерес тесен те... Çитĕнсе çитнĕ çӳллĕ кăкăр, çинçе пилĕк, купарчи те... Пурте пур. «Натура, что надо». Арçын шухăшĕ те пулчĕ. Тин кăна пиçсе çитнĕ хĕп-хĕрлĕ панулмине татса çыртса пăхас килнĕ чухнехи туйăм ăна канăçсăрлантарчĕ. Хăй те сисмерĕ, пӳрнипе пит тăрăх йĕр турĕ, мăйне кăтăкларĕ... Хĕрĕ те хирĕç туртăнчĕ. «Ах, тутлă та-çке тулли те нӳрлĕ тутана чуптума. Сăрланмасть, — палăртрĕ пурне те асăрхаса тăма хăнăхнă художник ăсĕ. — Хулпуççийĕ мрамор. Кăкăрĕ кăмака...»

Антăхса ларакан арçынпа хĕр тем туса хурĕччĕç пулĕ те, Натăн та турри пур. Такам шалтан кăлт! тĕксе вăратрĕ.

— Кай! — тĕртсе ячĕ хĕр. — Мĕн эс?

— Эп, эп ним те мар! — çĕтсе кайрĕ пaçăр кăна пурне те асăрхаса тăракан ăс. Вăл та çывăрса кайнă пулас. — Эп сан портретна тăвасшăнччĕ.

— Ну, ты! — çĕнĕ шухăшпа вăй илсе кайрĕ Ната. «Ну, Ивашка-дурашка, тем ан шутла. Шӳт кăна ку!» — якăлтатса кулса ячĕ хĕр. Хăй темле шăтăк кимĕ çинче ларса пынине сисмерĕ-ха вăл. Кулчĕ те кулчĕ.

Пăтăрмахран тарни Иван Михалча та килĕшрĕ. «От греха подальше», — шухăшларĕ вăл.

Арçын артаклăхĕпе тин кăна киленекен хĕр шухăша путрĕ. Мастерской варрине вырнаçса ларнă та портретне ӳкерсе пĕтерессе кĕтет. Пуçне уснă хăй. Куçĕ хупăннăпа пĕрех. Вăл кунта мар, паллах, пачах урăх çĕрте. Тен, Атăл хĕрринче кимĕпе ярăнать, тен, Петĕрпе пĕрле çил кăларса чупать... Хĕр туйăмне пĕлме çук. Акă вăл тин кăна арçынпа ашкăнатчĕ, халĕ вара...

Художник ӳкерчĕ те ӳкерчĕ. «Пĕчĕкçеç путене сарă тулла юратать. Юратать, юратать, сарă тулла юратать», — ăшра кăна юрларĕ вăл. Атăла чăмма хатĕр хĕвел пек ларчĕ хĕр. Ал-ури темле хуçăклă.

Сеанс вĕçленчĕ. Иван Михалч кăмăллĕ тулчĕ. «Путене» тесе çырса хучĕ ӳкерчĕк айне. Алă пусрĕ.

— Акă парне пултăр! — терĕ.

Ната хускалмарĕ. Çĕр çинче çук асамлă хĕр ăна калама çук илĕртрĕ. «Пирĕшти ку. Ку эпĕ мар!» — пулчĕ шухăшĕ.

— Эпĕ ăна Петĕре ярса паратăп! Вăл мана «Ангел» тесе чĕнетчĕ.

— Юрě, юрě. Кам-ха вăл, Петěр?
— Салтак.

Иван Михалч ыйтса-туса тăмарě, сухал пěрчине пěтěркелесе илчě те хěре ăсатса яма пулчě. Ку ěç хăй тěллěнех, йăлăнса тăмасăрах йěркеленчě. «Ăçтан лартса килнě, çавăнтах кайса ярас, — шухăшларě арçын. Хěре тивменшěн хавасланса та илчě. — Каçě епле хура. Тем килсе тухě».

Хěрлě «Жигулипе» ларса кайнă чух пулманни ансан килсе тухрě. Ахальтен мар пăшăрханнă-мěн Ната! Çак суккăр хула та куçлă-мěн! Кěпипе курткине юсакаласа кăна илнěччě — Ольгăпа Таня ытамне кěрсе ÿкрě. Автобуспа аннă-мěн. Иван Михалчпа та сывпуллашаймарě, машина тапранса кайрě. Ма çак тěлте тухмалла пулчě-ха ун? Çутă терě. Халăх кăна мар, кунта-мěн унăн тăшманěсем те пур. Ыталаççě тата! Петěре салтака епле ăсатни çинчен пěр-пěрне пÿлсех каласа кăтартаççě. Тÿпелешсе те илнě. Кăнтăртисем тарнă.

Çапла калаçкаласа хăпаратчěç вěсем «Октябрь» патнелле тăвалла. Чиперех пыратчěç. «Пакăлтатчăрах! — терě хěр. — Тупнă мухтанмалли?»

«Ку ÿкерчěке Петěре ярса паратăпах!» — тěв турě вăл утнăçемěн, Ольгăпа Таня тем пăшăлтатса илнине те асăрхамарě. Сěт кÿлли пек тутлă ěмěтре ишрě те ишрě, хăйсен кварталне урăх сукмакпа çаврăнса кěнине те сиссе юлаймарě. Ку çулпа та çÿремен мар-ха та?

— Сторово! — пÿлчěç хěрсен çулне виççěн.

Сěт кÿлли çěтрě. Ун вырăнне Манягăпа унăн юлташěсем тухса тăчěç. Ӳсěр хăйсем. — Погуляем, что ли?

— Вăхăт çук! — тесшěнччě Ната — ěлкěреймерě. Карт! туртса илчě хăй патне Маняга.

— Твой теперь уехал. Со мной путтеш!

— Не-е-ет! —çухăрса ячě Ната. Унчченхи пекех хыттăн çухăрса ячě. Куçě умěнче ирсěр сценăсем мěлтлетсе иртрěç.

— Никогда! — патлаттарса хучě хěр.

— Мěн эс турткалашса тăран? — пулăшма васкарěç юлташěсем. — Вăл укçаллă çын. Мужчина хоть куда! Хăвах пěлетěн. А, Петěр мěн вăл? Замуж он тебя все равно не возьмет. Бросил он тебя!

— Ан хăйнă пултăр Петěр çинчен япăх калаçма! Ан хăйнă пултăр! Пăрахман вăл, нихăçан та пăрахас çук. Эпě ăна акă хамăн сăнÿкерчěке ярса паратăп.

— Ну-ка, покажь! — Маняга кěтсе тăмарě. Хул хушшинчи тěркене кăшăлт! кăна кăларса илчě.

— От-то-то, мадонна! — мăкăртатрěç арçын ачасем.

— «Магдалина ÿкěнÿçě», — тутисене пăркаларěç хěрсем.

— Сирěн мар, парăр, — туртса илме пăхрě Ната.

Ăçта унта? Ӳкерчĕк алран алла çӳрерĕ, ашкăнма йӳтĕм пулчĕ.

— На, возьми, если можешь! — йĕкĕлтерĕ Маняга. Хут листине çӳлерен те çӳлерех тартрĕ. — Поцелуй, отдам! — текелерĕ.

Ха-ха-ха! ахăрчĕç çамрăксем.

Тем пулчĕ Натăпа? Çамрăксем кăна мар, тĕнче те куç умĕнчен çухалчĕ. Таçтан уçлăхран пирĕшти пек хĕр ярăнса анчĕ. Сапаланчăк çӳçлĕ, хурлăхлă питлĕ... «Каçар мана, Петĕр, каçар!» — тет пек.

Чарр! çурăлса кайрĕ çав вăхăтра ярса илнĕпе пĕрех ӳкерчĕк. Хĕр хут татăкĕпе тăрса юлчĕ.

— Не-е-ет! — çухăрса ячĕ пирĕшти.

Хи-хи-хи! ихĕрчĕç хĕрсем.

Ната тепре сикрĕ. Тепĕр татăк татăлса ӳкрĕ. Ӳкерчĕкĕн пуçĕ кăна тăрса юлчĕ. Тем тесен те парасшăн пулмарĕ вăл ăна тăшман аллине. Пуç çурмаран çурăлса кайрĕ.

Тантăшĕсем йĕкĕлтесе сиккеленине те, ӳкнĕ-пĕр татăксене вакласа пынине те курмарĕ Ната. Кармашрĕ те кармашрĕ çав çӳлти пирĕшти патне. Тем чул чĕвен тăрсан та çитеймерĕ. Çӳле кайнипе те мар, çĕре пăрахса таптаса пынипе. Алă тăсса мар туртăнчĕ вăл ун патне, упаленсе... пуçтарчĕ. Таçтан тухнă çил вĕсене унталла-кунталла кустарчĕ, йывăç вулли таранах çавăрттарчĕ.

Ача ушкăнĕ пăрахса кайнине те сисмерĕ вăл, çил çамкинче пĕччен те, пĕччен те мар тăрса юлнине те туймарĕ, пуçтарчĕ те пуçтарчĕ. Анчах ун сăнӳкерчĕкĕ куççăр-мĕн! Чиксе шăтарнă пулĕ вĕсене, таткаласа-вакласа пĕтернĕ пуль? Мĕнле пирĕшти пултăр вăл — куççăр?

Ната йĕрсе ячĕ. «Ята варалани çитмерĕ, ĕлкĕне те пĕтерчĕç. Ăнлантăн-и эсĕ çакна, Петĕр? — Хĕр ӳкерчĕк татăкĕсене кăкăрĕ умне тытрĕ. — Петĕр, ăçта эс? Ан пар пĕтме, Петĕр?!»

Ха-ха-ха! ахăрчĕ тĕнче.

Ши-ши-ши! шăхăрчĕ çил.

11.11.89

## ТУРИЛККЕ ÇИНЧИ ЧĔРЕ

# Хĕрхӳ хĕрлĕх

«Асту, ыльăм, такăнса ан ӳк!» — терĕ Верук чĕри тин кăна утма вĕреннĕ ывăлĕ такăнса ӳкме тăнине курсан. Хăраса, питĕ хăраса кайса каларĕ вăл çакна. Ара, пĕртен-пĕр ывăлĕ те-ха, мĕнле хăрамăн. Тата мĕн, ăна темле усал чир ерчĕ пулас, çат! та çат! тутарать пĕчĕк аллисемпе хăйне мĕн те пулин килĕшмесен. Урипе тапать, кăшкăрать, йĕрсе хăшкăлтарать... Урайне выртса йăваланни те пулнă. Тытамак тытать тем мур ачине? Ара, мĕнле ан тыттăр? Ачине ăна вĕт хăйне те хăмла пахчи хыçĕнче тăр! тăр! чĕтресе тунă. Çапла килсе тухрĕ çав, пĕр кĕтмен туман çĕртен...

...Хăмла татса пĕтернĕпе пĕрехчĕ ун чухне. Веруксен пайĕ кăна çил çинче чĕлтĕртетсе ларатчĕ. Пĕр тăрă та сивĕ кун çапла хĕр пĕчĕк бидона çĕнĕ хăмла сăри тултарчĕ, кăшт-кашт çыртка-ламалăх апат илчĕ те хăмла ани çине уттарчĕ. Никам та çукчĕ унта. Сивĕ çил кăна типсе кайнă хăмла çулçисене палтăртаттарса çӳретчĕ. Верук вăр-вар хĕрача, пĕр ĕçлеме пуçласан пĕр чарăнмасăр вăй хурать. Ку чухне те çапла пулчĕ. Кăнтăрла апачĕ иртсе кайсан кăна канма ларчĕ. Виçĕмкунах пĕçернĕ кукăле, типсе кайнăскерне, сăрапа сыпа-сыпа антаркаларĕ. Ăш хыпрĕ пуль, сăрине апат çисе тăрансан çине-çинех ĕçрĕ. Тем ывăннă пек пулса кайрĕ, хĕвел питтине, хăмла аври çине выртрĕ те çывăрса кайрĕ. Ара, çĕркаç куç хупманпа пĕрех! Çав Васюка пулах çĕрĕпех киле кĕреймесĕр хапха умĕнче тăпăртатса тăма тиврĕ. Путсĕр, пĕр ярса илсен нихăçан та вĕçертмест вара. Мĕн шăнса кайиччен тăчĕç кĕрхи çăлтăрсене шутласа. Хăш-пĕрисем çапла пăхсан-пăхсан куççулленсе çитеççĕ пулмалла та çӳлтен яр! та яр! шуса анаççĕ. Тӳпе теме пĕлсе йĕрет тейĕн. Вăйпах чуптуса пĕтерчĕ тата. Халь те çунаççĕ хĕр питçăмартисем, темле асаплăн та çав вăхăтрах темле савăккăн тапать хĕр чĕри. Юрату суранĕсем, чăн та, хăмла аври сĕртĕннисем мар çав вĕсем. Верук пичĕ тем тĕлленнĕçемĕн йăл-йăлл! çиçсе илет. Ахăртнех, ырри те сахал мар пуль çав Васюк çумĕнче. Ав епле чиперлетет вăл хĕрĕн

ҫавра питҫӑмартине. Тӳпере мар, ҫӗр ҫинчех тейӗн тепӗр хӗвел.

Кӑптӑрт! хӑпарса выртрӗ ҫав вӑхӑтра Верук ҫине такам. Карт! сикрӗ чӗри. Шари! ҫухӑрса ячӗ хӗр, хӑйӗнпе мӗн тума хӑтланнине ӑнланса илнӗскер. Ҫыннине те палласа илчӗ. Каллех ҫав, Ваҫук! Пӗтӗм вӑйран тӗртрӗ ӑна хӑй патӗнчен Верук. Анчах ним тусан та усси пулмарӗ. Каччӑ хӑй мӗн тӑвас тенине турӗ-турех. Ним тума аптранипе хӗр йӗрсе ячӗ. Шапӑрр! юхса анчӗ куҫҫулӗ ҫӗр ҫине каҫхи ҫутӑ ҫӑлтӑр евӗр. Каччӑ чӗри те чул мар, курчӗ, хӗрхенчӗ, лӑплантарма тытӑнчӗ. Качча илме пулчӗ. Лӑпланчӗ хӗр, йӑлл! кулса илем пекки те турӗ. Питне тӳртӗн ал тупанӗпе шӑла-шӑла типӗтрӗ. Чӗри вара темле лӑплантарсан та лӑпланмарӗ, хӳхлерӗ те хӳхлерӗ, хӗр ӗмӗрӗ иртсе кайнӑшӑн хуйхӑрчӗ.

Кӑнтӑрла хыҫҫӑн чылай ӑшӑтса пӑрахрӗ. Пӗччен ларса юлнӑ Верук каллех кӑтӑш пулчӗ. Йӗрсе тӑраннӑ ача пек ҫывӑрса кайрӗ. Тӗлӗк курчӗ. Таҫта темле юмах ҫӗршывра пек. Питӗ телейлӗ Верук, унӑн ывӑл ача ҫуралнӑ, анчах ҫиме ним ҫук пирки вӑл пасара хӑйӗн чӗрине сутма тухнӑ. Сылтӑм ал тупанӗ ҫине кӑларса хунӑскер темле телейлӗн те хӑвӑрттӑн тапать. Верук хӑйӗн чӗри ҫапла сывӑ та вӑйлӑ пулнишӗн савӑнать, кам та пулин илет пуль-ха тет. Анчах ун пек хӗрарӑмсем, чӗре сутакансем, кунта-мӗн тем чухлех, чӗре хакӗ йӳнелсех кайнӑ. Илес текенсем вара темшӗн питӗ тиркеҫҫӗ. Пурте Верук паллакан ҫынсем тата, ҫавӑ тӗлӗнтерет. Малтан хӗр тантӑшӗ пырса пӑхрӗ. Ҫавӑркаларӗ-ҫавӑркаларӗ алӑ ҫинче йӑлтӑртатса выртакан чӗрене — илмерӗ. Верук ӑна пӗтӗм кӑмӑлтан парасшӑнччӗ, укҫасӑрах пама хатӗрччӗ. Ҫук, ун юратнӑ тусӗ тутине пӑркаласа малалла урӑх чӗре шыраса утса кайрӗ. Унтан тӑруках Ваҫук сиксе тухрӗ. Вӑл та чӗре шырама тухнӑ-мӗн. Шӳтлет хӑй, култарать, суйланӑ пӗр чӗресене кӑкӑр ҫине тытса пӑхать, май килет-и тет пулас. Май килмест пек те — малалла утать. Акӑ Верук патнех ҫитрӗ. Верук чӗри хӑвӑртрах, вӑйлӑрах тапма пуҫларӗ. Савӑнать вӑл Ваҫука телей кӳресшӗн, тӑсса панӑ алӑран тухса ӳкме те хатӗр. Тӑрӑшни, чӑн та, харама каймарӗ, каччӑ хӗр чӗрине ун пек те, кун пек те ҫавӑркаласа-ҫупӑрласа кӑкӑрӗ ҫумнех тытса пӑхрӗ, пӑчӑртасах лартрӗ пӗр вӑхӑт. Лайӑх-лайӑх пулса кайрӗ Верука, тем те пама хатӗрччӗ вӑл ҫав вӑхӑтра юратнӑ каччине. Чӗрине кӑна мар, хӑйне те ним юлми!.. Анчах хӗр чӗрипе пӗр вӑхӑт савӑнса тӑнӑ хыҫҫӑн Ваҫука тем пулчӗ, питне пӗркелентерсе илчӗ те чӗрене ҫӗре ҫавӑрса ҫапрӗ. Лач! турӗ тусан ҫине ӳкнӗ чӗре. Унччен те пулмарӗ, утса кайма тӑнӑ Ваҫук ун ҫине урипе пусрӗ. Шари! ҫухӑрса ячӗ тӗлӗк куракан Верук. Хӗр сасси улах хӑмла пахчи тӑрӑх тӑлӑххӑн ҫапкаланса ҫӳрерӗ-ҫӳрерӗ те таҫта ҫырма тӗпне кайса ҫухалчӗ. Ҫук, никам та илтмерӗ ҫав сасса, хӗр тӗлӗкӗ те татӑлмарӗ... Акӑ вӑл чӗрине тусан ҫинчен илсе вӗре-вӗре тасатрӗ. Каллех тӑсса пачӗ пасарта кӗшӗлтетсе ҫӳрекен ҫынсене. Кӑшт

вараланнă та-ха ĕнтĕ вăл халь, юнланнă та... Верук чĕрине пăхмаççĕ те. Ара, юнашарах мĕн чул хĕр те... Чĕрисем те вĕсен тин пиçсе çитнĕ панулми пек. Питĕ илĕртӳллĕ. Верукăн вара — хăйĕнчен хăй йĕрĕнсе тăчĕ хĕрарăм — кама кирлĕ пултăр? Ывăлне тесен юрĕччĕ! Çапла шутласа илчĕ кăна хĕрарăм, таçтан пĕр ушкăн арçын ушкăнĕнчен ун ывăлĕ утса тухрĕ. Ӳссе кайнă хăй, йăл-йăлл! кулкалать. Амăшĕ тăсса панă чĕрене пĕр ыйтмасăр пырса илчĕ те çывăхра тăракан хĕрарăма кайса пачĕ. Лăштах кайрĕ Верук, сутрăм терĕ пуль, çăмăллăн сывласа илчĕ. Сывласа илчĕ кăна, кĕлетки пушанса юлнăран-ши, темле шыва кĕнĕ чухнехи пек çĕкленсе илчĕ, тепре сывларĕ — вĕçсех кайрĕ. Çӳле-çӳле, таçта темле савăклă çутă патне çул тытрĕ...

Çапла тĕлĕк курнăччĕ Верук çав хăмла ани çинче, çавна аса илчĕ. Чăн та, çав тĕлĕкри пекех килсе тухрĕ ун пурнăçĕ. Ывăл çуратрĕ Верук. Ваçук вара ăна качча илмерĕ — улталарĕ. Намăс курнă хĕр чăтса пурăнаймарĕ, ялтан хулана тухса тарчĕ. Акă вăл халь хăйĕн Арнулĕпе йăпанса пурăнать. Пĕр пӳлĕм панă ăна малосемейкăра. Пĕр ĕç... пир-авăр фабрикинче...

«Нимех те мар, ывăлăм, ан хăра! — йăлл! кулса илчĕ ывăлне ура çине тăма пулăшакан Верук. — Пĕрре кăна мар такăнса ӳкĕн-ха. Аннӳ пур чухне такăнма та юрать, кайран мĕн тăвăн?»

Çулĕпе çап-çамрăк Верук, пăхма вара темле ватă çын пекех курăнать. Пĕр пайăрка çӳçĕ ун шап-шурах, хур тӳссе хуралнă куçĕ темле шала путса кĕрсе кайнă. Тахçан çавра пичĕ темле тата çавракаланса пĕчĕкленнĕ. Хăйне çавăнпа та ватă тесе шутлать Верук. Ниçта та тухмасть, никампа та хутшăнмасть. Пĕрмай ывăлĕпе, пĕрмай килте. Арнольд вара çавна пулах пуль пит йӳтетмĕш. Амăшне тарăхтарсах çитерет, кун памасть тесен те тĕрĕс. Ăна-кăна ăнланмасть хĕрарăм. «Арнуль, Арнуль!» — тесе çеç тăрать. Ачи чылай пысăк пулсан та алăран çитерет. Чи тутлă, чи лайăх апата кăна парать, çăвартанах хыптарать. Тетте тесен вара, ун чухлĕ магазинта та çук пуль. Пурне те ватса-вараласа-пăрахса пĕтернĕ, тем пек пуçтарса тăрсан та пуçтарса ĕлкĕрейместĕн. Ара, пĕрмай килте лармастăн вĕт тата. Ĕçе те каймалла, магазина та тухса кĕмелле... Аптăраса тăмасть Верук — питĕрет те хăварать. Ах, макăрать вара лешĕ. Амăшĕ килнĕ çĕре кайăклансах çитет. Иккĕшĕ те вара ыталашса илеççĕ те каç енне уйрăлми пĕрле. Пĕрле апат çиеççĕ, выляççĕ, çывăрма выртаççĕ. Çывăрнă чухне те уйăрăлаймасть Арнольд амăшĕнчен. Тĕлĕкре те пĕрле вĕсем.

Тĕлĕк тупсăмне пĕлсе пĕтерейменрĕ Верук. Чикан майрине юмăç та пăхтарчĕ пĕринче аптранă енне. Темле валетпа тĕл пулатăн, укçаллă та пуян пурнăç килет тенисĕр пуçне урăх нимех те илтеймерĕ. Ваçук тесен Ваçук та мар ĕнтĕ вăл... Кам-ши? Пурха пĕр мастер, пит пăхать вара, пулăшма тăрăшать. Станока та вăхăтра юсаттарать, укçине те нумайрах çырса парать. Килĕшет

те пек вăл, çав вăхăтрах темле туйăм, ку цехри пĕр хĕре те тĕрĕслемесĕр хăварман тени, чарса тăрать пуль куçран пăхса йалл! кулма, эпĕ те хирĕç мар сан пулма теме. Хĕрарăмсем те пĕрре те хурласа калаçмаççĕ ун пирки, хур тумасть пулмалла никама та. Автан пулни пĕр енчен вăл лайăх та...

## Пылак çырла

Çапла, тунсăхлать Верук чĕри арçыншăн. Юлташ кирлĕ, ывăлĕпе кăна çырлахмасть-ха вăл. Çавăнпа та пуль паян пит тăрăшса тумланчĕ, ĕçе кăшт маларах çитес терĕ. Ывăлне хăйĕнчен, яланхи пекех, вăйпа тенĕ пек уйăрчĕ те лешĕ каçса кайса макăрнине пăхса тăмасăрах хваттер алăкне шăкăр-шакăр! питĕрсе илчĕ, тăваттăмĕш хутран чупса тенĕ пек анса кайрĕ.

Пĕтĕм кĕлеткипе кĕрсе ӳкрĕ çуркунне ытамне, тухнă-тухманах юрласа ячĕ чĕри, хирĕç тĕл пулакан арçынсене куçласа кăна пырать халь Верук. Темле телей килмелле пек паян, темле йыхрав илтет ун хăлхи. Пĕр кана тумла ташшине чарăнса тăрсах пăхса тăчĕ, унтан тарăннăн сывласа илчĕ те тата хытăрах утса кайрĕ комбинат еннелле. Питĕ васкарĕ пулсан та хĕвелтухăçалла темиçе хутчен те çаврăна-çаврăна пăхрĕ, хĕвел тухасса кĕтрĕ. Кĕтсе илчĕ-илчех. Хĕвелпе пĕрле йалл! кулса ячĕ те цеха вăрт çаврăнса кĕрсе кайрĕ.

Пĕрре пырса курнă çынна пир-авăр фабрики тамăк пекех курăнать. Хăлхана хупласа тăракан шав, сывлăша пӳлсех лартакан тусан... Çаплаччĕ Верукшăн та, халĕ вара асăрхамарĕ те çав тамăка, тӳрех мастер патне чăмса кĕрсе кайрĕ. Олег Петрович пĕччен пулни те савăнтарчĕ. Ăнать ун паян, куçкĕрет ăнать. Ахальтен-им çуралнă кунĕ çитнĕ, телей кунĕ ĕнтĕ вăл.

— Салам пултăр, Олег Петрович! Çуркунне паян, Алтатти кунĕ! Юр айне автан сăхмалăх шыв килсен çу лайăх пулать тет. Ах, ма Алтатти мар-ши эп? Паян ман çуралнă кун, паян эп пурне те телей кӳнĕ пулăттăм, кун пек кăна мар çуркунне илсе килĕттĕм, — хĕр чухнехи пек çиçрĕ Верук, хăй те сисмерĕ, пăлтăр та пăлтăрт! çаврăнса илчĕ арçын умĕнче, кăлтăр! кулса ячĕ.

— Çуралнă кун тетĕн? Пит аван, санран тухать апла. Саламлама вара?..

— Саламлама каçпа пырăр, кĕтетпĕр!..

Урăх ним те каламарĕ Верук, вăрт çаврăнчĕ те тухса кайрĕ. Пулчĕ терĕ.

Урăх никампа та калаçмарĕ вăл, никама та чĕнмерĕ, питĕ хăвăрт, питĕ-питĕ нумай ĕçлерĕ, ăшне пусарас терĕ ĕнтĕ, урăх мĕн пултăр. Олег Петрович хăнана пырас пирки пĕрре те

иккĕленмерĕ. Смена вĕçленсенех килне тухса чупрĕ. Мĕн кирлĕ-кирлĕ маррине тахçанах тупса хунă та, халĕ сĕтел çине лартмалли кăна юлнă. Чăн малтан Верук пĕр графин шурă эрех кăларса лартрĕ, унтан çыртмалли: помидор, кăмпа, хăяр... Ура айĕнчех явкаланса çӳрекен ывăлне тĕрте-тĕрте ярсах чупкаларĕ. Юнашар кӳршĕллĕ пурăнакан хĕрарăмпа та харкашса илчĕ пĕр авăк. Анчах чĕрре кĕрсе тăма вăхăт тупăнмарĕ, пĕр тепĕр сехетрен ăшалама çĕрулмипе какай лартса ячĕ. Пурте питĕ вăхăтлă, пурте тутлă пиçрĕ. Алăкран шакканă-шаккаман ыйтса мĕн тумасăр чупса пырса уçрĕ, Олег Петровича кӳршĕсем ан курччăр тесе сĕтĕрсех тенĕ пек пӳлĕме туртса кĕчĕ, хывăнтарчĕ, сĕтел хушшине лартрĕ. Мастер хăй те пушă алăпа мар. Сĕтел çинче ĕнтĕ тепĕр çут кĕленче, тата чечек çыххи те пур. Çавсем илем кӳреççĕ. Таçта темле питĕ чаплă ресторанти пекех халь. Унта канса ларакансем те чи телейлĕ, чи юратуллă, паллах. Арнольд та, икĕ аллине икĕ апельсин ярса илнĕскер, мăшт пулнă. Стена çинчи радио çеç тем мăрăлтатать. Хĕрарăмпа арçын пĕр кана чĕмсĕр, пĕр авăк темле аванмарланса ларчĕç, унтан тăруках пĕр харăс кула-кула калаçма, эрех ĕçме пуçларĕç. Çуркунне, çуралнă кун, Алтатти терĕç. Ĕçрĕç те çирĕç, çирĕç те ĕçрĕç... Верук чĕри пĕр-икĕ черкке ĕçсенех юрлама тытăнчĕ. Верук хăй çавна пĕрре те сисмерĕ. Чĕри кăкăртан тути вĕçнех сиксе тухрĕ. Арçын алли ачашланине те, чĕрепе пĕр пулса кайнă тутине чуптунине те туймарĕ — вăл халь хăй юрă пулса вĕççе çӳрерĕ. Çывăрса кайнă ывăлне кравать çине вырттарнине те астумарĕ вăл. Хăйне епле хывăнтарнине те асăрхаса ĕлкĕреймерĕ. Вăхăт чарăнса ларчĕ тейĕн. Пĕр савăк кăна, пĕр телей кăна юлчĕ. Çăмăл-çăмăл пулса кайрĕ Верук чĕрине. Темле çутă, темле пылак ăна халь. Хăйĕн кĕлеткине те туймарĕ хĕрарăм, туйрĕ пулсан та, ăшă лĕп шывра шыва кĕнĕ пек кăна. Çук, Ваçук пек ыраттарса та тарăхтарса мар, пĕтĕмпех урăхла килсе тухрĕ ку юрату касĕ. Верука юратма паян çак çырă çӳçлĕ арçын мар, турă хăй килнĕ тейĕн. Сĕтлĕ кӳлĕре чӳхенекен хĕрарăм кĕлетки пулă пулчĕ, авкаланчĕ, тути арçын ӳтне каçăхса кайса чуптурĕ. Унччен те пулмарĕ — таçтан шалтан калама çук тутлă сасă шăранса тухрĕ, пирĕшти сасси пулчĕ пулĕ вăл е хăйĕн мăшăрне чĕнекен кăвакарчăн сасси, ăна ăнланса илмелĕх вăхăт тупăнмарĕ, çав сасса самантрах тепĕр сасă хупласа хучĕ. Тамăкри мĕнпур çылăхлă çынсене каçарнă та, çавсен савăнăçлă сасси таçтан хăпса тухрĕ тейĕн. Çĕр пĕрре, тепре ахлатса илчĕ — çурăлсах кайрĕ. Тĕнчере урăх ним те юлмарĕ — пĕр çулăмлă сывлăш, ăша йăлт çунтарса яракан сывлăш кăна...

Ирпе темле шарт! сиксе вăранса кайсан та хăй ăçтине тăруках ăнланса илеймерĕ-ха Верук. Хуп-хура çăмлă арçын ури хăйĕн çинчех тенĕ пек выртнине курсан тин чухласа илчĕ. Иртнĕ каç мĕн пулни куç умне кинори пек тухса тăчĕ. Вăтанса,

аванмарланса кайрĕ хĕрарăм. Хăйне темшĕн хĕр пек, çук, тин качча кайнă хĕр пек туйрĕ Верук. Ара, чăн та, кун пекки пурнăçра пуçласа та... Урайне ўкнĕ утиялне асăрхануллăн пĕшкĕнсе илчĕ, хăй савнă çынна — Улякка тесе чĕнчĕ вăл ăна ăшра — витрĕ. Чĕри каллех, çапла тусанах ялкăшса илчĕ. Ĕнер каç хыпса илнĕ çулăм халĕ те сўнмен-мĕн, халĕ те çунтарать. Çав çулăм ăшĕнче ĕмĕтленсе выртрĕ Верук. Халь тин ĕнтĕ пĕр çын пек пурăнĕç вĕсем, пĕр çемье... Халь тин хăйне ыттисенчен катăк шутламасть вăл.

Чунĕ тулса çитнĕ Верук Улякка айĕнчен йăпшăнса тенĕ пек шуса тухрĕ те кравать çинчен анса пўлĕм тăрăх чăн пирĕшти пек пĕр сассăр, пĕр вăтанмасăр çарапаккан утса кайрĕ. Сĕтел умĕнче пĕр кана чечек илемĕпе киленсе тăчĕ, унтан халат тăхăнчĕ, ывăлне пырса пăхрĕ, пурте йĕркеллĕ пулнине курсан йăлл! кулса илчĕ те кухньăна апат хатĕрлеме кĕчĕ. Кĕриччен кĕменниччĕ, кўршĕ хĕрарăмĕ Верук ăна нихăçан та ятран чĕнмен, тискер кайăк пек сиксе ўкрĕ. Вĕсем-мĕн çĕрĕпе юрланă, ташланă, çывăрма паман.

— Тепре илсе килсенех коменданта кайса калап! — кăшкăрсах ячĕ çав хайхи çын илтмеллех.

— Сана мĕн ĕç? — теме кăна пĕлчĕ Верук. — Сан арçынну мар вĕт.

— Аха, эсир ашкăннине кашни çĕр итлесе лармалла тет-и-ха ман? Темле ют арçын хыççăн çуса тасатса тăмалла тет-и-ха?

— Ма сан тасатмалла тет вара? Эп хамах.

— Хамах, хамах! Туалета пырса кĕме çук, эс вара хамах тесе тăран. Тек илсе килнĕ ан пултăр. Ун валли кунта площадь çук!

Верук калаçса тăмарĕ, вăрт! çаврăнчĕ те хăйсен пўлĕмне кĕрсе кайрĕ. Алăк кутĕнче тенĕ пекех Олег Петровичпа тĕл пулчĕ. Вăл тăхăнма ĕлкĕрнĕ, питне-куçне çума кайма хатĕрленнĕ пулас та хĕрарăмсем харкашнине итлесе аптраса тăрать. Çавна Верук пĕрре пăхсах ăнланса илчĕ. Намăс пулса кайрĕ.

— Ан кулян, Верук! Эпĕ сире тек кун пек кансĕрлесе çўремĕп. Ĕнер, чăн та, ытларах, пурнăçра мĕн пуррине мансах савăнтăм, каçар. Эрехне те ĕçкелерĕм, сана та...

— Çук, çук, мĕн калаçатăр, Олег Петрович! Эсир мана ним чухлĕ те, чĕрне хури чухлĕ те хур туман. Эпир унпа пĕрмаях çапла вăрçса пурăнатпăр, çынни çавнашкал вăл.

— Ну, юрĕ. Эпĕ сана çилленместĕп. Каятăп халĕ...

Пĕр пилĕк-ултă минут каялла кăна юрласа тапакан Верук чĕри такăнчĕ. Тин çеç лайăхчĕ ăна. Халь вара, çав шуйттан хĕрарăма пула, юратнă çынран та уйрăлма тивет. Çакă ăна питĕ тарăхтарса ячĕ. Халь тесен халь чупса пырса çўçĕнчен çулса илĕччĕ... Çук, тем пек йывăр пулсан та чăтрĕ, чарчĕ çиллине. Ун вырăнне вăл тухса кайма тăнă арçынна куçран пăхса çапла каларĕ:

— Тем ан шутла вара, ан манса кай, — терĕ.

— Сывă пул! — тени çеç илтĕнчĕ алăк хыçĕнчен.

Верук чĕри тепре тапăлтатса илчĕ. Чĕри пекех таплаттарса кĕрсе кайрĕ вăл кухньăна. Çапса та пăрахатчĕ пуль, ăсне çухатнă чухне вăл пит усал, ют çынна кăна мар, ачине те çапса пăрахма пултарать. Анчах хальхинче ун пек килсе тухмарĕ, турă сыхларĕ пуль, пукан çинче пуçне усса ларакан хĕрарăма курчĕ те çилли таçта кайса кĕчĕ. Çак пĕчĕк те хĕсĕк кухньăшăн, кĕрсе тухма çук туалетшăн çапăçмалла тет-и-ха вара, пĕр-пĕрне мĕн виличчен курăймасăр пурăнмалла тет-и? Чăн та, икĕ сĕтел, икĕ буфет лартсан ни каялла, ни малалла... Туалет пирки калаçмалли те çук. Хăш чух черет тăма тивет.

Хăй пекех асапланакан хĕрарăма Верук чĕри пĕр самах каламасăрах ăнланчĕ — каçарчĕ. Пĕрле пурăнмалла терĕ пуль çав! Плита çине ирхи апат пĕçерме лартрĕ. Калаçса, пĕр-пĕрне ăнлантарса тăма вăхăт та юлмарĕ ĕнтĕ, ĕçе каймалла. Арнольд та çывăрса тăчĕ пуль? Хыпаланчĕ те хыпаланчĕ хĕрарăм. Пĕри çисе ларчĕ, тепри çăмарта тума аптранă чăх пек чупкаларĕ.

Ывăлĕ халĕ те тутлăн çывăрса выртни кăна Верук чĕрине вырăнне лартрĕ. Ача питçăмартийĕ çинче вылякан хĕвел пайăрки хуçăлса та пулин Верук чĕрине пырса тăрăнчĕ, пĕрре ыраттарса та, тепре савăнтарса ячĕ. Хăй те хĕвел пулса кусса кайĕччĕ ачин питçăмартийĕ тăрăх. Вăхăт çукки пĕтерет. Васкамалла, каллех таçта ĕлкĕрмелле, çитмелле, мĕн хушнипе хушманнине те туса пымалла. Хăйĕн ачипе çапла йăпанмалăх вăхăт та юлмасть вара. Ача садне парсан кăна! Черечĕ çывхарса çитнĕ терĕç. Ку кĕркуннепе вара вăл та ытти ачасемпе пĕрле ача садне çӳреме пуçлĕ, текех, темле сĕм хулари Маугли пек, пӳлĕмре хăйĕн чĕмсĕр теттисемпе кăна хупăнса лармĕ. Тен, çавăнпа питĕ начар калаçать ман Арнольд? Çапла чупкаланă вăхăтра темтепĕр шутларĕ амăшĕ. Ачине те вăратрĕ, апат çитерчĕ, тăхăнчĕ те тухса чупрĕ.

## Сарă улăм çути

Кун хыççăн кун иртрĕ. Олег Петровичпа татах тĕл пулса калаçасшăнччĕ Верук, анчах арçын куçран тӳррĕн пăхса калаçманни тата кӳршĕ каллех кăтăрса каясран хăрани чарса тăчĕ. Тата ватă амăшĕ чирлесе ӳкни те кансĕрлерĕ ăна хăйĕн çинчен шутлама. Вăл та хĕнлĕхе кĕрсе ӳкнĕ, ăна та пулăшас пулать. Ĕçрен таврăнать те çавăнпа ачине çĕклесе яла тухса каять Верук кашни шăматкун. Çĕр чавмалла, пахчаçимĕç лартмалла... Амăшĕ вара чирлĕ.

Пурăнма питĕ йывăр пулчĕ пулсан та чунпа çăмăл тăчĕ. Килти мĕнпур япаласене йăлт çуса тасатса пĕтерчĕ çапла темиçе хут килсе. Амăшĕн сывлăхĕ те тӳрленсе пычĕ. Çавăнпа та-и,тен,

тем ăс пырса кĕчĕ пĕринче çамрăк хĕрарăм пуçне, вăл клуба каçрĕ. Кино кăтартатчĕç-и? Кино курас-тăвасси пулмарĕ, Васюкпа тĕл пулчĕ. Йалт маннăччĕ ăна. Чĕрере кăна мар, пуçра та юлман. Халь вара тем пулчĕ — тахçан юратнисем сĕвĕрĕлсе пĕтмен-и е урăххи, хĕрарăм пулса çитни, тахçанхи туйăмне чĕртрĕ — пĕлме çук. Анчах каллех вут пек хыпса илчĕ Верук чĕри. Хăмла пахчи хыçĕнче мĕн пулса иртни те ыраттармарĕ. Тем мурĕ пулчĕ, ыраттармарĕ кăна мар, çав тĕлĕке татах чĕнчĕ. Сисрĕ çавна каччă, вăл та тунсăхланă пуль çав, иккĕнтен ик алла пĕрлештерсех утрĕç каçхи урам тăрăх. Çулĕ каллех çав улах çĕрех илсе тухрĕ. Кунта халь пуш-пушă. Хăмла тымарĕсене витнĕ сарă улăм кăна çил çинче чĕлтĕртеткелет.

— Ма авланмастăн вара, ку темĕн... — каласа пĕтерейменрĕ Верук.

— Ман арăм пур! — татса хучĕ Васюк.

— Кам вара вăл? — пĕлмĕше печĕ хĕрарăм. Чĕри вара çак вăхăтра савăнса карт! туртăнса илчĕ. Ах, манман иккен вăл савнă тусне, манман... çап-çамрăк чухнехи пекех халь те тапăлтатса тапма хатĕр.

— Урăх кам пултăр? Эс, паллах!

— Мĕн, урăх хĕр тупаймарăн-им?

— Сансăр пуçне мана урăх никам та кирлĕ мар! — каллех пат татса каласа хучĕ Васюк. Мĕн ăспа каларĕ, Верук тăруках тавçăрса илеймерĕ-ха, темле шухăш тытнă пулас. Анчах чĕри ăна тек шутласа тăма вăхăт памарĕ, кăлтăртаттарса кулса ячĕ.

Каччăна çавă кăна кирлĕ пулчĕ. Карт! туртса илчĕ хĕрарăма хăй патне, çат! çыпçăнса ларчĕç тутисем. Пĕрре те чуптутаттарасшăн марччĕ вĕт-ха вăл çак арçынна тек, пĕрре те парăнасшăн марччĕ. Унчченхи пекех тем турткалашрĕ кĕлетки, хăйса çитнĕ, ытла ирĕке янă арçын аллине темиçе хутчен те сиресире ывăтрĕ. Тен, чăн та, нимĕн те пулмастчĕ пулĕ вĕсем хушшинче, енчен те Васюк каллех «пĕрле пулатпăр, пĕрле пурнатпăр, телейлĕ пулатпăр» темен пулсан. Çавă парăнтарчĕ хĕрарăм чĕрине. Хĕрхенчĕ те пуль? Хĕрарăмсăр пурăнса тунсăхласа çитнĕ арçын питĕ хĕрӳ тата вăл. Васюк сывлама та памарĕ — пĕр вĕçĕмсĕр чуптурĕ, ăшă сăмахсем каларĕ... Мĕн пулас тени вара каллех çав хăмла ани çинчех пулчĕ. Хăмла аврисем кăна çук. Ун вырăнне çемçе те сап-сарă улăм. Вăл çав авăр пек ыраттармасть вара!..

Ирпе тин таврăнчĕ Верук киле. Çĕр çывăрман амăшĕ мăкăртатма пăхрĕ, хĕрĕн питĕнче темле çутă курчĕ пуль, чарăнчĕ. Хăвăнне ху пĕлен тесе ал сулчĕ те апат пĕçерме лартса ячĕ. Верук ачи çумне кĕрсе выртрĕ те тутлă ыйăха путрĕ.

...Таçта темле пахчара çӳрет пек Верук. Питĕ çутă, питĕ илемлĕ пек. Тĕрлĕ тĕслĕ, питĕ сĕтеклĕ курăнакан çырла тата-

тата çиет пек. Чунĕ таçта кайса кĕресле савăклă. Ярăнса утса пырать Верук çав пахча тăрăх, канлĕ ăна, çутă, ăшă... Анчах çав вăхăтрах, çав вырăнтах темле хăрушлăх та пур пулмалла. Пахча хуралçи курасран хăрать мар-и? Кăрт! та кăрт! тапса илет хăрушлăха туйнă чĕре. Çавăнпа, тен, тата ытларах савăнса каять. Пултăрах тет пулас, эпĕ нимрен те, никамран та хăрамастăп. Ярăнса утать, тĕрлĕ тĕслĕ улма-çырлана пуçтарса çиет. Унччен те пулмарĕ — ун умне пĕр çăмламас йытă сиксе тухрĕ. Хуралçăн ĕнтĕ, урăх камăн пултăр. Хуçине юрасшăн пулса вĕрет те вĕрет. Тем пек тăрăшать пулсан та, ку Верука пĕрре те хăратмасть...

Çав сасăпа вăранса кайрĕ Верук. Арçын сасси-мĕн. Тӳрех палласа илчĕ. Ваçук, каллех çав! Амăшĕпе юнашар диван çине кĕрсе ларнă та тем мăкăртатса калаçса ларать!.. Тем «туй тумастпăр», «пĕрле пурăнасчĕ»— тенине çеç илтсе юлчĕ, тек итлесе тăмарĕ, сиксе тăчĕ те пахчана тухрĕ. Çурхи ăшă та уçă сывлăш паçăртарах хăратса тăнă шухăша йăлт сирсе ячĕ. Сахалтарах çывăрнă пулсан та хăйне вăл вăйпиттин туйрĕ, ача чухнехи пек çак сукмак тăрăх чупса каяс кăмăлĕ килчĕ. Ун-кун пăхкаласа илчĕ те никам та çуккине кура вăтанса тăмарĕ — сиккипех анса кайрĕ çырма тĕпнелле. Çырмара курак шавĕ. Вата йăмра çинче, шутласа кăларма та çук, çине-çинех курак йăви. Кашни çемьен хăйĕн. «Ха, пĕри тепĕринпе тӳпелешекенсем те пур!» — кӳршĕ хĕрарăмпа хирĕçнисене аса илсе шутларĕ Верук. Çырма тĕпĕнче шур чул çине пусса, пĕр вăхăт çак тĕлсенчех пĕчĕккĕ чух вылянисене пĕр авăк астуса тăчĕ, сивĕ шывпа питне çурĕ. Вара тин лăпланса çитрĕ. Халь тин ĕнтĕ ăна нимле тĕлĕк те хăратмасть. Хĕрарăм чунĕ çак çутçанталăкпа пĕрлешсех кайрĕ. Эпĕ хам та çак йывăç, эпĕ хам та çапла шыв пек шăнкăртатса юхатăп тесе шутлама тытăнсан вара, чăн та, нимрен те хăрамастăн. Ара, эсĕ халь ху та турă. Эсĕ ун пекех хăвăн пахчунта савăнса пăхкаласа çӳретĕн. Верук хăй тĕлĕкре çăтмахра пулса курнине тин ăнланса илчĕ, хăйсен килĕнчи ашшĕн пахчи те унран кая мар-мĕн, ăна та курчĕ. Пушшех савăнса кайрĕ, тăвалла та ача чухнехи пекех чупса хăпарчĕ.

Картишнелле тухакан чӳречерен ывăлĕ пуçне пăркаласа йăлл! кулнине курсан вара каçăхсах кайрĕ. Пӳрте чупса кĕнĕкĕмен Арнольдăн çап-çаврака пуçне кăкăрĕ çумне пăчăртаса хучĕ те пĕр вĕçĕмсĕр чуптума пуçларĕ.

— Мĕн эс, ачана сывлăшсăр хăваратăн вĕт! — тени кăна чарчĕ тăнран кайнă хĕрарăма. Унсăрăн, чăн та, пăчăртасах вĕлеретчĕ пулĕ. Пӳлĕмре темле хуçаланса ларакан Ваçука та асăрхаман пек пулчĕ, амăшне те шута илмерĕ çав вăхăтра. Ачипе кăна йăпанчĕ. Чуптуса тăраннă хыççăн утьăкка сиктерме пуçларĕ. Унтан кăтăклама тытăнчĕ... Ахăрчĕç анчах вара!

Амăшĕ тарăхса пăхкаласа тăчĕ-тăчĕ те ал сулчĕ, выльăхсене апат пама тухрĕ. Ваçук вара пĕр кĕвĕçсе те пĕр хутшăнас кăмăлпа пăхса ларчĕ. Унăн питĕнчен те кулă каймарĕ. Ара, хăйĕн те-ха! Мĕнле савăнмăн? А, тен? Арçын куçĕ хăй кăна пĕлекен паллăсене шырама пуçларĕ. «Ывăлĕн те, манранах пулнă пулсан, — шутларĕ вăл, — тути тачка пулмалла». Ваçуксен йăхĕнче пурте тачка туталлă, кăтра çӳçлĕ. Ӳт те хурарах... Пăхрĕ-пăхрĕ Ваçук — нимле ун пек-кун пек паллăсене шыраса тупаймарĕ. «Манран мар пуль ку? — пĕр сивĕнсе, пĕр вĕриленсе шутласа илчĕ тин кăна савăнса лараканскер. Ара, манпа пулнă хыççăн вăл тавăрас тесе такампа та çӳреме пултарнă, тепĕр тесен!» — каллех шуйттанланса илчĕ таçта шалта темскер. Анчах Ваçук чĕри çав сасса ĕненмерĕ, ывăлне курса савăнса тăчĕ. Такам ăна ку сан ывăлах терĕ. Çырлахрĕ арçын. Хăй те диван çинчен майĕпен урайне шуса анчĕ те ывăлĕпе пĕрле йăваланма пуçларĕ. Хирĕçлекен тупăнмарĕ. Ара, таса чунчĕрепе хутшăннă чух кам хирĕçлетĕр, кам ютшăнтăр. Вара ялти çак пӳртре пурăнакан çынсемшĕн те кун килчĕ. Курак йăвинчен те çӳлерех хăпарса ларчĕ вăл халь çак пĕчĕк пӳрт. Таçта çӳлте-çӳлте, ту çинче, çутă хĕвел айĕнче...

Шупашкара кайма кăнтăрлапа тухрĕç. Амăшĕ ăсатма тесе укăлча патне çитиех утрĕ. «Халь сывалнă хыççăн пурăнать-ха ĕнтĕ», — шутларĕ хĕрĕ. Ал парсах уйрăлчĕç вара. Автобус патне çул чылай инçе. Утмалăх та, шутламалăх та пур. Арнольда йăтнă упăшки çине — упăшки ĕнтĕ халь! — пăха-пăха пычĕ Верук. Пĕрре киленчĕ, тепре — тĕлĕнчĕ. Укăлча хапхи умĕнче пăхса тăракан амăшĕ çинчен те манса кайрĕ. Халь ĕнтĕ вĕсен пĕрле пурăнмалла пулать. Виççĕн! Темле йышăнĕ ку йыша кӳршĕ, паллă мар. Олег Петровичпа пулнă пек килсе ан тухтăрччĕ кăна. Кайран унта мĕнле те пулин майлашĕ... Шухăшларĕ те шухăшларĕ Верук. Хăйĕн çемйи чăмăртаннăшăн савăнчĕ. Халь тин, мĕн калăн, пулăшакан та пур. Ахаль чух ачине йăтса çӳренипех алă татăлса ӳкес пек ырататчĕ, халь çăмăлтарах пулать пуль-ха... Халĕ вара иккĕн çывăрмалли кравать те илмелле пулать ĕнтĕ...

— Мĕн пит кулса пыран çак? — арăмĕн вăрттăн каласăвне кĕчĕ Ваçук.

— Санпа паян ăçта выртса çĕр каçмалли пирки шутларăмха! — пĕр паттăрланса та пĕр хăраса каласа хучĕ Верук. Ара, ун пек-кун пек вылянчăк тесе каласран хăраса ӳкрĕ мар-и? Пĕччен пурăнса якăлтатма вĕреннĕ тейĕ те, каллех мĕнле те пулин пăтăрмах сиксе тухĕ.

— Ăна тупăпăр-ха, пире урайĕнче те юрать, эпир хирĕç мар, — кăмăллăн, темле тутлă кукăль астивсе пăхасла каласа хучĕ упăшки.

— Урайĕнче выртса тăма, мĕн, эпир выльăх-им? Чин-чинарĕм, иккĕн выртса виççĕн тăмаллинех илетпĕр, ан кулян.

# Кил ăшши

Автобус патне çул инçе пулни те савăнтарать Верука. Машинпа-мĕнпе ларса тухас пулсан вара хăш чухне кăмăлсăр та юлать. Ара, тăван çĕрпе утса киленсе пыма питĕ лайăх. Йĕри-тавра ăçта пăхатăн, çавăнта вăрман. Тишле çырми тăрăх ката. Çырмисем те темиçе. Сăхăт, Кашкăр, Кантăр, Нижер. Кашнинче пулса курнă, утă çулнă, ĕне-сурăх çитерме çӳренĕ, вăййи-кулли тата мĕн чухлĕ пулман пуль!..

Верук пушшех савăнчĕ. Мĕн автобус киличченех куçларĕ тăван тавралăха. Унăн хăйĕн илемĕ. Çавă тыткăнларĕ ăна. Автобус çине ларсан та лăпланса çитеймерĕ. Малаллине шутласа палăртса пычĕ. Çывăрса кайнă Ваçукĕ çине ытарайми пăха-пăха илчĕ. Лешĕ, паллах, çавна сисмерĕ. Ывăннă-ши вăл е çынни çавăн йышши, кантăк çумне сĕвенсе ларнă та автобус сиктерни-мĕнне пăхмасăрах тĕлленсе пырать. Арнольда хăй чĕрçи çине илнĕ. Ку та кăмăла тултарать. «Малашне те çапла пултăрччĕ!» — ĕмĕтленет çамрăк хĕрарăм. Çапла шутласа Шупашкара мĕнле çитнине те туймарĕ. Ахаль чух кĕтсех ывăнаканччĕ, паян вара ӳт-пĕвĕ те, пит-куçĕ те чĕрĕ. Яртлаттарса утать вăл халь хула урамĕпе, упăшкипе ачи аран-аран ĕлкĕрсе пыраççĕ. Хирĕç пулакан çынсем те тем кураççĕ пулас Верук çумĕнче, çул парса ирттерсе яраççĕ. Кун пекки нихçан пулман. Верук хăйне начартарах тесе шутланăран-ши çулне-мĕнне яланах хăй параканччĕ. Халĕ вара, чăн та, ыттисенчен пĕрре те катăк мар. Упăшкипе ачи вăй парса тăчĕç пулас, урăх мĕнпе ăнлантарăн ку улшăнăва.

Килне те, тăваттăмĕш хута, чупса тенĕ пек хăпарчĕ. Кил ăшшине туйса илнĕ чунсем виççĕн пĕр харăс темĕн те пĕр çинчен пĕр-пĕрне пӳле-пӳлех калаçрĕç. Амăшĕ ялтан парса янă çĕрулмине ăшалаcа çирĕç те телевизор курма ларчĕç. Ваçукшăн та кун çитрĕ пулмалла, вăл футбол курма тапратрĕ. Арнольд, ĕшенсе çитнĕскер, диван çинчех çывăрса кайрĕ. Верук çемйине сăнаса пăхса тăчĕ-тăчĕ те кухньăна апат пĕçерме тухрĕ.

Автобус çинчех шутласа хăраса кĕтсе пынăччĕ пулас тĕлпулăва Верук. Çак пĕчĕк хваттере Ваçука мĕнле вырнаçтармалли пирки пуçа ыраттарсах пăшăрханнăччĕ. Кӳршĕ хĕрарăма мĕнпе çырлахтармаллине те шутласа хунăччĕ. Хальхинче чăнах та турри пурах пуль çав Верукăн, шутласа хунă пекех килсе тухрĕ. Пĕр банка кофе такамăн кăмăлне те уçĕ. Кӳршĕ вара уншăн вилсех каять. Наркоман пекех. А, тен, чăн та, пур та пулĕ унăн çав туртăм. Калаçнă-мĕн вăхăтра пит хĕрсе каять. Питĕ ăслă тата хăй, пурне те хăйĕнни пек тутарасшăн. Куç пăвма та пултарать пулмалла, куçĕ темле ылмаш...

— Ăçтан тупрăн вара ку чун уççи эмеле? — хавасланчĕ хайхи

банкине апла та капла çавăркаласа пăхнăçемĕн. «Бразили» тесе çырса хунине вулакалать. — Ну, пурăнатпăр ĕнтĕ халь.

— Анне илсе хунă пулнă. Ăна, ват çынна, кирлĕ мар. Пире Васюкпа иксĕмĕре парса ячĕ.

— Мĕнле Васюк тата?

— Упăшка ман.

— А-а-а!

Тек чĕнмерĕç. Çырлахрĕç. Пĕри кофепе, тепри — а-а-а! тенипе. Кирек мĕнле пулсан та паянлăха вăрçас-тăвас кăмăл тупăнмарĕ ун, çавă хаклă. Майĕпен, урăх никама та кансĕрлес мар тесе тăрмашрĕ кухньăра Верук. Васюка кукăль пĕçерсе çитерес терĕ. Чуста лартса ячĕ. Ăшне хатĕрлеме пуçларĕ. Каçчен ним те мар ĕлкĕрет. Кун вăрăм. Шап-шур çĕрулмине вĕтĕ туранăçемĕн ун чунĕ каллех, ним сăлтавсăр тенĕ пекех хăпартланса кайрĕ. Ара, хăйне майлă идилли мар-и вара? Шăп пӳлĕмре таçта телевизор мăрăлтатать, чӳречерен хĕвел кĕрет... Кам курма пĕлет — савăнать. Чуста епле чашкăрса хăпарнине те илтет халь Верук. Ачи çывăрать. Урăх мĕн кирлĕ пултăр? Савăнать хĕрарăм. Хăйĕн телейне такампа та пайлĕччĕ. Пĕччен телейленни телей-и вара вăл? Чăтаймарĕ хĕрарăм, пĕр сас кăлармасăр утса кĕрсе кайрĕ пӳлĕме, Васюка хыçалтан пырса ыталарĕ. Пĕр сăмах каламасăр ун çумне тĕршĕнчĕ. Упăшки мĕнле те пулин паллă парса савăнтарасса кĕтрĕ. Футбол кансĕрлерĕ-и е мĕн те пулин урăххи — Верук пĕлеймерĕ. Ăшшăн кăна пăхса ыталаса илес вырăнне Васюк темле канăçсăррăн хускалса илчĕ те: «Ан кансĕрле-ха!» — тесе хучĕ. Нимех те каламарĕ ĕнтĕ. Анчах хĕрарăм чĕри, тĕрĕсех сисрĕ пуль çав, темле сивĕнсе ыратса кайрĕ. Упăшки çапла ăнăçсăр калаçасса кĕтменччĕ вăл. Кăмăл пăсăлчĕ. Кукăль пĕçерес шухăш та сĕвĕрĕлчĕ. Çук, ачи лăпкăн-лăпкăн сывласа çывăрнине те, чуста епле чашкăрса хăпарнине те илтмест халь Верук. Хĕвел те тек кĕрсе пăхмасть ĕнтĕ. Саланчĕ, йăлтах саланчĕ çак куçа курăнманпа пĕрех черченкĕ тĕнче. Вăйсăрланса кайрĕ Верук. Ларчĕ-ларчĕ те таçтан каллех вăй кĕчĕ. «Пулин, — шутларĕ вăл, — ан пăхтăр, эпĕ вара пĕрре те кулянмастăп. Кукăле, пĕр лартса янăскере, пурпĕрех пĕçеретĕп. Васюка мар тăк ывăла пулать».

Вырăна ларнă чĕре тек аптратмарĕ. Ал-ура хăй ĕçне турĕ. Пурнăçра, хуть те мĕн калăр, начаррипе пĕрле лайăххи те пур. Чуста, çĕпре вăйлă пулчĕ пуль, кукăль ăшне хатĕрлесе çитернĕ тĕле хăпарса та çитрĕ. Халĕ ĕнтĕ кăмакине хутса ярсан та юрать. Вĕриленсе тăтăр. Çапла ăшталанса ĕçлекен хĕрарăм хăй те сисмерĕ — каллех паçăрхи евĕклĕхе кĕрсе ӳкрĕ. Кăмăл пур чух ĕç те ăнать. Тепĕр çур сехет иртрĕ-и, кухньăна тутлă шăршă тапса тухрĕ. Çавă Васюк сăмсине те кăтăклантарчĕ пулас. Унччен те пулмарĕ, футбол курма пăрахсах чупса пычĕ.

— Таçтан тем кукăль шăрши килмест пулĕ те? — ĕмĕтленни çитнĕ чухнехи пек темле куçне хупса, сăмса çуначĕсене хăпартса ыйтрĕ вăл.

— Ара, паянхи кун уявлăрах пултăр тенĕччĕ те...

— Ну, маттур та вара эсĕ ман! — паçăр пулманни тинех çаврăнса çитрĕ. Ваçук Верука пырса ыталарĕ. — Ну, çиетпĕр те... Эпĕ мĕн, эпĕ кукăль ачи вĕт. Кукăль тесен, — каллех ыталарĕ вăл арăмне, — тем тума та хатĕр.

— Ăт лайăх. Час пиçет. Арнольда та вăрат, хатĕрленĕр.

— Çывăртăр, мĕн вара?

— Кăнтăрла нумай çывăрсан каçпа пит асапланать. Лăпкă мар.

Çав вăхăтра Арнольд сас пачĕ.

— Вăранчĕ! — чусталлă аллисемпех чупса кайма хатĕрччĕ Верук — Ваçук чарчĕ.

— Эпĕ хамах, — темле мăн кăмăллăнрах, хăйне чăн ашшĕ пек туйса каласа хучĕ.

Пÿлĕмре, нумай та вăхăт иртмерĕ, ахăлтатса кулни, çухăра-çухăра янисем илтĕнме пуçларĕç. Верук чĕри ирĕлсех кайрĕ. Ара, кун пек лайăх килсе тухать тесе шутламан та. Пуçра пĕрмай пăшăрхануччĕ. Çуралнă чухне — мĕнле çуралать-ши тесе, çуратсан — мĕнле пăхса ÿстермелле-ши тесе. Ашшĕ пулмарĕ теха пĕр вăхăт, мĕн тăвăн, тем те шутлăн.

...Леçсе яракан та пулмарĕ вĕт ăна больницăна. Ача тума аптранăскер, хăй тĕллĕнех, кăшкăра-кăшкăра ярса тенĕ пек, хăйне хуçлатса пăрахнине пăхмасăрах васкавлă пулăшу чĕнчĕ. Илсе кайрĕç вара ăна... Каялла таврăнаймастăп пуль тенĕччĕ. Çул çинче ах! ахлатрĕ. Шăла темле çыртса пырсан та тухрĕ вĕтха вăл çав сас. Пулас ача сассиех пулчĕ пуль. Больницăна мĕнле пырса кĕнине те астумасть халь. Тен, малтан астунă та пуль, халь маннă. Пĕр шухăшчĕ ун чухне пуçра. Тĕрĕс-тĕкел çуралтăрччĕ, алли-ури вырăнта пултăрччĕ... Ваçук ÿсĕртерехчĕ çав ун чухне, хăй те сăра ĕçнĕ... Тем курса ларас пур. Вăл вăхăтсенче пурте питĕ ĕçетчĕç те, ачисем те чăлах çуралатчĕç.

Çук, ытла пит нумай асапланмарĕ Верук. Çăмăл çуратрĕ. Лăштăрах кайрĕ ывăнса çитнĕ çан-çурăмĕ. Тĕрĕс-тĕкелех мĕн ачи, ывăл! Пăхма та хăй... Ним иленки çук. Пĕрре пăхса илчĕ — çĕклесе те кайрĕç. Верук кăтăш пулчĕ.

Ĕмĕртме пĕрремĕш хут илсе килнине те астăвать Верук. Арнольд малтан кăкăра хыпасшăн пулмарĕ, кайран вара — çисе тăранатчĕ те юнашар йăванса çывăрса каятчĕ. Пăхатчĕ те ÿссе çитсен кинори хăй юратакан Арнольд Шварцнеггер артист пек пулассăн туйăнатчĕ. Çавăн пекех вăйлă мускуллă арçын. Вара вăл амăшне никама та хур тума памĕ.

Çапла ĕмĕтленнĕччĕ ун чухне Верук. Темле пулать ĕнтĕ. Ун чухне ашшĕ пулман та...

Ту-ту-тут! тĕпĕртетсе тухрĕç çав вăхăтра пÿлĕмрен кухньăна

ашшёпе ывăлĕ. Ачи лайăх утма пĕлмест-ха, пĕç хушшинче сĕтĕрĕнсе пырать. Ниçта кайса кĕрейми савăнăçлă хăйсем.

— Акă эпир çитрĕмĕр те. Чăш-чăшш! Поезд çине ларса килтĕмĕр, анма вăхăт. Пире кунта йышăнаççĕ-и?

Ваçук ывăлне ячĕ. Тĕрексĕр тăрса юлнă ача табуретка хĕрринчен тытрĕ. Йăванса каймарĕ. Ашшĕпе амăшĕ ун çине пĕр авăк ытараймасăр пăхса тăчĕç-тăчĕç те утма вĕрентме пуçларĕç. Хире-хирĕç тăрса кукленсе ларчĕç те малтан пĕр метртан, кайран икĕ метртан та пулĕ ачана пĕр-пĕрин патне «кил кунта, кил» тесе яма тытăнчĕç. Утма пĕлмен ача ашшĕ е амăшĕ патне çитес тесе ывтăнса каять, анчах ӳкме памаççĕ, çемçе те ăшă аласем вăхăтра ярса илеççĕ, ăшă кулăллă пичĕсем çумне тытса чуптăваççĕ. Унтан каллех пĕр-пĕрин патне тĕксе яраççĕ. Пĕр çур сехет иртрĕ-и çапла выляса, иртмерĕ-и — ача хăй тĕллĕн утма вĕренчĕ те. Урисем хытса çитнĕскерĕн ма утмалла мар тет вара. Ахаль чухне, аркă çинче сиктернĕ вăхăтра, питĕ хытă тапа-тапа ярать вăл. Аллипе кирлĕ-мĕн япалана çатăр кăна ярса илет. Амăшĕ вара уншăн пит савăнать: ку маххă памасть тет. Ашшĕ те çапларах та... Улми улмуççинчен аякка ӳкмест теççĕ. Акă Арнольдăн та хăлхисем темле карăнарах тăртанса тăраççĕ, Ваçукăнни пекех. Тути вара — чисти чечек! Пăхса та, чуптуса та тăранмалла мар. Сăмси пысăк, куçĕ çавра... пурте йĕркеллĕ, пурте вырăнта ку пулас каччăн, хĕр чĕрисене çунтармăшăн. Тăнк! тăракан пĕчĕк сапаккине курсан вара каçсах каять, ачине чĕçç! тутарать. Мĕншĕн çаплине вăл хăй те пĕлмест. Хуть те мĕн калăр ăна, хуть те мĕн тăвăр — пĕтĕм тĕнчене, пĕтĕм пурнăçне хăй ачи тавра çавăрттарать вăл. Унран лайăххи никам та çук.Чи хитри, чи ăсли... Куç ан ӳктĕр кăна. Куç ӳкесрен питĕ хăрать Верук. Çав кӳршĕ хĕрарăм — нихçан та ятран чĕнмен — пит усал пек курăнать. Кашнинчех чĕрре кĕрет, куçне тавăрса пăхать. Шалта тем хăрушлăх явăнать, ăссăр та тĕпсĕр кӳлĕ пек тем... Ачи кăна мар, çак тĕнчере Верук хăй пурри те питĕ тарăхтарать пулмалла ăна. Паянлăха та пулин мĕн те пулин ан сиксе тухтăрччĕ тесе кĕлтăвать Верук. Çав хĕрлĕ çӳçлĕ, хĕремеслĕ питлĕ хĕрарăм тем хăратса, асăрхаттарсах тăрать. Ахальтен мар пĕр-пĕрне курайманççĕ вĕсем, кайран мĕнле те пулин усал япалапа таврăнать-ха ĕнтĕ вăл, çавна Верук питĕ лайăх ăнланать, — пĕрех çĕнтереймеççĕ кăмăлĕсене, çавна пĕле тăркачах çапăçаççĕ. А, тен, пĕлмеççĕ те!.. Çын вăл хăш-пĕр чухне питĕ суккăр пулать. Ваçукпа та акă тем килсе тухĕ, пĕрре те шанчăклă мар вăл. Хулана ĕçе вырнаçатăп тет-ха та, ненай, вырнаçса пĕтейĕ-и? Кунта вĕт ялти мар. Кашни кун шăп та лăп палăртнă вăхăта çитмелле ĕçе. Унсăрăн часах ху çине урăхларах пăхма пуçланине те сисĕн, кунта вĕт ялти пек çапкаланса çӳреймĕн... Çавна пĕлмест-ха вăл. Ахăрать-ха халь ачипе, савăнать...

Хĕвеллĕ, кукăль шăршиллĕ пӳлĕмре халĕ калама çук хăтлă. Упăшкипе ывăлĕ ун кукăль çисе телевизор пăхса лараççĕ. Хăй кĕпе çĕлет. Юрать вĕренсе юлчĕ çав ĕçе. Халĕ акă кирлĕ пулчĕ те. Магазинта ним тупса илме çук. Мĕн чухлĕ çĕлемен пуль вăл кун пек кĕпе-йĕме. Ялтан хулана килсенех ниçта кайса кĕме çукчĕ те чăн малтан ученица пекки пулса çĕвĕ цехне вырнаçнăччĕ. Питĕ йывăрччĕ! Пĕрехмай пĕр ĕç туса лар-ха кунĕпе, ухмаха тухса кайма та пулать. Пĕр каччă тата тем çыпăçма пуçларĕ, хĕр маррине сисрĕ пулмалла, кунран мана валли те мĕн те пулин тухать терĕ пулмалла. Патне те пыртармарĕ ăна Верук. Ун чухне, мĕн калăн, арçынсене питĕ кураймастчĕ вăл. Питĕ тарăхтарса çитернĕччĕ ĕнтĕ ку та, юрать ман хырăм ӳснине курчĕ пулас та — чарăнчĕ. Унтан декрета кайма вăхăт çитрĕ. Хăтăлтăм терĕ. Çук çав! Общежитире те темле услап каччăсем канăç памастчĕç. Ун чухне общежитиреччĕ-ха вăл. Вара çавăнта вĕт темле хура ӳтлĕ йĕкĕтсем пырса тулатчĕç те хăш-пĕр хĕрачасене, тин кăна ялтан килнĕскерсене, тăпăлтарсах илсе тухса каятчĕç. Хута кĕрекен никам та çукчĕ. Хĕрхенместчĕ вĕсене Верук. Манпа мĕн пулни ытгисемпе те пултăр тетчĕ. Халь пулсан, паллах, апла шутламĕччĕ. Ун чухне вара кӳренсе лартнă та, чĕри курайманлăхпа тулса ларнă та... Ах, çухăртатчĕç вара, ах, çухăртатчĕç çав йĕпĕлккесене... Кайран вара хăйсем те сăмсисене каçăртса çӳреме пуçларĕç. Парне панă тир кĕрĕксемпе, хаклă чăлхисемпе мухтанатчĕç. Чăваш каччисене питлетчĕç. «Вĕсенчен мĕн усси? — тетчĕç. — Ни ресторана илсе каймалăх, ни хăйсен тăхăнмалăх çук». Кайрĕç вара, черетленсе пыратчĕç... Ачине упăшкисĕр çитĕнтернĕ пулин те хăйне çав хĕрсенчен телейлĕрех тесе шутлать Верук. Ун ачи, пурнăç тыткăчи, пур. Пӳлĕм те пачĕç ăна. Апла вăл темле тăлăх турат мар, патшалăха кирлĕ çын. Вăл ывăл ӳстерет. Кусен вара?

— Ăт парать! Тăпăлтараççĕ кăна! — кăшкăрса ячĕ çав вăхăтра телевизор курса ларакан Ваçук. Çĕвĕ çĕлесе ларакан Верук шухăшĕ татăлчĕ. Кино кăтартаççĕ-мĕн. Таçта Парижра вăрçă вăхăтĕнче амăшĕпе ачи пурăнаççĕ. Ачи питĕ илемлĕ. Çапçаврака питлĕ, яка уссиллĕ. Амăшĕ ăна вилесле юратать пулмалла. Ывăлне кăна мар, юлташĕсене те питĕ пăхать. Лайăх пултăр тет. Лешсем вара — ку кинона Верук та ĕçне пăрахсах пăхма тытăнчĕ — çаратаççĕ. Пĕр вĕçĕмсĕр укçа ыйтаççĕ, килти мĕнпур япаласене суттараççĕ. Маларах, Ваçук кăшкăрса янă вăхăтра, ывăлĕ амăшне çапса янă пулмалла. Лешĕ питне тытса çӳрет. Хăйне, çилленес вырăнне, темле айăплă туять, юрама тăрăшать. Юлашкинчен унран чи хаклă, никама та пама, сутма юраман япала ыйтаççĕ. Ку парасшăн мар. Ылтăн çĕрĕ-мĕн. Питĕ çилленсе тухса каяççĕ кусем. Вĕсенчен пĕри, ывăлĕ ирĕк панипех ĕнтĕ, чăтаймасть, таврăнать те çав хĕрарăма вĕлерсе çĕррине тăпăлтарса илет. Лешĕ вара вилес умĕн те ывăлĕн ятне асăнать.

Верук та çапла сутма тăнăччĕ мар-и-ха? Таçтан пырса кĕчĕ

танлаштару. Амăшне хулана илсе килсе çуртне сутса хăварасшăнччĕ вăл. Вара ăна та кунта çырăнтарса тепĕр хваттер, кунран пысăкраххи, илесшĕнччĕ. Амăшĕ ăслăрах пулчĕ пуль, юрать сутмарĕç, халь хулара йывăрлăхсем пуçлансан ялти пахча, амăшĕ пăхса ӳстернĕ выльăх-чĕрлĕх питĕ вырăнлă пулчĕç.

## Савăш курки

Аптрамасть пурăнать халь Верук. Ваçуксен ашшĕ-амăшĕ те пулăшаççĕ. Ыттисенчен кая юлас килмест çав, мĕн тăвăн? Унăн та виçĕ пӳлĕмлĕ, уйрăм кухньăллă, ваннăллă хваттерте рехетленсе пурăнас килет. Хăнана-мĕн кайсан, юлташĕсем патне унта, вĕсен капăрлатса пĕтернĕ çывăрмалли, хăна йышăнмалли пӳлĕмĕсене курсан чĕри шар! çурăлса каять. Хваттер пурпĕрех илетĕп тесе шăла çыртсах тупа тăвать вара вăл ун пек чухне. Анчах амăшĕ акă май килнĕ чухнех тем пек ӳкĕтлесен те хулана пурăнма куçма килĕшмерĕ. Хăй ĕмĕрне ялтах, хăйĕн килĕнчех ĕмĕрлес терĕ пуль. Тĕрĕс турĕ. Мĕн лайăххи пур вара кунта? Курнă, курман мар, çӳреççĕ вара ниçта кайса кĕреймесĕр хула картишĕнче ял карчăкĕсем, хăйсене ниçта кайса чикеймеççĕ. Ĕç те çуккă вĕсем валли кунта, сывлăш та, шыв та... Никампа калаçса чуна йăпатма çук. Килнĕ-килмен тенĕ пек асапланма тытăнаççĕ, тăван ялĕшĕн, хурăнташĕшĕн тунсăхлаççĕ, çавна пула нумаях та пурăнаймаççĕ, çак ют хуларах çĕре кĕреççĕ, ют çĕртех манăçа тухса выртаççĕ. Çавă хăратрĕ-и карчăка е урăххи — паллă мар, çын умĕнче аван мар терĕ те, ĕçĕ те пĕтрĕ. Иртĕнсе пурăнма хушмарĕ пуль, çавă çех. Ирĕклĕрех пурăнас тени, чăн та, пурччĕха Верукăн. Мĕн хур тӳснĕшĕн, мĕн пур куççульшĕн пĕрре питĕ рехетленсе, ун патне те савăш курки çаврăнса çитрĕ тесе тутлă апатçимĕç çисе, хаклă йышши эрех ĕçсе пурăнса курас килетчĕ. Пурччĕ ун пек туйăм. Те çавна сисрĕ амăшĕ, те халăх ăсĕ калаçрĕ ун чĕлхипе — пĕлмерĕ хĕрĕ. Анчах та амăшĕ тĕрĕс тунине халĕ питĕ лайăх чухлать. Яла кайса килме кăна мĕне тăрать. Пырса кĕретĕн те тăван киле — чĕре лăштăрах пулать. Пĕтĕм хуйха-суйха, хулари пĕтĕм пăтăрмаха манатăн. Çук кунта нимĕнле магазин, çук черет, вăрçăхаркашу та çук. Канлĕ, лăпкă, ырă... Чĕре çăвĕ ирĕлсе анать теççĕ ун пек чухне. Ним марсăрах çухататчĕ çав çăтмаха Верук. Хăйĕншĕн мар, ачишĕн те, апăрша...

Верук кĕпе çĕлесе пĕтерчĕ, çаврăнса пăхрĕ. Ун упăшкипе ачи... иккĕшĕ те çывăрса кайнă-мĕн. Ачи урайĕнче, арçынни кресло çинче. Шухăша кайса ларса упăшки çинчен çеç мар, ывăлĕ çинчен те манса кайнă вăл. Ах тур, çав аса илӳсене! Нумай та пурăнман вăл çак çĕр çинче — хура-шурне вара

хăш-пĕрисенчен ĕмĕр ĕмĕрленисенчен те ытларах тӳссе курнă.

Çывăрса кайнă ывăлне вырăн çине асăрханullăн илсе хучĕ. Васука вăратмалла-и, вăратмалла мар-и тесе пăхса тăчĕ. Ыйха путнă çын сăнне сăнама питĕ лайăх. Вăл камне тӳрех куратăн, питре нимле маска та çук. Пĕтĕмпех куç умĕнче. Васук умне чĕркуçленсе ларсах пăхма тытăнчĕ Верук. Акă тути ун темшĕн усăнсах аннă, çăварĕ кăшт уçă, сасси кăшт хăрăлтатса тухать, сăмси ĕçлемест-и... Кун пек пĕрре пăхсан пĕрре те усал пек мар вăл. Юратать те пулмалла вăл Верука. Тепĕр тесен, çав хăмла ани çине те пĕр юратусăр ытахальтен пыман вĕт-ха вăл, Верукшăн пынă. Хăйне хăй чарайманни кăна, тен, кунта. Вăн, тути... Характер çукраххине пĕлтермест мар-и-ха çапла усăнса анни... Чараксăр, характерсăр... Пылака пит юратать тата. Варени тесен каçсах каять. Верук та... йӳçех мар пулмалла çав, çапла тутанса пăхас тесе çуннă пулсан...

Верук пуçне сасартăк вăрттăн шухăш пырса кĕчĕ. Енчен те халех тепре чăнласах савăшса илсен... Никам та кансĕрлемест, — ачи çине пăхса илчĕ Верук — пĕри çывăрать, теприне вара вăратăпăр... Çапла шутларĕ кăна, хĕрарăм чĕринче темле çăтсан та çăтса тăранмалла мар пылак туйăм çуралчĕ. Унăн халех, çак урайĕнчех пĕрле выртса виççĕн тăрас килчĕ. Асăрханullăн, сывлама чарăнса тенĕ пек сĕртĕнчĕ аллипе арçын питçăмартинчен, унтан тутинчен... Пĕрре ассăн, тепре тутине пăркалантарса сывласа илчĕ те лешĕ кресло çинче тепĕр май çавăрăнса ларчĕ. Ан кансĕрле тени пулчĕ ĕнтĕ ку. Хĕрарăм вара тата асса кайрĕ. Хăйса-хăйса çитрĕ те арçын тутине нихçан курман пек чуптурĕ. Тин тăна кĕчĕ хайхи, куçне чарса пăрахса тем пулнă пек пăхма тытăнчĕ. Çумĕнчи арăмне курсан лăпланчĕ. Хăй çумне туртса илчĕ. Çавă кирлĕ пулчĕ те хĕрарăма. Халь тин ун ытамĕнчен вĕçерĕнеймĕн. Тутисем çыпçăнсах ларчĕç. Нихçанхинчен те пылак пек туйăнчĕç. Çав пылакшăнах каçарчĕ Васука Верук. Хăех, никам ыйтмасăрах каçарчĕ. Ăна йăлтах, ним юлми парăнас терĕ. Хĕрарăм хĕрӳлĕхне нимле арçын та чăтаймасть. Асамлă вăй вăл. Темле хумлăн-хумлăн пырса çапать те сана таçта çити çавăрттарса каять. Ху та хĕрӳленсе каятăн, кăмака уççинчи пек ху та... Васук та сисмерĕ урайне арăмĕпе юнашар епле анса выртнине, хăй мĕн тунине те ăнланмарĕ. Хытă пулчĕ Верука урайĕнче выртма, хытă та питĕ савăклă. Ун чухне хăмла ании çинче ăна-кăна сиссе юлайманччĕ, халĕ вара пĕрре те ыраттармарĕ вăл Верука. Ачашларĕ, питĕ ачашларĕ, тăнран кăларатчĕ. «Ку тем тесен те хĕрарăмсемпе пурăнса курнă вара», — шутларĕ пуçĕ. Анчах ку самантлăха кăна пулчĕ, ăна арçын йывăррăн сывлани, хăлхаран темле ăнланмалла мар сăмахсем калани хупласа хучĕ. Намăс та, çав вăхăтрах питĕ савăк иккен ун пеккине илтме. Хăмла аври çинчи пек мар ку, пĕрре те хăрушă

мар... Унччен те пулмарĕ, Верук хăй те Васук пусне сатăрласа ярса илчĕ, кăкăрĕ сумне мĕн вăй ситнĕ таран чăмăртарĕ. Хăй те сывлăшсăр пулчĕ... Сав кирлĕ пулчĕ те! Сасартăках ӳт-пĕвсĕр тăрса юлчĕ, унтан темле пылак вăй пусран пырса сапрĕ те — Верук тăнне сухатрĕ. Самантлăха сухатрĕ пулин те питĕ хăраса ӳкрĕ вăл, ӳт-пĕвĕпе хусаланакан Васука хăй патĕнчен тĕртсе ячĕ. Унтан тăруках кулса ячĕ. Савăккăн-савăккăн... Васук та, хăй ĕсне мĕн кирлĕ таран тунă та, хирĕслемерĕ, кăмăллăн кулса айккинелле йăванчĕ. Пасăр пăталаса лартнă ӳт тата сăмăлрах, тата савăкрах тапма пусларĕ. «Пĕрре те йывăр мар иккен вăл савнă арсын айĕнче выртма», — сиссе илчĕ шухăшĕ. Савăнтах, ах, намăс! Улякка аса килчĕ. Сук, ун айĕнче те начар марччĕ. Вăл та ĕсне тăватчĕ. Васук вара пурпĕрех вăйлăрах пек. Ун пекки сук. Малашне те сапла пулĕ, вăл унăн кăна пулĕ...

Сапла е урăхларах шухăшсемпе пăтранса выртрĕ Верук. Чĕри пĕр тикĕс тапрĕ. Никамран та хăрамарĕ вăл хальхинче. Ун упăшки пур! Нимле каччă та, нимле мастăр та кирлĕ мар тек. Хăйсемех хăйсене мĕнле кирлĕ сапла майлаштарса пурăнĕс. Кӳршĕ майран та, амăшĕн те, никамăн та нимле ĕс те сук вĕсен сумĕнче. Эпир халь хамăр пĕр семье. Пулнă, пултăр, чупнă пултăр хĕрарăмсем патне, хам та сылăхсăр мар, халĕ вара урăх ниста та сĕтĕрĕнсе каяс сук, никама та сак пӳлĕме сĕр касма кĕртес сук. Семйине те, ачине те ун нихăш енчен те хур кăтартма юрамасть. Улякка мĕн вăл? Васукпа танлаштарсан, паллах, курăмлăрах, ăслăрах... Пуслăх тата. Хăйне Васукпа лайăх пулнă сĕртех урăх арсын пуса пĕрмай пыра-пыра кĕни Верука тĕлĕнтерет, мĕншĕнне чухламасть-ха вăл. Хăй сисмесĕрех иккĕшне танлаштарать. Чĕри парăннă пулсан та пĕрех суйлать. Унăн та телейлĕ пулас килет, йăнăшас марччĕ. Урайĕнче кăна мар, йĕри-тавра тĕкĕр те шифоньер лартнă пӳлĕмре сарлака кравать синче выртса тăрасчĕ.

Темтепĕр ĕмĕтленсе выртрĕ Верук. Урайĕнчех! Упăшки ун каллех сывăрса кайрĕ. Вăл та урайĕнчех. Пусне сĕклесе минтер хурса пачĕ, ая утиял сарчĕ, хăй те юнашар выртрĕ. Сывăрчĕс вара сăтмахри Адампа Ева пек. Сивĕ сĕрте сивĕ пулчĕ, утиялне те пĕр-пĕрин сине турткаларĕс. Ăшă сĕрте ăшă пулчĕ — сирсе ячĕс. Пĕрле пĕрремĕш хут сывăрни пулчĕ ку. Урайĕнче пулсан та питĕ тутлă, пĕр вăранмасăр сывăрчĕс.

## Шурă пуслă симĕс сĕлен

Ирпе харăс вăранчĕс. Вăранчĕс кăна — туалет пăтăрмахĕ пусланчĕ. Майра каллех сиксе ӳкрĕ. Хальхинче Васук сине. Вăл вара аптраса тăмарĕ, арсын темерĕн, касрĕ те татрĕ. Татах

майлатан пулсан майна татап терӗ. Лешӗ чӑтаймарӗ, ним тӑвайман енне пӳлӗмне чупса кӗрсе кайрӗ. Тухмарӗ. «Ҫав кирлӗ, — шухӑшларӗ Верук, — сахал мар ман юна пӑснӑ, сахал мар тарӑхтарнӑ». Пӗрмай ӑна ҫырлахтарса пурӑнмалла мар ӗнтӗ, ҫитет. Халь ун упӑшки пур. Ӑна вӑхӑтра апат пӗҫерсе ҫитермелле, ҫуса тӑхӑнтармалла, вӑхӑт ҫитсен юнашар хумалла... Неччу унта, ҫитет, тек сас ан кӑларнӑ пултӑр. Ҫапла шухӑшларӗ те — хӗрхенчӗ. Хӑйӗнчен те пӗрре кӑна мар кулнӑ — ыттисем те ҫапла хура-шур курччӑр тет-и-ха вӑл?

— Ун пек каламалла марччӗ, — чӑтаймарӗ Верук, — ҫынни ҫавнашкал вӑл. Усалӗ те ун...

— Майра темерӗн. Ман мӗн тумаллине пӗлет тата. Хӑй мӗн пит таса пурӑнать-и вара, темскерсем каласа пӗтерчӗ, атту.

— Таси-мӗнни, ача тавраш ҫук та, тасарах та пуль ӗнтӗ. Арнольд хыҫҫӑн пуҫтарса ӗлкӗрсе пыма ҫук. Тата эпӗ ӑна нумай чухне килех хупса хӑварнӑ. Йӗнӗ те пуль, тарӑхтарнӑ та...

— Ҫитӗ. Ман паян ӗҫе вырнаҫма каяс пулать. Ир харкашсан ӗҫ ӑнманран хӑратӑп. Атя ҫырткалар та...

Ваҫук каласа пӗтерейменерӗ, алӑк уҫӑлса кайрӗ те — хӗремесленнӗ майра сиксе тухрӗ.

— Эс кунта квартирант ҫеҫ, эс никам та мар. Паян тесен паян тухса кайма пултаратӑн. Эп сан хыҫҫӑн тасатса тӑмастӑп. Халех тухса вӗҫнӗ пултӑр, халех!

Кӳршӗ хӗрарӑм ниҫта кайса кӗрейменерӗ, пӗр вырӑнта тапӑртатса илчӗ, аллисемпе хӑлаҫланчӗ тата тем каларӗ — Ваҫук ӑнланмарӗ. Ун та пичӗ хӗремесленчӗ, алли те чӗтреме пуҫларӗ... Тем сиксе тухатчӗ, калама хӗн, ҫав вӑхӑтра упӑшкипе майра хушшине Верук кӗрсе тӑчӗ.

— Эпӗ хам, пӗтӗмпех хам пуҫтарса тӑрӑп, ан хӑрӑр, ӳпкелешмелле пулмӗ. Вӑл халь тин ялтан килнӗрен ҫапла пуль, хулари хваттерте пурӑнса курман, ӑна-кӑна пӗтӗмпех чухласа пӗтерейместм. Вӑхӑт нумай та иртмӗ акӑ, хӑй вырӑнне хӑех ларӗ.

— Чыссӑр эсир, эсир нихҫан та ҫын пек пурӑнас ҫук. Тухса кайӑр кунтан. Унсӑрӑн пурпӗрех тӗп тӑвап. Колхозник! — майра пуҫне каҫӑртрӗ те, пурне те ҫӗнтертӗм терӗ пуль, пӳлӗмне кӗрсе кайрӗ. Ваҫук чӗнмерӗ. Вӑл чӑтрӗ. Ӗҫе вырнаҫам-ха терӗ, унтан куҫ курӗ.

Ал-хапӑл пуҫтарӑнчӗҫ те тухса кайрӗҫ. Арнольдне, паллах, яланхи пекех, пӳлӗмех хупса хӑварчӗҫ. Миҫе хутчен ӗнтӗ ҫапла чунне хытарса тухса каять Верук килтен. Ача сачӗ кӗркуннепе кӑна пама пулчӗҫ, унччен ниҫта та кайса кӗрейместӗн, чӑтас пулать. «Ваҫукпа иккӗн, тен, ҫӑмӑлтарах пулӗ», — шутларӗ вӑл. Пӗри пӗр смена, тепри тепӗр... Упӑшкине киле хӑвӑртрах килме хушса хӑварчӗ те хула урамӗпе комбинат еннелле ҫӑмӑллӑн утса кайрӗ. Паян ун, ирпе кӑшт вӑрҫкаласа илни ним те мар, кӑмӑл пур, паянтан вӑл упӑшкаллӑ. Укҫа енчен те ҫӑмӑлланӗ... хитре

тумланмалăх та, тен, тупăнĕ. Хăйĕнпе хăй киленсе утакан хĕрарăм тута хĕррипе кăна кулса илчĕ, кулли питĕ хитре тухрĕ. Эх, халь ун çинче чаплă кĕпе пулнă пулсан-и — вăл хăйне чи телейлĕ çын пек туйнă пулĕччĕ. Анчах... Кулли мĕнле çуралнă, çапла çĕтрĕ. Пĕрех асăрхамасăр юлмарĕ. Хирĕç килекен пĕр арçын чарăнса тăрсах пăхса ăсатса ячĕ ăна. Апла тем пур ун çумĕнче, иртен-çӳрене те чарăнтарса пăхтарчĕ тĕк. Верук каллех кулса ячĕ. Кăмăлĕпе тата çӳле хăпарчĕ, вĕçсех каятчĕ пулĕ те... Мĕн ĕнтĕ, ĕçе çитиччен çапла пĕрре мар ĕмĕтленнĕ. Шухăшпа хваттерне те тем тĕрлĕ илемлетсе пĕтернĕ кутемĕн, тем тĕрлĕ илемлĕ çипуç тăхăнса çӳресе пăхнă, таçта никам кайса курман çĕршывсенче патвар арçынсемпе кинори пек якăлтатса çӳрени те пулнă, мĕн пытармалли пултăр, ăçта кăна çитмен пуль шухăшпа, мĕн кăна туман пуль, пылак вăл, питĕ пылак, ĕмĕтлĕ шухăш. Халĕ те çапла пулчĕ, халĕ те хăй йĕркипе ĕмĕтленчĕ хĕрарăм, анчах хальхинче унчченхи пек тĕтреллĕ мар, халь тин упăшки пур, халĕ упăшкипе çӳрерĕ çав асамлă тĕнче тăрăх. Таçта та кĕрсе тухатчĕ пулĕ те, пĕр кĕтмен çĕртен умне Улякка сиксе тухрĕ. Кĕтсе тăнă тем?

— Ырă кун, Верук! — аллăран тытсах чарчĕ арçын. Темле кăшт вăтанса пăхать хăй. Иртнишĕн-и айăплать е тата кĕресшĕн çав айăпа — калама хĕн.

— Сывлăх сунатăп, Олег Петрович! — татăлнă ĕмĕчĕшĕн тунсăхласа темле питĕ вăраххăн хушса хучĕ хĕрарăм.

Уляккапа мĕн пулнисем куç умне сиксе тухрĕç. Ваçук таçта кайса кĕчĕ. Мĕн шуйттан? Верук тата кăмăлсăрланчĕ. Унăн пурне те çын евĕрлĕ, турă çырнă пек тăвас килетчĕ, ак халь вара пĕр кĕтмен çĕртен пачах урăххи — Улякка — сиксе тухрĕ. «Вăхăт çук!» — теесшĕнччĕ вăл малтан. Çапла каласшăнччĕ те пăрăнса утасшăнччĕ. Ĕçĕ те пĕтнĕччĕ. Çук, пултараймарĕ, тем чарса тăчĕ. Тен, тахçан пĕрле выртса каçăхса кайса чуптунисем, арçын ытамĕнче çуралнă пылак туйăмсем хуçалана пуçларĕç каллех хĕрарăм чунĕпе? Кăна вăл хăй те пĕлмерĕ. Пĕр япалана кăна сасартăк, ку вăл аçа çапнă пекех ăнсăртран пулчĕ, ăнланса илчĕ. Вăл халь çак арçынна, Уляккана, юратать. Ваçука мар! «Ах, намăссăр! Ах, кайăк!» — вăрçса илчĕ вăл хăйне. Хăйне вăрçрĕ пулин те, кулли питĕ илĕртӳллĕ тухрĕ. Паçăрхинчен темиçе хут хитререх. Тути ун çак арçынпа татах айкашасшăн пулчĕ тем. Анчах ку аташу нумая пымарĕ, хĕрарăм тăна кĕчĕ.

— Ман вăхăт çук, каçарăр, — тупрĕ мĕн каламалли сăмаха Верук. Тутине тăп тытрĕ. Халĕ ĕнтĕ ун патне ан та пыр! Çирĕп шухăш тытсан çине тăма пĕлет вăл. Çилленес-тăвас пулсан вара — уйăхлăха. Пĕр уйăх шăп та лăп кĕтес пулать. Верук çакна хăй те лайăх пĕлет. Çавăнпа çирĕп. Çĕнтертĕм терĕ халĕ те.

— Калаçмалли пурччĕ! — хĕрарăм хытса пынине сиснĕ арçын тата хăюсăрланчĕ. — Тен, тĕл пулăпăр паян?

— Çук, нихçан та.

— Мĕн-ма ун пек вара... çапсах хуçас терĕн?

— Çапас-тăвас тесе мар. Ан çиллен. Анчах каçар, тек тĕл пулма пултараймастпăр.

— Мĕншĕн? Çав кӳршĕ хĕрарăма пула-и?

— Упăшкаллă эпĕ, акă мĕн. Ваçук килчĕ... Пĕрле пурăнас тетпĕр.

— Авă мĕн! Эп вара? Эп те сана юрататăп вĕт-ха! Тахçанах юрататăп.

— Сан ун пек юратусем тем чухлех пулнă, татах та пулĕç. Сан кунта тивмен хĕр юлман тет.

— Тетĕн хӳри кĕске тет.

— Юрать, кĕске пултăр, пуринне тытмасан та юрать. Сывă пул!

Ку ĕнтĕ пурнăçпа ĕçре мар, юратура сывпуллашса уйрăлнине пĕлтерчĕ. Олег Петрович та çапла ăнланчĕ. Çавăнпа та ку калаçăва тек хускатмарĕ, Верукпа пĕрлех комбината кĕрсе кайрĕ. Ĕç вăхăчĕ. Унта пит шутласа çӳреме май çук. Шутлама та кирлĕ мар терĕ пуль. Ассăн сывласа илчĕ те пĕр-икĕ хут, аллинчи ылтăн кайăка вĕçертнĕ чухнехи пек кулянса пăхкаласа илчĕ те Верукран ал сулсах уйрăлчĕ.

Верука вара çав ылтăн кайăк ал тупанĕ çинех пырса ларнăн туйăнчĕ. Вăл хăйне хăй те çĕнтерчĕ, кайăкĕ те алăрах. Апла кайăкĕ те ăçта пырса ларас тейĕ, çавăнта ларĕ. Çапла шутларĕ кăна — хурланса ӳкрĕ. Халь тин ĕнтĕ вăл çав арçын аллинче читлĕхе тин лекнĕ кайăк пек çатăлтатаймĕ. Паçăрхи арçын артаклăхĕ каллех кăтăкласа илчĕ. Ах, тепреччĕ! Çук, çук, тек юрамасть, намăс епле...

Çип арлакан цехри ĕçсем епле пулса пыни никамах та интереслентермест пулĕ, мĕн ĕнтĕ унта, станок патĕнчен станок патнех чупса иртет вăхăт. Верук та, ыттисем те хăйсем кунĕпе мĕн туса ирттернине пач та пĕлмен пек асăрхамаççĕ те. «Мĕн турăр?» — тесе ыйтсан, çип арларăмăр теме пĕлĕç, урăх мĕн. Кунĕпех кунта пулнине, пурнăçĕ те, телейĕ те çакăнтах пĕтнине шута та илмеççĕ.

Шута илме кирлех те мар пуль. Йывăр пулать. Ахаль те унта çатма çине ăшалама хунă пăрçа пек ăшталанатăн. Ваçук тата?.. Вырнаçайрĕ-ши ĕçе?.. Е... Темтепĕр пырса кĕрет пуçа, чĕре вырăнта мар чухне темтепĕр шутлатăн.

Киле те урине туймасăр тенĕ пек чупса çитрĕ Верук. Ачи вырăнтах. Выляса ывăннă пулас та теттисемпе пĕрлех çывăрса кайнă. Амăшĕн чунĕ лăштăрах кайрĕ. Çывăртăрах терĕ. Ваçук килнĕ çĕре апат пĕçерсе хурас терĕ. Шухăшĕ вара упăшки çинчех пулчĕ. Тем туса çӳрет ĕнтĕ, кутемĕн килмелле те пек... Ĕçлеме кĕнĕ пулсан ĕçрен те тухмалла пек. Кун каç еннех сулăнчĕ, апат та пиçрĕ. Верук апат çиме ларчĕ. Унччен те пулмарĕ, алăкран ытла хытă шаккани, тем мăкăртатса калаçни илтĕнсе кайрĕ. «Çавă!» — пĕр хăраса та пĕр савăнса кайрĕ Верук чĕри.

— Уç, Верук! Уç! — хальхинче уççăнрах илтĕнчĕ Ваçук сасси.

«Ӳсĕр!» — тин ăнланса илчĕ хăйне мĕн кĕтнине хĕрарăм. Ăнланса илчĕ те чĕтрене ерчĕ. Каллех çав хăмла ани çинчи пекех туйăнчĕ. Уçма та хăрарĕ, уçмасăр та май çук. Шăв-шава илтсе кӳршĕ чупса тухĕ те акă, пуçланĕ тепĕр пăтăрмах...

— Час, ан шакка, уçатăп! — терĕ те такам ун алли-урипе хуçаланса Верука алăк патнелле уттарчĕ. Мĕнле уçса кĕртнине те лайăххăн астумарĕ вăл, алăкран темле питĕ хăрушă пит-куçлă арçын йăтăнса кĕнине кăна курса юлчĕ. Чăтаймарĕ, алăк кутĕнчен пӳлĕме тарса кĕрсе кайрĕ. Ним тума аптранипе ачи патне пырса ăна ыталаса илчĕ, чăмăртарĕ. Ытла хытă пулчĕ пулĕ, Арнольд, вăранса çитменскер, нăйкăшкалама тытăнчĕ. Алкумĕнче вара ӳсĕр çын ĕхлеткелени, тем каласа вăрçни, ури çинче тĕрĕс-тĕкел тăрайман пирки стена çумне пыра-пыра çапăнни илтĕнсе тăчĕ.

«Ара, ман ăна хирĕç тухса кĕтсе илмелле вĕт-ха, упăшка вĕт. Ăшă сăмах каласа илĕртес те апат çиме лартас», — мĕлтлетсе çиçсе илчĕ хĕрарăм шухăшĕ. Ачине йăтсах тухрĕ алкумне, хӳтлĕх терĕ пуль...

Хăрах пушмакне хывнă, тепĕрне хываймасăр хăшкăлса ларакан упăшкине курсан чĕри каллех йăшкама тытăнчĕ. Пĕр сăмах каламасăрах ун умне кукленсе ларчĕ те пушмакне хывма пулăшрĕ. Теме пĕлсе лешĕ, ӳсĕрпе ĕнтĕ, тĕрте-тĕрте ячĕ. Вăйсăр хăй, ленчешкеленсе кайнă. Арнольд ним ăнланмасăр ашшĕне çӳçĕнчен турткаласа пăхрĕ, ун çине пăхса йăл-йăлл! кулкаларĕ. Ашшĕ те чат пĕтмен курăнать. Ывăлĕпе вылям пекки турĕ, анчах вăйĕ çитмерĕ, килте терĕ пуль, йăвансах кайрĕ. Ним тума та çук. Верук ăна çĕклесе илчĕ те пӳлĕме сĕтĕрсе кĕртсе пăрахрĕ. Ачи хыççăн мĕкĕлтетсе кĕчĕ. Ашшĕпе амăшĕ мĕн хăтланнине ним ăнланмасăр пăхса тăчĕ, тете терĕ пуль, выртакан çын тумтирне тыта-тыта пăхрĕ, амăшне пулăшам пекки турĕ.

«Инкек, каллех инкек. Каллех ман пуç çине татăлса анчĕ. Ăçтан, кам мурĕ ĕçтерсе янă ăна? Ĕçе вырнаçнă-ши хăть?» Ним тума аптранă енне Верук кĕсйисене ухтарма пуçларĕ. Пĕринчен вак укçа тухса ӳкрĕ, тепринчен документсем: шофер прави, паспорт тата ĕç кĕнеки. «Ĕçсе янă, ĕçĕ вара... ĕçе кĕнĕ. Автоколонна тет. Газ-53 машина». Верук тин лăпланчĕ. «Ĕçе илнĕ. Çав ятпа янă ĕнтĕ. Пĕр пус юлмиччен пек ĕçнĕ. Выртать халь, выртттăр...»

Верук ачине йăтрĕ те кухньăна апат çитерме, ачин те хырăм выçнă,васкамасăр кĕрсе кайрĕ. Кун пек килсе тухасса кĕтмен мар-ха вăл. Çавăн евĕрлĕреххине ялта пурăннă чухне те пĕрре кăна мар куркаланă. Хĕрарăмсем питлесе каласа кăтартнă тăрăх та пĕлет. Мĕнле чăтатăр тесе ыйтсан, чăтатпăр, ăçта кайса кĕрен тетчĕç килĕнчисем. Ак халь хăйне те пырса çапрĕ. Юрать çапăçмасть-ха...

Апат лайăх çиет Арнольд, сывă ӳсет. Ку таранччен чирлесе

асаплантарман-ха вăл. Халĕ те ак лĕрĕплеттерет анчах сĕтел çине лартса панă сивĕ яшкана, çав кăна савăнтарать. Ача апат çинине пăхса ларчĕ Верук, хăйĕн вара анмарĕ, пĕр пĕрчĕ те çăвара ямарĕ. Халĕ ĕнтĕ тин çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ ун, хăйĕн çинчен мар, упăшки çинчен шутлама тивет вăн, ачи те ӳсет... Вĕренме каяс тенĕччĕ. Пулмарĕ ĕнтĕ. Ваçук пур, пулăшать тенĕччĕ. Ăçта ĕнтĕ? Акă таçта аякка тавар турттарма пуçлĕ те киле те килсе çакланмĕ. Уйăхĕ-уйăхĕпе пулаççĕ тет-и-ха вĕсем çул çинче? Вара çав вăхăтра такампа та çыхланса каяççĕ тет. Хăйсемпе пĕрле çамрăк хĕрсене лартса çӳреççĕ тет. Кун çинчен те илтнĕ Верук. Тем те пĕлет вăл халь упăшки çинчен, тем тĕрлĕ те курнă, тем те курĕ тата... Акă çывăрса тăрĕ те, кам пĕлет, çапса пăрахĕ. Е хăмла ани çинчи пек тепĕр хут тапăнĕ... Çук, пĕрре те шанмасть халь хăй Ваçукне Верук. Олег Петровичах ун пек марччĕ. Темле шанчăклăччĕ вăл, юратма та пĕлетчĕ... Ку вара? Выртать пуль-ха...

Хăй упăшкинчен хăй йĕрĕннĕрен ачине те пӳлĕме кайса яма тăхтаса тăчĕ Верук. Кухньăрах тăрмашрĕ. Ачи урайĕнче йăваланчĕ. Майра тухса кансĕрлемерĕ. «Илтрĕ ĕнтĕ вăл эпир кунта мĕнле айкашнине, илтрĕ...» — пăшăрханчĕ Верук. Килти çӳп-çапа никамăн та урама çын умне кăларса пăрахас килмест. Тепĕр тесен, халь ун пек тума та именсе тăмаççĕ. Путсĕрлĕхĕпе мухтанакан та пур. Майранах илер. Ун пек-кун пек сиксе тухсан мĕн пулнине-иртнине кашнинчех кала-кала парать. Мухтанса каласа парать тата тăн кĕртрĕм вара çавна тесе. Хăй пит ăслă пуль? Кĕнеке вулать вара пĕрмай. Эс çавна вуларăн-и çак тет. Хăй нумай пĕлнипе те мухтанать. Ăçтан ман ăна та, кăна та пăхса тăма вăхăт?

## Шуйттан мăйраки

Каç пулсан çывăрма тесе тин кĕчĕç упăшки сарăлса выртнă пӳлĕме. Пăрака шăрши çапнă та — чăн малтан кантăка уçса уçăлтарас терĕ Верук. Арнольда вырттарчĕ. Ваçука вăратмарĕ. Хăй диван çине вырнаçрĕ. Шухăша путрĕ. Паян ирпе кăна питĕ телейлĕччĕ вĕт-ха вăл. Мĕн пулчĕ? Мĕн йăнăш турĕ? Ваçука илсе килни тĕрĕсех пулмарĕ-и е... урăххи? Тен, хăваласа ямалла марччĕ ун çав Уляккана? Тен, çапла сайра хутра килсе çӳрекен арçынсемпех пурăнса ирттерсе ямаллаччĕ? Ашшĕ пултăр терĕ-çке!.. Çапла шухăшласа тĕлĕрсе кайрĕ Верук. Нумай-и, сахал-и выртнă тĕлĕрем пекки туса, астумасть, вăранасса вара темрен хăраса сасартăк вăранса кайрĕ. Ирхи кăвак çутăра пӳлĕм варринче темле кĕлетке тайкаланса тăрать. Ваçук! Хайхи хăй ăçтине ăнкарса илчĕ пулас та диван патне тайкаланса утса пычĕ. Армак-чармак аллисемпе вырăн ăшне пытаннă ăшă ӳте

хыпашласа тупрӗ. Сӳ-ӳ! ҫӳҫенсе кайрӗ Верук пӗтӗм кӗлеткипе. Чӗри те тапма чарӑнса ларчӗ пуль. Пӗр сас кӑлармасӑр выртрӗ. Ан тивтӗрех терӗ. Ваҫук вара сулланса тӑчӗ-тӑчӗ те хыванмасӑр-тумасӑр Верук ҫине хӑпарса выртрӗ. Хӑмла ани ҫинчи пекех кӑптӑрт! хӑпарса выртрӗ. Хӗрарӑм самантрах сывлӑшсӑр тӑрса юлчӗ. Тӗртсе ярасшӑнччӗ, кӑшкӑрса пӑрахасшӑнччӗ — ачи вӑранасран хӑрарӗ, чӗнмерӗ. Лешӗ вара хӑй пӗлнӗ пек хуҫаланчӗ. Верука шӑнтсах пӑрахрӗ. Арҫын йывӑррӑн та шӑршлӑн сывлани лӗклентерсе ячӗ. Шӑлне ҫыртса выртрӗ хӗрарӑм, мӗн чӑтмаллине чӑтап терӗ пулмалла, пӗр сас та кӑлармарӗ. Ҫук, пӗрре те ilemлӗ мар ӳсӗр арҫын хӗрарӑмпа ҫапла хӑтланни. Пӗр хӗлӗх те хускалмарӗ ун чӗринче, юратнӑ ҫын пулсан та, упӑшки вӗт тата, ашшӗ те. Ҫук, пӗрех пӗр ӑшӑ та вӗрсе кӑлармарӗ ҫӑварӗ. Каска пек пӗр хускалмасӑр, пӑр пек сип-сиввӗн выртрӗ вӑл арҫын айӗнче. Ҫук та тейӗн ӑна кунта. Ҫапла пулчӗ пулмалла, чӑн та. Вӑл темле гипноза кӗрсе ӳкрӗ. Ӳт-пӗвӗ те ним те туймарӗ, ӑстӑнӗ те ҫывӑрчӗ. Мӗн пулса иртнине ӑнланмарӗ, ӑнланасшӑн та пулмарӗ. Вӑл хӑй ӑҫта ҫӳренине те пӗлмерӗ. Упӑшкипе пӗрле мар, ку тӗнчере те мар, таҫта, унта пурнӑҫ та ҫук пек... Темле хурлӑхлӑ, пӗр вӗҫӗмсӗр куҫҫульлӗ, пӗр сассӑр мӗлке евӗр ҫакӑнса ярӑнса ҫӳрерӗ вӑл. Ӑҫта пулнин йӗрри-палли пулмарӗ. Тӗлӗк те мар-ха вӑл. Ваҫук епле йывӑр пулнине те чип-чиперех туять, ун тутинчен хӑй тутине те тартать... Анчах пӗрех кунта мар вӑл халь. Нумай выртатчӗ-ши ҫапла вилӗмпе пурнӑҫ хушшинче, пӗлмерӗ, арҫын хӑй ӗҫне вӗҫлени пулӑшрӗ. Ҫемҫелсе ҫывӑрса кайнӑ Ваҫука вара тин хӑй ҫинчен тӗртсе ячӗ. Лӑнкках кайса выртрӗ лешӗ. Халь ӑна, курӑнать, ним те кирлӗ мар. «Хӑй мӗн тӑвас тенине турӗ такки, — пӗр ҫилленмесӗр, таҫтан питӗ аякран пӑхса пӗр пӑшӑрханмасӑр шухӑшларӗ хӗрарӑм. — Арҫынсем вӗсем пурте ҫавӑн пек. Ҫывӑртӑр ӗнтӗ тепӗр кана, урӑлса ҫитӗ те, тен, ҫын шутне кӗрӗ. Упӑшка вӗт!»

Ҫапларах шутласа илчӗ те хӑй тепӗр хут ҫывӑрса кайрӗ. Хальхинче питӗ канлӗ пулчӗ. Тарӑн ыйха путрӗ.

...Темшӗн вара вӑл цехра пек, ҫарапакка тата. Йӗри-тавра вӗҫкелесе ҫӳрекен мамӑк ун ҫара ӳчӗ ҫине ларать, кӑтӑклантарать. Лайӑх ӑна, ахӑлтата-ахӑлтата чупать вӑл станоксем хушшипе. Чупса-чупса пычӗ те ҫапла Уляккана пырса ҫапӑнчӗ. Вӑл та ҫарапакка. Ку темшӗн пӗрре те тӗлӗнтермерӗ. Ӑна кӑна мар, Уляккана та кӑтӑклантараҫҫӗ иккен ҫав мамӑк пӗрчисем. Ачашшӑн, питӗ ачашшӑн сӗртӗнеҫҫӗ ун ҫумне... Акӑ иккӗшӗ те пӗр харӑс чупса кайрӗҫ цех тӑрӑх. Намӑс мар. Ӳчӗсем, мамӑк тейӗн, пӗр-пӗрин ҫумне ҫапӑнса ачашланаҫҫӗ. Улякка алли, чӑн та, питӗ ҫемҫе. Ун ӳтне лайӑхрах туясшӑн пулса лӑпчӑнать арҫын ҫумне хӑй те мамӑк пек вӗҫекен хӗрарӑм...

Ҫапла аташса вӑранса кайрӗ Верук. Алли... алли вӑл

Ваçукăн-мĕн. Кулса пăхса выртать, алли ун çинче. Çĕркаç пулса иртнисем аса килчĕç. Аллине сирсе ывăтрĕ те вăрт! çеç çаврăнса выртрĕ тепĕр енне. Тути хăех тăсăлса тухрĕ. Каласшăнччĕ — çăварĕ уçăлмарĕ. Шăлне çыртса лартнă та, мĕн калас тени ăшрах юлчĕ. Пĕрле çапла выртма та чун çитмерĕ. Вăшт! сиксе тăчĕ те Ваçук çумĕнчен кухньăра кăштăртатма пуçларĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, темле айăплăн пăхкаласа Ваçук пырса кĕчĕ.

— Ăçтан тухать теп тутлă шăршă? — пуçларĕ вăл те каçарттарас тесе, те хырăмĕ выçнипе.

— Лар, пиçнĕпе пĕрех, — çитерес мар тенĕ çĕртех сĕтел хушшине чĕнчĕ упăшкине Верук. Çавăн пек пĕр-ик сăмах каланипех каçарчĕ-ши вара? Хăйне çапла мăшкăл кăтартнă çĕртенех ун умне апат лартса парать-и-ха?

— Ну, тутлă та вара! — пĕр вăтанмасăр лĕрĕплеттерчĕ лешĕ ярса панă шÿрпене, — çăмăллансах кайрăм. Халĕ ĕнтĕ ĕçе кайма та юрать. Эпĕ, мĕн, халлĕхе шофера вырнаçас терĕм. Урăх ĕç çук терĕç.

— Юрĕ ĕнтĕ.

Урăх шарламарĕç. Ĕç нумай. Арнольда вăратмалла, тăхăнтармалла, апат çитермелле... ĕçе каймалла. Пурте хăнăхнă йĕркепе пулса пычĕ. Çак хваттере ютрах çын пырса кĕни пурнăçа кăшт улăштарчĕ пулсан та, йăлтах урăхлансах каймарĕ-ха вăл. Пĕр вăхăт упăшкаллă пулас тесе пурăннă Верук Улякка та, Ваçукĕ те Арнольдпа танлаштарсан никамсемех те мар пулнине çак пăтăрмахсем хыççăн питĕ лайăх ăнланса илчĕ.

Нимле арçын та кирлĕ мар ăна, ун ачи пур, ывăл! Пĕртен-пĕр юратнă Арнольд! Урăх никам та кирлĕ мар ăна, никам та!

Çапла шутлама йывăр пулчĕ пулĕ те, пурăнма вара, çавăн пек татса каласа хунă хыççăн, çăмăлтарах та пек туйăнчĕ. Чăн та, пĕр вăхăт çапла асапланса илнĕ хыççăн Верук хăйĕн Ваçукне асăрхами пулчĕ тесен те тĕрĕс. Кун хыççăн кун иртрĕ, çĕр хыççăн çĕр. Пĕтĕм пурнăçĕ ачи çинче пулчĕ. Ун сывлăшĕпе сывларĕ, ун чĕлхипе калаçрĕ. Ыттисенчен кая ан юлтăр тесе кăна мар, маларах та тăтăр тесе тăрăшрĕ. Пуринчен лайăх тăхăнтартрĕ, чи тутлине çитерчĕ. Чееленме те вĕрентрĕ.. Черетре-мĕнре тăмастчĕ вара ачи, чăн та, хăй лайăхраххине туятчĕ пуль, пыратчĕ те илетчĕ.

Çавна пула хăйне те уяма пăрахрĕ Верук. Хăй телейĕшĕн мар, ачи телейĕшĕн пурнатăп терĕ пулмалла. Малтанрахпа Ваçукĕ, чăн та, ăна та ăс кĕнĕ пек пулчĕ, юратрĕ те пулĕ. Кайран арăмĕ хăй çине пăхманнине курчĕ те тата тăтăшрах ĕçсе килме пуçларĕ. Тÿпелешмесĕр кун та иртмен. Юлашкинчен, мур илесшĕ, пĕр кĕтмен туман çĕртен çав хĕрлĕ çÿçлĕ майрапа çыхланса кайрĕ. Тĕлĕнмелле пулчĕ ку. Пĕр-пĕрне чăн тăшмансем пек курайман çынсем, шуйттан мăйракине кăларчĕ пулĕ, пĕрле пурăнма пуçларĕç. Пĕрре те тарăхтармарĕ çакă Верука. Ку та тĕлĕнмелле.

Уляккана та тахҫанах пуҫран кӑларса пӑрахнӑ вӑл. Сайра хутра кӑна ӗҫре е тӗлӗкре куркалать, курать те ҫавӑнтах манса каять.

Арнольд вара, чӑн та, пепке ӳсрӗ. Ун кӗрнеклӗхӗпе, илемлӗхӗпе мухтанатчӗ амӑшӗ. Вӗренессе те лайӑх вӗренетчӗ вӑл малтан. Кайран пӑрахрӗ. Малтан пӗрмаях килте урок туса ларатчӗ, кайран урамран кӗми пулчӗ. Ҫӑтмахри пек кунсем иртрӗҫ. Ачи епле ҫитӗнсе ҫитнине те сиссе юлаймарӗ Верук. Тӗлӗкри пек иртрӗҫ вӗсем, тӗлӗкри пек. Ваҫукӗ те тахҫанах тухса кайрӗ ун. Пӗрлешрӗҫ те вӗсем кӳршӗ майрапа таҫта ҫухалчӗҫ. Пӗчченех пурӑнать халь Верук хӑй хваттерӗнче. Те килет-ха ывӑлӗ ҫывӑрма, те килмест... Кам та пулин пулинччӗ хӑть юнашар... Кичем халь пӗччен хӗрарӑма, тунсӑхлӑ. Таҫтан тата темшӗн Ваҫука майрапа тытни аса килчӗ. Тарӑхни иртсе кайман-ши вара?

Яла кайнӑччӗ вӑл ун чухне Арнольда илме тесе. Амӑшӗ ватӑ пулсан та ҫапла пӗрре кӑна мар пӑхса панӑ ывӑлне. Кӑшт канса илме те май пурччӗ. Ҫапла пӗрре кайсан пурӑнаканччӗ-ха вӑл амӑшӗ патӗнче, ку чухне Шупашкара ялти автобус каять терӗҫ те, ача япалисем нумай, йӑтса ҫӳресси тесе ҫав автобуспах ҫав кунах каялла ларса тухас терӗ. Тухиччен тухманниччӗ. Чиперех ҫитрӗҫ. Киле те чиперех кӗчӗҫ. Ваҫук, ӗҫе каймалла, иккӗмӗш сменӑна, тенӗскер, курӑнмарӗ. Тумтирӗ-мӗнӗ, пушмакӗ пуррине курчӗ-ха, ӑнланса илеймерӗ, куҫ умӗнчи япала терӗ пуль. Кайран Арнольда ҫывӑрттарса ярсан кухньӑра чей ӗҫсе ларатчӗ-ха вӑл. Ним шухӑшсӑр, ним туйӑмсӑр... Таҫтан пырса кӗчӗ хӑлхана ҫав сас, арҫын сасси... Палланӑ пек. Темшӗн тата кӳршӗ майра пурӑнакан пӳлӗмрен илтӗнет вӑл, ҫав сас... Яр! уҫӑлса кайрӗ Верук ӑстӑнӗ. Ара, Ваҫук... тумтирӗ те... Куҫ хуралса, чун капланса килчӗ. Пукан ҫинчен мӗнле сиксе тӑнине те астумарӗ, шаккаса та тӑмарӗ, ура тапсах уҫса ячӗ алӑка. Лешсем, никам та килсе кансӗрлес ҫук тенӗ пуль ҫав, питӗрмен те... Витӗнмен те... Иккӗшӗ те ҫарапакка выртаҫҫӗ. Юнашар, пӗр вырӑн ҫинче... Ҫывӑрса кайнӑ пулас та, тин вӑраннӑ ирхи кӑвакарчӑнсем пек кӑвӑлтатса калаҫаҫҫӗ. Чутах персе анатчӗ Верук. Таҫтан вӑй тупрӗ, шарт! хупса хучӗ майра алӑкне.

Ҫӳҫенсе, унчченхи пекех ҫӳҫенсе илчӗ Верук. Каллех куҫ умӗнче курчӗ те-ха вӗсене! Тарӑхмасӑр, ҫӳҫенмесӗр епле чӑтан? Тахҫанах, питӗ тахҫанах пулса иртнӗ пулсан та, Верук чӗри каллех ыратса килчӗ. Ах, вӑл майрана! Ҫӳҫрен ярса илсе тӑпӑлтармаллаччӗ те... Ҫук вӗт, тивес темерӗ. Упӑшки хӑйне мӗншӗн тивнине вара тин ӑнланса илчӗ. Майрапа ҫыхланса кайнӑ-мӗн вӑл! Акӑ мӗн! Хӑй те ӗнтӗ, леш пӗрмай ӗҫсе килетчӗ те, ҫумне вырттармастчӗ. Ҫулӑхкалатчӗ-ха вӑл малтан, тулса ҫитнӗ пулас та, юрас тесе урай-мӗн те ҫуса паратчӗ. Каҫартӑр тесе тӑрӑшнӑ ӗнтӗ. Тек ӳсӗр килместӗп тесе каласа та пӑхнӑ вӑл. Верук вара каҫармарӗ. Ӑҫтан каҫаран ун пеккине? Ҫапса йӑлт

кăвакартса пĕтеретчĕ те... Çынсем умне тухма намăс пулнă пирки вара вăл килте пĕчĕк отпуск илсех пĕр эрнесем пек ним тумасăр ларатчĕ. Çавăн чухне хытса çитрĕ те ун чĕри. Ним туйми пулчĕ. Арçын арçынах çав, хышаланчĕ-хышаланчĕ те арăмĕ çумĕнче май тухманнине кура лăпланчĕ. Кайран тин ăнланса илчĕ Верук Васук канлĕхне майра патĕнче тупнине, малтан айванрах пулса кăна тăн кĕртетĕп-ха тенĕ. Çапла тĕппипех уйрăлса кайрĕç вара вĕсем çав пăтăрмах хыççăн. Арçыншăн питĕ тунсăхласа çитсен Улякка çине те тĕмсĕлсе пăхса илетчĕ вăл Васук кайсан. Анчах лешĕ, хĕрарăм йытти, çамрăкраххи тупса янă та Верук çине çаврăнса та пăхмарĕ. Верук вара арçынпа урăх çыхланас та темерĕ. Хăй сăнпа кăна мар, чунпа та ватăлса çитнине ăнланчĕ, лăпланчĕ. Пĕтĕмпех, йăлтах, пуçĕпех ывăлĕшĕн пурăнма тытăнчĕ.

## Йӳтетмĕш ача

«Çав кирлĕ те мана. Çав кирлĕ, çав кирлĕ!..» — пĕчĕк чăмăрĕпе хăйне пуçран шаккаса ларчĕ кресло çинчи хĕрарăм. Хăйне пĕрре те шеллемерĕ. Çав кирлĕ терĕ. Çук, ӳкĕнмерĕ. Пурнăçне, кирек мĕн сиксе тухтăр, ачишĕн пама хатĕр тăчĕ. Акă çитет макăрса ларса терĕ те кресло çинчен тăрса çуса типĕтнĕ хыççăн пухăнса кайнă кĕпе-йĕмне якатма тытăнчĕ. Ывăлне вăл якатмасăр пĕр кĕпе те тăхăнтармасть. Ун пурте «на ять» пулмалла. Куртка илсе пама ыйтать-ха тата. Сăран куртка, кооператорсем сутаççĕ. Укçа çук мар-ха ун. Ялта та пĕр нӳхреп çĕрулми выртать. Ăна та сутма пулать. Амăшĕ вилсен те яла çӳреме пăрахмарĕ, кил-çуртне пăхса тăчĕ, çĕрулми те ларткаларĕ. Вăл та хаклă халĕ! Пурте хаклă! Куртки те çĕр пин ытла тăрать. Плащ та кирлĕ-ха, хăйне валли. Çын умне тухма намăс. Пĕр вунă çул та пуль тăхăнать. Тĕсне йăлт çухатнă.

Укçине пухнăччĕ-ха вăл. Те çитет ĕнтĕ. Васукран усси пулмарĕ. Леш майри пăрахса кайсан Васук йăлт пĕтрĕ, ĕçсĕр тăрса юлчĕ. Ĕçкĕç çын кама кирлĕ пултăр? Хăй те ашшĕ тесе кăна чăткаласа пурăнчĕ вĕт унпа.«Ачан ашшĕ пултăр терĕм-çке!» Алимент тавраш та шыраттарман, хăйне хăй те тăрантараймастчĕ, мĕн алименчĕ ĕнтĕ унта.

Каччă шутне кĕриччен темех марччĕ-ха, пăхма пулатчĕ. Халĕ вара тем пулчĕ ун ачине, ним илсе нимпе юрама çук. Питĕ лайăх шăлавар туянса панăччĕ — тăхăнмарĕ. Мĕн вĕсен хăйсен урăх мода. Сарлака йышши... Курткине те... хăйĕнпе пĕрле кайсан анчах. Çапла шутларĕ те Верук ачи шкултан килессе кĕтме тытăнчĕ.

Арнольд вара çав вăхăтра пĕр хваттерте темле хĕрлĕ çӳçлĕ хĕрарăмпа пулчĕ. Шкулта мар, пачах урăх çĕрте шырарĕ вăл

хӑйӗн телейне. Мальвина унран чылай аслӑрах курӑнать, хӑйне питӗ лайӑх тыткалать, курнӑҫмасть. Тата таҫта курнӑ пек те туйӑнать ӑна ҫав хӗрарӑма. Питӗ ачаш. Вӑт ҫавӑн патне иленчӗ каччӑ. Шкула каяп тесе тухса каять те Мальвина ытамне кӗрсе ӳкет. Уроксенче тепӗр чух эрнипех пулмасть. Учителӗсем те, ачисем те — пурте тахҫанах йӑлӑхтарса ҫитерне ӑна кутемӗн. Вӑтам шкула мӗнле те пулин пӗтерес те авланас тесе пурӑнать вӑл халь. Ҫак шухӑш патне хӑй тӗллӗн мар, Мальвина хӗтӗртнипе ҫитнине те чухламасть. Ара, илӗртсен тем те тӑвӑн. Шуйттан шӑтӑкне те кӗрсе ӳкӗн. Шӑтӑкне ӑна вара Мальвина чавма пӗлет, пӗр ҫын кӑна мар кӗрсе ӳксе курнӑ унта. Унӑн кирек мӗнле пулсан та Арнольда качча тухмалла, тухмалла та ун амӑшне тата тепӗр хут тата хытӑрах тавӑрмалла. Арнольд ачаш ача, мӗн каланине йӑлт итлет. Ялта Арнольд ҫине ҫыртарнӑ пӳрт пуррине те пӗлет вӑл. Ара, мӗнле пӗлмест пултӑр-ха. Ашшӗпе, Ваҫукпа, ҫавӑрттарчӗ кӑна вӗт. Леш, ухмах, супрӗ те, май килмерӗ. Кунпа, тен, май килет, шутлать Мальвина.

— Кил кунта, чупту мана! — каччи мӗнле юратнине тӗрӗслесе пӑхас терӗ хӗрарӑм. Иккӗлентерекенни те ҫук мар та-ха. Мальвина темле сарлака питлӗ, хӗрлӗ ҫӳҫлӗ, мӑкӑр туталлӑ... тата Арнольдран чылай аслӑ. Леш ҫавна чухламасть пулмалла. куҫ ӳкнӗ тейӗн. Мальвинӑран лайӑх ҫын та ҫук тейӗн.

— Чунӑм! — чӑп! тутарса илчӗ каччи. Мальвинӑн вара ӑна тата астарас килчӗ.

— Тутаран мар, ак кунтан, — тӗллесе кӑтартрӗ хӗрарӑм хӑйӗн кӑкӑрӗ ҫине. Каларӗ те кӗпе тӳмисене вӗҫертме пуҫларӗ. Кӗтни ҫитрӗ. Шап-шуррӑн курӑнса выртакан кӑкӑрсене Арнольд каҫӑхса кайсах чуптурӗ. Тахҫанах ӗмӗтленнӗччӗ... Хӗрарӑм кӑкӑрӗсем мӗншӗн ҫапла ишӗлерех выртнине те пӗлмерӗ вӑл, чуптурӗ те чуптурӗ... Мальвина вара ҫав вӑхӑтра пачах урӑх арҫынпа, ҫак ачан ашшӗпе, Ваҫукпа, айкашнине аса илсе выртрӗ. Тӑп-тӑпӑлччӗ ун чухне ун кӑкӑрӗсем. Хальхи пекех чуптӑватчӗ вӗсене Ваҫук. Асӑрханса юратма пӗлменни пӗтерчӗ ӑна ун чухне. Ҫие юлчӗ. Аран-аран хӑтӑлчӗ вӗт. Ваҫук сиссе те юлмарӗ. «Ку та пӗлес ҫук», — шухӑшларӗ хӗрарӑм каччӑ ачашланнӑҫемӗн хӑй те хӗрсе пырса. Ҫавӑнпа кӑкӑрне кӑна мар, ун-кун тыткалама та ирӗк пачӗ. Чи кирли патне кӑна пыртармарӗ. Ун ҫинчен те шутласа хунӑ вӑл. Никам сиссе юличчен тумалла ку ӗҫсене... Малтан лайӑх ӗҫсе ӳсӗртес пулать те, унтан вара...

— Савниҫӗм, чунӑм! — антӑхса кайса мӑкӑртатрӗ ҫав вӑхӑтра Арнольчӗ. — Пул манӑн, ҫакӑнтах, халех!

— Ан ухмахлан, — пӳлчӗ Мальвина, — унти патне ҫул загс урлӑ выртать. Ан та шутла, аннӳ пӗлсен кутран ҫаптарӗ.

— Анне хирӗҫ пулмасть. Маншӑн вӑл тем те туса пама хатӗр. А-а! Куртка илме каятпӑр тенӗччӗ-ҫке. Эс кунтах юл-ха апла. Эп каям.

Хайне курткăпа улăштарнине сисрĕ-ха хĕрарăм, анчах шарламарĕ. «Куртки те кирлĕ», — шутларĕ вăл. Чарса тăмарĕ. Каччă та кунта май килмест терĕ пулас, ал-хапăл тăхăнчĕ те тухса шăвăнчĕ.

Мальвина ку каччăпа малалла мĕн тумаллине шутласа выртса юлчĕ. Ашшĕпе амăшĕ ҫинчен шутланă чухне вара хăй те сисмерĕ, шăлне шатăр-шатăр! тутарчĕ. Ах, епле кураймасть вăл вĕсене. Верукне пуринчен ытла. «Ман пурнăҫ ҫавсене пула пĕтрĕ», — шутлать вăл. Таврăратăпах тет. Хваттертен тухса кайма тивнĕшĕн те, Ваҫукĕ пăрахнăшăн та, пуриншĕн те. Таврăрмалли те хăех кĕрсе ӳкрĕ ун аллине. Ҫав айван Арнольд...

Арнольчĕ вара ҫав вăхăтра урам тăрăх йăкăлт-якăлт! сиккелесе сăран куртка тăхăнса янă ҫын пекех куштанланса пычĕ. Ҫав ӳкерчĕк пуҫра кăна пулнă пулсан та питĕ савăк пулчĕ. «Эх, тĕлĕнтеретĕп те!»

Ҫав ĕмĕтпе пырса кĕчĕ вăл киле.

— Пĕтрĕҫ те-и уроксем? — темле шанмасăртарах ыйтрĕ амăшĕ.

— Паян шăматкун, нумай мар, — суйрĕ Арнольд. Хăй ҫак вăхăтра шкулта пулмаллине те манса кайнă вĕт-ха вăл, мăнтарăн. — Атя кайрăмăр.

— Укҫи ҫитмест пулĕ тетĕп-ҫке.

— Мĕн чул пурри те ҫитĕ, — укҫа ҫуккине пăхмасăрах илес килчĕ курткине Арнольдăн. Амăшĕ хăй шухăшне улăштарасран та хăрарĕ.

— Йӳнĕреххи тĕл пулсан кăна! Кайса пăхар ара, — сăран куртка тăхăннă ачине куҫ умĕнче тенĕ пек курчĕ Верук. — А, тен, кивҫен илес? Ҫĕрулми сутас-тăвас пулсан парса татăпăр.

— Ил, анне, ил! — савăннипе ниҫта кайса кĕреймесĕр тапăртатса тăчĕ Арнольд. Тахҫанхи ĕмĕт пурнăҫланать мар-и, ара.

Тепĕр пĕр сехет иртрĕ-и — амăшĕпе ывăлĕ пасара ҫитрĕҫ те. Вĕсен кăмăлне, чăн та, мĕнле кăна тумтир, мĕнле кăна куртка ҫук. Тӳле кăна. А, мĕн, хакĕ пысăк пулсан та, нимĕн те тăвай-мастăн, илетĕн. Мекĕрлене-мекĕрлене ĕҫлесе унтан-кунтан тупкаласа илетĕн, ниҫта та кайса кĕрейместĕн. Ҫынран кая пурăнас килмест вĕт. Пĕртен-пĕр ывăлĕшĕн ĕнтĕ мĕн хĕрхенсе тăрĕ тата. Хĕрхенекенĕнне хĕрлĕ йыт ҫинĕ тет! Ун-кун тыткаласа, тăхăнкаласа пăхкаларĕҫ те ытараймарĕҫ, пĕр курткине, хакне те пăхса тăмарĕҫ, илчĕҫ. Тин кăна тĕкленсе ҫитнĕ кайăк пек вĕҫсе кайрĕ Арнольд. Сăран ҫупăрласа илнĕ кĕлетки хăйне вăйлă, илемлĕ, ирĕклĕ хусканулă туйрĕ. Халĕ ĕнтĕ, чăн та, Мальвина патне кăна мар, шкула та кайма юрать. Курччăр, кĕвĕҫчĕр!..

Шкула та кайма тиврĕ. Ку пĕр кĕтмен ҫĕртен сиксе тухрĕ. Кăмăлĕсем тулнă амăшĕпе ывăлĕ ҫапла майĕпен хăпаратчĕҫ хăйсен хваттерне. Савăнса, ĕҫ турăмăр-ха тесе пĕр шухăшсăр пыратчĕҫ. Алăк кутне ҫитсен кăмăл улшăнчĕ. Унта-мĕн хут татки хĕстерсе хăварнă. «Ывăлăрпа иксĕр те шкула пырăр», — тенĕ.

Инкек куҫа курӑнса килмест теҫҫӗ ҫав. Темле ҫил-тӑвӑл пек йӑтӑнса анчӗ вӗсем ҫине ҫын ҫилли. Директор ура тапса вӑрҫрӗ, класс руководителӗ ачине «ухмах» тесе пӗтерчӗ. Шкула вӑл эрни-эрнипе ҫӳремест-мӗн, пырсан та пӗрмай парта айӗнче пытанса ларать. Ыйтни те усси ҫук унран, чӗнмест. Култарас тесен вара, чӑн та, култарать. Пӗтӗм класа ахӑрттарать. Учительсемпе кӑна мар, ыттисемпе те питӗ чӑрсӑр. Пирус туртать, ӗҫет, тӳпелешет...

Темтепӗр каласа хӑртса пӗтерчӗҫ амӑшӗпе ачине. Ывӑлӗ ҫаплишӗн пӗтӗмпех амӑшӗ айӑплӑ-мӗн. Ҫавӑ Верука пӗрре те килӗшмерӗ: «Вӑт шанса пар кусене ачана, — шутларӗ хӑй ӑшӗнче, — ӑс парас вырӑнне пӑсса хунӑ». Арнольдне вӑрҫма шутламарӗ-ха вӑл, шкулне кӑна тарӑхрӗ. Ахӑртнех, хӑй ҫине ҫапла урнӑ йытӑ пек сиксе ӳкни килӗшмерӗ.

Питӗ йывӑр кӑмӑлпа таврӑнчӗҫ ачипе амӑшӗ ку кӗтмен тӗлпулуран. Кӳтсе ҫитнӗ чунне лӑплантарас тесе пӗрре тытса хӗнеме те тӑчӗ амӑшӗ — пулмарӗ. Лешӗ те ухмах мар, килте яланхи пекех нумай тытӑнса тӑмарӗ, урама тухса шӑвӑнчӗ. Пӗччен тӑрса юлнӑ хӗрарӑм вара тин чуна капланса килнӗ куҫҫульне тек чармарӗ, йӗрсе ячӗ. Ҫук, ҫук, никама та мар, хӑйне айӑпларӗ. Унтан пур-ҫук ашшӗне вӑрҫрӗ. Пурнӑҫӗ ҫапла тӑрлавсӑр килсе тухнӑшӑн хурланчӗ те хурланчӗ. Кӑшт лӑпланса ҫитсен ывӑлӗ пирки те пӑшӑрханма пуҫларӗ. Ывӑлӗ килессе кӗтрӗ. Леш тем пек кӗтсен те килмерӗ. Тӑххӑра та, вуннӑна та, вуниккӗ ҫапсан та... Чӳрече умӗнчен каймасӑр тӑчӗ Верук, куҫ илмесӗр пӑхрӗ урамра мӗн пулса иртнине. Унта вара нимех те пулса иртмерӗ. Урамра шӑп. Сайра хутра кӑна каҫа юлнӑ пӗр-ик ҫын васкаса иртсе каять.

Урӑх ним те курӑнмасть.

Ӑҫта, кам патӗнче-ши? Ҫапса пӑрахмасан юрӗччӗ те! Милицие лекни те ним те мар халь кӗтсе ывӑнса ҫитнӗ хӗрарӑма, унта, мӗн калӑн, ҫынпа, хӳтлӗхре... Ҫӗр хута ҫул ҫинче вара тем те кӗтме пулать. Ҫавӑ пӑшӑрхантарать Верука. Пӗрре сӑран курткине хывса илнӗ пек, тепре хӑйне йӑлт хӗнесе пӗтернӗ пек. Хӑй те халь ҫак хула урамӗпе ҫӳрет пек, такамсемпе тӗл пулнӑ пек...

Урараан персе аниччен те тӑма хатӗр амӑшӗ. Ывӑлӗ килни кӑна курӑнтӑр, урӑх нимӗн те кирлӗ мар ӑна, ҫавӑ кӑна...

## Вупӑр

Анчах темле тӗсесе пӑхсан та каҫхи урамра куҫса пыракан тӑван мӗлкене уйӑрса илеймерӗ вӑл. Ҫывӑхри ҫуртсен чӳречисем те сӗм тӗттӗм... Пӗтӗм тӗнче тарӑн, нихҫан вӑранайми ыйха путнӑ тейӗн. Чӳрече умӗнче тӑракан Верук та, чӑнах та, ҫапла пӗр

вĕçĕмсĕр куç илмесĕр пăхнăран пуль анрасах кайрĕ. Ăна çак хваттер те, хула та темле юмахри пек курăнма пуçларĕ. Ăна темле тухатмăш тухатса хăварнă та, халĕ ĕнтĕ ĕмĕрлĕхех çапла хытса тăмалла пулать. Хускалми тăрать хĕрарăм. Халь уншăн пĕтĕм пурнăç чарăнса ларнă тейĕн. Хăйĕн чĕре таппине кăна илтет вăл. Тук-тук! тук-тук! Темле хăрушă çын утса килет пек. Ăна вĕлерме шухăш тытнă та тĕттĕмлĕхрен пĕр пытанмасăр утса тухать. Тук-тук! тук-тук! Халь-халь вилес пек тăнă вăхăтра ку çын вăрă-хурах маррине тин ăнланса илчĕ Верук. Ку ун ывăлĕ! Ӳсĕр хăй... Аран-аран пырать... Куртки?.. Куртки чăнах та çук. Ăçта пулсан та хăй çинче мар. «Сутса ĕçсе янă-ши вара?» — мĕлтлетет пĕртен-пĕр шухăш. Ачи тĕрĕс-тĕкĕл таврăнни те савăнтармасть.

— Куртка ăçта, куртка? — кĕнĕ-кĕмен сиксе ӳкрĕ ывăлĕ çине.

Леш тем мăкăлтатса илчĕ те тӳрех вырăн çине кайса ӳкрĕ. Урăх пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Капла хăтланни тата хытăрах тарăхтарса ячĕ пулас та — Верук чăтса тăраймарĕ, лап кăна сарăлса выртнă ывăлне тытса силлеме пуçларĕ. Лешĕ вара темле силлесен те уçăмлăн пĕр сăмах та калаймарĕ, тем мăкăртатса илчĕ те каллех çывăрса кайрĕ. Ним тума аптранă енне амăшĕ те ал сулчĕ те спальнăна кĕрсе выртрĕ. «Килте!» — терĕ. Лăпланчĕ. Те пасăр çилленсе ирттерсе яни пулăшрĕ, те çĕрĕпе чӳрече умĕнче тăрса ывăнни палăрчĕ, хăй те ывăлĕ пекех тĕшĕрĕлсе анчĕ. Пуçне хунă-хуманах ыйха путрĕ. Çывăрса каясса кайрĕ-ха, анчах çав пасăрхи хăрушă сасса пурпĕрех манаймарĕ. Таçта такам пĕр вĕçĕмсĕр тук-тук! тук-тук! туса утса çӳрерĕ. Халĕ акă вăл Верук выртнă вырăн патнех утса çитнĕ пек... Питĕ хăрушă, питĕ хăрушă Верука. Акă темле çăмламас аласем ун патнех туртăнаççĕ, ун çинех сĕртĕнеççĕ... Ах, ун çинех такам йывăррăн сывласа лап! кăна хăпарса выртрĕ... Сывлама та çук! Караул! кăшкăрса ярас тесен те кăшкăраймăн. Никам та пулăшас çук...

«Ывăл, ăçта ман ывăл? — шарт! сикрĕ хĕрарăм. — Мĕнле пурăнĕ вăл мансăр эпĕ вилес тăвас пулсан?» Çапла шутласа илчĕ çеç, вăранса та кайрĕ.

«Вупăр пусрĕ тем?»

Тĕлĕкре кăна мар, пурнăçрах вупăр пусма пуçланине ăнланса илеймерĕ-ха вăл. Ачи темле мур шăтăкне лекнине кăна туйса илчĕ. Леш ирпе ыйтсан та каламарĕ. Шат та пат тунчĕ. «Курткăна ăçта чиксе хутăн?» — тесе ыйтсан та çăвар та уçмарĕ. Суйсан та юрĕччĕ хăть! — тарăхрĕ амăшĕ, суйса та аппаланса тăрасшăн мар, мур илесшĕ!

Кун хыççăн кун иртрĕ. Верук темиçе хутчен те сăмах пуçарчĕ — усси пулмарĕ. Нихçан та пĕлес çукчĕ — ăнсăрт пулăшрĕ. Пулăшиччен пулăшманни ун пек чух. Мĕн пулассине пĕлнĕ пулсан-и, урама та тухас çукчĕ. Тухрĕ çав, сĕт илмеллеччĕ, Арнольд пит юрататъ, çăкăр та пĕрре ларса çимелĕх анчах

юлнăччĕ. Тухрĕ те çурт кĕтессинчех тахçан пĕрле пурăннă, Ваçукне илĕртсе ертсе кайнă хĕрарăмпа, Мальвинăпа, тĕл пулчĕ. Çавăн пекех хитре, вăхăт та тивмен тейĕн, çавăн пекех патвар та хĕп-хĕрлĕ питлĕ, хĕп-хĕрлĕ çÿçлĕ... Çиййĕнче сăран куртка... Темшĕн çав Арнольда илсе панă куртка пекех туйăнса кайрĕ Верука. Чăн та çавăн пекех! Ак пĕр тĕлте кукăр çĕвĕ пурччĕ, кунăн та çавах, çав тĕлтех!.. Иккĕленчĕ-иккĕленчĕ те унтан уни-куни калаçкаласа илнĕ хыççăн чăтаймарĕ, ыйтрĕ.

— Куртка пит чаплă вара сан. Мĕн хак парса илтĕн? — терĕ.

— Мĕн илсе тăрап вара. Пĕр айван каччă парнелерĕ. Пĕр каç хампа пулма ирĕк патăм та...

Шарр! çурăлса кайрĕ Верук чĕри. Ку уяр çанталăкра тип аçа çапнă пекех пулчĕ. «Çук, çук, кун пек, кирек мĕн калăр та, пурнăçра нихçан та пулма пултараймасть!» — хирĕçлерĕ вăл пĕтĕм чун-чĕрипе.

— Ачи мĕн ятлă, пит юрататъ пулас?

— Ячĕ-мĕнĕ, ятне сан пĕлмесен те юрать, — тавăру шухăшĕпе киленсе шапăлтатрĕ майра пĕр шуралса та, пĕр хĕрелсе тăракан хĕрарăма асăрхами пек пулса.

«Çавă, каллех çавă, Ваçука кăна мар, халь ман ывăла та тăпăлтарса илет ĕнтĕ ку», — вăйсăрланса шухăшласа тăчĕ Верук.

— Арнольд мар-и?

— Арни! тетĕп эпĕ. Тăхта-ха, тăхта, ывăлна çапла чĕнеттĕн мар-и-ха эсĕ? Ха-ха-ха! — ахăрса-йĕкĕлтесе кулса ячĕ хĕрарăм. — Ăçта курнă теп?

— Мĕн тума кирлĕ вăл сана, мĕн тума? — аран-аран илтĕнчĕ Верук сасси.

Кун пек хăрушă хыпара илтсен такам та юман пек çирĕп тăрсан та йăванса кайĕ, Верук вара, тĕлĕнмелле те, ура çинчех тăрса юлчĕ.

— Мĕн тума тен? А, мĕн тума пултăр? Иккĕн выртса виççĕн тăма, урăх мĕн тума пултăр. Ак час мăнук туса парап та... Хам çине авлантаратăп... А, мĕн? Каччи чипер вăл. Сын çине те тухма пулать, намăс мар.

— Ан ухмахлан, çамрăк вĕт-ха вăл. Мĕн сана, Ваçука илĕртсе тухса кайни çитмест-им? Кăна та, ман юлашки тĕреке те, пĕтерес терĕн-им? Ун пек мăшкăл курма мĕн турăм эп сана?

— Мĕн ĕмĕр тăршшипех тарăхтарса пурăнтăн эс мана. Эс ху айăплă, йăлт эс. Ваçуку та сан ху пекех путсĕр, пĕрле пурăнатпăр тесе илсе тухса кайрĕ те пăрахрĕ. Эп вара ăна пула хваттерсĕр тăрса юлтăм. Сана хăвна хăваласа кăларса ямалла пулнă та ун чух, ăс çитерейменӗ. Ну, ун чухне çитерейменнине халь çитерĕпĕр.

— Эп мĕнпе кансĕрлерĕм вара? Эп мар сан упăшкуна туртса илнĕ. Эп мар сан ачуна туртса илнĕ... Пĕтĕмпех эсĕ ху! Тепĕр тесен, сан хĕсĕрĕн ача та пулас çук. Çавăнпа хапсăнтăн та!

— Сан пулнă, халь ман. Акă качча тухатăп та сан пата пурăнма куçатăп. Ун чухне курăн вара кам хĕсĕррипе хĕсĕр маррине!

— Мĕн курасси паллă. Каллех харкашу та çапăçу, урăх мĕн пултăр. Ах турă, пулăшах, тек ан кĕрт çак хĕрарăма ман киле.

— Ха-ха-ха! Турра аса илтĕн пулать. Эпĕ те ăна кашни кун кĕлтăватăп. Мана та телей кирлĕ. Ман та ыттисем пек упăшкаллă, ача-пăчаллă пурăнса пăхас килет. Сан кăна мар!

— Ман мĕн пурăнни ĕнтĕ.

— Вăт, вăт, çав кирлĕ те. Сан пурăнмасан та юрать. Пире хваттер кирлĕ. Тух та кай, пурăн ăçта май килнĕ çавăнта. Халь пирĕн вăхăт.

— Çук вара! — лĕштĕр кайнă çĕртенех таçтан вăй илчĕ Верук. — Ура та ярса пуснă ан пултăр! Унсăрăн ик уруна та хуçса ярап. Курткăна та халех хывса панă пултăр. Сан мар.

Çапла каласа аллине те тăсрĕ Верук. Час хывса илеп терĕ пуль. Ăçта унта? Мальвина унран хаяртарах та, вăр-вартарах та пулчĕ, аяккалла сиксе ӳкрĕ те: «Хурах, çаратаççĕ!» — тесе кăшкăрма тытăнчĕ. Чупса килнĕ çавăн чухлĕ халăх хушшинче тăма та, мĕн сиксе тухнине ăнлантарса пама та хал çитереймерĕ вара Верук, пурте хăйĕн çуртĕнче пурăнакансем те-ха, пурте паллакансем, пĕлсен кулса вилĕç, çавăнпа та çав вăрă-хураха çĕнтереймессине туйса илчĕ те ал сулса пăрăнса утрĕ. Лешне вара çавă çеç кирлĕ пулчĕ. «Ухмах, тăм писмен, çара кут!» — тесе пĕтĕм урам илтмелле кăшкăрса, аллисемпе хăлаçланса тăрса юлчĕ. Пырса çĕмĕрсе тухассипе те хăратрĕ. Верук ăна итлесе тăмарĕ. Хваттерне кĕнĕ-кĕмен йĕрсе ячĕ.

«Мĕншĕн çапла пĕрмай кутăнла килсе тухать-ха ман пурнăçра? — ĕсĕклеме пăрахмарĕ вăл вырăн çине урлă тăсăлса выртса. — Амăшĕпе кăна ӳсрĕ, ăнăççăр çуратрĕ, ашшĕсĕр ӳсрĕ... халь акă шкула çӳреме те пăрахрĕ. Эпĕ вара ăна шкула каять-ха, вĕренет-ха, çын пулать-ха тесе пĕтĕм чун-чĕререн пăхса пурăнатăп. Вăл вара вăт тав турĕ те — таçти шуйттан шăтăкне ярăннă. Унта картла выляса, эрех ĕçсе, хĕрарăмсемпе асса ларнă. Кур та тăр халь. Вăт сана ывăл, вăт сана Арнуль!»

Çапла йĕрсе выртнăçемĕн çилли те хăпарса пычĕ, йăлтах шăмарса çитсен Верук вырăн çинчен сиксе тăчĕ те урлă-пирлĕ уткалама тапратрĕ. «Килтĕр çеç, килтĕр çеç киле, эп ун пĕр çӳç пĕрчине те хăвармăп, йăлт çулса илĕп», — ниçта кайса кĕреймесле шутларĕ вăл. Ывăлне нихçан та хĕнесех курман та, мĕнле тытса мĕнле хĕнемеллине те пĕлмерĕ, ун-кун çеç ухмаха тухса каясла уткаларĕ. Арнулĕ вара тем пек кĕтсен те килмерĕ. «Çавăн патĕнче ĕнтĕ, урăх ăçта пултăр. Ах тур, мĕнле туртса кăларас тулькка? Чупса кайса çӳçĕнчен вăтăрса илĕччĕ, чăн та, ăçтине пĕлмест. Кайсан та çав хĕрлĕ çӳçлĕ хĕрарăмпа вăл тек ним те тăваяс çук. Упăшкине туртса илнĕ чухне те ним те тăваймарĕ, халĕ ватăларах

кайсан мӗнех тӑвайӗ ӗнтӗ? Ҫавӑнпа та Верук хваттертен тухмарӗ, килтех кӗтсе илме шут тытрӗ. «Килти сурӑх килех килекенччӗ-ха!» — ҫапла каласа лӑпланкалайрӗ те яшка пӗҫерме лартса ячӗ. Апат пиҫсе ҫитнӗ ҫӗре леш, чӑнах та, ним пулман пекех кӗптӗрт! кӑна кӗрсе тӑчӗ. Куртки те хӑйӗн ҫинчех. Анчах хӑй вара ӗнерхи пекех вил ӳсӗр. Алӑк кутӗнче темле йӗрӗнчӗклӗн кулкаласа пӑхса тӑчӗ-тӑчӗ те чалӑшсах кайрӗ, ҫапах та ӳкмерӗ.

Ҫавна курнӑ амӑшӗ ывӑлӗпе харкашса тӑрас темерӗ. Усси ҫук. Пӗрре пӑхсах ӑнланчӗ ҫакна Верук чӗри. Тата ывӑлӗ ҫапла питӗ ӳсӗр пулсан та киле килни те савӑнтарчӗ ӗнтӗ. Куртки те пур. Тен, кайран, урӑлса ҫитсен, ӑса кӗртме те пулӗ. Ачи ухмах мар-ха вӑл, ӑнланӗ. Амӑшӗ те ют мар. Акӑ анне тесе кухньӑна чупса кӗрӗ те мӑйӗнчен пӗчӗк ача пек ыталаса илӗ... Вара, вара иккӗшне те питӗ лайӑх пулса кайӗ...

Ҫапла шутларӗ ҫеҫ ҫав. Ачи те чупса пымарӗ. Пурте кӑлӑхах пулчӗ. Ывӑлӗ ӑна итлемерӗ. Малтан ӑна амӑшӗ ачашласа та пӑхрӗ, пӗрех ӗҫ тухмарӗ. Вара вӑрҫма тапратрӗ.

— Эс, мӗн, кӗрт йытти, мана ҫапла улталаса пурӑнатӑн-и-ха? Мана, тӑван аннӳне, ухмаха тӑратса хӑварасшӑн-и? Мӗн тума кирлӗ сана ҫав пӗтнӗ хӗрарӑм? Мӗн тума ҫыхланса кайнӑ эс унпа? Пӗлетӗн-и, тахҫан вӑл ҫакӑнта пирӗн хваттертех пурӑннӑ. Ун чухне сан аҫуна астарчӗ, халӗ вара, кур, санпа ҫыхланса кайрӗ. Пӗлетӗн-и эсӗ ҫавна?

— Пӗлетӗп-и, пӗлместӗп-и, сан ӗҫ ҫук! — ҫемҫелмерӗ ывӑлӗн чӗри.

Ӑнланмарӗ курӑнать амӑш чӗрине, татрӗ те хучӗ.

— Шкула вара, шкула ма ҫӳреместӗн? — ним калама аптранӑ енне пачах урӑх ыйту ҫине сиксе ӳкрӗ Верук.

— Тем тума кирлӗ пуль? Эп шофера вӗренме каяп, укҫаллӑ пулап. Вӗреннин мӗн усси? Вӑн инженерсем унта кинона мӗне каймалӑх та ӗҫлесе илеймеҫҫӗ. А, пит кирлӗ тӗк акӑ тытап та япала сутма пуҫлап.

— И-их! ухмах. Санран пулать-и сутӑ туса? Унта, мӗн, ӑспуҫ кирлӗ мар тетӗн-им? Кам, кам, ҫав Мальвинах минретсе янӑ-и сана, ҫав ӗнтӗ, урӑх кам пултӑр? Ну, ӑна-и?

Хӗрарӑм хӑйӗн ҫиллине шӑнараймасӑр каллех каллӗ-маллӗ уткалама пуҫларӗ, унтан ывӑлӗ патне чупса пычӗ те аллине ҫӗклерӗ. Турӑ чарчӗ, ҫапма памарӗ. Ҫапнӑ пулсан лешӗ, паллах, пӗр самант та тӑхтаса тӑман пулӗччӗ, тухӗччӗ те тарӗччӗ. Халӗ вара акӑ ҫав шуйттан ҫури, урӑх кам пултӑр ӗнтӗ вӑл, ывӑлӗ пулсан та шуйттан сӑнлӗ, яшкине ним пулман пек ҫисе ячӗ те тав сӑмахӗ каламасӑрах, хуҫа пек, вырӑн ӑшне лашт! ҫеҫ кӗрсе выртрӗ. Вӑт сана Арнуль! Амӑшне те, ун апатне те ним вырӑнне те хумарӗ.

«Тем, пӑсӑлман-и ку? — пырса кӗчӗ хӗрарӑм пуҫне пӗр кӗтмен шухӑш. — Пӑсса пачӗҫ пуль те... Ах тур, тем курас пур? Ҫав, ҫав майра мӗн те пулин туса пачӗ пуль? Унсӑрӑн вӑл капла хӑтланас

çук. Тен, юмăçа каяс? — аптранă енне тем те шутласа пăхрĕ Верук. Унтан хăйĕнчен хăй вăтанса кайса мĕн шутланисене пăрахăçларĕ те ывăлĕ çумне кравать çине пырса ларчĕ. Юрату вăрçăран вăйлăрах терĕ пуль. Пĕлмерĕ-ха вăл ывăлĕн юратăвне. Ун вĕт пачах урăх юрату. Пуçне те унне урăх енне çавăрнă...

— Арнуль, эс, мĕн, тем çав хĕрарăм патне тек ан кай-ха, юрать-и? — йăпăлтатарах пуçларĕ вăл паçăрхи калаçăва тепĕр хут. Ахалех пуçларĕ. Лешĕ карт! туртăнчĕ те:

— Эп каймастăп, хăй килет, — тесе хучĕ.

— Хăй? Кам каларĕ?

— Мĕн эс, анне, ухмах-и? Хăй каларĕ тетĕп-çке!

— Вара, вара мĕн? Эс, мĕн, авланатăн-им?

— Авланап, авланап, сана мĕн ĕç?

— Мĕнле ĕç çук пултăр-ха. Эп сан аннӳ вĕт!

— Кам пĕлет сана. Такам эс. Вăрçан пĕрмай: ăна тума юрамасть, кăна тума юрамасть... Ак авланап та...

— Апла эп кирлĕ мар пултăм-и-ха, çапла-и?

— Пĕлместĕп, тен, çапла та!

Верук каллех аптраса ӳкрĕ. Ывăлĕ каланă сăмахсем ниепле те вырнаçаймарĕç, пуçне те ик аллипе тытса пăхрĕ, пĕрех ăнланаймарĕ. Чĕри вара пушшех те йышăнмарĕ. Мĕнле вара çапла пач ют хĕрарăм пырса кĕтĕр-ха çак пӳлĕме? Ватăрах тата! Çамрăкки пулсан, тен, юрĕччĕ те... А, ку вара, Верук пĕлет, чăн-чăн ултавçă. Çав пырса кĕрет-и? Çук, çук! Ку нихçан та пулас çук! Верук каллех тарăхса кайрĕ, юратса çавăрап тенĕ çĕртех каллех вăрçма пуçларĕ. Ку йăлт асар-писер килсе тухрĕ. Мĕн пулнине никам та астуса тăрса каласа кăтартаймĕ. Шăтăр-шăтăр! пăтăр-пăтăр! турĕ темскер. Халĕ ĕнтĕ пĕр-пĕрне нихçан каçарми кӳренсе лартрĕç. Ку çеç те мар, Арнольд вăрçнă вăхăтра амăшне хытах тĕртсе ячĕ. Хĕрарăма нумай кирлĕ-и? Палт çеç кайса ӳкрĕ Верук. Кун пекки пулман та, ним калама аптрарĕ, куççулĕ вара хăй тĕллĕнех юхса анчĕ. Кун пек килсе тухать теменччĕ. Çавăрасшăнччĕ вăл ывăлне. Çавăрасшăнччĕ те ĕлĕкхи пек шăкăл-шăкăл! калаçса пурăнасшăнччĕ. Халĕ ĕнтĕ ун пек тек тăваймăн. Урăх тек ним лайăххи те пулмĕ. Пулмĕ çав. Верук пурнăçне каллех тепĕр çĕлен шуса кĕрĕ те...

## Верук чĕри

Чăн та, вăхăт нумай та иртмерĕ, шкул вĕренме пăрахнă Арнольд, никамран ыйтмасăр тумасăр, килне çав майрана илсе кĕчĕ. Вăйсăрланса кайнă Верук хирĕç тăраймарĕ. Тен, çав вăхăтра чĕри пит хыт ыратнипе чирлесе те ӳкрĕ пуль вăл. Питрен

те питĕ кайнăччĕ, сăмах тапратсанах тăр-тăр! чĕтреме тытăнатчĕ. Хăрарĕ те, тен? Хирĕç чĕнме пăрахрĕ... Халь вăл кухньăна та ĕлĕкхи пекех питĕ кирлĕ чухне кăна тухса кĕрет. Туалета кайма та хăраса тăрать... Каллех çав хĕрлĕ çӳçлĕ хĕрарăм тем калассăн туйăнать. Лешсем вара малтанлăха пит аптратмарĕç те-ха. Тепĕр пӳлĕме хупăнса ларчĕç те кунĕн-çĕрĕн пĕр ĕçпе йăпанчĕç. Зала е кухньăна апат çиме е кино курма кăна тухкаларĕç. Аптрамарĕ те-ха малтан!.. Каярах вара, кĕтнĕ пекех, чăн тамăк пуçланчĕ тесен те тĕрĕс. Çук, çук, майра мар пуçларĕ ăна, ывăлех пуçларĕ. Ĕçе вырнаçаймарĕ, ĕçме-çиме вара, паллă, халь ĕлĕкхи мар, укçа пысăк кирлĕ. Те еркĕнĕ хĕтĕртнипе, те хăй ăс çитернĕ, Арнольд килти япаласене сутса ĕçме пуçларĕ. Верука тĕппипех пĕтерес терĕ пулас, япалисене ĕçсе ярсан ĕç укçине тăпăлтарма тытăнчĕ. Малтанах Верук теме пула хирĕç тăраймарĕ-ха. Чĕрине ыраттара-ыраттара чăткаларĕ. Тен, ашкăнĕç-ашкăнĕç те пыл уйăхĕ иртсе кайсан хăйсемех лăпланĕç терĕ. Анчах ĕç пĕрре те вăл шутланă пек килсе тухмарĕ. Лешсем аснăçем асрĕç, путсĕрленнĕçем путсĕрленчĕç... Верук та вара тек чăтаймарĕ, хирĕç тăрса пăхрĕ. Анчах ку вăл юлашки хирĕç тăру пулчĕ. Пĕринче çапла Верук магазинран сервелат илсе килнĕччĕ. Уяв тăвас тенĕ пуль çав? Холодильника хунăскере пӳлĕмре пуçтаркаласа çӳренĕ хушăра, сисмен те, ярса та илнĕ. Пăхать: кăлпасси çук та! Çавă пулчĕ пулĕ чуна тулса çитерекен юлашки тумлам. Верукăн чĕри те юнпа пăвăнса ларчĕ, вăл та урса кайрĕ. Çил-тăвăл пек пырса кĕчĕ вăл ывăлне уйăрса панă пӳлĕме. Тем каларĕ, вăрçрĕ, минтерĕсене çавăра-çавăра çапрĕ, хăй те астумарĕ. Майра вара Верук çапла туллашнине вырăн çинче кулса пăхса выртрĕ. Питĕ килĕшрĕ ăна çак пăтăрмах. Сăнĕпе те çуталса, çамрăкланса кайрĕ. Ара, кăлпассине те çинĕ те-ха, вăй кĕнĕ пуль? — Выртрĕ-выртрĕ те çапла вăрçса вăйран кайнă Верука пӳлĕмрен тĕрте-тĕртех кăларса ячĕ. Урăх ним тăвайман енне Верук каллех йĕрсе лăпланчĕ. «Эрех ĕçме укçа туртса илни çитмерĕ ĕнтĕ кусене, халĕ выçă вĕлерессĕн пуль?» — терĕ. Пӳлĕмрен тек тухмарĕ.

Ывăлĕ те курчĕ амăшне йывăр пулнине, анчах пулăшма-тума пĕрре те пымарĕ. Усаллăн çеç пăхкаларĕ. Тавăрчĕ вăл ăна, тавăрчĕ. Хĕрсем патне яманшăн, картла выляма, эрех ĕçме чарнăшăн тавăрчĕ. Анчах ку пăтăрмах пуçламăш çеç, ку нимех те мар пулчĕ-ха. Малалла мĕн пулса иртнине каласа пама та йывăр. Ăсран тайăлнă ывăлĕ ăна килтен хăвала пуçларĕ. Ирĕклĕ пурăнма икĕ пӳлĕм кирлĕ иккен вĕсене! Майран чăн хуçа пулас килнĕ. Çапла килсе тухать айккинчен пăхса тăрса каласан. Ах анчах, айккинчен-майккинчен пăхса кăна тăрас марччĕ. Тен, ăна ăс панă пулсан, кампа та пулин ырă çынпа тĕл пулнă пулсан урăхла килсе тухнă пулĕччĕ. Çук çав. Верук никампа та

хутшăнмарĕ. Çын умĕнче аван мар терĕ пулас. Шарламарĕ. Тухса кайма ăс памаллаччĕ ăна! Пулмарĕ, тупăнмарĕ çав ун пек çын. Ывăлĕнчен те тем пулсан та уйрăлас темерĕ пуль тата? Хĕрарăм вăл чăтать. Ывăлĕ вара чăтаймарĕ, ĕçрĕ-ĕçрĕ те хăй те чикеленсе кайрĕ. Чирле пуçларĕ. Чирлĕ çын кама кирлĕ пултăр? Леш, лярва, пăхса ларас темерĕ, выçăллă-тутăллă пурăнкаларĕ-пурăнкаларĕ те май çуккине кура пĕр каç тухрĕ те шăвăнчĕ. Усси çук терĕ пуль? Ара, Верук тек кăлпасси илсе килмест, япала та тек сутаймăн, йăлт ĕçсе, сутса пĕтернĕ. Ал сулчĕ пуль те, а, тен, урăххине тупса янă та ку кирлĕ мар пулнă. Кирек мĕнле пулсан та чи кирлĕ вăхăтра, упăшки чирлĕ, амăшĕ пĕтнĕ вăхăтра, тухрĕ те кайрĕ. Çав кирлĕ терĕ пуль, кусене тăнч пĕтертĕм терĕ пуль... Пĕлмерĕ-ха вăл Верук чĕрине, ывăлĕ тесен амăшĕ пурнăçне те пама хатĕр тăнине. Майра тухса кайнă-кайман, хăйĕн те пĕр чĕптĕм вăй юлман, ывăлĕ тавра тăрмашма тытăнчĕ. Амăш кăмăлĕ пулăшрĕ-и е урăххи, ачи пĕр-тепĕр эрнеренех самайланма пуçларĕ. Тепĕр уйăх иртрĕ-и, ура çине тăчĕ. Верук вара хăй йăлт пĕтрĕ. Çĕрĕ-çĕрĕпе çывăрмасăр пурăнсан кам пĕтмĕ ĕнтĕ? Амăшĕн пăшăрханăвĕ, вăйĕ виле чĕртмелĕх те пур. Çапла пулчĕ те. Анчах ним те çухатусăр пулмасть çав, кашни япалашăнах тӳлеме тивет. Арнольд сывалса çитнĕ çĕре хăй те урараn ӳкрĕ. Ывăлĕ вара, пĕр ăшă туйăм та çуралмарĕ-ши вара? — пырса та пăхмарĕ. Выртать акă вăл халь, Верук ятлă чăваш хĕрарăмĕ, чирлĕ, анчах хăйне пĕрре те чирлĕ пек туймасть... савăнăçлă вăл, телейлĕ, ывăлне пулăшрĕ, лярвине кăларса ячĕ... Халь ĕнтĕ вилме выртнă пулсан та пурăнать. Пурăнать-и е тĕлĕк курать?..

...Ун пурнăçĕнче каллех пăтăрмах пек. Майра каялла килнĕ те, ывăлĕ амăшне йăлтах пăрахнă пек. Халь ĕнтĕ тухатмăш хĕрарăм хĕтĕртнипе ăсне çухатнă ывăлĕ амăшне пусма хатĕрленет пек... Выçă куçлă хĕрарăм, кăлпасси çитмен пуль, Верук чĕрине тутанса пăхасшăн. Тутлă ĕнтĕ вăл Верук чĕри. Ма тутлă пулмалла мар ун? Вăл вĕт йăлтах ачипе упăшкишĕн пурăннă. Вĕсем улталанине пăхмасăрах вĕсене вăйлăран та вăйлă юратнă. Лешсем вара таптанă кăна. Мĕнле чăтнă-ши вăл, çав чĕре? Вăт халь ăна та кăкăртан кăларса илмелле тет. Ăсран тайăлнă ывăлĕ акă çĕçĕ илчĕ те вилес пек чирлĕ выртакан амăшĕ патне пычĕ... Патнех пычĕ... Çук, хăрамарĕ Верук. Ма хăрамалла пултăр ун хăйĕн ывăлĕнчен? Кирлĕ тĕк вăл чĕрине кăна мар парĕччĕ... Лешĕн вара аллинче турилкке. Турилкки тап-таса! Йăлтăр-йăлтăр тăвать... Ара, кухньăра хăех çуса тасатса хунă та-ха... Яшт! тутарчĕ çав вăхăтра таçта кăкăрта. Ярр! çурăлса кайрĕ кăкăрĕ, пиçсе çитнĕ арбуз пек. Ыратмарĕ те вĕт-ха. Ывăлĕ аллинчи çĕçĕ татах ялтлатса илчĕ. Çат! çеç ӳкрĕ чечеклĕ турилкке çине хĕп-хĕрлĕ юнлă чĕре. Тĕлĕнмелле те, тапма пĕрех чарăнмарĕ. Тăлт-тăлт! тапать. Хитре хăй, тĕлĕнмелле хитре... Унран ăшă çапать,

йĕри-таврана çутатать... Акă ывăлĕ çĕççине хучĕ... Амăшĕ çине пушă-пушă куçĕпе ним пулман пек пăхса илчĕ те тухса кайма тăчĕ. Тăчĕ те алăк кутне çитсен такăнчĕ ӳкрĕ! Шарр! çурăлса кайрĕ амăш чĕри. «Ах тур, ыраттартăн пуль, асăрханарах çӳре! — терĕ. — Утма вĕрениччен ак темиçе хутчен те такăнăн... Çумра кам та пулсан юрĕччĕ те...» Верук ачине халь те пĕчĕк пек курчĕ пуль, çавăнпа пăшăрханса ӳкрĕ. Çуралсан пĕр вунă уйăхран çапла утма вĕрентнĕччĕ... Çавă аса килчĕ. Арнольчĕ вара те илтрĕ амăш сăмахне, те илтмерĕ... Илтрĕ пуль çав, чиперех çĕкленсе илчĕ те ыраттарнă чĕркуççине аллипе сăтăркаласа тепĕр пӳлĕме кĕрсе кайрĕ. Лăштăрах пулчĕ Верук та. Халь ĕнтĕ пурăнап терĕ. Ывăлĕ ун чĕрине илчĕ, тиркемерĕ...

Тепĕр кунне ирпе çĕрĕпе выляса выçса çитнĕ ывăлĕ амăшне тарăхса пӳлĕме пырса кĕчĕ те тăпах чарăнса тăчĕ. Мĕн пулса иртнине вăл пĕрре пăхсах ăнланса илчĕ. Вырăн çинче выртакан чирлĕ амăшĕ тек сывламасть те.

Тулса çитнĕ çилли, амăшĕ вилнине курсан, тем пулчĕ, сĕвĕрĕлчĕ. Таçтан тахçан амăшĕ эпĕ вилес тăвас пулсан мана вара яла илсе кайса пытарăр тени аса килчĕ... «Вот еще!» — яланхи пекех тарăхса шутларĕ Арнольд. Тăкак нумай пулать терĕ пулĕ, шутларĕ-шутларĕ те, ним тума аптранă енне пĕр ухмахла шухăш патне пырса тухрĕ. А мĕн, эпĕ нимĕн те курман, пĕлместĕп те... Ыйтас тăвас пулсан, эпĕ килте тахçанах пулман тесе калатăп та, пулчĕ те. Тепĕр тесен камăн мĕн ĕç пултăр ман çумра?..

Çапла шутлакаласа ларчĕ-ларчĕ те çав мĕскĕн арçын амăшĕ вил выртан пӳлĕмрен кушак пек йăпшăнса тухса кайрĕ. Çаврăнса та пăхмарĕ. Амăшĕ те ĕнтĕ ăна тек курмарĕ, чĕри те...

Пĕр-икĕ кун иртсен тин кӳршĕ хĕрарăмĕ Верук аппа вилнине кирлĕ çĕре пĕлтернĕ. Пытарнă вара ăна çапла халăхпа, выртать вăл халь хула масарĕнче, хăй пекех çапла ывăлĕсем маннă хĕрарăмсемпе пĕрле. Пĕр шăпа вĕсен, пĕр хуйхă...



# КАЛАВСЕМ

## АÇА ÇАПНĂ ЧУН

Çакă çутă та ырă тĕнчене ытахальтен тенĕ пек пурăнма мар, чăнласа, пĕтĕм чун-чĕререн юратма килнĕ вĕт-ха эпĕ! Манăн та кашни ир çакă çутă хĕвел евĕр ăшшăн-ăшшăн пăхса илес, каçпа кун иртнĕшĕн хурланса шурă-шурă уйăхăн шуса иртес килет. Çапла пăхса çӳресен-çӳресен вара юратнă çын алли çине çуркуннехи шурă лĕпĕш пулса пырса ларăттăм, эсĕ мана темле хăратсан та вĕçсе тармăттăм. Тен, пĕр асăрхамасăрах мана пĕр ывăça чăмăртаса илĕн, нимĕрĕн, вĕлерĕн... Эпĕ вара çав вăхăтра шурă сĕт тумламĕ пулса сан юнна сăрхăнса кĕрĕттĕм. Эсĕ вара ху та ман кăмăл-сипетлĕ пулса ман хыççăн ача пек чупса кайăн. Айккинчен пăхса, курса тăма ку питĕ кулăшла пулĕ. Эпĕ каçăхса кайса кулăп... Аса илĕп те кулăп.

Кулатăп тăк мĕншĕн-ха эпĕ сана питĕ-питĕ юрататăп? Камши вăл мана пӳрнĕ арçын? Мĕн тĕслĕ-ши унăн куçĕсем? Тен, вăл пĕрре те çын путлĕ мар, йăлт асар-писер питлĕ, усал чунлă?.. Тен, ăна асат хуçнă? Апла пулсан эпĕ ăна тăван амăшĕ пек пăхнă пулăттăм. Юратмалли çын вăл кирек мĕнле курăнтăр, хăть катемпи пултăр, эпĕ ăна юрататăпах пурпĕрех. Манăн питĕ-питĕ, пĕтĕм чун-чĕрепе парăнса юратас килет! Эпĕ çакă тĕлĕнмелле тĕнчене юратма çуралнă. Куççуль тумламĕ пулса ӳкĕттĕм эпĕ унăн куçĕ çине, юр пĕрчи пек кăтăклантарăттăм унăн шурă ӳтне... Ах, тĕл пуласчĕ унпа, эпĕ ăна хамăн чун хĕрӳлĕхне пĕтĕмпех парнелĕттĕм, ăна пĕтĕмпех, пĕтĕм ӳт-пĕвĕмпе парăнăттăм... Ӳчĕ унăн, — ăçтан сисетĕп-ха ăна? — темле чечен-чечен. Çӳçĕ кăшт кăвак, куçĕ хурлăхлă-хурлăхлă, тути асаплăн кукăрăлса ларнă. Кама куратăп эпĕ?..

Вырăн çинче ĕмĕтленсе-киленсе выртакан хĕр ялтах сиксе тăчĕ, куçĕ чарăлса-чарăлса пычĕ. Ӳт-пĕвĕ чул пек хытса ларчĕ. Аллине çӳлелле тăснă хăй. Тем кĕлтăвать.

...Хула çийĕн таçтан тахăш вăхăтра пуçтарнă аслатиллĕ çумăр кĕрлесе хăпарчĕ. Малтантарах аякра кăлтăртатакан аçа сасси халĕ çывăхарах, чӳрече айĕнчех илтĕнет. Кăлтăрр! кăлтăрр! кусса каять аслати. Яри! çурса çиçет çиçĕм. Курмастьилтмест хĕр, вăл питĕ таçта, питĕ аякра... Лĕпĕш пулнă-и вăл е çурхи шыв тумламĕ — никам та пĕлмест. Тути кăна пĕр вĕçĕмсĕр:

«Ăçта эсĕ, ăçта эсĕ, манăн юратнă çыннăм?» — тет. Курать те, курмасть те пек вăл хăй савнине куçĕ умĕнче. Тем мĕлтлетет, тем улшăнать тĕнчере çакă çиçĕмлĕ-çутăллă каç. Тен, аслатиллĕ çумăр çапла туса кăтартать!

...Хулара пурăнакансем ку тăвăла хăраса та чĕтресе кĕтсе илчĕç. Чӳрече-алăксене тачăрах хупрĕç. Утиялсемпе пуç çинченех витĕнчĕç те çывăрма выртрĕç. Пĕр çын кăна выртмарĕ, алăкăнтĕпелĕн утрĕ, аллисене чăмăрта-чăмăрта ал сыпписене шăтăртаттарчĕ. Пĕтĕм тĕнче, пĕтĕм пурнăç пĕтнĕ пек туйăнчĕ ăна çак самантра. «Мĕншĕн пурăнмалла тет, енчен те нимле тĕллев те, нимле ĕмĕт те илĕртмест тĕк? Юратас тенĕччĕ, питĕ пысăккăн, пĕтĕм чуна парса юратма хатĕрччĕ эпĕ çакă тĕнчене, çакă çынсене... Çук, май килмерĕ. Чун савнă çыннăм пĕр ырă сăмах та каламарĕ. Йышăнмарĕ ман юратăва... Халĕ мĕн тăвăн ĕнтĕ? Пулăшма тесе те пăхрăм — йăлт усалпа тавăрса пачĕç. Ним ăнланми, ним туйми пулса çитрĕм эпĕ, ытти çынсем пекех. Чĕре те, малтан ырă ĕçшĕн кăварланса çуннăскер, сӳнсе-сӳнсе пычĕ, чулลансах ларчĕ. Халĕ ĕнтĕ эпĕ те çăкăрпа перекене чулпа çапма хатĕр... хама юратакан çынна та... Мĕн тума кирлĕ вăл — çав юрату? Таçта пур теççĕ ăна... Темле романсемпе сăвăсенче арçынпа хĕрарăм пĕр-пĕрне епле хытă савса пурăннисене çыра-çыра кăтартаççĕ... Пĕрне те ĕненейместĕп. Таса юрату та пур теççĕ тата... Ăçтан тупăнтăр çакă çăрăлса пĕтнĕ пурнăçра никам тытса вараламан тасалăх? Ăнсăртран таçта мĕнле те пулин çуттăн курăнса илес-тăвас пулсассăн та, сана самантрах пылчăкпа çапса вараласа хурĕç. Хăйсем епле хуралса хытса ларнинчен хăраççĕ мар-и çавсем, сылăха кĕрсе кайнăскерсем? Çапла пулĕ те, анчах ман мĕн тумалла тет халĕ? Манăн та ыттисем пек хура курак пулса тăрас-и, пулса тăрас та усала тата темиçе хут нумайрах ĕрчетсе ярас. Çук, çук, апла тăвиччен аçа çапса çунтартăр. Тахçан, астăватăп, атте пахчинче пиççе çитмен панулмине татса çинĕччĕ. «Юрамасть, аçа çапать!» — терĕç. Аçа çапмарĕ. Тен, вăхăчĕ çитмен пуль? Çитĕ те акă çĕр ăшнех çапса кĕртсе ярĕ...»

Хула çийĕн кĕрлекен аслати çавна илтрĕ-ши, тата хытăрах ахлатса кĕрлеме, куçа хуптарса çиçме тапратрĕ. Яр! та яр! каять çиçĕм. Карса хунă чӳречерен те çутă ялтăрах кĕрет. Аслати сасси хăлхана утиялсемпе хупласан та пĕрех çĕмĕрсе кĕрет.

...Ăçта эсĕ, манăн чунăм? Эпĕ сана тахçанах, сĕм авалах çухатнă пулас та, халĕ те тупаймастăп. Ăна ман шыраса тупмаллах! Ман санпа пĕрле чăмăртанса пĕр ӳтлĕ, пĕр куçлă, пĕр чунлă пулмалла. Пĕр çын пек утса каймалла çак пурнăçпа пирĕн, пĕр уйрăлми çын пек. Эпĕ сана кашни кун, кашни каç куç хупса та пулин шыратăп. Урапа утса пыратăп-и е картлашкапа хăпаратăп — кашни самантрах санăн асапланакан чунна сисетĕп, сассуна илтетĕп. Эсĕ çумрах... Çумрах эсĕ! Куçа кăна курăнмастăн. Тен, пирĕн чунсем, кĕлеткесем çывăрма выртсан уçăлма тухаççĕ те пĕр-пĕринпе вăрттăн тĕл пулаççĕ. Паллаççĕ, ахăртнех, вĕсем пĕр-пĕрне, пире çеç пĕлтермеççĕ. Тен, çав сиси-

сисми туйăма сиссе тăмалли кăна юлчĕ, çав анчах. Тен, тĕл пулаймăпăр та çакă тĕнчере. Пирĕн чун мĕлкисем нихăçан та ӳтленмĕç. Пĕр-пĕрин çумне тĕршĕнсе киленмĕç.

Ăçта эсĕ, чун савнă çыннăм? Пĕлтер хăвăн çинчен, кăшт пулин те пăхса ил ман çине, куç хӳрипе те пулин. Кăшт кăна кулса ил, тута хĕррипе те пулин. Çемçен, вĕрене çулçи евĕр кăна сĕртĕнсе ил ман çума... Эпĕ вара эсĕ ăçтине тӳрех туйса илĕп. Сан пата хамах чупса пырăп, сан ытамна хамах, никам хистемесĕрех кĕрсе ӳкĕп, хам ирĕкпех сана парăнăп, санăн пулăп. Ман сана питĕ-питĕ юратас килет! Тен, эпĕ пĕр вăхăтрах сан аннӳ те, йăмăку та пулăп? Тен, шуйттана çаврăнса улталăп, ан çиллен. Тен, турă пек чăннине калăп, чуптуса илĕп. Эсĕ вара ху та турă паллиллĕ çын пулса тăрăн. Ху та турă. Кирек мĕнле килсе тухсан та, кирек кам пулсан та — эпĕ санăн, санăн...

Кĕр-кĕр! кĕрлерĕ вăй илсе çитнĕ аслати. Вăл тач хупса лартнă чӳречесемпе алăксенчен çĕмĕрсе кĕчĕ, сехрене хăпартрĕ...

«Пĕрех вилетĕп, — шухăшларĕ арçын. Кăвакарнă çӳçне каялла çавăрса хурса шăлса илчĕ. — Усал пулса тăриччен вилни лайăхрах. Акă çакă радиоантеннăна нӳрлĕ çĕрпе хам урлă çыхăнтаратăп та... — Çын аçа çапасран тунă контакт авăрне тепĕр май çавăрса хучĕ. Халĕ вăл хăй Çĕр пулса тăчĕ, тӳпепе пĕр пралукпа тӳрремĕн çыхăнчĕ. — Антеннăна аçа пĕрмаях çапаканччĕ... халĕ те çаплах пулĕ», — шухăшлама тата ĕçне тума пăрахмарĕ вăл. Кĕр-кĕр-кĕр! кĕрлерĕ аслати. Яр! çурчĕ çиçĕм. Хăраса кайнă хула лапчăнсах ларчĕ. Арçын та урайне ларчĕ. Аçа çапмассерен ун сăн-пичĕ самантлăха та пулин çуталса илет. Кăвак куçлă, пысăк сăмсаллă, ӳчĕ шурă-шурă... Хăй лăпкă, питĕ лăпкă. Пур япалапа та килĕшнĕ ку, куна халĕ нимĕн те кирлĕ мар тесе калама пулать ăна курсан. Хăй те вăл мĕн тăвас тенине иккĕленмесĕр, чунпа чĕтремесĕр тăвать-и тен. Унăн ал-ура хутламĕсенче темле çирĕп шухăш хытса ларнă.

...Нумаях та вăхăт иртмерĕ, урамра тем шатăр-шатăр-шат! тутарчĕ. Тăр-тăр-тăр! чĕтренсе илчĕ пĕтĕм тĕнче. Куна вырăн çинче кĕлтуса ларакан хĕр те илтрĕ, аллине тем пăшăлтатса тата çӳлерех тăсрĕ... Хуп-хура пĕлĕт хушшинчен темле çап-çутă пăнчă сиксе тухрĕ. Куçа шартарса яракан пăнчă! Вăл пĕр вырăнта çаврăнкаласа тăнă хыççăн майĕпен куçса пычĕ-пычĕ те çӳлте çакăнса тăракан антенна вĕçне çапăнчĕ... Чашăлл! туса тăсăлса тухрĕ вăл арçын ларакан пӳлĕмри розеткăран. Çап-çавракаланса çитрĕ те тĕрлĕ тĕслĕ çулăмпа çунса пралук тытнă пӳрне вĕçĕсенчен ӳте сăрхăнса кĕме тытăнчĕ. Аçа çапнă арçын çĕлен евĕр авкаланса илчĕ, вĕттĕн-вĕттĕн чĕтренчĕ, хуçкаланчĕ, асапланчĕ, тăнне çухатрĕ... Çавăнпа та вăл çав çавра çиçĕм хăйĕн ăшне кĕнине те, хăй темле питĕ лăпкăн, ача пек çутă кулăллăн лăпланса, урайне выртса çывăрса кайнине те туймарĕ. Аслатиллĕ çумăр çурĕ те çурĕ, ирпе иртсе кайрĕ.

Питӗ уҫӑ, хӗвеллӗ ир арҫын ним пулман пекех тӑчӗ, тумланчӗ, урама тухрӗ, кӑкӑр тулли сывласа илчӗ. Уҫӑ сывлӑш хальхинче нимрен те тутлӑрах туйӑнчӗ.

...Апат вӑхӑчӗ те часах ҫитрӗ. Столовӑйӗнче халӑх ялан йышлӑ. Кам кӑна ҫукка унта! Пӗрле ӗҫлекенсем те, юттисем те...

«Ку арҫынна эпӗ ӗмӗрне те курман», — пӗрре тӗлӗнмелле савӑнса, тепре хӑраса пӑхса илчӗ Эльтти сӗтел хушшине апат ҫиме кӗрсе ларнӑ арҫын ҫине. Вӑтам ҫулсенче, ҫӳҫӗ кӑвакрах, хӑй темле питӗ кӑмӑллӑ, питӗ лӑпкӑ. Кӑрт! турӗ хӗр чӗри. Куҫне тартрӗ, чӑтаймарӗ — каллех пӑхрӗ. Йӑлл! кулса ячӗ арҫын. Сӑнпичӗ ҫинче хӗвел вылярӗ. Ларчӗ-ларчӗ те хашш! сывласа ячӗ. Хӗр пӗтӗм кӗлеткипе туртӑнса хускалса илчӗ. Ӑна та сывлӑш ҫитмерӗ.

— Сире паллаштарас-и? — хушша-хуппа кӗчӗ ҫав вӑхӑтра сӗтел хушшинех пырса ларнӑ ҫын. — Эсир пӗр-пӗрне пӗлместӗр курӑнать. Ку акӑ — Эльтти! Ӑна эпир хамӑр хушӑра Эльт тетпӗр. Интереслӗ вӗт? Эсир иксӗр те пӗр ятлӑ. Пӗрне-пӗри палламан тӑвансем мар-и? — хӗрпе арҫын ячӗсем ҫапла ӑнӑҫлӑ килсе тухнӑшӑн савӑнчӗ пӗлӗш.

Кӑвак ҫӳҫлӗ арҫын пуҫне сӗлтрӗ, хӑйне аванмартарах туйрӗ пулас, хӑюсӑррӑн кулса илчӗ. Кулли питӗ лӑпкӑн пулса тухрӗ.

Эльтти! Эльт! Икӗ ята танлаштарса арҫынна хӑйпе юнашар тӑратса пӑхрӗ хӗр. Вӑрттӑн шухӑшпа кӑна астарчӗ чунне, темле Илемкайӑк вӗҫсе анчӗ тейӗн пуҫ ҫине, канлӗ-канлӗ пулса кайрӗ. Пуҫра темле ҫемҫе-ҫемҫе кӗвӗ янӑрама пуҫларӗ. Таҫта кайса ҫухалчӗҫ ӗнер каҫ тарӑхнисем! Инди халӑх юрри евӗрлӗрех янӑрарӗ те янӑрарӗ ҫав кӗвӗ. Чун халь тап-таса, ҫав кӗвӗ пекех ҫап-ҫутӑ. Кӑвак кун пек. Сӗрме купӑс сасси пек...

— Эсир вара? Ӑҫта ӗҫлетӗр? — татрӗ хӗр тӗлӗкне Эльт.

— Эпӗ, мӗн, эпӗ биолог. Эпӗ ӗҫлеместӗп, эпӗ пурӑнатӑп. Йывӑҫ пек.

— Пурӑнатӑр йывӑҫ пек? Мӗнле лайӑх!

— Ҫапла. Акӑ ҫак самантра эпӗ ҫилсӗр-мӗнсӗр савӑнса алӑ ҫупса ларатӑп, хӗвел ҫинчи ҫулҫа куҫкӗски пек вылятатӑп. Куратӑн-и? — хӗр арҫын умӗнче вылянса илчӗ. Чӑн та, темле тӗлӗнмелле йывӑҫ евӗр вӑл. Ун ҫумне пырса тӗршӗнес килет. Ун ҫумне сӗртӗнсен вӑй илсе каяссӑн туйӑнать...

Хӗрпе арҫын калаҫса кайрӗҫ. Хӑйсене паллаштаракана та манчӗҫ вӗсем. Иккӗн анчах. Куҫа-куҫӑн кӑна. Иккӗн пулсан та — пӗр тӗнче. Чунӗсем уйрӑлми пӗр чӑмӑркка. Вӑл вӗсен куҫа курӑнман халь тин кӑна ҫуралнӑ пӗчӗк ачи, тен? Акӑ вӑл пӗрремӗш хут макӑрса ячӗ. Ун сассине хӑйсем кӑна илтрӗҫ пулмалла: икӗ тута, икӗ куҫ пӗр-пӗрин ҫине пӑхса йӑл та йӑл кулма тытӑнчӗҫ. Ҫук, ӳт мар, тин кӑна ҫуралнӑ ҫӗнӗ чун туртрӗ вӗсене пӗр ҫӗре, пӗр чӑмӑркка. Пӗр чунлӑ ҫынсен, паллах, пӗр ӳтлӗ, пӗр сывлӑшлӑ пулмалла. Пӗр чӗреллӗ, пӗр шухӑшлӑ... Ҫапла килсе тухрӗ те.

— Эй-эй, эсир мӗн? А-а-а, ну, юрать, эпӗ кайрӑм, —

кансĕрлесшĕн пулмарĕ вĕсене пĕлĕшĕ. Унăн та, тен, пĕрле пулас килетчĕ пулĕ? Вăл, Эльт асăрхарĕ, хĕр çине питĕ юратуллăн пăхса илчĕ.

Ку самант та иртрĕ. Пĕр çĕре пĕрлешнĕ чунсем тек никама та илтмерĕç. Чӳхенчĕç те чӳхенчĕç сĕтлĕ кӳлĕре. Леш тĕнчере тейĕн. Çылăхсăр тейĕн. Çылăхсăр мар та-ха! Мĕн тăвăн, çакă пархатарлă çутçанталăка та турă пĕр çылăха кĕмесĕр туман. Чи таса япала, юрату, чăн çылăхра çуралать. Пылак та илĕртӳллĕ тута енче пытанса пурăнать-пурăнать те вăрттăн кăна, кĕтмен çĕртен йăлл! кулса сиксе тухать. Çапла вылянать таса чун: пĕрре куç пăвса илет, тепре ачаш сăмах персе ярать. Хăй епле илемлĕ пулнине тĕрлĕ япала урлă туса кăтартса парать.

— Эльтти!

— Эльт!

Икĕ чун пĕрре уйрăлса, тепре ăнтăлса ыткăнчĕç пĕр-пĕрин патне. «Кам эсĕ?» — ыйтрĕç пĕр-пĕринчен сассăр.

«Эсĕ манăн чунăм».

«Эсĕ манăн пурнăçăм».

«Эпĕ сана мĕн ачаран кĕтнĕ. Эсĕ çапла ман пата ирĕклĕн, никам хăратман кайăкăн хулпуççи çине пырса ларасса, ларсан-ларсан савăк юрă юрласа ярасса пĕлсех тăнă. Мĕнле-ха эпĕ, çул çитмен ача, пулас савнă хĕрарăм çинчен çапла ĕмĕтленме пултарнă, çавăнтан тĕлĕнетĕп».

«Эльт, эсĕ манăн çĕршывăм. Манăн чун сар çĕршывра уçăлса çӳрет халь, тăрă тумлам шывĕпе чӳхенет, тăм тивнĕ çеçке пулса çĕре, эсĕ утса пыракан сукмак çине ӳкет. Таптатăн ĕнтĕ эсĕ ăна. Ах, епле намăс мана сан çинчен çапла ĕмĕтленме. Савăк та... Ман сан çума вăштăр çил пек вылянса сĕртĕнес килет. Сан çумра мĕн пур — пурте килĕшет...»

«Чунăм, енчен те эпĕ сана хăçан та пулин, мĕнле те пулин хур тусан эсĕ мана кала, пĕр хĕрхенӳсĕр тĕртсе яр. Вилсен те сан ытамунта кăна вилес килет. Ман пек ухмах, тен, кайран та тупăнĕ!»

«Мĕн эсĕ, Элĕм? Эсĕ манăн, манăн анчах! Анчах эпĕ, каçар та, текех хĕр мар ĕнтĕ. Ман ку пурнăçра тем те курма тиврĕ. Вилес патнех çитнĕччĕ... Анчах эсĕ пĕрре те ан кулян кун пирки. Ку ман айăп. Эпĕ сана ун вырăнне хамăн чун хĕрлĕхне парăп. Вăл — санăн».

«Чунăм, Эльтти, тинех кĕтсе илтĕм пулать сана. Тинех пĕрле!»

Никам илтмелле мар шăппăн, пĕр сассăр калаçрĕ икĕ чун. Пĕр хĕвел пек çиçрĕç. Çути аякка ӳкрĕ-ши, апатра ларакансем те çакна таçтан сисрĕç, асăрхарĕç пулсан та пĕр усал сăмах та каламарĕç. Хăйсем те вĕсем темле çуталса, йăл-йăл кулса ларчĕç. Вĕсен те çапла пĕр çаврăнса пăхмасăр, йĕри-таврари тĕнчене йăлт манса кайса юратас килсе кайрĕ пуль, çавăнпа та, тен, икĕ чун пĕрлешнине курмăш пулчĕç.

Пĕр-пĕрне тин кăна шыраса тупнă чунсем те сĕм суккăр,

айван. Хӑйсене ҫынсем умӗнче халиччен палламан пек те тытма тӑрӑшрӗҫ, ахальтен калаҫнӑ пек те тукаларӗҫ, юлашкинчен апатланмалли пӳлӗмрен ним пулман пек тухса кайрӗҫ, кӗрхи ҫулпа шӑппӑн, пӗр васкамасӑр утрӗҫ.

— Ӗнер пит тӗлӗнмелле пулса тухрӗ вара. Чутах вилеттӗм, — хӑйӗнпе мӗн пулса иртнине ӑнлантарса пама тӑрӑшрӗ Эльт.

— Мӗн сиксе тухрӗ вара?

— Аҫа ҫапрӗ. Ун чухне мана темле питӗ йывӑрччӗ, вилес килетчӗ. Аҫа ҫаптӑр тесе кӗлтӑваттӑм. Кӗттермерӗ ҫав пулӑм. Аслати вӑл шуйттана ҫапать тет. Шуйттан тарса пытаннӑ вырӑна шыраса тупать те... ҫапать. Кӗркуннепе тата... ҫумӑр аслатиллӗ килекен марччӗ.

— Миҫере пулчӗ вара вӑл?

— Пӗр вунпӗрте.

— Вунпӗрте? Шӑп ҫав вӑхӑтра эпӗ юратушӑн питӗ тунсӑхласа ларattӑм. Турӑран юрату ыйтса кӗлтӑваттӑм. Тен, илтрӗ вӑл? Сана акӑ ярса пачӗ.

Икӗ ҫын аллисем, чунӗсем пекех, хӑй тӗллӗнех пӗрлешрӗҫ, пӗр-пӗрне ачашлама, ҫупӑрлама тытӑнчӗҫ. Улах ҫул ҫинче юрать никам та кансӗрлемерӗ. Никам тытса чарайми туртӑнчӗҫ пӗр-пӗрин патне хӗрпе арҫын. Тӑнран кайрӗҫ тейӗн. Тутисем хӑйсем сисмесӗрех ҫывхарчӗҫ. Чунӗсем пылакланса-пылакланса кайрӗҫ...

«Епле тутлӑ, епле ҫутӑ эсӗ, — каллех калаҫма пуҫларӗҫ чунсем. — Ӗмӗр-ӗмӗр пӗрле пулӑттӑм, пӗр чарӑнми чуптӑваттӑм».

«Ман сана хамӑн ӑша кӗртес килет, — питӗ вӑтанса-вӑтанса каларӗ хӗр. — Пӗтӗмпех санӑн эпӗ, йӑлт санӑн. Сан ҫумра кӑна эпӗ хама чӑн-чӑн хӗрарӑм пек туятӑп».

«Эсӗ манӑн савнӑ хӗрарӑм».

«Эсӗ манӑн арҫыннӑм!»

«Сан ҫумра ман питӗ вӑйлӑ, питӗ таса пулас килет».

«Мана, каҫар та, сан ҫӑмлӑ аллусем питӗ-питӗ килӗшеҫҫӗ».

«Ан сӑна ун пек. Эпӗ хитре арҫын мар».

«Эпӗ сана хитришӗн мар, урӑххишӗн, эсӗ ҫапла ырӑ кӑмӑллӑ пулнишӗн юрататӑп».

«Эпӗ сана ача чунлӑ пулнӑшӑн, ман ҫине ҫапла, темле, анне пек пӑхма пӗлнӗшӗн. Тӳррипе каласан, эпӗ сана нимӗн чухлӗ те тивӗҫ мар. Турӑ парни пултӑн эсӗ маншӑн. Эпӗ ҫак таранччен ҫапла асапланса пурӑннӑшӑн таҫтан пӗлӗтрен ҫын йӑтайми телей йӑтӑнса анчӗ. Эпӗ питӗ телейлӗ, эпӗ юрататӑп».

«Ах, анчах! Юрамастчӗ пулӗ ман сана юратма! Юрату вӑл — самант. Пӗр килет те, пӗр каять. Эпӗ, тен, ҫак самантра кӑна юрататӑп. Кайран вара... асап, кӳлешӳ... Халӗ те акӑ эсӗ манпа тӗл пуличчен юратнӑ хӗрарӑмсене кӗвӗҫетӗп. Енчен те эсӗ мана пӑрахас пулсан эпӗ сана...»

Юнашарах тӑракан хӗр алли сасартӑках арҫын мӑйне явса илчӗ те пӑвса лартрӗ. Куҫӗ никам ӑнланмалла мар хӗм сапрӗ.

Шăрçисенчен темле çавра çиçĕмсем кусса тухрĕç, тăнран ячĕç...

...Кĕр-кĕр! кĕрлесе илчĕ урамра аслати юлашки хут. Йалтăр-йалтăр çиçрĕ вăйсăр çутă. Вăл, тĕттĕмрех пулсан та, пӳлĕм урайĕнче выртакан арçынна уççăнах çутатса кăтартрĕ. Акă вăл пуçне çĕклерĕ. Ун-кун пăхкаларĕ, тăрса ларчĕ. Ăçта эпĕ тенĕн куçне-пуçне сăтăркаларĕ. Унтан кухньăна кĕрсе шыв ĕçрĕ, вăхăт нумая кайнă-çке тесе стена çинчи сехете пăхса илчĕ те çывăрма выртрĕ.

...Ирпе Эльт сывă тăчĕ. Ĕнер каç аптратса çитернĕ шухăшсем йалт пĕтнĕ. Аса та килмерĕç. Апат кăшт-кашт çырткаласа илнĕ хыççăн урама тухрĕ. Тем пулчĕ ăна, халь тин çиçсе тухнă хĕвел пек якăлт! сикрĕ вăл. Кăшт кайсан капла ачалла хăтланнине никам та курмарĕ-и тесе каялла çаврăнса пăхрĕ. Çук. Урам пуш-пушах. Ут, чуп, сик никам курасран хăрамасăр, килен çакă çутă та уçă ир çинче. Пĕр кана нимĕн шухăшламасăр утрĕ Эльт. Анчах пĕр япала, таçтан аса килчĕ вăл, канăç памарĕ. Çапла тап-таса ир çак çулпа тахçан утса курнă пек туйăнать ăна. Каллех çав çулпа ир-ирех, хĕвел пек сиккелесе утать пек... Çапла шутласа илчĕ çеç утакан, пĕр-икĕ утăм турĕ-и, манса та кайрĕ çав канăççăр асаилĕве. Вăл тепре çаврăнса пăхрĕ те, никам çуккине курсан, каллех якăлт! сиксе илчĕ, хăйĕнчен хăй тăрăхласа ача евĕр кулса ячĕ. Ĕçре те çуталса кăна ларчĕ, пуринпе те кăмăллă калаçрĕ вăл. Унăн аçа çапнă чунне такам питĕ асăрхануллăн, питĕ ачашшăн, çемçен-çемçен çупăрларĕ. Çавна сиссе-туйса пурăнчĕ пуль, апат çиме те çав кăмăлпах кайрĕ. Сĕтел хушшине ларма пушă вырăн шырарĕ.

— Ларăр кунта! — илтĕнсе кайрĕ пĕр кĕтмен çĕртен паллангă çын сасси. — Эпĕ сана акă пĕр хĕрпе паллаштарăп.

Çавра сĕтел хушшинче, аякрах та мар, чăн та, çав палланă арçынпа юнашар питĕ хитре хĕр лара парать. Вĕл! те вĕл! вĕçеççĕ куç харшийĕсем. Шăрçи темле чеен пăхать-пăхать те çĕре ӳкнĕ пăрçа пек сиккелесе каять, тем шырать. Тути йăл-йăлл!.. таçта курнă пек ăна, тахçантанпах çывăх пек, ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурăннă пек.

— Паллашăр, ку — Эльтти! Ак ку вара...

Эльт пуçĕ çаврăнса-çаврăнса кайрĕ. Куç умне çавра çиçĕм сиксе тухрĕ. Аça çапрĕ.

«Эльт, элчелĕм манăн!» — янăраса кайрĕ таçтан уçлăхран килекен сасă.

«Чунăм, эсĕ-и ку? Эльтти, эсĕ килессе эпĕ пĕлнĕ. Эпĕ сана тахçантанпах кĕтетĕп. Кил ман пата», — ахрăм пек çапăнса килчĕ тепĕр сасă.

Икĕ чун пĕр-пĕрин патне туртăнчĕç. Уйрăм пурăнса кӳтсе çитнĕскерсем пĕр çĕре чăмăртанса пĕр-пĕрне ăшăтма, ачашлама тытăнчĕç.

«Ан юрат эсĕ мана, Эльт. Ан юрат... Эпĕ лайăх мар. Эпĕ сана юратăп-юратăп та пăрахăп...»

«Мĕн калаçатăн эсĕ, тăванăм? Пĕр тупăнсан вара çапла

пăрахăпăр-и? Пиртен те килмест вăл, тепĕр тесен, пĕрле пуласси. Эпир халь иксĕмĕр те пĕр турă аллинче. Вăл анчах татса парĕ пирĕн юратăва, пурнăçа...»

Пĕр сассăр, пĕр сăмахсăр калаçрĕç икĕ чун. Хăйсем кăна, никам илтмелле мар пăшăлтатрĕç пĕр-пĕринпе. Никама та курмарĕç вĕсем, никама та илтмерĕç. Хăйсен тин кăна çуралнă ачипе киленчĕç те киленчĕç. Ăна чи савăк вырăнĕсенчен черетлĕн лăпкарĕç, сĕтлĕ кўлĕре шыва кĕртрĕç. Халь тин ĕнтĕ вĕсем нихăçан та уйрăлас çук! Вĕсен ачи пур...

— А-а-а, эпĕ мĕн тесе? Эсир ларăр-ха апла, ман каймалли пур, — пĕр-пĕрин çине питĕ савăшса пăхса лараканесем умĕнче темле аван мар туйрĕ хăйне вĕсене паллаштаракан çын.

Ăна илтмерĕç. Икĕ куç тĕл пулнă, икĕ пуç пĕр-пĕрин патне тайăлнă. Вĕсем тавра темле çавра çулăм. Вăл темле тĕрлĕ тĕслĕн çуннине никам та асăрхамарĕ. Чўречерен ўкнĕ кун çути терĕç.

## ÇĂТМАХ

Тĕттĕм-ха. Тĕттĕм пулсан та çутăсăр мар. Çутă çўлтен мар, çўлте йăлт пĕлĕтленнĕ, таçтан шалтан шурă юртан тухса тăрать пек. Çил çавăрттарать. Çул ик айккипе те лартса тултарнă çўхе туталлă кăпăшка кĕртсене чуптăвать. Татах тем тăвасшăн пуль, татах çавăрттарать. Ман çула пўлет, тĕрте-тĕрте ярать те, кĕрт çинех пырса кĕретĕп. Утма та, сывлама та йывăр. Сивĕ тата! Çил çинче çилпе пĕр тан чупса та пăхатăп, васкатăп. Ĕçе çитсе ўкес те хăнăхнă йăла-йĕркепе радио ярас, алла ручка тытас та пачах урăх тĕнчене кĕрсе ўксе сăвă çырма пуçлас. Ку ахăрсаманаллă вăхăтран тухса тарас. Кирлĕ мар мана нимле рынок та, укçа та, çăкăр та... Тухатăп та таратăп акă çав тĕнчене! Çăтмах-и вăл, тамăк-и — пĕрех. «Пирĕн хутлăх, — ăсчахсем калаççĕ, — темиçе сийлĕ, темиçе пайлă». Акă эпĕ халĕ пĕр пайĕнче, хула урамĕнче çилпе çапкаланса пыратăп. Нумай та вăхăт иртмĕ, тепĕр пайне, ĕç вырăнне кĕрсе ларăп, радио ярăп.

Еç хутлăхĕ хаклăрах пулас, ăна хуралласçĕ. Хуралçăна сывлăх сунтăм та ĕç пўлĕмне — ăна уçма хуралçăра кăна упранакан уçă кирлĕ — хăвăрт кăна кĕрсе кайрăм. Хывăннă-хывăнман радио ятăм. Радиона эпĕ питĕ вăйлă яратăп. Питĕ хытă кĕрлесе каять те вара, хам та таçти тĕнчене, çав радио çавăрттарса тăракан авăра, ним те мар кĕрсе ўкетĕп. Шухăш-ĕмĕтпе таçта та пулса куратăп.

Урăх хутлăхра çўреме никам та ан кансĕрлетĕр тесе эпĕ ир-терех килетĕп, пĕр çур сехет вара çапла ним те мар хамăрăн вăхăтран хăтăлса тухатăп, малашлăха кĕрсе пăхатăп, унтан

аваллăха çитсе килетĕп... Куматăп кăна... Мĕн ăçтан килнине курса хам та тĕлĕнетĕп вара тепĕр чух. Ара, пӳлĕм тесен чипер пӳлĕмех, хут таткисемсĕр пуçне унта урăх ним те çук. Радио тесен радио та ахаль динамик кăна. Ну, кăшкăрать те вара... нимĕн те илтĕнмест. Урамра унта е урăх çĕрте хуть çĕр çĕмĕрччĕр, хăлхана кĕр-кĕр кĕрленисĕр пуçне урăх пĕрех нимĕн те кĕмест. Пĕр-пĕр рок-ушкăн юрланă чух пушшех! Эх, çавăрттараççĕ! Эх, тăпăлтараççĕ чуна! Йăлт саланса каятăн, каятăн та, чăннипех те, çак тĕнчерен урăх çĕре кĕрсе ӳксе çухалатăн. Çапла килсе тухрĕ те...

Ниçтан-таçтан сиксе тухрĕ вăл, никам та курман ăна, никам та пулман унта. Унта халĕ эпĕ кăна, тата такама кĕтетĕп пек эпĕ... Тĕттĕм. Кассăн-кассăн пырса çапăнать манăн ахаль те пĕçерсе тăракан пите ăшă  çил. Шăмпăл-шăмпăл! çапăнать çыр хĕррине хум. Шыв çийĕпе тĕрлĕ тĕслĕ çутă пăнчăсем чупса килеççĕ, таçта темле пурнăç пуррине ĕнентереççĕ. Вĕсемсĕр ку тĕнче пач тĕттĕмре выртмалла. Куç ахаль те йĕп чиксен те нимĕн те курмасть. Çутă çине пăхсан вара суккăрлансахларатăн. Хăлха кăна чун пекех тăнлать те тăнлать. Çывăхри вăрманти сас-чĕве те, таçта хăй йывăрăшĕпе хуçăлса аннă хăрăк турат сассине те, вăрăмтуна пуç йĕри-тавра нăйлатса вĕçсе çӳренине те — пурне те илтет, пурне те хак парать. Çак тĕнчере мансăр пуçне урăх никам та çук пек туйăнса каять. Тен, чăн та, пĕччен! Эпĕ, тен, çак тĕнчери пĕрремĕш çын? Турă туса янă Адам, тăмран тунăскер? Халĕ вара хамăн мăшăрăма, Евăна, кĕтсе тăратăп. Турă ăна ман аяк пĕрчинчен тунă пулать. Унтан мар пулсан та, манранах тухнă ĕнтĕ вăл, урăх ăçтан тухтăр? Çавă мар-и-ха килеп тесе калаканĕ? Кĕтетĕп вĕт-ха эпĕ. Ăна мар пулсан кама? Чăтăмсăррăн, питĕ тимлĕн итлесе тăратăп çак шăплăхра никам илтми вăшăлтатса килекен ура сассине. Хам ĕнтĕ эпĕ тахçанах ташша янă, вăрăмтуна купăс калать, хуп-хуран курăнса выртакан юханшыв алă çупать...

Çав вăхăтра аякри çутă çинче тем мĕлтлетрĕ, темле сасă илтĕнчĕ. Каçхи кайăк вĕçсе иртрĕ, тен? Е çыр хĕрринчи хăйăр вăшăлтатса юхса анчĕ — пĕлме çук. Чун кăна, тем пĕлнĕ пек, карт! туртăнчĕ. Хăлха тата хытăрах карăнчĕ. Таçта куç витерейми тĕттĕмлĕхре, чăнах та, такам питĕ хăвăрттăн, питĕ çăмăллăн пĕр сассăр утса килет. Акă вăл çывхарса-çывхарса пычĕ, куç умне такама та хăратса ямалла шап-шуррăн сиксе тухрĕ. Мана курчĕ те хаваслăн кулса ячĕ, ӳт-пĕвĕ темле çĕленнĕн авкаланса илчĕ. Эпĕ сывлăшсăр пулса лартăм. Ара, ку Ева вĕтха! Çак тĕнчене, çак тĕттĕм хутлăха мĕн шыраса килсе тухрĕ-ха вăл? Аллинче темле хутаç, хăй темле вăрттăн-вăрттăн шухăшлă, пĕр сăмахсăрах темпе илĕртет те илĕртет. Эпĕ сехре хăпма тăнă çĕртех тин çăмăллăн сывласа илтĕм. Унпа юнашар, чăн та, пĕрре

те хӑрамастӑн, унпа юнашар эпӗ те паттӑр, эпӗ те турӑ! Ара, мӗн пулчӗ-ха манпа, эпӗ чӗнменччӗ вӗт-ха ӑна кунта. Кам ячӗ-ха вара апла? Тен, турӑ? Тен, ман чун? Ҫакӑ тин кӑна ҫуралнӑ тӗнчере пӗччен ҫӳреме питӗ кичем пулчӗ пулӗ те ӑна акӑ вӑл хӑйӗн юлташне, Евӑна, чӗнсе илчӗ. Мӗн кӗтеп тетӗп паҫӑр? Авӑ мӗн!

Тин кӑна хама темле тискер кайӑк пек туйса тӑраканскер, эпӗ, ҫын пулса ҫитрӗм пуль, хаваслӑн-хаваслӑн кулса ятӑм. Эпӗ те пӗр сӑмах та каламарӑм. Чунсем кӑна калаҫрӗҫ... Шӑмпӑл та шӑмпӑл шӑмпӑлтатрӗҫ хумсем ҫыр хӗрринче, нӑй та нӑй купӑс каларӗҫ вӑрӑмтунасем, вӑшӑл-вӑшӑл юхрӗ сӑрт тӑрринчен хӑйӑр... Тем шут тытрӗҫ вӗсем, иксӗмӗр те алран тытса шыв хӗрне анса кайрӑмӑр. Ҫара урасене кӑтӑклакан типӗ хӑйӑр кӑмӑлсене тата уҫса ячӗ: кӑлтӑр-кӑлтӑр кусрӑмӑр, йӑкӑлт-якӑлт сиккелерӗмӗр. Шыв хӗррине ҫитсе ӳксен чӑмпӑл-чӑмпӑл тутартӑмӑр. Ах, лайӑх та иккен турӑ тин туса янӑ тӗнче! Сӗм-тӗттӗм пулсан та, питӗ ӑшӑ вӑл! Шывӗ те, хӑйӑрӗ те, чӗрчунӗ те — пурте пур. Таҫтан акӑ Ева та килсе тухрӗ. Шыв хӗррипе ятарласа ҫатлаттарса пырать ҫара урипе. Эпӗ урана сӗтӗрсе хум кӑларса утатӑп. Ӑҫта каятӑп — пӗлместӗп. Пурпӗр мар-и? Утса пынӑҫемӗн хуп-хура шыва ывӑҫласа илетӗп те пите ҫӑватӑп. Кӑмӑл тата пысӑкрах уҫӑлса каять. Ман халь ку шыва пуҫӗпех, пӗтӗмпех кӗрсе ӳкес килет. Ҫапла турӑм та. Ҫире мӗн пуррине хывса ҫапрӑм та шыва сикрӗм. Темле вӗҫӗ-хӗррисӗр хура уҫлӑха, темле тӗпсӗр кӳлле сикнӗнех туйӑнчӗ малтан. Чӑтаймасӑр темле кайӑк пек кӑшкӑрса ятӑм. Унтан пӗр-икӗ хут чӑмкаласа илнӗ хыҫҫӑн эпӗ, чун уҫҫи тупнӑскер, каллех паҫӑрхи пек кӑмӑллӑн кулса илтӗм. Евӑна шыва пӗрле кӗме чӗнтӗм. Ҫук, килӗшмерӗ вӑл, пуҫне кӑна ман ҫине пӑхса унталла-кунталла суллакаларӗ. Унтан: «Шӑнса вилетӗн вӗт!» — тесе хучӗ. Ҫыран хӗррипе тем, вут-шанкӑ пулас, пуҫтарма пуҫларӗ. Эпӗ вара, пӗчӗк ача пек, ҫав ӑшӑ шывра чӑмпӑлтатрӑм та чӑмпӑлтатрӑм. Кӑвайт чӗрӗлсе кайсан тин тухрӑм. Ӑшӑ тенӗ ҫӗртех шӑлсем шӑк-шак тутаркаласа илчӗҫ. Мӗн пур ҫавна тӑхӑнса ятӑм та вут умне чӗтресе чӗркуҫленсе лартӑм. Шӑнса кайнӑ алӑсене ҫулӑм ҫине тытса ӑшӑтатӑп. Ай, лайӑх!

Чанк! тутарчӗ ҫав вӑхӑтра Ева. Аллинче ун, пӑхатӑп та, эрех кӗленчипе черкке. «Шалтан та ӑшӑтас пулать, — тет. — Унсӑрӑн ҫак тӗнче мӗнне пӗлеймӗн». Тӗнче сиввине кӑна мар, тӗнче ӑшшине те пӗлес килчӗ пуль, шухӑшласа тӑмарӑм, шалт! хутӑм тӑсса панӑ черккене. Кӑваррӑн ҫунтарса анса кайрӗ пыр тӑрӑх ҫав хӑватлӑ шӗвек. Чӑтаймарӑм — чыхӑнса кайрӑм.

— Ку сан мӗн, панулми эрехӗ-им?

— Ҫавӑ.

— Ытла та хӑватлӑ, вӗлеретӗн вӗт кун пек.

— Пӗр черкке ӗҫнипе кам вилтӗр? Кил, тепре яр.

— Çитет пуль? Эпĕ эсĕ кам пулнине те пĕлместĕп вĕт-ха.

— Мĕнле пĕлместĕн? Эпĕ сан пулас арăму, Ева.

— Ева! — паçăртарах шутланисем тĕрĕс килсе тухнăран тĕлĕнсе кайрăм эпĕ. — А эпĕ, Адам. Мана тăмран тунă.

— Мана сан аяк пĕрчинчен. Анчах та унтанпа вăхăт пĕр çĕр пин çул та иртрĕ пулĕ ĕнтĕ.

Пуç çаврăнса-çаврăнса кайрĕ. Тепĕр черкке ятăм-и е çук — астумастăп. Халĕ эпĕ хам та çулăм хыпса илнĕ вутпуççи пулса тăтăм. Çак хĕрарăм çумĕнче хама чăн-чăн арçын пек туйса илтĕм. Ак хайхи, хам арçын пулнине ку тарана çитсе те пĕлмен-ши вара эпĕ? Пĕлнĕ пуль, анчах çапла çĕкленсе хăюлланса кайман, нихăçан та! Халĕ вара тем пулчĕ? — малтан хăюсăртараххăн, кайран вара каçăхса тенĕ пек чуптума тытăнтăм. Ева текен хĕрарăм мана пĕрре хăй патне турта-турта илчĕ, тепре тĕрте-тĕрте ячĕ. Çапла хăтланни мана тата çулăмлантарчĕ, чуна тем капланчĕ, чутах çунса каяттăм. Паçăрхи шăнса чĕтренисем йăлт иртрĕç. Хура каç та хăйĕн вĕçĕ-хĕррисĕр тĕпсĕрлĕхĕпе хăратма пăрахрĕ. Халĕ вăл темле ăшă та ачаш алăллăн çупăрларĕ, хăйĕн ăшне илчĕ. Эпĕ хама халь тин çак хура уçлăх ачи пек куртăм. Чунра темле урăх куç уçăлчĕ. Çав куçпа пăхса илтĕм те хам мĕн хăтланнине курса вăтанса карăм. Турă, астăватăп, ку шĕвеке ĕçме хушманччĕ. Ĕçрĕм те акă — хам та турă. Ĕçрĕм те турă çак тĕнчене епле тунине ăнланса илтĕм. Вăл та малтан çапла, ман пекех, çылăха кĕнĕ. Çылăхсăр тĕнче çук. Ахальтен мар пуль-ха вăл ман пата çак хĕрарăма ячĕ. Çылăха кĕртесшĕн пулас, татах тепĕр тĕнче тутарасшăн. Çав тĕнчене вара пирĕн хамăрăнах, турă пăхса тăнă пекех, пăхса тăмалла пулать. Питĕ чее хăтланать. Ку тĕнчене хамăн ывăлăма ятăм, ку тĕнче пуласлăхĕшĕн пăшăрханмастăп тет пуль-ха хăй ăшĕнче. Эпĕ вара тӳпе ывăлĕ пулсан та çак хура çĕр çинчех тăратăп вĕт-ха, çак илемлĕ те чуна кансĕрлекен хĕрарăм çине куç илмесĕр пăхатăп. Эпĕ унпа мĕн тумаллине йăлт пĕлетĕп. Пĕлессе пĕлетĕп те, анчах...

Ева эпĕ темле шухăшпа пăтраннине сисрĕ пулас та ман çине темлерех тĕмсĕлсе, илĕртсе пăхса илчĕ.

— Арçын-и эс е арçын мар?

— Арçын.

— Тыт апла пулсан, ĕç!

— Ху вара?..

— Эпĕ те ĕçетĕп.

Хăватлăран та хăватлă шĕвек пыра тепре çунтарса анчĕ. Ева та манран юлмарĕ. Пуççем иксĕмĕрĕн те çаврăнсах кайрĕç пулас, иксĕмĕр те ăшă хăйăр çине персе антăмăр.

Куç умĕнче темле кăвак хуппи уçăлса кайрĕ. Эпир телей ыйтса ĕлкĕртĕмĕр-и е çук — çак тĕнчерен пачах урăххине, çăтмаха, кĕрсе ӳкрĕмĕр. Унта, куççене хупнă пулсан та, çап-çутă! Унта

тĕрлĕ кайăксем çунат çапса юрлаççĕ. Çак хура çыран хĕрринчех хĕвел пăхать. Тĕрлĕ тĕслĕ çутă пăнчисем хум тăррисене ларса тухнă. Куçа йăмăхтарать. Ева сап-сарă хăйăр çинче тин çурăлнă çеçке пек сарăлса выртрĕ. Ăна пĕрре кăна пырса тапта, вăл пĕтĕмпех лутăрканса та пĕтĕ... Çавăнпа та эпĕ ăна питĕ ачашшăн, питĕ асăрханулăн тыткалатăп. Кашни хусканăвне сыхлатăп, чуптăватăп.

Ева та манран юлмарĕ. Эпĕ чуптунă чухне хăйне лайăх пулнине пĕлтерсе кĕлеткине хумхатрĕ. Юлашкинчен чăтаймарĕ пулас, хăй те ыталаса илчĕ. Халĕ ĕнтĕ эпир пĕр чăмакка пулса тăтăмăр. Пĕр чун. Тахçан хамранах пайланса тухнăскер, вăл халь каллех ман ăша кĕчĕ. Хамăн тахçан çухатнă та халь тин тупнă чи хаклă япалана ал çинче тыткаланă вăхăтри пек савăнтăм, канлĕ-канлĕ пулса кайрĕ. Эпир çак икĕ пая пайланса кайма тăнă тĕнчене каллех çыпăçтартăмăр, илем кĕртрĕмĕр. Икĕ кĕлеткерен пĕр кĕлетке, икĕ чунран пĕр чун туса хутăмăр. Хальхинче пĕр вăтанмасăр, пĕр хăрамасăр турăмăр турă ĕçне. Турă çавна курчĕ пулас та те кĕвĕçсе, те çилленсе пире уйăрса ячĕ. Самантлăха кăна пычĕ çав пĕрлешӳ, çĕнĕ тĕнчене çуратакан пĕтĕçӳ. Пулчĕ те саланса кайрĕ. Хăлхара темле ăнланмалла мар савăклă сассем çеç упранса юлчĕç. Тимĕр шапан шурă хуранĕ евĕр уçăлнă Ева патне халь ан та пыр, темле юттăн пăхса выртать. Тути хĕрринчен темле вăрттăн кулă сăрхăнать. Пурне те улталакан, пурне те ăнланакан кулă. Хамăн ĕçе турăм тет пулас вăл та. Анчах вăхăт иртнĕçемĕн вăл кулă та çухалса ирĕлсе пычĕ, çав çухатупа пĕрле пирĕн хушша каллех паçăрхи хура каç кĕрсе тăчĕ. Халĕ эпир пĕр-пĕрне пач курмастпăр тесен те юрать. Кăвайт сӳннĕпе пĕрех. Ун сайра хутра мĕлтлетсе илен çутинче эпĕ шапшур мĕлке пек ярăнакан Евăна куратăп. Ман çумрах пек вăл, çав вăхăтрах ман çумра та мар халь. Вăл, пĕлетĕп, каять. Ун каймалла... Манăн та каймалла. Хăвалаççĕ пире кунтан. Турă хăвалать. Çылăха кĕнĕшĕн çилленет. Хамăра та питĕ намăс. Пĕрпĕрин çине пăхма та вăй çитерейместпĕр. Çавăнпа каймалла та... Таçта тамăка кайса асапланса çӳремелле пулать... Турă çапла хушать. Çапла шухăшласа ларнă вăхăтра кăвайт ман пекех тĕлĕрме тытăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ, чăннипех те, хуп-хура тĕнче хупăрласа илчĕ. Ева курăнмарĕ. Эпĕ ăна чĕнмерĕм, пăшăрханмарăм. Унăн хăйĕн ĕçĕ, малалла мĕн тумаллине вăл хăех пĕлет, мансăрах тăвать мĕн тумаллине... Ку юлашки шухăш пулчĕ. Эпĕ çывăрса кайрăм.

Тĕлĕк куртăм. Турă пире, чăн та, ку ăшă та лăпкă тĕнчерен хăваласа янă пек. Темле хула пек. Ева ман арăм. Ача та пур. Ах, вăрçать пек мана Ева. ~~Килте ним~~ ĕçмелли те, ним çимелли те çук. Хӳла тăршшĕпех темле пушă магазинсем лартса тухнă. Ман пек çылăха кĕнĕ çынсем çав магазинсене кĕре-кĕре тухаççĕ. Ним

çук пирки вăрçа-вăрçа каялла тухаççĕ. Хăш-пĕр çĕрте тем суткалаççĕ пулас та, тĕркешӳ пырать. Манăн та çав тамăка кĕрсе каймалла пек. Унсăрăн киле те кĕртмĕç. Ăт тамăк, акă ăçта вăл тамăк текелесе пăхкаласа тăратăп та черет ăшне хастарланса кĕрсе каятăп. Черечĕ, тĕрĕссипе каласан, çук. Черет мар ку, тамăк хуранĕ. Тем вĕрет унта, тем пăсланать карса пăрахнă çăварсенчен. Темле усаллăх, темле хаярлăх çĕкленсе тухать çав хуран тĕпĕнчен, çĕкленсе тухать те пире ярса илет, ал-урапа хăлаçлантарать, ăшчике пăтратать. Тухса тарас тесен те тухса тараймăн... Хуран умĕнче пĕр шуйттан. Хуран патне хĕсĕнсе çывхарса çитнĕ çынсене тем пара-пара ярать. Ах, савăнаççĕ вара лешсем. Туянтăмăр-ха теççĕ. Мĕн илнине те пĕлмеççĕ. Илсе пултăр! Те усал, те ырă... Те çимелли, те ĕçмелли — пĕрех. Кайран çав япаласене кирлĕ-пĕрне улăштарса шырама тытăнаççĕ. Чăн-чăн улшуçсем тейĕн. Мана, пăхатăп та, темле чăваш кĕнеки тыттарса янă. Эпĕ ăна мĕн тума кирлĕ ку тесе çимеллипе улăштарасшăн. Никам та килĕшмест. Ахаль кĕнеке те мар вĕт-ха вăл. Вăл чăваш кĕнеки! Анчах ăна вулакан та çук-мĕн. Пĕлмеççĕ. Манса кайнă. Ним тума пĕлмен енне эпĕ ăна киле илсе килтĕм. Ева ман вулама юратаканччĕ-ха тесе утнăçем уçкаласа пăхса пыратăп. Унта мĕн, мĕн тетĕр пулĕ? Унта куçпа вуласа илсен те пĕрре те ĕненес килмест, йăлтах пирĕн пурнăç çинчен. Малтан çăтмах пулнă тет. Адампа Ева çылăха кĕнĕ пулать те, турă вĕсене тамăка хăваласа янă. Тамăкра пурăна-пурăна вĕсем хăйсен чĕлхине те, çынлăхне те çухатнă пулать. Ак хайхи, чăн та çапла мар-и текелесе пыратăп хам вуланăçем. Хуплашки çине темшĕн «Пуплев» тесе çырса хунă. Çĕр çинче чăн малтан Адам ятлă çын пурăннă тенĕ. Эпĕ ĕнтĕ вăл. Ăна тăмран тунă. Чăн та, тăм писмен! Тĕрĕс пурнăçран арăмĕ, Ева, пăрнă, çăтмахри темле панулмине çитернĕ, çылăха кĕртнĕ. Ку та тĕрĕс. Эрех кĕленчи çине темле панулми ӳкерсе хунăччĕ. Çав панулми шĕвекне ĕçнĕ пулас эпĕ çак çылăхлă тĕнчене тăвас умĕн. Акă халĕ те сутаççĕ мар-и-ха ăна — çав шĕвеке? Мана хирĕç пулакан çынсем пурте кĕленче йăтнă. Кĕленчи çине панулми ӳкерсе хунă. Каснă лартнă çавă, Евăпа иксĕмĕр ĕçни! Ăт яраççĕ! Пурте савăнăçлă хăйсем. Хĕрарăмĕсем те, арçыннисем те... Юрă юрлаççĕ. Эх, кĕрлеттереççĕ! Ах, ма ĕçрĕм пĕрех хут ун чухне! Халь мана пула пĕтĕм тĕнче ĕçке ернĕ. Евăпа иксĕмĕр эпир ӳсĕр тĕнче çуратнă. Турă ĕçне кăна мар, шуйттан ĕçне те тунă. Акă мĕн!

Акă мĕн! тесе эпĕ сасăпах каласа янă пулмалла. Пĕри, çав кĕленче йăтни, ме тет, кĕнекене бутылкăпа улăштарма ыйтать. Патăм çав кĕнекене, вулатăр терĕм. Кĕленчине илтĕм те ним тума пĕлместĕп. Пĕччен ĕçес — илемлĕ мар, кичем. Евăпа пĕрле — вăрçасран хăратăп. Хăра-хăрах илсе кайрăм киле. Мĕн пулать те мĕн килет, яратпăр терĕм. Хавасланасах аса илĕпĕр акă мĕн

пулни-иртнине. Ева та хирĕç пулмĕ. Тен, çак пурнăçа тӳрлетме май шыраса тупăпăр. Халь, тем тесен те, пирĕн тахçанхи авалхи çылăха каçарттарас пулать. Хамăрăн туррăмăра шыраса тупса ун умĕнче чĕркуçленес пулать.

Киле ним пулман пек пырса кĕтĕм. Арăм апат пĕçерет. Ачи темле пăшал йĕтнă та пӳлĕм урлă-пирлĕ пиф-паф! текелесе чупса çӳрет. Такама персе вĕлерме хатĕрленет, мур илесшĕ! Ева вăрçать пуль тенĕччĕ, вăрçмарĕ. Апат çиме ларсан чанк! тутарчĕ. Аллинче ун тин çуралнă хуп-хура тĕнчери çыр хĕрринчи бутылкăпа черкке. Хальхинче ăна эпĕ хам илсе килтĕм. Ева мар. «Ĕçетпĕр-и?» — тетĕп. Пуçра пĕр вăрттăн шухăш. Çак тамăкрах пĕр çăтмах туса хурас та... Ним те мар тума пулать! Эрех анчах кирлĕ! Пĕрре ятăмăр, тепре... Тĕнче уçăлсах кайрĕ. Каллех çав çыран хĕрри пек, эпир çак çĕр çинче пĕртен-пĕр çынсем пек. Кăвайт çунать. Хумсем шывран тарса пыракан çырана хăваласа çитсе çапаççĕ. Йăшăлл! ишĕлет хăйăрлă çыран. Çывăхри вăрманта темле тискер кайăксем çухрашкалаççĕ... Хăрушă! Çав вăхăтрах темле савăк та. Мĕн тăвас тен, эпир те çынсем, пирĕн те ыттисем пекех юратас килет. Вăл вара, юрату, чăн та, çылăха кĕмесĕр пулмасть пулмалла. Хальхинче, тен, кам пĕлет, урăх тĕнче çуратăпăр. Çапла турăмăр та...

Анчах мĕн-ма-ха пуç тӳсме çук хытă ыратать? Мĕн шуйттанĕ, мухмăр мар пулĕ те ку? Тем кĕрлеттерет тата, хăлхана кĕрсе кайсах çĕмĕрттерет. Такамсем ĕçсе лартнă пулмалла та чăваш юррине урăм-сурăм юрлаççĕ. Радиопа мар пулĕ те! Радио, радио... эпĕ радиона хытă янăччĕ-çке. Мансах кайнă. Сĕтел хушшинче самантлăха кăна кăтăш пулнă. Тĕлĕк курнă тем? Таçта аташса çӳренĕ пек астăватăп...

## ДЖОКОНДА

Джоконда! Мĕн кăна каламаççĕ пулĕ Леонардо да Винчи ӳкерчĕкĕ пирки? Джоконда! Вăлах «Мона Лиза». Пĕр купца хĕрĕ. Питĕ хытă юратса пăрахнă пулать ăна ватă Леонардо. Хăйĕн хăватлă та асамлă туйăмне пир çине пĕтĕм тĕнче тĕлĕнмелле сăнарласа хăварнă. Халĕ те куç илмесĕр пăхатпăр, пурнăçра çапла çутă та ырă сăнлă, çав вăхăтрах çапла вăрттăн кулăллă хĕрарăм та пур-ши вара тесе шухăшлатпăр. Çук, курман эпир ун пек пирĕштие çак çĕр çинче. Тен, ватă художник умне тахçанхи ĕмĕчĕ ӳтленсе чăмăртанса ларнă та — çавна кăна çырса кăтартнă? Хăш-пĕр тĕпчевçĕсем калаççĕ-çке, вăл хăйĕн автопортречĕ тесе. Тем те калаççĕ... Манăн та Джоконда çине пăхнăç-

емĕн тем калас килет. Каланă пулăттăм, анчах сăмах çитмест. Шуйттан илĕртнĕ Ева мар-ши тетĕн пĕр вăхăт шухăшласа ларнă хыççăн. Тин кăна çыртса илнĕ вăл çĕлен панă панулмине, çăтса та ярайман-ха, çылăх епле тутлă пулнине ăнланса кулса ларать. Стена çинчи ўкерчĕкре те мар тейĕн. Чĕп-чĕрех тейĕн. Тути çинчи кулли халь-халь шăпчăк пулса вĕçсе каяссăн, темĕн каласшăн вăл ман çине пăхса... Эпĕ ўкерчĕк патнерех пытăм. Темле çутă явкаланать ун тути тавра, çап-çамрăк хĕрарăм тутине çавă мăкăртарах кăтартать пулмалла. Тытса пăхма та пулать. Асăрханулăн, темрен хăракаласа сĕртĕнсе пăхрăм эпĕ пўрнепе. Темле ăшă çапрĕ. Джоконда тути кăтăкланă чухнехи пек туртăнса илчĕ. Пўрнене каялла карт! туртрăм. Ай тур, тем курса ларасси пур? Ўкерчĕк кăна тенĕ сăн, эпĕ хăранине кура пуль, темле шăппăн-шăппăн кулса ячĕ. Чăнласах илтрĕм эпĕ ăна, суять тесе ан калăр. Тен, ăсран тайăлтăм ун чухне, вăл та пулма пултарать. Çав вăхăтра вара ман вăй çитеймерĕ пулас, пўлĕмрен эпĕ чупсах тухса кайрăм.

Каçа кĕтсе илекен хула урамĕсем халăхпа тулса ларнă. Хĕвĕшеççĕ кăна. Хăвна кăткă йăви ăшĕнче утса пынă пекех туятăн. Хутран-ситрен чăвашла перкелешнисем илтĕнеççĕ, пĕр ушкăн хĕр вырăсла пакăлтатса иртсе каять. Пĕри те Джоконда мар! Пур-ши вăл пирĕн Чăваш енче Мона Лиза майлă хĕрарăм? Е ун пек ăшă чунлă çын таçта кăнтăрта тусем хушшинче, сенкер тинĕс хĕрринче кăна çуралса ўсме пултарать? Пирĕн кунта сивĕ, çырма-çатраллă, пĕчĕк уйсем... Ăçтан çуралса ўстĕр ĕнтĕ ăшă çил çинче ирĕклĕн сулланса ларакан тулли пучах пек çутă сăнлă, тутлă хĕрарăм! Ăçтан кулса яччăр вĕсем çапла вăрттăн та илĕртўллĕ, таврари пĕтĕм арçынна астарса. Чăваш хĕрĕсем вара хытанка, çинçе уралла... Ăçта ĕнтĕ унта тиха пек ĕрĕхтерсе чупса кайма? Çул хĕрринчи ясмăк пулмасан та юрĕччĕ текелесе кăна çўреççĕ вĕсем. Эпĕ вара Джоконда шыратăп. Хăй тĕллĕнех хĕвел пек çиçсе тухакан кулăпа киленетĕп. Халĕ те манаймастăп пулать паçăрхи пăтăрмаха! Мона Лиза, вăл çамрăк пулсан та, питĕ вăйлă юратса пăрахнă тет Леонардăна. Вĕсен хушшинчи çыхăнусем çиеле тухнă пулать те... хула çыннисем вата художника хăваласа янă. Ăт пасса! Ăçтан тупнă-ха вăл çавăн чухлĕ вăй? Ўкерчĕке пăхса миллионшар çын киленнĕ пуль, пĕрех иксĕлмест — илемĕ те, хăвачĕ те. Татах пăхас килет, татах шыраса тупас килет çавăн пек пирĕшти хĕрарăма. Пурах ĕнтĕ ун пеккисем çак Çĕр чăмăрĕ çинче. Тен, Шупашкартах тупăнĕ? Выляса та кулса тенĕ пек, хирĕç пулакан хĕрарăмсен куçĕсемпе тĕл пулма тăрăшатăп, тутисенчи куллисене суйлатăп. Çук, пĕрин те çывăха та пымасть.

Çумранах çăмăлтарах тумланнă пĕр пике вашлаттарса иртсе кайрĕ. Ах, урисем, çăтса ямалла. Çĕлен тирне аса илтерекен

чăлха тăхăнса янă та... питĕ илĕртӳллĕ, пасса, тутине пăхма мансах кайнă! Ура тесе! Пĕртте çинçе мар вĕсем, сăмах май каласан. Паçăртарах ахалех кӳрентертĕм пулас эпĕ чăваш хĕрĕсене. Ĕлĕкрех, тен, çапла пулнă та-и тăла сырнă чух. Халĕ вара апла мар. Халĕ ура илемлĕрех курăнтăр-ха тесе тăлана туртса çыхса лартас йăла çук. Эпĕ чарăнса тăнă тĕлтен паçăрхи хĕрачасен ушкăнĕ каялла иртсе кайрĕ. Кашнин аллинче пылак пăр. Çуллаca кăна пыраççĕ. Манăн та пыр ярăнса кайрĕ. Пит кирлĕ пуль çав Джоконда? Хĕрсен аллинчи пăр ун тутинчен темиçе хут пылакрах. Черет те пысăках мар пуль? Каяс та илес! Шанкаx хытса тăтăм. Çав ушкăнранах пылак пăр тытнă хĕрарăм уйрăлса кайрĕ. Ак тамаша, çул çинчи карлăк çумне ман патах пырса сĕвенчĕ. Хама хам ĕненмесĕр тата тимлĕрех пăхатăп. Шăп та лăп çавă, Джоконда! Аллинчи пĕр пылак пăрне ĕмет. Эпĕ питĕ çуланса тăнине сисрĕ пулас, вăтанмасăр, ун-кун шухăшламасăр пĕтĕм кăмăлтан сĕнчĕ теприне мана.

— Çисе пăхăр эсир те. Мана иккĕ ытлашши. Ахаль те пыр ыратать, — ним пулман пек тыткаларĕ вăл хăйне. Ман вара çĕр айне кĕрсе каймалли кăна юлчĕ. Джоконда! Манпа юнашар! Мана пылак пăрпа хăналать. Тути çинчи кулли те... ӳкерчĕк çинчиех. Темле питĕ ытарлă, илĕртӳллĕ. Хăй кăштах шанмасăртарах пăхать пек. Ку çынран тем те кĕтме пулать тет-ши? Асăрханулларах тыткалать. Çав вăхăтрах нимрен хăрамасăр пĕр палламан ют арçын çумне пырса тăрать те ăна пылак пăр сĕнет. Тĕлĕнмелле мар-и-ха ку? Çапла пуль те, эпĕ вара пĕрре те тĕлĕнмерĕм. Мĕншĕн тесен эпĕ ăна, çакă Джокондăна, ятарласа шырама тухнă та-ха. Шыракан тупать тет. Акă вăл, юнашарах, алăпа тытса пăхма та юрать, хирĕç мар тăк. Ку ӳкерчĕкри фантом мар, ку чĕрĕ ӳтлĕ, сĕтеклĕ туталлă, вăй вылякан куçлă хĕрарăм.

— Тавтапуç, тăванăм. Пыр паçăрах ярăнатчĕ. Кайса илес-и тесе тăраттăм пăхкаласа. Акă халь çӳреме те кирлĕ мар. Пӳрни пӳрт умнех килсе выртрĕ...

— Тĕрĕс тунă. Илекенĕсем тата пурте чăтăмсăр. Кармашаççĕ...

— Каçарăр та, кучченеç паракана ятран каласа тав тумалла тет. Мĕн ятлă эсир?

— Лиза!

— Мона Лиза?

— Çук, Мона Лиза мар, Лиза кăна.

Эпĕ чĕнмерĕм. Чăваш хĕрĕ Лисук. Вăлах Джоконда. Юнашарах. Те ĕненмелле, те... Кирек мĕнле пулсан та ӳкерме питĕ меллĕ модель. Манăн халех, паянах пир çине куçарса кăтартас килчĕ унăн асамлă сăнне. Хам камне пĕлтерес, тен, савăнĕ?..

— Эпĕ вара ăссăр ăста, ӳкеркелетĕп кăштах. Ванча тесе

чĕнеççĕ. Мастерской пекки те пур ман. Хăвăрăн сăнна пир çинче курас килмест-и?

— Уй-уй! Апла юрать-и вара?

— Ма юрамасть пултăр? Эпĕ сире хăвăрпа паллаштарăп.

— Мĕнле апла, ăнланмастăп.

— Ан хăрăр. Эпĕ сире пĕтĕмпех ăнлантарса парăп.

— Хăраса тăракан çынах марччĕ-ха эпĕ. Ку, чăн та, кĕтрет. Кайрăмăр.

Эпир карлăк çумĕнчен хăпрăмăр та Шупашкар урамĕпе аналла анса кайрăмăр. Манăн ăна малтанласа Атăл хĕрринчи сăрттуллă вырăнсемпе паллаштарас килчĕ. Куртăр, пĕлтĕр хăй ăçта çуралса ӳснине! Тинĕс пек вĕçĕ-хĕррисĕр сарăлса выртакан Атăл хумĕпе выляса килентĕр. Эпĕ шутласа хунă пекех пулчĕ. Лиза çыран хĕрринчен пĕчĕк ача евĕр чупса анчĕ. Хăй кунта тахçантанпа пулманни çинчен вăтанса пĕлтерчĕ. Калама çук тарăн çырмасене курсан тĕлĕнсех кайрĕ. Ку пирĕн Швейцари тетĕп те — кулса вилет. Малтан ту качаки пек сиккелерĕ пулсан та кайран вăйран кайрĕ. Хĕрарăма илĕртсе те пулин хамăн мастерскоя илсе кĕме вăхăт çитрĕ. Эпĕ ăна пĕр курка чейпе хăналама пултăм. Вăл килĕшрĕ. Хули юрать пысăк мар пирĕн.

Мастерской ман иккĕмĕш хутра вырнаçнă. Пырса кĕме çук пĕчĕк алăк, аран-аран уçкаларăм, унччен кун пеккине асăрхаманччĕ. Халь вара... пӳлĕмре таса мар пулнине те, картинăсем кĕтесре пĕр килĕшӳсĕр купаланса тăнине те питĕ хăвăрт туйса илтĕм. Ара, Джоконда умĕнче намăс курас килмест вĕт-ха ман. Унта-кунта сапаланса выртакан япаласене пуçтаркаларăм та ларма сĕнтĕм. Чей хатĕрлеме пуçларăм.

Ют арçын пӳлĕмне пырса кĕнĕ хĕрарăм пĕр сăмах та чĕнмерĕ, стена çинчи картинăсене пăхкаларĕ. Унтан Леонардо ӳкерчĕкĕ çине тĕмсĕлсе пăхма пуçларĕ. Тем тупрĕ пулас хăйне валли.

— Калăр-ха, кам сăнне ӳкерсе панă çакă картинăра? Вăл темшĕн ман аннене аса илтерет.

— Кама пултăр? Сире, паллах! Курмастăр-им?

— Çук, çук, пулма пултараймасть. Мана ку таранччен нимле художник те ӳкермен.

— Кăна пĕр тăватçĕр çулсем каярах тĕнчипе паллă художник Леонардо да Винчи ӳкернĕ. «Мона Лиза» ятлă. Джоконда тенине те илтме пулать. Эсир мар-и вара ку?

Хĕрарăм стена çинчи ӳкерчĕк çине темле тайăлса пăхрĕ. Çав вăхăтра, асăрхарăм, кулли те темĕнле çуттăн, тĕтреллĕн выляма тытăнчĕ. Унăн та куçĕсем тем курнă пек, тем пĕлеççĕ пек эпир пĕлменнине... Хĕрарăм темерĕн. Вăл хăй пĕр уçлăх та, мĕн калăн.

— Манăн та Джоконда пек пăхса ларас килет, — тет.

— Эпĕ Леонардо мар та, мĕнех, аппаланса пăхар, эсир хирĕç мар пулсан, Мона Лиза.

— Мона тăк Мона, мана пĕрех.

Эпĕ пир хатĕрлерĕм, хĕрарăм çине тепре пăхса илтĕм те ӳкерме пуçларăм. Пуçра пĕр композици çуралчĕ. Ку «Мона Лизăна» акă Шупашкар тăвĕсем хушшинче кăтартса парăп, чăваш тумĕпе пултăр вăл, чăваш Джоконди. Шел, пĕрре пăхсах курăнать, Матрона мар. Тен, ăна кĕпесĕр-мĕнсĕр ӳкермелле? Пултăр хальхи вăхăтри Мона, мĕн вара...

Кĕтмен çĕртен çуралнă шухăша пăхăнса, эпĕ пукан çинче меллĕн вырнаçса ларнă хĕрарăма хывăнтарма тытăнтăм, куçпа кăна, питĕ вăрттăн. Анчах хĕрарăмран мĕн те пулин пытарма пулать-и вара? Унăн кофтине хывса ĕлкĕртĕм-и, çук-и, манăн модель тем аванмарланса хускалкалама, темле пĕчĕкленсерех ларма тăрăшрĕ. Мона Лиза çухалчĕ. Ун вырăнне темле вăтанчăк хĕрача. Хамăн шухăша пĕрех пăрахăçламарăм. Вăтанчăклăхĕпе пĕрле тата урăх илем, чăваш илемĕ кĕрсе кайрĕ. Хулпуççийĕсем ун, чăнах та, ансăртарах. Кăкăрĕсем пĕчĕкрех. Ял хĕрарăмĕн çапларах. Йывăр ĕçре унта... Ак çак бюстгалтера хывса персен унăн çавра кăкăрĕсем икĕ шап-шурă панулми пек тухса ӳкмелле ман алă çине. Епле вĕри пуль вĕсем? Мĕн-ма пăчăхса выртмалла пултăр вĕсен çак тумтир ăшĕнче? Хĕрарăм ман ашкăнчăк шухăша сисрĕ. Сисрĕ кăна мар, хăй те хĕмленсе кайрĕ пулас. Пăхатăп та паçăрхи вăтанчăк хĕрача вырăнне каллех матрона. Мона Лиза лара парать. Куçĕнче илĕртӳллĕ кулă, тути юрату вăййи вылять. Ку лайăх. Ӳкерме те çăмăлтарах. Тута хусканăвĕпе кăна Лизăна питçăмартинчен чуптуса илетĕп. Аякран пулсан та сисет çавна ман модель, шеремет. Чăтаймарăм — аялти тутине паçăр ӳкерчĕкре тытса пăхнă пекех сĕртĕнтĕм. Паçăрхинчен темиçе хут ăшăрах, çав тĕлтех темле вылянчăк çутă. Илĕртет те илĕртет... Çав вăхăтра эпĕ, ухмах, тăна çухатнă пулмалла. Урăх ним те астумастăп. Мĕнле лапчăнтăм, çаплипех сыпçăнса лартăм. Тути чуптуса тăранмалла мар тутлă, сывлăшĕ — сиплĕ, сывламассерен вăй кĕрсе каять, ах, унпа пĕрлешсе каймалла марччĕ ман. Леонардăпа Джоконда та çапла пĕр-пĕрне юратса пăрахнă тет. Ăçтан чăтса тăрăн ĕнтĕ? Художник хăйĕн модельне юратмасăрах ăçтан çуралтăр-ха ӳкерчĕк? Енчен те тата вăл гениллĕ пулсан? Юратăвĕ те питĕ пысăк, таса та питĕ çылăхлă пулмалла ĕнтĕ. Урăхла пулма та пултараймасть! Манăн алă та халь Леонардо алли! Чĕре те унăнах! Ахальтен-им эпĕ Ванча?.. Мĕнле ăшă Лиза ӳчĕ. Унăн вăрăм та сулхăнрах пӳрнисем хăйне ачашлакан арçын алли çине кайăк пек ӳкеççĕ, чĕтренеççĕ, чарма пăхаççĕ... Ан хăра, чăваш Джоконди, эпĕ сана пĕтĕм тĕнче умне хăвăн чăн-чăн илемӳпе, хăвăн вăрттăнлăхупа илсе тухăп. Курччăр, тĕлĕнччĕр! Пĕртте çинçе мар чăваш хĕрарăмĕн ал-ури! Чăваш куçĕпе пăхсан вĕсем калама çук илĕртӳллĕ. Ĕçе те, юратăва та хăнăхнă, кунĕпе чупма та, çĕрĕпе... Ах, тăмсай, ма хутăм-

ха çак хĕрлĕ сăрра ун ура тупанĕ çине? Ура тупанĕсем ун çепçемçе, кĕренлĕхĕ пур, анчах вăйлă мар, таçтан шалтан, юн тымарĕсенчен тапса тăрать. Ача тяппи пек таса, чуптума та юрать. Манăн ирĕке кайнă алăсене чарас тесе пуль Лиза мана темиçе хут та тĕрте-тĕрте ячĕ. Кай, кай! тет пек. Çав вăхăтрах туртать те хăй патне. Эпĕ унăн пӳрнисене ӳкерме пуçларăм. Кашнин вĕçĕнчен темле тумлам, пире пĕрлештерекен вăхăт тумламĕ тумлать пек. Ёмсе илнĕçемĕн таçти аякри çĕршыва, Джокондăпа Леонардо çĕршывне кĕрсе ӳкетĕп. Тусем çинчен сулхăн çил вĕрет. Тинĕс шавĕ таçтан илтĕнет. Пахчара иçĕм çырли пиçет. Ватă художник хăйне халĕ çап-çамрăк туять. Унăн çак çап-çамрăк хĕрарăма юратма та, унпа çывăх пулмалăх вăй та пур.

Джокондăн тути хĕррисене эпĕ пытарарах, кăшт уçăмсăртарах кăтартатăп. Вăт халь лайăх! Тĕтреллĕрех, тата тĕтреллĕрех! Ун хыçĕнчен пĕтĕм тĕнче, турă тин туса янă тĕнче çĕкленсе ирхи пăспа мăкăрлантăр. Хăй вара, Çĕр çинчи пĕрремĕш хĕрарăм пек, çĕлен тăсса панă панулмие тин кăна çыртса илнĕ те çăтса ярайман пирки пĕр тарăхса та каялла пурпĕрех кăларса пăрахмастăп тесе кулса тăтăр...

Хам ӳкернĕ картина çине тепре пăхса илтĕм те Лизăна чĕнтĕм. Ку картинăна такама та кăтартма юрать пек. Шупашкар тăвĕсем хушшинче çарамас хĕрарăм тăрать, хальхи вăхăтри Мона...

— Кам вара ку? — тарăхса та темле аптраса кайса ыйтрĕ Лиза.

— Ку эсĕ, чăваш Джоконди!

— Мĕн? Халех хуратса пăрахнă пултăр. Унсăр-ăн...

— Унсăрăн?

— Халех чĕрсе пăрахатăп!

Чĕрсе пăрахатăп терĕ те аллине тăсмарĕ. Хăратрĕ кăна. Апла чунра таçта картина ăна килĕшнĕ. Хăйне çапла уçăмлă кăтартса панăшăн кăна тарăхать. Тарăхтăр, пĕлтĕр хăй кам пулнине. Эпĕ мĕн пултарнă таран тăрăшнă.

— Вăл сирĕн, хуть те мĕн тăвăр. Эпĕ сире валли ӳкертĕм. Киле илсе кайăр та... унта хăвăрăн ирĕкĕр.

— Юрĕ, — килĕшрĕ хĕрарăм. Тути каллех темле вăрттăн кулса илчĕ. Улталарăм терĕ пулас. Мана улталаса мĕн усси, ху ан улталан, акă мĕн.

Ман Мона Лиза тухса кайрĕ. Тав тумарĕ те. Кирлĕ те мар. Эпĕ чунăма мĕн кирлине пĕтĕмпех турăм. Эпĕ чăваш Джокондине шыраса турăм. Эпĕ халĕ чи телейлĕ, чи таса савăнăçлă çын.

Эпĕ стена çумĕнчи картина умне пытăм. Джоконда ман çине пасăрхи пекех вăрттăн пăхса кулса илчĕ. Пӳрнепе кăна сĕртĕнтĕм — чăн чăвашла кулса ячĕ. Ах турух! Ара, мĕн ку? Çурăмĕ хыçĕнчи тусем пач урăххисем мар-и вара? Чăн та, çак тусене эпĕ халь

тин, тин кӑна ӳкертӗм-ҫке! Джоконда та темле питӗ чӑвашла пӑхса ларать мар-и? Темле вӑтанса-вӑтанса пӑхать сан ҫине. Кӗпи витӗр сӑнасарах пӑхсан шап-шур ӳчӗ ҫутала-ҫутала илет. Ара, ку кунта тин кӑна кулкаласа ларакан Шупашкар матки-ҫке, нимӗнле матрона та, нимӗнле Мона та мар. Ку, ку... чӑваш Джоконди ку, акӑ мӗн!

## ЮНШӐХ

Автобус урапи ҫавӑрса пыракан ҫул пуҫа ҫавӑрттарсах ячӗ. Ҫав вӑхӑтра таҫтан никам илтми пӗр сасӑ, ҫав авӑртанах, тен, пӗтӗм тӗнчене ҫупӑрласа илеслӗн янӑраса кайрӗ. «Оля, Оленька! Ӑҫта эсӗ?» Алӑра Ҫерушӑн Ҫеҫпӗл ҫырнисен пуххи, куҫ умӗнче поэт хайланӑ «Юншӑх» калав. Унта Миклухапа Маша юратӑвӗ...

...Миклуха итлесшӗн те мар вӗсем шавланине, сӑмахӗсем те уншӑн нимӗне те пӗлтермеҫҫӗ. Тем пирки сӑмахлатчӗҫ вӗсем, темшӗн ахӑлтатса кулатчӗҫ — вӑл илтмӗше хыврӗ. Ҫур вӑхӑтне пула пӗтӗм ӳт-пӗвӗнче вӗресе ҫӗкленнӗ вӑй-хӑватне туйса вӑл пӗртен-пӗр хаваслӑ Машӑна ҫеҫ асӑрхарӗ...

...Тытмалла вылянӑ чух вӑл Машӑпа юнашар тӑчӗ. Ун аллине тытрӗ. Те Маша хытӑ пӑлханса чӑмӑртарӗ ӑна аллинчен, е ӑна ҫавӑн пек туйӑнчӗ кӑна-ши, е хӑех ҫатӑрларӗ-ши — чӗри ун ытарайми ҫурхи кӑмӑлпа киленчӗ, темле хӗрӳ шанчӑкпа хӗпӗртерӗ...

...Ҫеруш Теччӗне пырса кӗнӗ чухне вара ылтӑн кӗркуннеччӗ. Ҫӗлен ӑшши.. Вӑл та темле ҫав Ҫеҫпӗл туйса тӑнӑ ҫемҫе ҫанталӑка аса илтерчӗ. Шурӑ акаци ҫулҫисем симӗс-хӗрлӗ тӗспе ҫеҫке евӗрех ҫунатчӗҫ, кассӑн-кассӑн ҫил тухмассерен тек урӑх нихҫан вӗҫейми ҫаврӑнкаласа илетчӗҫ те ҫӗре ӗмӗрлӗхех ӳксе лӑпланса выртатчӗҫ. Унӑн та чӗри ытарайми ылтӑн кӗркуннепе хӗпӗртетчӗ, тем кӗтетчӗ...

...Уҫланка ытларах та ытларах чун кӗчӗ. Ҫамрӑксем шавлаҫҫӗ, чупаҫҫӗ, пӗр-пӗрне хуса ҫитсе тытаҫҫӗ. Машӑна та хӑваласа ҫитрӗҫ. Ҫамрӑк та вӑйлӑ Ваньӑсемпе Петьӑсем ярса тытрӗҫ те ӑна вӑйӑ картине кӗртсе ҫавӑрттарчӗҫ, ташлаттарчӗҫ. Маша кулчӗ, юрларӗ, куҫ хӗсе-хӗсе илчӗ, каччӑсене чуптурӗ...

...Ольӑна та ҫапла вӑйӑ картине туртса кӗртрӗҫ, унпа пӗрле ташлама пуҫларӗҫ. Ҫеруш вара хӑю ҫитерейменӗ. Вӑл мар, Валерисемпе Андрейсем ун тавра ҫаврӑнчӗҫ. Оля та вара юлмарӗ, авалхи Грецири юрату турри пек авкаланчӗ, ахӑлтатрӗ, куҫ хӗсрӗ.

...Ах, Турах! Чутах кăшкăрса яратчĕ автобус çинче ларса пыракан Çеруш. Иртнĕ тĕлпулусем куç умне çапла чуна ыраттармалла яр-уççăн сиксе тухни ăна пĕрре хăратса, тепре савăнтарса ячĕ. Пăлханнине никам та ан куртăр тесе-ши, пуçне каллех пĕкрĕ, куçĕ тем сăлтава пула вулама пуçланă калава тăрăнчĕ.

...Пĕр-пĕрне тытмалла вылянă чухне хĕрсем малта чупаççĕ. Каччăсем вĕсене хуса çитсе чуптăваççĕ, хĕстерсе чăмăртаççĕ, кăкăрĕсене йăвалаççĕ. Миклуха вăрман чăтлăхĕнче Сашашăрчăка тытрĕ. Тулли ўтлĕ, пиçĕ кĕлеткеллĕ сатур чиперккене хăй çумне хытă хĕстерчĕ.

...Çеруш та ташланăçемĕн Оля çумнерех куçса пычĕ. Акă халĕ ĕнтĕ вăл алă тăсса ярса илмелĕх çывăхра. Унăн шап-шурă та таса ўчĕ çаврăнмассерен илĕртўллĕн çутала-çутала илет. Кĕлетки йăрăс. Ташласса та вăл тата вырăс хĕрĕсем пек тăрслаттарса мар, чăваш пикийĕн ярăнса ташлать. Ку та килентерет. Çеруш аллине ун патнелле тăсать те ташă майăн Оля ун ытамнех кĕрсе ўкет...

— Кай кунтан! — тĕртсе ячĕ ăна Оля.

— Кай кунтан! — терĕ Саша.

— Ямастăп, — чарса тăчĕ ăна Миклуха, йăлтах хĕрсе çитнĕскер. Саша хыпсах илчĕ.

— Кай тенĕ кунтан, суратăп ак! Кай, упăте, — Миклухана вăл питренех сурчĕ...

«Кай кунтан. Кай кунтан», — янăраса кайрĕ пек пĕтĕм салон тăршшĕпе пĕр Çеруша кăна илтĕнекен сасă.

...Миклуха тăпах хытса тăчĕ. Ăна «упăте» терĕç иккен, пичĕкуçĕ илемсĕртен ĕнтĕ. Вăтаннипе юн пуçа пырса тиврĕ. Хăйĕн шатраллă чăваш пичĕ ытла та илемсĕр курăннине туйрĕ вăл, куçĕ те чапрас унăн, тути те чечче чирĕпе пăсăлнă. Çав сар хĕвел пек çиçсе çуталса тăран Саша умĕнче Миклуха хăйне шутсăр мĕскĕннĕн туйрĕ. Çапла вăтаннă кăмăлпах пăрăнса утрĕ ун çумĕнчен. Ытти яшсемпе вăл пĕр тан марри ăна калама çук кўрентерчĕ, чĕри те сурса ыратрĕ.

...Ташă картинчен епле тухса ўкнине Çеруш хăй те сисмерĕ. Мĕнле вăй тĕксе кăларса ячĕ ăна çак юрату вăййĕпе вĕресе тăракан пурнăç хуранĕнчен, нимĕн те ăнланмарĕ. Çынсем ух! тесе ташлакан ункă айккинче кăна тăна кĕчĕ. «Мĕн-ма тĕртсе ячĕ-ха вăл мана?» — чукмар пек темле йывăррăн çапса пырса кĕчĕ пуçа шухăш. Çапла вĕриленсе кайнă ўт-пĕвне сивĕткелесе пăхкаласа тăратчĕ вăл ун чухне. Кўреннĕ пекчĕ те, çынсем епле савăннине темле ютшăнарах пăхса тăратчĕ. Унччен те пулмарĕ, вăйă картинчен Оля вирхĕнсе тухрĕ. Пичĕ-куçĕ хăйĕн, ташланипе ĕнтĕ, тата хитреленсе кайнă. Карт! туртрĕ вăл каччăна хăй патне. «Мĕн пăхса тăратăн? Атя ташлатпăр», — терĕ пек тути. Те çавăн пекех

пулчĕ, те çук — пĕлмерĕ. Хĕр ытамне пĕр сăмахсăрах кĕрсе ӳкрĕ те ташша яра пачĕ.Çук, пĕрре те «Юншăх» калаври Сашашăрчăк пек тыткаламарĕ хăйне Оля. Ăнланчĕ пулас, çыпçăнсах ларчĕ. Халĕ ĕнтĕ Çеруша мĕн тумалла, паçăрхи пек тĕртсе ямалла-и? Çук, хĕр паçăр тунă пек тума пултараймарĕ, пачах урăхла, вăйлă арçын пек ăна хăй çумне пăчăртаса лартрĕ. Ку вара чăнах та ытлашши пулчĕ пулас. Оля ун çине чăрр! пăхса илчĕ те хальхинче, каччă хирĕç тăчĕ пулсан та, хăй çумĕнчен уйăрчĕ. «Намăс» терĕ пулас.

Çерушăн татах ташлас килетчĕ, вăй тупăнмарĕ. Вара вăл ушкăнран уйрăлчĕ те табак туртакансем патне пырса тăчĕ. Унта ун тантăшĕсем хĕрсех Çеçпĕл çинчен калаçаççĕ. Ара ĕнтĕ, чăн та, ун çулĕпе çӳреççĕ те-ха вĕсем, ун çинчен пулмасан урăх кам çинчен калаçăн. «Çеруш кăна тем ташласа урăх çулпа кĕрсе кайрĕ пулас», — хăй  çинчен темле иккĕмĕшле шутласа илчĕ каччă.

Пирус чĕртнисене пурне те Çеçпĕл вилĕмĕ кăсăклантарчĕ. Унăн çапла пӳкле вилĕмĕнче пире пурăнма паракан темле хăват пур пек. Хăй пурăнса çитерменнине пире парать-ши ĕнтĕ вăл е тата пач урăхла, калама хĕн. Анчах та паллă, пурте ун пек, ун пурнăçне малалла тăсса ĕçлеме ĕмĕтленеççĕ. Вăл туса çитермен ĕçсем пирĕн ĕçсем ĕнтĕ. Эпир те тумасан — кам тăвĕ вĕсене? Пуçра Çеçпĕл тума ĕмĕтленнĕ чăваш патшалăхĕ те, çарĕ те, укçи те... тимĕр касма пултаракан чĕлхи те. Питĕ пысăк лав тиенĕ çав вăл хăй çине. Чирлĕ пулнă тата... Юратăвĕ те... Хĕрарăм ачашлăхне туйса курманскер, çак тĕнчене епле çав таранччен чăтса пурăнма пĕлнĕ-ши? Чăтнă-чăтнă та — вара хуçăлнă та аннă. Пурнăçăн юлашки тумламĕ пек килсе тухнă пулнă ун умне ачаллă икĕ чăваш хĕрарăмĕ. Тăван çапла выçă çапкаланса çӳренине мĕнле куçпа лăпкăн пăхса тăрăн ĕнтĕ? Украинăра вара ăна пулăшма та пулман. «Çӳреççĕ кунта», — тенĕ. Çеçпĕл хăй çиес çăкăрне парать те чунĕ чăтайманнипе çакăнса вилет. Типшар вĕт-ха ку. Чăн-чăн типшар, çак тĕнчене хăй вилĕмĕпе те пулсан çĕнсе илме пултаракан пулăм. Епле вăйлă вăл вилĕм. Хыт кукар чунлă çынсене вăл хăй вилĕмĕпе те пулин тавăрать. Тавăрать вĕт-ха, чăн та тавăрать. Ăçта халь вĕсем, никама та хĕрхенме пĕлмен çынсем? Вĕсен йĕрри-палли те юлман, Çеçпĕл вара халĕ те чĕрĕ. Акă мĕнле чĕрĕлĕхе çаврăнса ӳкет ун вилĕмĕ. Вăл вĕт ахаль мар, вăл пире пурнăç парас тесе вилнĕ. Турă чунлă мар-и вара ун пек çын? Чӳклесе тенĕ пек ӳстерет чун чечекне...

Çавна ăнланакан çынсем те пулнă çав ахăрсаманаллă вăхăтра. Поэтпа юнашар ун тусĕ Федор Пакрышень, юратнă хĕрарăмĕ Нуся... Вăл та ĕнтĕ кăшт та пулин юратман-ши çав асаплă та черчен чĕрене?

...Тĕмсем хушшипе иртсе уçланка тухнă чух Миклуха Ма-

шăна курах кайрĕ. Маша хаваслăччĕ, чупса ĕшеннĕрен хашкаса сывлатчĕ. Миклуха хăйне мĕскĕннĕн туйрĕ. Машăпа калаçса вăл хăйĕн кăмăлне уçасшăн пулчĕ, мĕншĕн тесен Маша ăна кирек хăçан та ырă кăмăлпа, ăшă куçпа пăхнă.

— Маша, атя çак çулпа каяр. Манăн санпа сăмах каламалли пур.

— Кала эппин.

— Темле пуçлас ĕнтĕ, пĕлместĕп. Ялан сан çинчен шухăшлатăп. Вара шухăшларăм-шухăшларăм та пĕтĕмпех хăвна каласа парассăм килчĕ.

— Савни тăвасшăн мар пуль-çке, — кулса ячĕ Маша.

— Эпĕ сансăр пурăнма пултараймастăп тесшĕнччĕ...

— Чăнах-и. Ай, тупата, ĕнтĕ ăçта кайса кĕрес, — Маша пӳлĕне-пӳлĕне хытах кулма тытăнчĕ, унтан сиксе тăчĕ те тара пачĕ...

Автобусри Çерушăн та, çакă унпа чăн пулнă тейĕн, чунĕ Миклуханнипе пĕрле ыратса илчĕ. Ах, мурилесшĕ хĕрĕ...

...Асăрхарĕ-ха вăл, асăрхарĕ, тахçанах курчĕ кам çумне туртăннине çав Маша майлă Оля ятлă хĕр. Ун Андрей пур...

...Миклуха пусăрăннă кăмăлпа лăпсăркка çĕмĕрт айне ӳпне выртрĕ. Питне аллисемпе хупларĕ, шатра пичĕ пӳрнисене вутпа пĕçертнĕ пек çунтарсан, вăл шак хытса кайса, чĕлхесĕрленсе тертленчĕ.

— Тен, ку ниме те пĕлтермест. Ытла айванла пулса тухрĕ-çке. Тен, Маша шӳтлерĕ çеç. Саша та шӳт турĕ пулĕ. Ман сăнăмпитĕмпе мĕн ĕç пур кунта...

Миклуха çамрăксем патнелле кайрĕ. Вăл çитсе тăнине никам та асăрхамарĕ, пĕртен-пĕр Маша кăна куç айĕн пăхса илчĕ те куллине сӳнтерчĕ. Пурте савăнсах картла вылятчĕç, Миклухана та вăййа йышăнчĕç.

Маша выляса ярсан çамрăксем шавлăн кулкаласа ăна ушкăнри пĕр савнă çынна чуптума хистерĕç. Маша вылякансем умне тухса тăчĕ те сасартăк Миклуха енне ярса пусрĕ. Питçамартийĕ ун юн пĕрĕхтерес пек хĕрлĕ, сывлăхĕ чипер. Миклуха асăрхарĕ-ха вăл ăна куçран пăхнине. Чĕринче хĕвел çути хыпса илнĕн, çăлтăрсем çуталнăн туйăнчĕ ăна, пĕтĕм тымарĕ тăрăх юн хумлăн-хумлăн выляса кайрĕ. Вăл кĕтсе тăчĕ. Кĕçех ăна питĕнчен Машăн вĕри сывлăшĕ çапасса, тутине хĕрӳ ĕнчĕ çунтарасса кĕтрĕ. Миклуха куçне хупрĕ. Самантлăха вăхăт та чарăнса ларчĕ.

Юнашарах сăмахлани илтĕнчĕ:

— Пĕçертет-им?

— Сахăрпа-çке... — Унтан вăрахчен чуптурĕç.

Миклуха пуç çĕклесе пăхрĕ, Маша унпа юнашарах ларакан Ваньăна пĕшкĕнсе тепĕр хут чуптунине курчĕ...

...Çерушăн та çапла килсе тухрĕ. Пирус турткаланă хыççăн

вăл та ыттисемпе пĕрле вăйă выляма пӳлĕме кĕчĕ. Унта кĕленче çавăрмалла выляççĕ. Кĕленче пуçĕ кам çине пăхать, çавăн çавăракана чуптутарттармалла. Карта варринче ун чухне шăпах çав Ольăччĕ. Кăлтăрр çеç кусса çавrăнса кайрĕ кĕленче. Пуçĕ Çеруш çинех пăхнăн туйăнчĕ. Вăл та, Миклуха пек, Оля хăйне пырса чуптăвасса кĕтрĕ. Анчах мĕн ку? Юнашарах чаплаттарни, чунтан ихĕлтетсе кулни илтĕнчĕ. Оля-мĕн Андрее çунтарас пек пăхса тинкерет, çине-çинех чуптăвать...

Çук, чăтса тăраймарĕ çав намăса ун чухне çамрăк каччă. Тарăхса кайрĕ те Атăл хĕррине чупса тухрĕ. Каçхи лăпкă та ăшă шыв, никам хускатман шăплăх ун чунне кăштах та пулин çемçетрĕç пулас. Мĕнех терĕ вăл. Пулин. Ĕç кунта сăнра кăна мар. Чуптунисем те ниме те пĕлтермеççĕ. Юратăва вăл акă пачах урăхла, чуптăвашса мар, сăвă-юрă çырса тупĕ. Вăл, тен, хăй те Çеçпĕл пек пулĕ.

Çеруш ручкипе блокнотне туртса кăларчĕ. Тĕттĕмре шуррăн курăнан хут çине куçа палăрми йĕркесем хăйсемех тухса вырттрĕç.

Çеруш сăвва тепĕр хут вуласа тӳрлетсе тăмарĕ, «Ольăна» тесе çырса хучĕ те, темле питĕ усал çынна çĕнтернĕ евĕр, пуçне çĕклесе вăйă ахăрнă тĕлелле утса кайрĕ. Залра хĕрсех вальс ташлаççĕ-мĕн. Каччă хăйса-хăйса çитрĕ те Ольăна та ташлама чĕнчĕ. Килĕшрĕ хĕр. Урине вара хăй аран-аран шутаркаласа пычĕ. Çук, кунта ташлама пĕлменни те мар, кунта пачах урăххи пулчĕ. Çырăва мĕнле те пулин хăйса алран тыттарасси асаплантарчĕ Çеруша. Çавăнпа та вăл вальс вĕçленнине те астуса юлаймарĕ. Çырăвне вара пурпĕрех пачĕ... Çеçпĕл пек пачĕ.

...Ытарайми чипер Маруçа, хăвна чун варĕпе вилес пек юратса пăхнă чух, таçта пĕр тĕттĕм кĕтесре чун хăвачĕпе асап-тĕсеп куракан никама та кирлĕ мар илемсĕр чĕрчун сана савса юратнипе нимле тӳсейми нуша курать. Сана вăл хăйĕн вĕçĕ-вĕçĕмсĕр, — автобус сиктернипе ниепле те йĕркеллĕ вуласа илме май килмерĕ саспаллисене, — ĕмĕтĕнче, янкăр тӳпери пин те пин çăлтăрсем хушшинче куçа шартса яракан ахах-мерченлĕ патша пуканĕнчи пек, ху тĕлне çитнĕ илемĕн ĕмĕрхи мухтавлă кĕввипе çунат хывнă хăватна ăшне хыптарса курать, сан çиçсе тăракан илемӳ умĕнче вăл, кĕл-тусанпа витĕннĕ пек телейсĕр çын, сана хисепе хурса пуç таять. «Самантлăха та пулин санăн питне сĕртĕнес килет, сан тутуна чуптуса киленĕттĕм. Çавăншăн эпĕ сана, Маруçа, пĕтĕм кун-çулăма пехилленĕ пулăттăм...»

Кăштах тăрсан вăл мĕн çырнине каялла тавăрса пачĕç.

...Çӳлте Ваня аллипе: «Пит-куç ĕренки çук», — тесе çырса хунă...

Çапла вак-тĕвекпе хаклани кирлĕччĕ-и Миклухана. Анчах çав сăмах ун пĕтĕм шанчăкне çапса хуçрĕ. Чунĕ çуннине чăтай-

масăр вăтанса, айван шăпине пула мĕскĕнленсе вăл клубран тухса кайрĕ.

Куҫне ҫыхса тенĕ пек утрĕ вăл...

Куҫне ҫыхса тенĕ пек ларса пычĕ автобус ҫинче Ҫеруш.

...Оля та вăл мĕн ҫырнине уҫса вуларĕ те Андрее тыттарчĕ вĕт. Ăҫта мĕн тума тухса кайнине вăл ҫавăн хыҫҫăн пĕрре те астумарĕ. Астума та кирлĕ мар. Анчах мĕн-ма-ха автобус шавĕ витĕр таҫтан аякран пĕр вĕҫĕмсĕр такам ăшран питĕ шăппăн каланă сăмахсем чуна шăтарсах тухаҫҫĕ. «Оля, Оленька. Ăҫта эсĕ?» — чĕнет пек такам.

## ТУХАТМĂШ

Людмила хăйне тухатмăш тесех шутлатчĕ. Кампа тĕл пулнă, кама куҫ хывнă — пурте ун аллине кайăксем пекех ҫакланнă. Ку таранччен. Ку арҫын вара темле кайăк пек те мар, темле йăпăлкка пулнă пек, ҫук, темле халь-халь ирĕлсе ҫухалса каяс фантом-тĕлленчĕк пек курăнса кайрĕ. Ниепле те ярса илме май килмерĕ ăна. Чăн малтан библиотекăра апат ҫиме ларсанах хăй ҫине пăхтарас терĕ, канфет та хурса пачĕ чей ĕҫме, хăнк та тумарĕ, асăрхамарĕ те лешĕ. Хăй те вăл ҫын асăрхиасăрхами ларчĕ. Ытлашши пит калаҫмарĕ. Ҫав арҫын пек пулас терĕ пуль. Ҫавăнпах-тăр лешĕ те ăна куҫа-куҫăн ларнă пулсан та курмарĕ. Пĕр сăмах хушинччĕ хуть. Апатне те чиперех ҫирĕ, чейне те ĕҫрĕ — сăмахне вара каламарĕ. Калакансем те пулмарĕҫ мар. Пĕрин хыҫҫăн тепри сиксе тăраҫҫĕ те пурте пĕлекен сăмахне нихҫан каламан пек туса ҫавăркаласа каласа хураҫҫĕ. Никам туйса курман юратăвĕ те вара унта, никама та кирлĕ мар туслăхĕ те — янăрать кăна ҫав тем тĕрлĕ сăмах хăлхара. Ниепле те хăпса тарса тухаймастăн унран. Тата вĕт ун ку ушкăна хула тăрăх кăна мар, ялсем тăрăх та илсе ҫӳремелле пулать. Ах, йывăр та килет ĕнтĕ ăна. Хăйĕн ҫинчен ҫапла виҫҫĕмĕшле курса шутласа илчĕ Людмила. Пĕрре те ҫӳрес килместчĕ ун ку ушкăнпа. Килте те ĕҫсем пурччĕ. Тата хăйĕн кив юратăвĕпе те татăлса пĕтмен-ха вăл. Вăл та чĕрене шăрпăкласах тăрать. Пурте йĕркеллĕ чухнех вĕт ун савнипе уйрăлсах каймалла килсе тухрĕ. Леш тем пек ыйтсан та хăй ĕҫне пăрахмарĕ. Кашни кун уншăн пăшăрханса ҫӳресе вăл ĕнтĕ калама ҫук ывăннăччĕ. Ăҫтан ĕнтĕ унта лăпкăн пурăнăн?.. Вăл вĕт вилĕмпе кашни кун тенĕ пек тĕл пулать те, вара Людмилăн унпа пĕрле тенĕ пек ҫӳресе пăшăрханса тăрас пулать. Камăн чĕри чăттăр. Питĕ юратать пулсан та Людмила ăна, ҫав харсăр та хитре арҫынна, яланлăхах пăрахас терĕ. Куҫ

ан куртăр терĕ. Халĕ ĕнтĕ ун хăйĕн тухатмăшлăхне ак çак тепĕр арçын çинче тĕрĕслесе пăхас килчĕ. Хитришĕн те мар, ку арçын вăл малтанхипе танлаштарсан куçа курăнмалăх та çук. Кăна Людмила пĕрре пăхсах ăнланса илчĕ. Ĕç унта мар. Вăл хăйĕн чун хăвачĕ пирки иккĕлене пуçларĕ. Çĕнтереймерĕ вĕт вăл хăйĕн савнине, тем пек тăрăшсан та пăраймарĕ ун пурнăçне, урăх çулпа яраймарĕ. Апла вăл ахаль çынран та вăйсăртарах пек курăнмĕи? Ак çак ăçтиçука та çĕнтереймесен вара, чăн та, çавăн пек пулĕ те. Çапла шутларĕ хăйне тухатмăш тесе хаклакан хĕрарăм. Çапла шутласа çумарах пулма тăрăшрĕ те çав шурăрах плащ тăхăнса янă арçынпа. Пуçĕнче ун симĕсрех шĕлепкеччĕ пулас... Çав хăй паллашма тăрăшнă арçын мĕн тăхăнни пирки иккĕленни те тĕлĕнтерсе ячĕ-ха Людмилăна. Кун пекки пулманччĕ. «Темле вăл сăнсăр, çав арçын, чăн та, — каллех тĕлĕнсе кайрĕ вăл. — Те пур вăл, те çук...» Çапла шутласа илчĕ çех, таçта шалта тем хускалса илчĕ. Ун каллех хăйĕн ĕçне тăвас килчĕ. Вăл тухатмăш вĕт. Ун çак арçынна та ыттисене парăнтарнă пекех парăнтарас пулать! И никаких! Шутласса шутларĕ те-ха, анчах ниепле те майне тупаймарĕ. Майне терĕр-ха, патне те пыраймарĕ. Лешĕ, тем пек тăрăшсан та, виле тейĕн, ним чухлĕ те хускалмарĕ. Мĕн ыйтнине хуравламарĕ, хăй те нимĕн те хушса каламарĕ. Каламалли нумайччĕ вара. Кун пекки ку библиотекăра, Людмила чылай ĕçлет пулсан та, ку таранччен пулман-ха. Кусем хăйсен кĕнекисене илсе килнĕ. Ахаллисене мар, хăйсен чĕлхипе çырнăскерсене. Людмила кĕтсе илнĕ йыш чăваш ушкăнĕ пулчĕ. Ун хулинче те, тавра ларакан ялсенче те чылайăн пурăнаççĕ вĕсем. Вăт çавсем патне илсе çитермелле пулать те ĕнтĕ ун çак чăвашла çырнă кĕнекесене. Пит ним тума та кирлĕ мар-ха ĕнтĕ вăл Людмилăпа ун юлташĕсене. Анчах вăт, халь пăх-ха, ним тума та çук, çав ушкăн хыççăн пырса чăвашланса каймах тивет. Чăваш проблеми кăна тет-и-ха, хулара вĕсемсĕр пуçне çĕр çирĕм ытла тĕрлĕ халăх çынни пурăнать. Пуринпе те ĕнтĕ ăçта ĕçлесе ĕлкĕрĕн. Кусемпе вăт вара ĕçлемех тивет. Темле питĕ хастар та кăмăллă кусем. Хирĕç тума нимле сăлтав та тупăнмарĕ. Ку та тарăхтарать. Пĕр-пĕр килĕшмен япала сиксе тухтăрччĕ те, вара мĕн, вара тарса кайма та пулать. Çук вĕт. Ак ку та темпе ĕнтĕ интереслентерсе ячĕ, калама та хĕн. Пит-куçне те пулин аса илесчĕ тесе тăрăшса пăхрĕ хĕрарăм, çук, ку та пулмарĕ. Вара çилленсех кайрĕ. «Ак, — шутларĕ вăл, — тепĕр кунне тĕл пулнă чух эп ун çине тек пăхмăп та. Мĕн унсăр пуçне урăх çын çуккă-им. Ак тепри, Валери ятлăскер, пăхма мĕне тăрать. Арçын тăк арçын. Сăмахне те хĕрсе кайсах калать, сăввине те чăн-чăн поэт пекех вулать. Хĕртсех ярать, таçтан пĕр кĕтмен çĕртен хăй тĕллĕнех юрату туйăмĕ тапса тухать. Юратасчĕ те, çук çав, çав мурилесшĕ çине пăхса илетĕн те, пур юратас-тăвас туйăм таçта мур

шăтăкне кайса пĕтет. Ларать вара пăхса! Юпа тесен юпа мар, чĕрĕ тесен, чĕрĕ те мар. Анчах тем шутласан та, унра тем пурри сисĕнет, темле ăшă çапать çав чунсăр пек курăнакан çынран. Ниçта та хутшăнмасть хăй, çапах та сасси пĕрех илтĕнет. Тен, ку арçын вăл хăй те тухатмăш?» Тем те шутларĕ ĕнтĕ аптраса ӳкнĕ хĕрарăм. Юратнă çынни пур çĕртех ирĕксĕрех тепĕр арçын çине шутласа кĕрсе кайрĕ те ниепле те каялла хăй савни патне çаврăнса тухаймасть халь. Пĕлес килни пĕтерет мар-и. Кирлĕччĕ-ши ĕнтĕ ăна çак ушкăнпа пĕрле çӳрени, кирлĕ марччĕ-ши — хăй те пĕлмест вăл. Арçынни пирки те аллине сулмаллаччĕ те, çук вĕт. Пулă пек вăл пĕр çаклансан, хăй пулă пулнине ăнланмарĕ-ха вăл — пулă вăл питĕ çатăлтатать. Вăт çавăн пек çатăлтатрĕ Людмила кăшт ӳсĕрĕлсе кайнă, ташлакан, юрлакан ушкăнра. Юрамастчĕ те ĕнтĕ ун пек пулма, ун пек çын та мар вăл. Вăл ытларах хăйне юратнине юратать. Кунта вара ак темшĕн пачах урăхла килсе тухса пырать. Чунĕ ун çав пĕр палламан арçын патнех туртăнать. Мĕнле те пулин унпа паллашас та ун пурнăçне пĕлсе хăйĕнне ун çумне хушса хурас килет. Ухмах темерĕн. Ухмах та мар-ха вăл. Пурнăçĕ хăй çапла килсе тухрĕ. Çав анчах. Унпа та усă курма пĕлес пулать вĕт. Юратсан та аванччĕ! Мĕн вара, чăваш та çынах пуль? Ăстăнĕ-пуçĕпе, хăйне урăхла тыткаланипе, куçа пачах та курăнма пĕлменнипе вăл татах та хытăрах тыткăнлать. Темле урăх тĕнчерен килнĕ пекех туйăнать. Çапла ĕнтĕ пĕр шутласан. Çав тĕнчене пĕрре кĕрсе курасчĕ те...

Тепĕр кунне вĕсем аякри яла кайма тухрĕç. Унта, чăваш йышлă пурăнакан çĕрте, вĕсен çав кĕнекесене халăх хушшинче сармалла. Чăваш кĕнекипе ĕçлеме пĕлмен библиотекарьсене ăнлантарса парас пулать. Çыннисем те, унта пурăнакансем, ку тарана çитиччен хăйсен кĕнекисене алла тытса курманскерсем, тĕлĕнтерсех ячĕç. Çак ушкăн пырса çитсенех клуба пырса тулчĕç. Нихçан калаçманнине калаçаççĕ, юрлаççĕ, ташлаççĕ. Çын çапла пĕр пытанса пурăнсан-пурăнсан хăй пытарăнчăклăхне сирсе ывăтса ярса ун пек, кун пек хастар пулма пултарать тесе шутламан та вăл. Интереслĕ иккен. Пытарăнса пĕтсе çитнĕ çынсем чунне тин тупнă та ăна тем тĕрлĕ май çавăркаласа пăхса савăнаççĕ. Тетте тейĕн. Хайхи çав арçын та пăхкаласа ларчĕ-ларчĕ те халăх умне сиксе тухрĕ. Тем çинчен, чăваш кунта тахçанах пурăнма пуçлани çинчен калаçма пуçларĕ. Тахçан пĕр çур пин çул каярах та килме пултарнă-мĕн вăл çак вырăнсене. Ялта музейре пулнă чух вăл-мĕн ĕлĕкхи карттăна курнă, унта-мĕн ăçта пăхнă çавăнта чăвашла янăракан ял ячĕсемпе юханшыв-кӳлĕсем. Çавă ăна тĕлĕнтерсех янă. Çавăн çинчен каласа парать. Сирĕн апла, кунта куçса килнĕ чăвашсен, кунта килти пекех пурăнмалла тет. Лешсем кунта пытарăнарах пурăннине таçтан асăрханă та ĕнтĕ, вĕсене ура çине тăма пулăшас тет. Эсир тăван çĕр çинчех

пурӑнатӑр, эсир ют мар тет. Чӑн та ӗнтӗ, пӗр пурӑнма пуҫланӑ пулсан ма килти пекех пурӑнмалла мар тет-ха. Людмила ку ҫӗре хӑй те пачах урӑх ҫӗртен куҫса килнӗ те ун пек сӑмахсене питӗ лайӑх ӑнланать. Кунта пытанса асапланса пурӑнакан чӑвашсенчен вӑл ӑна маларах та ӑнланса илнӗ. Вӑл хӑй те темле урӑх юнлӑ ҫын. Такам каланӑ тӑрӑх, унра поляк юнӗ те пур-мӗн. Пӗр шутласа кайсан Потоцки графпа та пӗртӑван килсе тухать. Чӑн та пур пуль. Тӗкӗр ҫине пӑхкаласа тӑрсан вӑл хӑйӗнче темле ҫав анӑҫри ҫын сӑнне курать. Куҫӗ чакӑр, ҫӳҫӗ вара хура. Ку тем тесен те вара вӑл хӗвелтухӑҫ ҫынни пулнинех пӗлтерет. Эй, йӑлт пӑтрашӑнса пӗтнӗ мар-и ҫак тӗнчере, тем мурӗ те пур пуль. Тен, вӑл хӑй те чӑваш, кам пӗлет. Ҫавӑнпа мар-и вӑл ҫакӑнта ҫӳрет. Чӑваш юрри-ташшине, сӑмахне пуҫласа илтет пулин те темле питӗ савӑнать. Вӑрттӑн темле, халлӗхе йышӑнмасӑртарах тенӗ пек. Килӗшессе килӗшет те, анчах халлӗхе пӗрех ют. Арҫын та ют...

«Мӗнле хӗрарӑм пулчӗ ку? — шутларӗ ҫав вӑхӑтра Минкка. — Пӗрмай мӑнкӑмӑлланса, хӑйне кӑтартасшӑн ҫеҫ ҫунса ҫӳрет. Пурте ӑна куҫран пӑхса тӑмалла тет. Куҫӗ вара хӑйӗн сиввӗнсиввӗн пӑхать. Шалта пӗр ӑшӑ хӗлхем те ялтӑрса илмест. Ӳчӗ вара, чӑн та, кӑпӑшка. Ал-урисем те тытса пӑхмалӑх пур. Ӑратлӑ хӗрарӑм, пӗр сӑмахпа каласан». Ун пеккисемпе ҫыхланса курман Минкка, ҫавӑнпа та ун ҫине ку ман пулас ҫук тесе ҫаврӑнса та пӑхмарӗ. Хӗрарӑм хӑйӗн тавра епле явкаланса ҫӳренине асӑрхасса асӑрхарӗ-ха вӑл, анчах ку чуна пӗрре те пырса тивмерӗ. Ют ҫын. Хӗрарӑм шухӑшӗ пулмарӗ-ха ун чух. Ӑстӑна пачах урӑххи — ҫак вырӑна чӑваш епле пырса лекни, хӑҫантанпа ҫакӑнта асапланса пурӑнни тыткӑнларӗ. Шухӑшламалли чӑнласах та пит нумай иккен. Ҫӗпӗре ҫӗнсе илекен Ермак казакпа пӗрле ҫичҫӗр чӑваш пулнӑ тет. Ермакӗ, сӑнӳкерчӗкне пӑхсан, хӑй те каснӑ лартнӑ чӑваш. Темшӗн ӑна тата вӗлерессе те Иртыш хӗрринчи Чӑваш сӑмсахӗ патӗнче вӗлернӗ тет. Мӗнле сӑлтава пула Ермакпа пӗрле пынӑ-ха ман несӗлсем. Тен, вӗсем хӑйсен тӑван ҫӗршывне тутар пусмӑрӗнчен хӑтарас тенӗ? Тахҫан авал, тен, гунсен вӑхӑтӗнчех Ҫӗпӗр тени чӑваш тенипе пӗр килнӗ. Карттӑ ҫине пӑхсан, чӑн та, унта та кунта чӑвашла вуланакан ял ячӗсем, юханшывсемпе кӳлӗсем. Пӗр ҫӗрте вара, Крысовӑпа Рысевка хушшинче, Булгар ятлӑ вырӑн та пур. Мӗне пӗлтерет ку? Ку мӗне пӗлтернине пӗлес тесен кунта тӗпчев ӗҫӗсене туса иртермелле пулать. Ҫӗпӗр чӑвашшӑн ют мар, ку паллӑ. Ҫавӑн ҫинчен калама тӑрӑшрӗ те вӑл Ҫӗпӗре килсе вырнаҫнӑ, тӗл пулнӑ пӗр чӑваша. Хӑй чӑваш пулнине те пытарма кирлӗ мар. Ку таранччен никам та ан куртӑрччӗ тесе пурӑнакан халӑхӑн хӑйӗн сассине памах тивет пуль. Халь вӑрттӑн ҫеҫ, мана ҫитет тесе ӗҫлесе пурӑнни ҫителӗксӗр. Вӑн мӗнле ҫӗмӗрттереҫҫӗ халь вырӑссем-

пе ытти халăхсем. Пĕтĕм халăх пурлăхне хăйсен аллине туртса илеççĕ. Чăваш каллех пăхса ларса юлать. Çапла ан пултăрччĕ. Çапла ан пултăрччĕ тесе çӳрерĕ ку ушкăнпа Минкка. Хăйсене пуçласа чăваш тесе калама хăйнă çынсене тĕрек пултăр терĕ. Юрри-ташши те çав шухăша çирĕплетме пулăшрĕ пуль, кашни каçах концерт-мĕн хыççăн чăвашсем клубра саркаланса ташларĕç, пĕр-пĕринчен уйăрăлайми калаçрĕç, авалхи юррисене аса илсе юрларĕç. Пур çĕрте те чăваш юн вăйĕ тапса тăчĕ. Çакă ушкăнпа пĕрле çӳрекен майрана та тĕлĕнтерчĕ пулас. Çав юрăсене, тухса калакă сăвăсене вăл та çăвар карсах итлерĕ. Чунĕ кăшт та пулин çемçелчĕ-ши, çынсемпе ăшшăнрах калаçма пуçларĕ. Пĕринче çапла Минкка çумнерех пырса ларчĕ те хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа пама пуçларĕ. Кам кама куç пăврĕ кунта — калама хĕн. Пĕр-пĕрне тесен, тĕрĕсрех пуль...

Автобус çинче пулса иртрĕ ку калаçу. Çул инçе те, кăмăлсем тулли те — мĕнле чăтса тăрăн пĕр-пĕринпе калаçмасăр. Ку хăй тĕллĕнех килсе тухрĕ. Людмилăн хĕрача чухнех-мĕн юрату ăнăçсăр килсе тухнă. Хăй питĕ юратнă каччă ăна юратман, юратам пекки тунă та пăрахнă. Чылай вăхăт хушши асапланса пурăннă хыççăн вăл вара тек никама та юратмастăп тесе хăйне хăй сăмах панă. Çавăнтан пуçласа вăл, чăн та, никама та юратса курман. Хăйне юратма, паллах, чарман. Ун пек юратма пĕлекенни ун телейне тупăннă, качча илнĕ. Халь те пит юратать...

Кун пек калаçу ахаль иртмест ĕнтĕ вăл. Çын хăйĕн чи вăрттăн шухăшне нихçан та ахальтен каласа памасть. Вăл та мĕн те пулин çавăн пеккине кĕтет. Тата халь вĕсем çума-çумăн ларнă та пĕр-пĕрин сывлăшĕпе тенĕ пек сывласа пыраççĕ. Каçхи шăплăхра пĕрле пулма та, калаçма та вĕсене халь никам та кансĕрлемест. Автобус пĕр тикĕссĕн шавлани вара пулăшать кăна. Хĕрарăмăн таса сывлăшĕ, пылак та кăшт йывăртараххăн туйăнакан ӳт шăрши Минккан пуçне паçăрах çавăрса ячĕ пулмалла. Вăл та çав ӳт çумнерех тĕршĕнчĕ те хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа пама пуçларĕ. Ун пек ăнăçсăр юрату ĕнтĕ камăн пурнăçĕнче кăна пулман пуль, Минккан та пулнă. Анчах ку пăтăрмах ун чĕрине пĕрре те сивĕтсе хăварман. Юратас кăмăл ун ĕлĕкхинчен те вăйлăрах. Анчах те юрать ĕнтĕ ун пек тума, çын пурнăçне хăвăн юратăвупа пырса кĕме? Пырса кĕме пулĕ-ха, анчах унта вĕт йăлт çĕмĕрсе хăварма та пулать. Çав шухăшлаттарать. Çыннăн хăй тĕллĕн, никама кансĕрлемесĕр-тумасăр пурăнмалла. Çапла шутлать Минкка.

— Мĕнле-ха апла пĕр хутшăнмасăр-тумасăр, кансĕрлемесĕр... Асăрхарăм-ха эпĕ ăна, эсир ниçтах та хутшăнса кайманнине, — ăнкарам пекки турĕ Людмила. — Питĕ хупă чунлă эсир, чăнах та.

— Çук, эпĕ хупă чунлă мар, эпĕ хура шăтăк. Пачах çук тесен те юрать. Ман урăх принцип. Эп çын умне пачах та курăнасшăн мар.

— Мĕнле-ха апла?

— Ку питĕ ансат. Пĕр-пĕр япала турăн пулсан, çав япала çинчен тек пĕр сăмах та ан кала. Сан çинчен никам та ан пĕлтĕр. Мĕн чухлĕ нумайрах ĕçлетĕн, çавăн чухлĕ пытанарах парас пулать. Кăна эп турăм, эп турăм тесе кăшкăрашса çӳремелле мар. Ĕçе сăпайлă та кăмăллă тăвасчĕ, хальхи пек пайласа та чап шыраса мар, пĕр сассăр, куçа курăнмасăр.

— Эп, каçарăр та, нимĕн те ăнланмастăп, — пĕр кӳренмесĕр ыйтрĕ хĕрарăм.

— Ну, мĕнле каласа ăнлантарса памалла-ши ку шухăша. Акă, калăпăр, эсир сăвă çырнă. Сăвва вулакан чăн малтан шурă хут çине çырса хунă сăмахсене, предложенисене курать, вулать, ăнланать, урăх тĕнчене кĕрсе ӳкет. Вăт çав урăх тĕнчене кĕрсе ӳксен вăл хут çинчи сăмахсене те, хутне те асăрхами пулать. Вăл пачах урăх тĕнчере, çав сăвă ӳкерсе панă тĕнчере, çӳреме тытăнать. Сăвви вара, материалĕ, çухалать. Материал пулмалла мар. Малтан пулнă пулсан та, кайран вара вăл çухалмалла.

— Сывлăш кăна тăрса юлать-и вара?

— Питĕ тĕрĕс каларăр. Сывлăшĕ кăна. Вăт çавăн чухне кăна вара çынсем пĕр-пĕринпе ытарлăн калаçса пурăнма пуçлĕç тетĕп. Вĕсен ĕнтĕ тин ним пайламалли те юлмасть.

Шухăша путнă хĕрарăм чĕнмерĕ. Хăй те, çак юнашар ларса пыракан арçын та, чăн та, çак çывăрса кайнă автобус евĕр, çук пекех туйăнса кайрĕç, пĕр сывлăш кăна. Вăл та пулин арçын сывлани... Хăй вăл курăнмасть те. Мĕлтлетсе юлакан çутă çинче самантлăха, кинори пек кăна, курăна-курăна каять тепĕр чух темле уйăрса илме май çук сăн-пичĕ. Темле пит тимлесе пăхсан та, чăн та, ниепле те уйăрса палăртса кăлараймасть ăна Людмила ытти çынсем хушшинчен. Тухатмăш тет хăйне тата. Çук çынна мĕнле тухатан? Пĕтĕм вăйне пухрĕ хĕрарăм. Ун çакăнтах, паянах çак арçынпа пĕрле пулас килчĕ. Тен, киле ăсатса ярĕ? Хăй те сисмерĕ — аллине ун алли çине хучĕ. Хирĕç чăмăртанине туйса илсен хĕпĕртесех кайрĕ. Ăшă килсе çапрĕ. Ку арçын çук мар-мĕн. Пур. Еплешшĕ пур! Акă ун алли ун алли çинчен шуса анчĕ те пӳрнисемпе пĕç тĕпне лексе кăтăклантарма пуçларĕ. Тĕлĕнмелле пылак туйăм хĕрарăм ăстăнне хупăрласах хучĕ. Те питĕ асăрханиуллăн, кăштăн çеç сĕртĕннипе хирĕç тăма вăй тупаймарĕ. Çав пылак туйăма йăлтах парăнчĕ. Арçынĕ хăй çук пулсан та, алли пур терĕ. Ун ăна çук çĕртенех пур тăвас килчĕ. Вара ун çумне вăл пăчăртанса çыпçăнсах ларнă пулĕччĕ.

— Мĕншĕн-ха эс тухса калаçнă чухне те ним чухлĕ те чунна уçмастăн. Сассуна пĕр хăпартмасăр, пĕр пăлханмасăр каласа паратăн вĕт. Чăваш халăх историйĕ çинчен ак сăмах пуçартăн та...

— Ма пит кăшкăрашса калаçмалла тет вара, историпе ап-

паланнă чухне пуринчен ытла асăрхануллă пулмалла. Ним те мар кӳрентерме пулать. Ун пек чухне туйăмсене ирĕке яма ним чухлĕ те юрамасть.

— Çапах та эс тепĕр чух урăхларах кала-ха, юрать-и?

Арçын чĕнмерĕ. Те юрать ĕнтĕ, те юрамасть... сцена çине халăх умне тухса калаçас кăмăл та ун çукрах та, те юрать ĕнтĕ. Мĕн тесе вара ун пакăлтатнине такамăн хăйĕн вăхăтне пĕтерсе итлесе лармалла тет. Ун пек ăс парса çӳреме ун нимĕнле тивĕç те çук тепĕр тесен. Те калаçмалла, те калаçмалла мар вара, çавăн пек шутласа кайсан калаçмалла та мар пек. Питĕ кирлĕ чухне анчах, питĕ вăхăтлă чухне кăна...

Тепĕр кунне каçхине, чăнах та, тем пулчĕ Минккана, вăл халăх умне тухрĕ, питĕ хĕрӳллĕ калаçрĕ. Те çав хĕрарăм ыйтни, те тăвансем пит ăшшăн пăхса ларни пулăшрĕ ăна çапла уçăлса кайма — пĕлмерĕ. Тен, урăххи, темле тухатни? Концерт пуçлансанах артистсем ларакан пӳлĕме пĕр шурă лĕпĕш вĕçсе кĕчĕ. Пĕрин çине пырса ларать, теприн çине... Залра чăваш кĕвви янăрать, ку вара çав кĕвĕ май вĕçкелет. Чăтаймарĕ Минкка, алла кăранташ илчĕ те сăвă çырма пуçларĕ. Хăй тĕллĕнех тухрĕ сăвви те. Çав клубри сывлăшранах.

Кам чунĕ вĕçсе çӳрет-ши
Каçхи шурă лĕпĕш пулса?
Çав лĕпĕш те вĕт итлесшĕн
Чăваш калакан купăса.

Хăй тĕлллĕнех тухса выртрĕç шурă хут çине пĕрремĕш сăмахсем.

Кĕвви ун чуна çĕклентерчĕ,
Янрарĕ таçти вăрманта.
А, тен, çеçенхир çеçкеленчĕ
Чăваш юрласан çакăнта?

Юлашки йĕркесене вăл сцена çине тухса тенĕ пек йĕркелесе çитерчĕ.

Тен, эп те çав лĕпĕш майлă
Çӳретĕп çав купăс тавра?
Хама та туятăп хаваслă,
Юрлатăп пĕрле çав юрра!

Калатăп çакна суясăр...
Пурнатăп пек эп лĕпĕшре.
Тен, эпĕ кунтан кайсассăн
Юлатăп çак çут вĕçевре!

Ercalaрĕ кăна юлашки йĕркене — халăх ăнланчĕ, кĕрр алă çупса ячĕ. Мĕн çинчен калаçрĕ, Минкка астумарĕ. Питĕ хĕрӳллĕн,

тем питĕ ăслă калас пек тыткаларĕ хăйне. Залра ларакан çынсем те çав калаçăва хутшăнчĕç. Апла çынна кирлĕ япалах каланă вăл, çавна кăна ăнланчĕ сцена çинчен тухса кайнă чух. Хальхинче хăйне намăс туймарĕ. Кирлĕ сăмахах каларĕ пуль çав, чăн та. Тен, ĕç унта та мар пулĕ, калама хĕн. Тен, вăл ăса мĕн килнĕ, çавна кăна каларĕ? Тен, çав килĕшрĕ? Кирек мĕнле пулнă пултăр, пĕрех çавăн хыççăн Минкка хăйне темле урăхла туйма пуçларĕ. Людмила куçне те пач урăхла курăнчĕ. «Ак эп ăна, — шутларĕ вăл, майлаштаратăп вĕт. Нумай та вăхăт иртмĕ, эп ун умне лĕпĕш пулса кăна мар, асамлă юмахри вутăш пулса тухса выртăп та, вăл вара хăй кам пулнине йăлт туса кăтартĕ. Халлĕхе вăл темле пĕрре те ӳкерме пĕлмен фотографăн сăнӳкерчĕкĕ пек шупкан кăна, палăри-палăрми кăна курăнса илчĕ-ха. Эп ăна çак пурнăç пăтранăвĕнчен куçа яр-уççăн курăнмалла туртса кăларăп ним те мар!»

Çапла ĕмĕтленчĕ Людмила. Анчах ĕмĕтленни пĕрре вăл, тепре ĕçне те тумалла-çке-ха. Ĕçĕ вара ăнсах пымарĕ. Тепринче вĕсен пачах уйрăм çӳремелле пулчĕ. Пĕр талăк анчах иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Вăл та çителĕклĕ-мĕн, арçын каллех çухалнă. Пăхмасть те, курмасть те, çума та пырса лармасть... Пачах урăх çĕрте, пачах урăх çынсемпе калаçать. Людмилăна асăрхамасть те. Ку, паллах, ăна питĕ тарăхтарса ячĕ. Тепринче унпа ачашрах, тимлĕрех пулма пулчĕ. Тĕл пуласси кăна юлчĕ. Анчах тем пек пĕрле ларса киленес килсен те хăй пыма пултараймарĕ. Леш вара ют хĕрарăмсемпе якăлтатрĕ, вĕсем патĕнчен кайма пĕлмерĕ, ун патне пымарĕ. Пымастчĕ те пулĕ, каçхине каллех çапла концерт парса тухсан Людмила чăтаймарĕ, хăй çумне вырăн пачĕ. Паман пулсан, паллах, вăл каллех ĕнерхи пекех ун çумĕнчен ним пулман пекех иртсе каятчĕ. «Кайăка ăна тытма пĕлес пулать, — шутларĕ тухатмăшлански пыракан хĕрарăм арçын хăй çумне вырнаçса ларнăçем. — Час эпĕ ăна, автобус тапранса кайтăр-ха...»

Кирлĕ чухне таçтан та тем те тупăнать. Кĕсье тĕпне таçтан юлнă пĕр-икĕ канфет тупăнчĕ, ăна чăмлакаласа ларнă вăхăтра ун-кун калаçкаларĕç, анчах унран ытла ним тума та пĕлмерĕç. Минкки те ĕнтĕ кун каçа тенĕ пек кайăкланса кайнă, вăтаннă пек пулать, хăй те хăюлланаймасть. Ютă-ха вĕсем, ютă... Пĕри питĕ мăн кăмăллă, хăйне кăна пăхтарасшăн, тепри вара пачах курăнасшăн мар. Çук пулса çӳресшĕн. Пачах расна, пачах уйрăм çынсем... Çак тĕнчере вĕсем çапла мĕнле тĕл пулма пултарни ку вăл хăй пысăк вăрттăнлăх. Туră вара хăй çапла тĕл пултарчĕши е ăнсăрт-кĕмсĕрт анчах пулчĕ — халлĕхе нихăшĕ те ăнкарса илеймерĕ. Ун-кун калаçу кăна пĕр сӳнсе те пĕр аталанса пычĕ.

Людмила хăйĕн тĕллевне пăрахмарĕ. Мĕн май килнĕ таран, çавăн чухлĕ ыйтса пĕлме тăрăшрĕ.

— Хĕрарăмсене вара эсĕ пĕрре те пăхмастăн, ма апла? Алăк-

ран тухатăп-и е кĕретĕп унта — алă та памастăн. Мĕн те пулин йăтса пулăшса парас пулсан вара эс нихçан та çумра çук, — кÿлешем пекки турĕ вăл.

— Эп, мĕн, ун пек хĕрарăм çумĕнче явăнса çÿреме хама тивĕçлĕ тесе шутламастăп. Мансăр пуçнех, курап, пур... тата эсир те вĕсене кăмăлламасăр тăмастăр пулмалла. Ма хушша-хуппа кĕрес?

— Эсĕ хăвăн юлташусем пирки калатăн-и? Вĕсем, чăн та, пĕрре те сан пек мар. Питĕ хăюллă, хастар, кăмăллă ачасем. Эс вара ун пек мар.

— Каларăм-иç ман принцип урăхла тесе.

— Мĕн ĕнтĕ унта сăлтавласа, темле теорисем шутласа ларатăн, кала çын пек пулма ман кăмăл çитмест тесе — пулчĕ те.

— Çук, ĕç унта мар. Эс мана ăнланмарăн курăнать. Халь çавна пулах пуль, асăрха, çынсем пĕр-пĕрне ăнланми пулчĕç. Пурте хăйсене хăйсем кăна тĕрĕс пек тыткалаççĕ. Нихăшĕ те темле йăнăш тусан та, хăйĕн айăпне йышăнмасть, урăх çын çине ярать. Пурте хăй талай, пĕр сăмахпа каласан.

— Начар мар пуль вăл, çине тăни. Кашни хăйĕн шухăшне калатăр.

— Вăл питĕ хăрушă. Шухăш калани кăна мар кунта, кунта çын хăйĕн йăнăшне йышăнманни пирки пырать калаçу.

— Вара мĕн тет халь, кута хĕссе лармалла тет-и?

— Ун пекех мар пуль те, пĕрех ытла пит автан пек е чăх пек кăтиклемесен те юрать.

Арçын çак сăмахсене темле çилленсе каланă пек туйăнчĕ. Çук иккен, ку çынна темле куç пăвсан та илмест. Питĕ хытă хупăллă чунлă. Ниçтан шăтарса кĕме çук.

— Интереслĕ, эс гипноз сеансĕсенче пулса курнă-и, — сасартăк тем шухăш тытса ыйтрĕ хĕрарăм.

— Пулкаланă. Анчах халлĕхе пĕри те мана çывратса ярайманĕ-ха. Сцена çине тухнисем самантрах тĕлĕрсе каяççĕ, эпĕ вара мăчлаттарса пăхкаласа тăратăп. Гипнотизерĕ çавна курать те мана халăх патне тĕксе антарса ярать.

— Çапла пуль терĕм çав. Ниепле те эс...

— Мĕн эп?

— Нимех те мар. Усăлмастăн теп.

— Ан васка-ха, тен, усăлăп. Эп пит час ĕненсе пăрахакан çын мар. Акă çÿрĕпĕр-çÿрĕпĕр те лайăххрах пĕлсе çитсен, тен, пĕрле ăçта та пулин чей ĕçсе ларăпăр...

— Чейне ăна ĕнтĕ нумай ĕçрĕмĕр-ха. Çитет.

— Ыран юлашки кун пулать. Унта та ĕçмесен вара? Эсир пыратăр пуль. Чăвашсем банкет туса параççĕ. Ăсату каçĕ пулать.

— Пыратăп, ма пырас мар. Эсир унччен — ыран ирпе кану

— музейсене кайса курăр. Собор пирĕн питĕ лайăх, краеведени музейĕ те чаплă. Мамонт скелечĕ те пур. Авалхи иконсем те...

— Юрĕ вара, ыранччен тейĕпĕр. Халь вара акă пирĕн анса юлмалла та пулчĕ. Сире, паллах, питĕ леçсе ямаллаччĕ те, каялла килме çулне пĕлместĕп, каçарăр. Тепĕр чух.

Тепĕр кун, чăн та, кану кунĕ пулчĕ. Концертпа çӳрекенсем малтан ирпе ирех мунча кайса кĕчĕç, унтан музейсем, магазинсем тăрăх, хула курса çӳрерĕç. Çапла кун иртни те сисĕнмерĕ. Каç енне вара пурте Чăваш центрне пуçтарăнчĕç. Кунта таçти ялтан та пуçтарăннă. Чăваш юрри-кĕвви юхса кăна тăрать. Людмила та унтах. Вĕр-çĕнĕ пурçăн кĕпе тăхăннă. Вăл темле шыв пек юхса тăрать ун ури-алли тăрăх, кашни хускалмассерен асамлă хум кăларать, пĕрре çавра купарчине, тепре çӳллĕ кăкăрне уçа-уçа кăтартать. «Хатĕрленнĕ вара!» — пĕр кĕвĕçмесĕр шутларĕ Минкка. Майра кун пек курăнни ăна килĕшрĕ. Ларма та юнашарах ларчĕç. Малтан ун пек пулманччĕ, тĕл пулсанах. Халь вара пĕлсе, пĕр-пĕринпе ытларах пулас тесех ларчĕç. Часах банкет пуçланчĕ. Делегацие ертсе пыракансем пĕрин хыççăн тепри тухса калаçрĕç. Пурте хавасланса черкке хыççăн черкке ĕçрĕç. Минкка та ĕçрĕ. Тĕлĕнмелле те, Людмила та ĕçрĕ. Ку таранччен вăл эрех ĕçнине курман Минкка, ку мĕне те пулин пĕлтеретех тесе шутларĕ. Халлĕхе вара нимех те пĕлтермерĕ-ха. Ĕçрĕç-ĕçрĕç те, те калаçмалли пĕтрĕ, юрлама-ташлама пуçларĕç. Минкка ташлама Людмилăна кăна чĕнчĕ. Акă ĕнтĕ вăл ăна пуçласа ыталаса курать. Çын умĕнче кăна пулсан та, ташăра кăна пулсан та питĕ савăклă. Хĕрарăм ӳчĕ мамăк пек кăпăшка. Çавăн пеккисене юрататъ те вăл, сĕтлĕ ӳтлĕскерсене. Малтан вăтанарах парса ĕлĕкхи пек ал тăсса ташларĕ, кайран тахăш вăхăтра хăй сисмесĕрех килĕштерсе пăрахнă хĕрарăма кăкăрĕ çумне чăмăртаса ташлама пуçларĕ. Хĕрарăм та хирĕç пулмарĕ. Вĕри кăкăрĕ çунтарса ярасла пĕçертрĕ, тата Минкка свитерне хывмарĕ те, ăна унсăр пуçнех питĕ ăшă пулса кайнăччĕ. Халь вара акă чăт кăна. Пĕр ташă сиктермесĕр ташларĕç вĕсем. Юрларĕç те. Юлашкинчен каллех ĕçме ларчĕç. Такам ăсне тем кĕчĕ çав вăхăтра. Минккана та сăмах пачĕç. Хĕрсе çитнĕскер, вăл килĕшрĕ. Ăçтан кăна сăмах тухрĕ. Ним пĕр хатĕрленмен туман çĕртен темле бомбăсем çинчен калаçса кĕрсе кайрĕ вăл.

«Мĕн тахçан, çак пĕр çитмĕл çул хушшинче, ятарлă питĕ хăрушă хутăш хатĕрлесе çитернĕ. Çав хутăш вăл çын масси, çын купи. Урăхла каласан, ăна совет çынни теме те пулать. Хăйсен çĕрне-шывне пăрахнă, ашшĕ-амăшне маннă, ваттисене асăнма вăтанса тăраканскерсем — пурте таçти çĕрсене куçса килсе ырлăх курас тенĕ. Миллионшар халăх вырăнтан тапраннă, тĕрлĕ çĕре çитсе ӳксе ыттисемпе пĕрле хутшăнса кайнă. Пĕр чĕлхеллĕ те, пĕр шухăшлă та пулса ĕлкĕрейймен — килнĕ пĕр

вырӑнти мӗнпур япалана пайлама-тӑпӑлтарма тытӑннӑ. Ун пек чухне, паллӑ ӗнтӗ вӑл, самантрах вӑрҫас-тӑвасси сиксе тухать. Халь-халь сирпӗнсе, вут хыпса илме хатӗр хутӑша мӗнле те пулин уйӑрса вӑйсӑрлатмалла пулнӑ. Унсӑрӑн — кӗтсех тӑр. Акӑ вӑн, Кавказ тавра, Прибалтикӑра, Молдавире, Таджикистанра ҫав хутӑш тар пек хыпса илчӗ, тавра тӑракан ҫынсене ӗнтсе ячӗ. Ҫук, ун пек тума памалла мар, — терӗ вӑл хӗрсе пынӑҫем хӗрсе пырса. — Акӑ пирӗн Ҫӗнӗ Шупашкарта хими хӗҫпӑшалне туса тултарнӑ та — халӗ ниҫта кайса хураймаҫҫӗ. Бомби вӑл кашни пайӗ уйрӑм выртсан нимле хӑрушлӑх та кӑларса тӑратмасть, хутӑштарса ярсан вара миллионшар ҫынна вӗлерме пултарать. Ӑна мӗнле те пулин хӑрушсӑрлатас пулать. Полигонне те тунӑ... Анчах ӑна хӑйне салатнӑ чухне те тем те пӗр сиксе тухма пултарать. Совет ҫыннипе те ҫавӑн пек, вӑл та питӗ хӑрушӑ бомба пек курӑнать. Кашни ҫӗрте, ӑҫта пӑхан, парти бюрократчӗсем ҫавӑн пек халь-халь ҫурӑлса кайма пултаракан мина лартса хӑварнӑ. Халь ӗнтӗ ӑна пушатма та питӗ йывӑр. Ак эпир те ҫав минерсем пек ҫӳретпӗр мар-и? Кунта та, сирӗн патӑрта, ҫӗр ҫирӗме яхӑн тӗрлӗ халӑх ҫынни терӗр. Пурте хӑйсем пек пурӑнасшӑн. Пурнӑҫӗ вара ун пек тума парасшӑн мар. Мӗнле те пулин ҫак тӗнче ан ҫурӑлса кайтӑр тесе калатӑп, тӗнче ан пӗттӗр тесе ҫак черккене ҫӗклетӗп», — терӗ темле ҫавӑн пек калаҫса анраса кайнӑ Минкка. Пӗрисем ӑна ӑнланчӗҫ пулмалла та пӗрле ура ҫине тӑрсах ӗҫрӗҫ, теприсем ӑнланмарӗҫ курӑнать те ларсах юлчӗҫ — хускалмарӗҫ те.

Людмила та ку шухӑшпа килӗшмерӗ пулас, черккене тытса та памарӗ. Ку ҫеҫ те мар, эс тӗрӗсех мар тесе хирӗҫлеме те пӑхрӗ. Ҫакна пурне те курса тӑракан Минкка никама та кӳренмерӗ, мӗн каламаллине каларӑм терӗ. Ҫавӑнпа никампа та хирӗҫсе тӑмарӗ. Ҫынсем те кӑштах тавлашкаласа тӑчӗҫ-тӑчӗҫ те майӗпен пуҫтарӑнма тытӑнчӗҫ. Вӑхӑчӗ те ӗнтӗ чылая кайнӑччӗ. Вӗсен вӗт тата поезд ҫине ӗлкӗрес пулать. Ак юлашки черкке, ку вӑл ҫул курки пулчӗ — ӗҫрӗҫ те пурте хуҫисене тав туса урамалла тухма тытӑнчӗҫ. Минкка ҫав вӑхӑтра Людмилӑран теме пула уйӑрӑлса кайнӑ пулас та, темле пит пӑхкаласан та кирлӗ ҫынна шыраса тупаймарӗ. «Ӑсатма пымасть ӗнтӗ ку», — тесе шутласа илнӗччӗ кӑна, автобус ҫине ларсанах Людмила унтине курса савӑнса кайрӗ. Темле майсӑр пулсан та ун ҫумнех хӗсӗнкелесе кӗрсе ларчӗ. Автобус тапранса кайрӗ. Такам купӑс тӑсса ячӗ. Ҫавӑнтах каҫхи хула тӑрӑх чӑваш юрри янӑраса карӗ. «Уй варринчи лаштра юман...» — илтӗнчӗ пуль Ҫӗпӗр тӑршшӗпех. Минкка хӑй те сисмерӗ, нихҫан ун пекки пулман, куҫне шӑлса илчӗ. Юнашар ларса пыракан хӗрарӑм та ҫавна асӑрхарех пулӗ.

— Мӗн эс хурланатӑн-им? — терӗ.

— Пӗлмерӗм-ха. Тем ҫухатнӑ пекех туйӑнать.

— Ма вара, сана пĕрех мар-им. Пулнă, çӳренĕ, никама та пит курăнас, килĕшес тесе çӳремен. Мĕншĕн хурланмалла тет вара.

— Пĕлмерĕм-ха, — каллех пĕр майлă хуравларĕ Минкка. — Юратас килчĕ пуль. Сирĕнпе пĕрле татах та татах пулас килчĕ. Ним те каламарăр эсир мана, эпĕ те сире ним те каламарăм. Çапах та пирĕн хушăмăрта тем сиксе тухрĕ, темле çилĕм пек япала. Çыпăçтарать те çыпăçтарать.

— Мĕн тума вара сана ман юратăвăм, — автобус шавĕпе пĕр тенĕ пекех илтĕнчĕ шăппăн кăна каланă сăмах.

— Çак тĕнчере эпĕ паян тин кăна кăшт та пулин палăртăм, çуралнă пек пултăм пулсан, ма вара ман нихçан та пулман пек çухалас тет.

— Сан принцип вĕт-ха вăл. Пĕр курăнмасăр çӳресси. Пĕр ӳтсĕр, чĕресĕр, пĕр святой сывлăшпа кăна...

— Çапла, ман тивĕç вăл. Çапла пулмаллаччĕ. Анчах та те инкеке пула, те телее — эпĕ ун пек тума пултараймарăм. Сан çумра акă хамăн мĕн пур — йăлт палăртрăм. Пĕр пытармасăр. Ан çиллен ĕнтĕ уншăн. Çапах та халь ак куратăн, эпĕ мĕнле, çаплипех тухса каятăп. Поезд тапранса кăна кайтăр, саншăн эпĕ нихçан курăнми çухалăп. Эсĕ мана хăвăн кăмăлупа темле çын куçне курăнмалла хускатрăн пулсан та, эпĕ пĕрех, куран, çухалса пĕтмелли çын. Акă нумай та вăхăт иртмĕ — автобус вокзала çитсе чарăнĕ... вара...

— Вара эпĕ сана асăнмалăх пĕрре ыталаса чуптăвăп. Ун чух вара ниçта та çухалмăн, астусах тăрăн.

— Тем пекехчĕ...

Çав вăхăтра, чăн та, юррисене те юрласа пĕтереймерĕç, автобус чарăнса та ларчĕ. Вокзал! Вăл çеç те мар, вĕсем çитнĕ те поезд çине те лармалла пĕр тăхтаса тăмасăр. Мускава каякан поезд кунта нумай тăмасть. Хăвăрт-хăвăрт тиекелерĕç те, ларса каякансем сывпуллашма тытăнчĕç. Людмилăпа Минкка айккинерех кайрĕç. Хальхинче вĕсем никамран та вăтанмарĕç, алăранах тытăнса тăчĕç. Пĕр-пĕрин çине куç илмесĕр, нихçан çухатас марла юратса пăхрĕç. Унтан хăйса-хăйса çитрĕç те чуптусах илчĕç. Поезд тапранса кайма тытăнчĕ, алли ун, алли Минккан, тепĕр хут сĕртĕнсе илчĕ-и хĕрарăм аллинчен — таçта кайса кĕчĕ. Каçхи тĕттĕмлĕхре Минкка та, поезд та ним паллисĕр таçта кайса çухалчĕç.

Вăхăт иртнĕçем хĕрарăм куçĕ умне чĕррĕн тухса тăракан арçын сăн-сăпачĕ те ирĕлсе çухалса пычĕ. Питĕ хăй асĕнче тытса хăварасшăн тăрăшрĕ ăна хĕрарăм, çук, май килмерĕ. Тахçан хăйĕн тухатмăшла вăйĕпе çак пăтравлă пурнăç шавĕнчен уйăрса илсе палăртнă сăнар ĕмĕрлĕхех куç умĕнчен кайрĕ.

«Аллипе кăна ман алăран сĕртĕнсе юлчĕ», — шутларĕ перрон çинче тăр-пĕччен тăрса юлнă хĕрарăм хăйĕн аллине майĕпен те асăрхануллăн теме аса илесле сăтăркаласа...

## КУКША ПУÇ

Кашни çын хăй пурнăçĕнче тĕлĕнмеллипе мĕнпе те пулин тĕл пулатех. Чылай вăхăт иртсен вара çав тĕлĕнни хăех аса килет те пĕтĕм пурнăçа тепĕр май çавăрса хурать, вара телей мĕншĕн сан çумăнтан шăхăрса иртсе кайнине те, ху мĕнле айван çын пулнине те тинех ăнланса илетĕн.

...Казахстанраччĕ эпир ун чухне. Çапла, эсир пурте пĕлекен çĕршывра, таçта мар. Çерем уçма килнĕ чăваш хĕрĕсемпе каччисем пурте пĕр çĕрте, пĕр казарма пеккинче, баракра, пурăнатчĕç. Йĕри-тавра пĕр йывăç та, пĕр юханшыв та çук. Хĕрсе çитнĕ çатма çинче пăрçасем сиккеленĕ пек, çеçенхирте тĕл-тĕл çĕр мулкачĕсем кăна сиккелетчĕç, хăрама та пĕлместчĕç. Пĕр еннелле пăхатăн, çĕрпе пĕлĕт хĕррине куратăн, тепĕр еннелле çаврăнса тăратăн — каллех çĕрпе пĕлĕт. Ун пек чухне çав вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕсре тракторпа мар, темле карапpа ишсе пынă пекех туйăнса каять. Хумлă-хумлă курăк çийĕпе ярăнса пыратăн та, сисместĕн те тепĕр чух, çывăрсах каятăн. Ун пек урлă-пирлĕ сухаласа кайнисем манăн кăна мар, ыттисен те пулнă пулмалла, ахальтен-им çеçенхирте çапла çӳренĕ чухне ним çук çĕртенех темле пĕр-пĕччен касă çине пырса тăрăнатăн. Таçта кукăрăлса кăвак инçетех илсе каять вара çав çул, çывăрса кайнă тракторист çулĕ. Манпа кăна мар пулса иртекеленĕ апла çав пăтăрмах. Ара, çыврас килнĕ пуль çав! Çамрăк чухне çапла вĕт вăл, çĕрĕ-çĕрĕпе хĕр хăваласа чупса çӳретĕн те, трактор тем пек хăлтăртататать пулсан та, ним те мар çывăрса каятăн. Ну, ку калав ун çинчен мар-ха. Тен, ун çинчен те! Мĕншĕн тетĕр-и? Мĕншĕн тесен çав пĕр-пĕччен касă никамăн та мар, Сахьен пулнă тетĕп.

Çав хĕр куçĕсене пĕрре кăна мар асăрханă эпĕ. Чăлтăр-р! тутарса пăхса илетчĕç ман çине, пăхса илетчĕç те — пытанатчĕç. Ун чухне ун-кун шутлама пĕлмен, вунсаккăрта кăна пулнă та... Сахье вара пĕр çирĕм çулсенелле çитнĕ хĕрччĕ пулас.

Пирĕн мĕн, ачапча вăййи, хĕр шухăшĕ пулман. Ăна-кăна кайран кăна ăнланса илтĕм. Малтан вара, барак умне вăййа тухсан, пĕр-пĕринпе тытмалла тенĕ пек вылякалаттăмăр-ха эпир. Ахальтен кăна, юлташла. Ăнсăртран пек, тен, тыткаласа та пăхнă пуль хĕр ӳт-пĕвне, чăмăркка кăкăрĕсем те ал айне лекетчĕç, вăл та ним пулман пекех ман алла тытса чăмăртатчĕ. Хăй вара пит вăр-варччĕ, çап-çавракаччĕ. Ах, кулатчĕ вара. Касса кайса,

тĕрлĕ майлă кăлтăртаттарса кулатчĕ. Çавсене халь, вăхăт ним чухлĕ те иртмен тейĕн, йăлт астăватăп. Ун чухне вара шута хуман. Ачапча темерĕн. Вăл çеç те мар-ха. Урăххи те кансĕрленĕ пулĕ. Çав Казахстанра мана пĕр-ик уйăх иртсенех тем пулчĕ, çÿç тăкăнма пуçларĕ. Те шыв юрамарĕ, те апат... Виçĕ уйăх та иртмерĕ пулĕ, эпĕ тутар ханĕ пек кукша тăрса та юлтăм. Юлташсем те вара шÿтлесе кукша теме тытăнчĕç. Эпĕ кÿренместĕмччĕ. Анчах та çав вăхăтрах хам ыттисенчен мĕнпе катăкрах пулнине те ăнланнă пуль çав, хĕрсем патне, питĕ выляс килнĕ пулсан та, ытла пит пыман. Айккинчереххĕн çÿреме тăрăшнă. Хĕрĕсем те ĕнтĕ, вĕсем пирĕн виç-тăваттă анчах пулнă та, çăра кăтра çÿçлисем пур çĕрте мĕн тума шакли патне пыччăр. Темле питĕ хаваслă, пĕр-пĕринпе килĕшÿллĕ пурăннă пулсан та, ун чухне те ĕнтĕ пĕр-пĕрне уйăрасси, хакласси, чун валли чи хитрине суйласа илесси пулнах ĕнтĕ вăл, пĕр çемье пек пурăннă пулсан та. Çав баракра, чăн та, пĕр çемье пекех пурăнаттăмăр. Хĕрсем пĕр енче, эпир тепĕр енче. Простынь карса хунă та — пулнă та. Малтан хĕрсем хывăнни-тăхăнни простынь витĕр йăлт курăнатчĕ те, питĕ пăлхантаратчĕ. Кайран хăнăхрăмăр пулас та, ун пирки шÿтлеме, калаçма пăрахрăмăр. Тата кашни хĕр хăйĕн каччине эпĕ каласа паракан ĕçсем пулса иртиччен тупнăччĕ те ĕнтĕ. Сахье те куçлакаласа çÿренĕ хыççăн çапла пĕринче ман пата вăтанкаласа пычĕ те:

— Якур! — терĕ, — кĕпÿне хывса пар-ха. Эс ăна тахçанах çуман пулмалла. Сана аттун, хураскере, ыталаса илме те май çук. Трактор тейĕн.

Каларĕ те çапла — хĕрелсе-хĕрелсе кайрĕ. Эпĕ те аванмарлантăм. Каччă пуçпа çапла ал-ура сывă чух çума тесе хам кĕпене хĕре хывса пани килĕшÿсĕр пек туйăнчĕ.

— Мĕн эс, Сахье, хамах çăватăп. Эп мĕн чăлах-им, — терĕм.

— Эс ан кулян, çын курасран ан хăра, — пăшăлтатса хĕрÿллĕн калаçма пуçларĕ хайхи ман хĕр. — Никам та сисмĕ, никам та курмĕ. Эс çывăрас умĕн ху пуçелĕк çумне хывса хур кăна...Ыттине, мĕн тумаллине, эп вара хамах пĕлетĕп...

Килĕшсе мĕн каланине астумастăп, хирĕç пулман пулĕ çав ĕнтĕ. Сахье те ÿркенмен. Каçхине тепĕр чух, астăватăп, питĕ ывăнса килеттĕмĕр. Кĕпе çума мар, пит-куçа çумалăх та вăй юлмастчĕ. Кăшт-кашт çырткалаттăмăр та вырăн çине тÿнеттĕмĕр. Ирхине çывăрса тăнă çĕре вара ман кĕпе пуçелĕк çумĕнчех тап-таса та тип-типĕ тата яп-яка выртатчĕ. Тăхăнма питĕ кăмăллăччĕ. Кĕперен таса шывпа супăнь шăрши кăна килетчĕ. Каç енне вара каллех тусанпа тĕтĕм çинче хуп-хура пулса ларатчĕ...

Тав тума та пĕлмен вĕт-ха эпĕ çав хĕре ун чухне. Хăçан, мĕнле майпа çапла çуса типĕтсе ĕлкĕрнине те ыйтман. Пуçра та

пулман. Кайран кăна, чылай вăхăт иртсен, пуҫа кĕчĕ ҫав шухăш. Унччен вара нумай ҫул иртрĕ. Эпир ҫĕнĕ ҫереме уҫса пĕтертĕмĕр те киле, тăван ҫĕршыва, тухса килтĕмĕр. Хăш-пĕрисем, ҫемье ҫавăрнисем, унтах юлчĕҫ. Эпир вара Сахьепе тăван ялсене таврăнтăмăр. Вăл юнашар ялтанччĕ. Аякра та мар ĕнтĕ пĕр-пĕрин патне пырса кайма. Ҫук вĕт. Сахье пуррипе ҫуккине те маннă пулмалла та, ҫапла пĕринче чӳречерен пăхса ларатăп... Урампа, пăхатăп, Сахье пыра парать. Пирĕн тĕле ҫитрĕ те чарăнса тăчĕ. Эп тухасса кĕтет пулмалла. Эп вара ним пулман пек, мĕн тăвать-ха тесе, ун ҫине пăхса ларатăп, урама тухма шутламастăп та. Ҫапла пăхса тăчĕ-тăчĕ те хĕр килнĕ ҫулпа каялла ҫаврăнса утрĕ. Эп вара вăл епле килнипе-кайнине куҫ илмесĕр пăхса ларса юлтăм. Ун патне тухмарăм. Мĕншĕннине халĕ те чухласа илейместĕп. Вăтанни те пулнă пуль. Вҫо такки кукша! Ҫавна пулах эп ялта вăйăсене те тухмастăм. Пĕрмай кĕнеке вуласа лараттăм. Тен, ĕҫ унта та мар. Хăш-пĕр арҫын вăл час пиҫсе ҫитмест вĕт, ун пеккисем те пур. Авланасса та эп, чăн та, питĕ кая юлса авлантăм. Мĕншĕнне ҫавна халь тин ăнланкаласа пыратăп пулмалла. Ун чухне вара, салтака каяс умĕн, хĕр шухăшĕ мар, ачапча вăййи кăна пулнă маншăн. Салтакра та манмарĕ мана Сахье. Ял хыпарĕсене, пĕрле ĕҫленĕ ҫамрăксем ҫинчен ҫырса пĕлтерсех тăчĕ. Ҫавăнпа та пуль тата ун чухне, салтакран таврăнсан ĕнтĕ, хама хам пысăкрах туйнă, ҫула май Сахье патне кӳршĕ яла кĕрсе тухас терĕм. Питĕ тунсăхланăччĕ, питĕ курас килетчĕ пĕрле ĕҫленĕ туссене. Сахье ĕнтĕ ун чухне... ватта юлнă хĕр тесен те юрать. Качча каяс темени, мана кĕтнĕ-и — ăна каллех шутлама пĕлмен-ха. Юрату ҫинчен мар, пачах урăх япаласем ҫинчен каласҫса ларатпăр.

— Сахье! — тетĕп, — эс ҫав кĕпене ҫĕр хута мĕнле типĕтнĕ вара? Тепĕр чух, астăватăп, ҫумăр та пĕрĕхкелетчĕ. Кĕпе вара кирек мĕнле пулсан та ир тĕлне тип-типехчĕ.

— Калас-и вара сана хамăн вăрттăнлăха, — ĕлĕкхи пекех кăлтăртаттарса кулать Сахье. — Эп ăна. Эп, ху чухласа илейместĕн-и вара?

— Ҫук, ăҫтан.

Хĕр каллех каҫса кайса ахăлтатать. Хăй ҫав кĕпене ҫунă чухнехи пекех савăк ахăртнех. Ҫавна аса илсе кулать ĕнтĕ вăл. Ăна, айван пулсан та, эпĕ те ăнланатăп.

— Эп ăна хам ая хурса типĕтеттĕм. Эп ун чухне пит вĕри хĕр пулнă, — чарăнайми кулать Сахье.

Унпа пĕрле эпĕ те куламҫи тăватăп, кĕпене ҫапла епле типĕтме май килнине ăнланмастăп пулсан та...

Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ. Эпĕ институт пĕтерне хыҫҫăн авлантăм. Сахье вара ҫаплипех качча каймарĕ. Вăл мĕншĕн ҫапла тунине эпĕ пĕрех ăнланман-ха, Атăл хĕрринче ҫапла пĕринче тĕл пуличченех...

Ăшă çуллахи каçпала çапла мăшăрпа уçăлма тухрăмăр. Пирĕ хирĕç пристанелле пĕчĕк чăматан йăтнă Сахье киле парать. Пире курчĕ те калама çук савăнса кайрĕ. Пĕрлешнĕ ятпа иксĕмĕре те саламларĕ. Саламларĕ çеç мар-ха, вăл пачах урăхла килсе тухрĕ.

— Ирĕк пар-ха мана, — терĕ вăл ĕлĕкхи пекех савăккăн кулса. — Ирĕк пар-ха çак каччăна, халь ĕнтĕ сан вăл, пурнăçра пĕрре те пулин чуптуса илме.

Çапла каларĕ те питĕ хăвăрттăн çав вăхăтрах тута вĕçĕпе кăна питĕ ачашшăн мана чуптуса илчĕ. Унтан Атăл хĕррине чупса тенĕ пекех анса кайрĕ: Хăлхара: «Эх, эсĕ те çав, кукша пуç!» — тени çеç янăраса юлчĕ. Ун тутине эпĕ халĕ те астăватăп, тута çинчех туятăп. Çав хĕр мана юратнине, юратакан хĕр тути анчах çапла тутлă пулма пултарнине, хĕр мана кĕтсе пурăннине, хамăн ăс çитменнине халĕ ĕнтĕ эпĕ тин ăнланса илтĕм. Çак çĕр çинче ахаль те питĕ сайра тĕл пулакан хăватлă та таса юратупа эпĕ хам сисмесĕрех çапăнса иртсе кайнă иккен. Ун пекки тата кампа пулса иртнĕ вăл? Манпа ĕнтĕ тек пулас çук...

## МĔЛКЕ ТАШШИ

Стена çинчи мĕлкесем авкаланса хускалса илчĕç. Пĕрре уйрăлса, тепре пĕрлешсе темле халиччен курман ал-уралла пĕр кĕлетке пулса тăчĕç. Пĕр вăхăт шăп, унтан антăхса кайса чуптуни, тем пăшăлтатса калаçни илтĕнчĕ.

Пӳлĕмре пăчă, кăшт тĕттĕмрех. Урайне антарсах лартнă лампа, вăйсăр пулсан та, пĕр-пĕринпе ыталашса выртакан хĕрсен кĕлеткине те уççăнах уйăрса илмелĕх çутă сапать, çавах мĕлкесен театрне кăтартать. Йăм-хура çӳçлĕ хĕр сап-сар çӳçлине пилĕкĕнчен ярса илнĕ, хăй çумне пăчăртасах лартнă.

— Тавах, Алина!

— Мĕншĕн?

— Юратма вĕрентнĕшĕн, — пăшăлтатрĕ хура хĕр сарă хĕрĕн хăлха çуначĕсене тутипе пĕр вĕçĕмсĕр чуптуса. Авкаланчĕ кăна сарă хĕр, пылак тĕнче ăшĕнче сăпкари пек ярăнчĕ.

— Ан хăра, Карина, юрат! Темле вăйлă арçынран та хытăрах ытала, пĕчĕк ачаран та ытларах ачаш пул.

— Алина, эсĕ манăн шурăмпуçăм. Эсĕ манăн шыв сиккинче вĕресе тăракан шурă кăпăкăм. Акă епле чуптуса хăпартатăп эпĕ сана, астаратăп... Епле ăшă, епле çемçе ӳтлĕ эсĕ!

Хура хĕр алли сарă хĕре пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанĕ таран ачашласа анчĕ. Сарă хĕр çĕлен пек авкаланчĕ, кулли çăл-

куç пек тапса тăчĕ. Стена çинчи мĕлкесем хускалчĕç, каллех халиччен никам курман кĕлеткесем туса кăтартрĕç, пĕр сассăр кăшкăра-кăшкăра ячĕç, макăрчĕç те пуль, тархасларĕç те... Юлашкинчен чул пек хытса выртрĕç.

— Ах, Алина, кала-ха, мĕншĕн арçынпа мар-ха эпĕ? — чĕрĕлчĕ тепĕртакран хурарах мĕлки.

— Ан аса ил-ха çав арçынсене! Мĕн пултăр вĕсен çумĕнче пире кирли? Вĕсен аллисем кăна мар, чĕрисем те тахçанах хытса ларнă. Чĕрне хурине те тăмаççĕ вĕсем, куркаланă, чуптăвам пекки тăваççĕ те ĕçĕ те пĕтнĕ, сухалĕсене çитĕнтерсе яраççĕ тата... Ни калаçма, ни юратма пĕлмеççĕ.

— Ан калаç, ун пекех мар вĕт-ха! Йăлт пĕтмен вĕт-ха!

— Пĕтнĕ, йăлт пĕтнĕ! Ĕлĕкрех, тен, пулнă та-и, пĕлместĕп.

— Пĕтнĕ пултăр. Пĕрех пĕрне те пулин çавăрса ярас килет.

— Эпĕ юратни çитмест апла сана?

— Çук, çитмест. Мана арçын кирлĕ.

— Эс, сутăнчăк эс, акă кам! — сарă хĕр хура хĕр ытамĕнчен вĕçерĕнсе тепĕр еннелле çаврăнса выртрĕ. Мĕн шутларĕ хĕр пуçĕпе, мĕн чĕпĕтрĕ чĕрине — калама хĕн. Хĕрхенчĕ ăна хура хĕр, ун çумне çыпçăнсах ларчĕ, чуптурĕ. — Кай! — тĕртсе ячĕ сарри. — Кай хăвăн арçынусем патне, чупту, пуççап!..

— Каятăп! — яшт! сиксе тăчĕ хĕр. Яштака-яштака хăй, хура хурăн пек хитре. Арçын алли пырса тĕкĕнмен кăкăрĕсем çапçаврака. — Кирлĕ пулсан темле меммерен те çын тăватăп, юрататăп.

— Кам вĕрентнĕ тет вара вĕсене юратма? Амăшĕсем тесен, амăшĕсем те кунĕн-çĕрĕн вăрçса патакласа тăнă, итлемесен-тумасан çĕрçăтмансем тенĕ. Ӳсерех парсан хăйсем те патак йăтнă. Мĕн сан арçын чышкине тутанса пăхас килчĕ-им?

— Юратнă арçын алли ыраттарать пулсан та савăклă. Сан вара, сан çемçе аллу йăлăхтарсах çитерчĕ!

— Ав епле! Вĕрентрĕм-вĕрентрĕм те...

Сарă хĕр йĕрсе ячĕ. Хури чăтаймарĕ — пычĕ. Иккĕшĕ те ĕмĕрлĕхе уйрăлнă пек ыталашрĕç, чуптурĕç, ахлатрĕç... Стена çинчи мĕлкесем каллех хускалчĕç, темле ташă ташларĕç.

— Кам вара вăл çав, эсĕ куç хывнă арçын? — хăй тăр-пĕччен тăрса юлнине тăруках ăнланса илчĕ сарă хĕр, чунĕнче темле хура курайманлăх чашкăрса хăпарчĕ, çав арçынна шыраса тупса халех тĕп тăвас килчĕ ун.

— Пур пĕр çын, — сисмерĕ тусĕн вăрттăн шухăшне Карина. — Анчах вăл питĕ хăй тĕллĕн, мĕлке пек, пĕр сассăр çӳрет. Таса мартарах тата! — Вăт çав арçынран çын тăватăп. Курăн акă, пĕр-тепĕр уйăхранах юратса пăрахĕ мана, эпĕ мĕн хушнине те йăлт тăвĕ...

— Мĕн пĕр-пĕр канавра çапкаланса выртакан ĕçкĕçĕ киле

илсе кĕретĕн те, çуса-тасатса тин кăна пĕçернĕ автан шӳрпи çиме сĕтел хушшине лартатăн та — ĕçĕ те пĕтнĕ тетĕн-им?

— Ун пек тума та пулать. Анчах эпĕ урăхла тăвăп.

— Мĕнле майпа вара?

— Эпĕ ăна куç пăвăп!

— Куç вылятма пĕлетĕн вара эсĕ, чăн та. Енчен те ку та пулăшмасан?

— Эпĕ ăна панулми çитерĕп. Ева пек. Çылăха кĕртĕп.

— Тĕрĕс. Çылăхсăр арçын вăл арçын та мар. Анчах питĕ кирлĕ пулĕ ăна сан çимĕçӳ? Уншăн пулсан эрех, сăра, табак пултăр! Акă вĕсем — арçын юратăвĕсем! Тем тутăр вăл санпа, пит кирлĕ пулĕ ăна хĕрарăм япали?

Малалли питĕ хăвăрт пулса иртрĕ. Ама уçлăх, хăй те артаклăхшăн тунсăхласа çитнĕскер, икĕ хĕре уйăрса ячĕ. Хура хĕр тăхăнчĕ. Сарă хĕр куç илмесĕр пăхса выртрĕ. Тусĕ патне пĕтĕм чун-чĕререн туртăнчĕ пулсан та пĕрре те хускалмарĕ, пĕр сасă та кăлармарĕ. Хури те чĕнмерĕ. Тухса каяс умĕн тепре çаврăнса пăхрĕ. Чăн-чăн юрату турри пек, пирĕштин курăнчĕ кравать çинчи хĕр. Самантлăха пулин те каллех çупăрласа илчĕ юрату туйăмĕ Карина чĕрине, вырăн патне чупса пырса тепре чуптуса илме те хатĕрччĕ, хăйне хăй вăхăтра тытса чарчĕ, чао! терĕ те пӳлĕмрен хăвăрт тухса кайрĕ.

Пӳлĕмре выртса юлнă хĕр те чăтаймарĕ, вăл та питĕ хитре! — тăрс-с сиксе тăчĕ. «Курăпăр-ха, курăпăр, мĕн тума пĕлĕн çав шăршлă сăра пичкипе!» — пĕр тарăхса та пĕр кӳренсе шухăшларĕ вăл. Тăхăнма васкамарĕ, тĕкĕр умне пырса тăчĕ те хăйĕн тулли те çавракa кăкăрĕсене сăтăркалама тытăнчĕ. Вăрăм çӳçне пĕвĕ тăрăх сапаласа ячĕ. Хăйне хăй ачашланăçем çӳçне лăстăр-лăстăр силлерĕ, пӳ илемĕпе киленчĕ, юратушăн çунчĕ, тусĕшĕн тунсăхларĕ, çав вăхăтрах пăшăрханчĕ те, тарăхрĕ те, пăсăк кăмăлне пĕтĕмпех ирттерсе ярас тесе тăрăшрĕ...

Карина суймарĕ. Тахçанах асăрханă вăл çав арçынна. Пăхма та ун çине! Пичĕ-куçĕпе илемсĕр, темле тĕссĕр... Васкамасăр, темле питĕ канлĕн пăхса çӳрет вара хăй, унăн пурнăçĕнче нимле хуйхă та хуçаланман тейĕн. «Ку ман пулать, — шухăшларĕ хĕр темле бомж майлă арçынна пĕр хĕрхенсе те пĕр йĕрĕнсе. — Ку кадр Адам мар, паллах, ку çынран арçын тума пит йывăр пулать. Çак упăте те улăп пек курăнса кайсан вара хам та чăн-чăн турă эпĕ».

Куç сиктермесĕр сăнама тытăнчĕ хĕр арçын хăтланăвĕсене, вăл епле утни те, апат çини те, ăçта ĕçлени те кăсăклантарчĕ ăна. Ун çинчен çынсенчен май килнĕ таран ыйта-ыйта пĕлчĕ. Тĕлĕнмелле те, çав ăçтиçук пек арçын çинчен пĕри усал каламарĕ, никама та усал туса курман пулмалла вăл, мăнтарăн. Тăшманĕ те, тусĕ те çук ун. Пĕрре, ăçта пурăнать-ха тесе, йĕрле-

се кайса та пăхнăччĕ. Çурчĕ те хăй пекех, темле пĕтнĕскер, таса мар, кивĕскер... Ун пеккинче Карина хăй пулсан нихăçан та пурăнас çук. Тăхăннă вара, чăн та, кулса вилмелле, чисти катемпи. Кивĕ пушмак, лутăркаланса пĕтнĕ темле шăлавар, чечеклĕ кĕпе... Юмахри ухмах Йăван тейĕн. Унпа юнашар утма та намăс пулассăн туйăнчĕ. Туйăнасса туйăнчĕ те, çав вăхăтрах тем çыхса лартрĕ ăна çав арçын çумне, сăмах пани-и е урăххи — халлĕхе хĕр ăнланмарĕ. Пĕр япала кăна паллă пулчĕ. Питĕ лăпкă ăна, питĕ лайăх çак арçын çумĕнче. Кăлăк чăххи пек лăпланса ларать вăл ăна курнă-курман. Вăрçма тет-и, никама та пĕр сивĕ сăмах та калас килмест. Пуринпе те кăмăллă, йăл-йăл кулăллă. Кам кама куç пăвать кунта, паллă мар! Сисмест те вĕт-ха хăйне çаппа чапла хĕр юратса пăрахнине! Чăн та мĕскĕн, чăн та мăнтарăн! Урăхларах арçын пулнă пулсан кутемĕн!..

Чылай сăнарĕ хĕр. Тĕл пулма май шырарĕ. Çук, ĕç тухмасть тенĕ çĕртех килчĕ çакă нихçан манми кун. Çурт-йĕр ыйтăвĕпе пырса кĕчĕ вăл хĕр пӳлĕмне. Пай пуçлăхĕпе калаçса кайрĕ. Шăлĕсем ун шăкăрин, чӳречерен кĕрекен хĕвел çути çинче йăлтăр та йăлтăр туса илеççĕ. Темле питĕ йăваш хăй, темле айăплă... Пулăшу ыйтать. «Мĕн вăтанать-ха ĕнтĕ, мĕн айăпа кĕнĕ? Пĕр хăрамасăр калаçма юрамасть-и вара? — арçыншăн пĕр пăшăрханса та хута кĕрсе çилленсе ларчĕ Карина. — Ăт айван! Куçĕ кут хыçĕнче пуль кун, темле шăтарасла пăхатăп пулсан та курмасть. Ну эпĕ ăна!»

Хура хĕр хушша-хуппа кĕчĕ. Куçĕсене вылятса, — ун пек тума вăл тĕкĕр умĕнче ятарласа вĕреннĕччĕ, — тем каларĕ, халĕ хăй те астумасть. Унтан итлекелесе тăчĕ-тăчĕ те:

— Эпĕ, Карина, сметчица. Эпĕ сирĕн ыйтăвăра самантрах татса пама пултаратăп, — тесĕ хучĕ.

— Эпĕ Микул, — çухалса каймарĕ арçын. Чăр-р! пăхать хăй. Мĕнле хĕр ку тет пулас. Вăтаннипе пуль, кулли тапса тухрĕ. Çурма уççăн, темле çав вăхăтрах питĕ ăшшăн кулчĕ вăл. Хĕр сылтăм аллине кăкăрĕ çине хучĕ, чĕри тăкăлт-тăкăлт турĕ. Куç умне Алина тухса тăчĕ. Самантлăха кăна. Çапах та ку курăну хĕре тарăхтарсах ячĕ. «Çук, — çине тăрсах шутларĕ вăл, — хам мĕн тăвас тенине тăвататăпах. Ку мăкăл-мăкăл Микулран юмахри Микула Селянинович пулать. Кирек кам пулса юлам, мана пĕрех!» Чĕри ыратрĕ пулин те, тути йăл-йăл çиçрĕ, куçĕ питĕ илĕртӳллĕн, чăнласах та куç пăвмалла вылянчĕ. Хитри хитрех çав вăл, арçын та илем патне туртăнчĕ. Татах пăхрĕ хĕр, шăтарсах пăрахрĕ пулĕ çак слон ӳтлĕ арçын чĕрине. Хайхи питĕ аванмарланса кайрĕ, хĕр куçĕнчен пăхаймарĕ, ара, епле пăхăн çапла куçа шартарса яракан илем çине, хĕвел пек те-ха вăл, çавăнпа та вăл пай пуçлăхĕ енне çаврăнчĕ те калаçăва малалла тăсрĕ. Татах куç пăврĕ хĕр — ку хăнк та тумарĕ. Ыйтнă пек тума тет-и,

тин кăна кампа куçласа-калаççа тăнине те манса кайрĕ. Карина умне каллех Алина сăнĕ сиксе тухрĕ пек, хальхинче темле йĕкĕлтесерех пăхать тусĕ, каллех хăй юратăвне сĕнет пек...

Пĕр тулăксăр вĕçленчĕ пĕрремĕш тĕлпулу, епле пырса кĕчĕ, çаплипех тухса кайрĕ арçын. Çук, куç хывмарĕ вăл çак хитре хĕре, астуса та юлмарĕ, сывпуллашмасăрах тухса вĕçтерчĕ. Ара, пуçлăх ăна тем каласа шантарчĕ те, мĕн кирлĕ пултăр ăна урăх, çав суккăра. Ларать пуль-ха халь хăй ĕçĕпе трестра хĕр ун çинчен кунĕн-çĕрĕн шутланине те, хуйхăрнине те пĕлмесĕр... Яланхи пекех тӳлек те пĕр туйăмсăр, шухăшсăр... Асапланчĕ Карина, асапланчĕ пулсан та телейлĕ çӳрерĕ. Телейĕ те ĕнтĕ ку шăла çыртсан та çĕмĕрсе кĕрекенни пулчĕ пуль. Пĕр виçĕ-тăватă кун иртрĕ-и, пуçлăх хăй патне чĕнсе илчĕ, алăран пĕр проект тыттарчĕ. Ăна треста çав Микул патнех леççе памалла-мĕн. Пĕчĕк ача евĕр савăнса кайрĕ хура хĕр. Тем пек палăртасшăн пулмарĕ кĕтмен çĕртен сиксе тухнă савăнăçне — пурпĕрех палăрчĕ. Ĕçри юлташĕсене вăл çавраçиллĕн курăнчĕ. Çавăрттарчĕ кăна, сĕтел çинчи хутсене те майлаштарса тăмарĕ, тухрĕ те вĕçтерчĕ.

Микул ĕç вырăнĕ пиллĕкмĕш хутра-мĕн. Питĕ асăрханса, чарăна-чарăна тăрса хăпарчĕ унта, вăрттăн тенĕ пек, пĕр шаккамасăр-тумасăр пырса кĕчĕ проектантсен пӳлĕмне. Халăх нумайран-и е ĕçлĕ пулнăран хĕр пĕрчине никам та асăрхамарĕ. Микул та пуçне пĕкнĕ. Аллинче кăранташ...

— Ырă кун пултăр, Микул! — шартах сиктерчĕ хĕр ĕçлĕ арçынна.

Çапла хитре хĕр хăй патне пырса кĕрессе кĕтменскер аптраса ӳкрĕ, мăч-мăч тутарать куçĕпе. Темле ĕненмесĕртерех пăхать. Çавах-ши вара ку тет пек.

— Сывлăх сунатăп! Эсир мĕн ĕçпеччĕ? — ним пулман пек тыткалама тăрăшрĕ хăйне хăй Микул. Анчах хĕр асăрхарĕ, аллинчи кăранташĕ чĕтренме пуçларĕ, унтан аллинчен тухсах ӳкрĕ.

— Акă пай пуçлăхĕ парса ячĕ, — проектне сĕтел çине кăларса хучĕ хĕр. Унтан арçын çине пĕр вăтанмасăр пăхма тытăнчĕ, вылятрĕ те вылятрĕ куçне леш çавна уçăмлăнрах сисиччен.

Микул проекта пăхкалам пекки туса ларчĕ. Ним калама пĕлмерĕ вăл, чĕлхесĕрленчĕ, пуçне те çĕклеймерĕ, тем пек вăй пухсан та хитре хĕр çине пăхма хал çитереймерĕ. «Юрать, юрать!» — текелерĕ-ха. Анчах хĕрпе çапла калаçмалла-и вара? Карина кӳренчĕ. Тухса каймалли кăна юлнăччĕ ĕнтĕ, турри пур пуль çав, арçын пĕр кĕтмен çĕртен: «Ларăр-ха, ларăр, ан васкăр. Сирĕнпе ларма питĕ кăмăллă», — тесе хучĕ. Хĕр чĕри ирĕлсех кайрĕ. Турри, чăн та, пур çав ун. Çапла теме кĕтсе ларнă вăхăтрах радио калама çук илемлĕ, чунлă инди юррисене шăрантарма тытăнчĕ. Ак хайхи! Арçын та илтрĕ пулмалла çавна, вăйлăрах ячĕ. Хĕр чĕри тата хĕпĕртерĕ. «Вăл та ман пекех инди халăх юр-

рисене юрататъ. Пӳрнисем те авӑ кӗвӗ майӑн вылянаҫҫӗ. Кинона чӗнес пулать ӑна, акӑ мӗн! «Легенда о любви» пыратчӗ мар-и-ха?»

— Инди юррисене эсир те юрататӑр пулас? — чӑтаймарӗ хӗр. Кинона чӗнме май шырарӗ ахӑртнех.

— Питӗ юрататӑп. Ӑсчахсем эпир ҫав енчен тухнӑ теҫҫӗ. Чӗре сисет — тӗрӗс калаҫҫӗ.

— Халӗ Шупашкарта «Легенда о любви» кӑтартаҫҫӗ. Питӗ лайӑх теҫҫӗ. Кайса курсан питӗ лайӑхчӗ те, — кинона кайма чӗнессе кӗтрӗ хӗр. Арҫынна куҫран тӗллесе, куҫ пӑвас тесех, илӗртес тесех пӑхрӗ. Усси пулмарӗ.

Микул ним пулман пек ларчӗ. Хӗр хӑйне темле вылянчӑклӑ тыткаланине паҫӑрах асӑрхарӗ-ха вӑл, шута илчӗ. Анчах, ҫав анчах тени кансӗрлет мар-и пире пӗрмай, инди юррисене илтсе чӗрӗлсе кайнӑ чӗри хӗре кинона чӗнме хал тупаймарӗ. Карина ҫакна таҫтан-таҫтан сиссе ӗлкӗрчӗ, арҫын кӑмӑлӗ вӗҫерӗниччен ман билечӗ те пур тесе каласа хучӗ. Кинона вӑл, чӑн та, Алинӑпа кайма хатӗрленнӗччӗ. Халь ӗнтӗ май килмест.

— Мӗнех, эпӗ хирӗҫ мар. Кино тенине тахҫанах курман. Килте те кичем. Хула пурнӑҫӗ хӑй ҫапла ӗнтӗ вӑл, — тӳрре тухма тӑрӑшрӗ арҫын. Хӗр сӗнӗвӗпе тӳрех пӗр майлӑ пулни вӑтантарчӗ-ши?

Каҫхине ҫичӗ сехетре тӗл пулма калаҫса татӑлчӗҫ Каринӑпа Микул, вара уйрӑлчӗҫ. Хӗр куҫ пӑвса пӑссах пӑрахасран хӑрарӗ, Микулӑн ӗҫ тупӑнчӗ.

Хӗр хальхинче те пӗр вӑтанмасӑр, кайӑк пек вӗҫсе анса кайрӗ пиллӗкӗмӗш хутран. Ҫул тӑршшӗпех пуҫа килнӗ пӗр инди юррине юрласа пычӗ. Телей сассиллӗ пулчӗ пуль, иртен-ҫӳренсем те илтрӗҫ ӑна, вӑшлаттарса утса пыракан хӗр ҫине ҫаврӑна-ҫаврӑна пӑхрӗҫ, ун куҫӗсемпе тӗл пулса хӑйсем те ҫуталса илчӗҫ, тен, ӑмсанчӗҫ те пулӗ ун илемне, хӑйсен те, тен, ун пекех ҫамрӑк та хӗвеллӗ пулас килчӗ ахӑр ҫак ҫӗр ҫинче. Ҫапла та пулчӗ пулӗ, тӗнче пӗрре те усал тӑмарӗ, хӗре никам та кӳрентермерӗ, пурте ырӑ сунчӗҫ, пурте кӑмӑллӑ пулчӗҫ, урамра та, ӗҫре те...

Кинона хӗр иртерех ҫитрӗ. Микула кӗтсе уткаласа ҫӳрерӗ. Питӗ канлӗн таянса пӑхса тӑчӗ пӗр кана бетон стена ҫумӗнче. Унта сулхӑн, кансӗрлемеҫҫӗ... Тӑхӑнасса вӑл ҫӳллӗ кӗлеллӗ туфли, хура чӑлха, хура юбка, шурӑ кофта тӑхӑннӑ. Пукане ку тейӗн. Куҫ хывакансем те пулчӗҫ пулмалла-ха, тӑнӑ ҫӗртех пӗр ушкӑн ача пырса ҫыпҫӑнчӗ. Арҫын ачасем ҫаврӑнкаларӗҫ-ҫаврӑнкаларӗҫ те хӑпрӗҫ, кинона кӗчӗҫ. Микул вара курӑнмарӗ. «Ну, кӑна!» — тарӑхрӗ хӗр.

— Кӗттертӗм, каҫар! — хӗр умӗнче пуҫ тайрӗ Микул, аллине, каҫару ыйтса ӗнтӗ, хыттӑн чӑмӑртарӗ. Ку килӗшрӗ. Чупсах кӗрсе кайрӗҫ кинона. Инди юрри-ташшисене итлесе киленчӗҫ.

Карина куç пăвма кино курнă чухне те пăрахмарĕ. Микул çине куç хӳрипе те пулин, тепĕр чухне уççăнах, тӳрременех, куç пăвас тесех пăхрĕ. Артистсен илемĕпе, вĕсен ача евĕр хăтланăвĕсемпе тыткăнланнă Микул хăй те хĕр çине темиçе хутчен те пăха-пăха илчĕ. Унăн та тем калас, тем пĕлтерес килнĕ ахăр. Хура хĕр вара çак юнашар ларакан арçын та çак кинори герой пек юраттăр мана тесе кĕлтурĕ. Хăйĕн те кинори героиня пекех юратас килсе кайрĕ. Пăхрĕ-пăхрĕ вăл Микул çине, куç илмесĕр тенĕ пек пăхрĕ мĕн кино вĕçлениччченех. Чăн та, тем пулчĕ, кино курни пулăшрĕ-и, мăраннăн сывласа ларакан арçын шăпланчĕ. Пĕр тĕлте, асăрхарĕ хĕр, ун куççуль те тухрĕ пулас, хăй те сисмерĕ, куçне шăлкаларĕ, темле ăнланмалла мар мăкăртатса хускалса илчĕ. Унтан хĕр аллинчен хăюллăнах ярса илчĕ те темле питĕ тĕмсĕлсе пăхма тытăнчĕ. Карина малтан хăй те пăшăрханса ӳкнĕччĕ, арçын ун аллине вăрттăн чуптуса илнине курсан лăпланчĕ. «Куç пăврăм!» — шутларĕ вăл. Çапла-ши е урăх сăлтав — калама хĕн. Çав кино хыççăн вара вĕсем, чăн та, уйрăлмарĕç. Микул ăсатса яма пулчĕ, Карина хирĕç пулмарĕ. Хула тăршшĕпех çуран утрĕç, мĕн çинчен кăна калаçмарĕç пулĕ... Пĕр пытармасăр, пĕр-пĕрне питĕ хисеплесе, мĕн пĕрлештерчĕ-ха пире тесе пычĕç. Чунĕсем темле питĕ-питĕ пысăк ĕç тума, питĕ илемлĕ пурнăç тума вăраннă пек пулчĕç. Çапла пĕрле утни ахальтен мар ĕнтĕ вăл, чăн та... Куç пăврăм тени те мар кунта, ĕç пĕрре те унта мар, хĕр çакна хăех, никам каламасăрах ăнланчĕ. Вăл юратса пăрахрĕ, паллă! Киле çитнине те сисмерĕç. Тем тумалла ĕнтĕ халь, чĕнмелле ăна хăнана е чĕнмелле мар тесе шутласа пыратчĕ-ха хĕр, алăк кутĕнче сывпуллашма вăхăт çитсен чăтаймарĕ, чей ĕçме те пулин кĕрсе тухма ыйтрĕ. Пĕлчĕ-ха вăл, сисрĕ хăйĕн чунне, пачах урăх шут тытнине, чармарĕ, пултăрах, çак тĕнчере мĕн пулмалли пултăрах терĕ. Куç пăвни хăйне каялла ахрăм евĕр пырса çапнине те ăнлансах илеймерĕ. Унăн çак самантрах, çак каçах Микулăн, пĕтĕмпех çак арçыннăн, пулас килсе кайрĕ. Çавăнпа чĕнчĕ те.

Микул та сисрĕ пулмалла çавна, вăл та вăтанчĕ, вăл та турă хушнине хирĕç тăраймарĕ. Шăпа терĕ-ши? Хĕр пӳлĕменче, — вăл общежитире пурăнатчĕ, — таса та çутă. Ку та килĕшрĕ. Микул малтан чей пиçессе кĕтсе Карина панă альбома пăхса ларчĕ. Альбомра, курчĕ, паçăртарах çул тăршшĕпех каласа панă хĕр пурнăçĕ тепĕр хут куç умне тухрĕ. Акă Карина, пĕчĕкскер!.. Акă вăл шкулта...Ку вара Атăл хĕрринче пулас. Шыва кĕмелли костюмпа кăна... куçа шартарса ярасла пăхса тăрать. Çав альбомрах ун ашшĕ-амăшĕ, çамрăк чухнехисем те, ватăлсан та... Питĕ кăмăллă çынсем пулас, пĕрре пăхсах курăнать. Альбом пăхса ларнă вăхăтра Карина ун çумне темиçе хут та пыра-пыра ларчĕ, сăнӳкерчĕксене кăтартрĕ, ăнлантарчĕ. Кайран чей ĕçрĕç, музыка итлерĕç. Пӳлĕмре каллех инди халăх юрри кинори пекех

тепĕр хут чуна кăтăкларĕ, каллех çав паçăрхи асамлăха кĕртсе ÿкерчĕ. Чĕрисенче юрату вучĕ ялкăшрĕ. Такам тĕртсе ячĕ тейĕн — пĕр ытама кĕрсе ÿкрĕç. Тин кăна çуралнă анчăк çурисем пек хăтланкаларĕç. Ал-урисем пĕр-пĕрне хăйсемех хыпашласа тупрĕç, мĕн тумаллине пĕтĕмпех турĕç. Кам пуç пăврĕ вĕсене, хĕр хăй-и е шуйттан — калама çук. Пĕр кĕлетке пулса чăмăртанса ларчĕç те тăнĕсене йăлт çухатрĕç. Вĕсем халь пĕр чунлă, пĕр ĕмĕтлĕ пулса пурăнма пуçларĕç. Малтан урай тăрăх çăмха пек кусса кайрĕç, унтан пĕр-пĕрне чуптума, хывăнтарма тытăнчĕç. Пĕр вăтанмасăр, пĕр хистемесĕр аппаланчĕç вĕсем. Кунта пÿлĕмре мар, пачах урăх тĕнчере çÿреççĕ тейĕн. Çăтмахра та пулчĕç, тамăка та кĕрсе курчĕç... Ним те мар вĕсене çын сăмахĕ, çын куçĕ... Малтан мĕн пулнине те, кайран мĕн сиксе тухассине те асра тытмарĕç. Юрату куçĕ иккĕшне те пăвса лартрĕ. Ĕмĕрлĕхе, уйрăлми... Çак самантран пачах урăх çынсем пулса тăчĕç. Анчах çавна вĕсем пĕлмерĕç те... Ыттисемшĕн те ним те улшăнмарĕ. Пÿлĕмре кăна пĕр вĕçĕмсĕр инди юрри янăранă вăхăтра пур çĕрте те мĕлке ташши кăна пулчĕ.

## УХМАХХИСЕН КАРАПĔ

Вăл кулатчĕ, каçăхса кайса кулатчĕ. Хаваслăччĕ унпа пĕрле пулма, ун пекех каçăхса кайса кулма. Халăх та, ухмах курăк çинĕ тейĕн, каçăхса кайсах кулать, ташлать, юрлать, ĕрлешет...

Аслă Атăл кăна шăп. Унăн хумлă-хумлă пĕркеленчĕклĕ питĕнче хăвăрттăн кăна шуса пыракан карап мĕлки тата шыв çинех тайăлса пăхакан çын пуçĕсемпе кĕлеткисем курăна-курăна каяççĕ. Шыв пичĕ вĕсене темле кукăртса кулăшла туса кăтартать. Карап çинчисем тути-çăварĕсене карса пăрахнă, куç-пуçĕсем чармак пек... Кам мĕн тума пултарать, çавна тăвать пек. Çапла тума пулăшаканни те пур. Ăна конферансье теççĕ.

Çав астарнипе кулать те вăл. Хăйĕн те ĕнтĕ, мĕн тăвăн, кулас-ташлас килет. Акă ертсе пыраканни Атăл çинчен хывнă юрăсене кам мĕнлине пĕлет, çавна юрласа пама ыйтать. Çакă кирлĕ пулчĕ те ăна. Сасси ун темле хăйăлтатса тухать те хăлхана хăйăрса кĕрсе каять, чĕрене чăрмалать, тарăхтарать. Микрофонпа та питĕ хытă илтĕнет. Мĕн-ма чармаççĕ-ха пĕрех хут! Куçкĕретех, лайăх юррах пăсать... Ăна эпир, астăватăп, çамрăк чухне пуçа каçăртса, куçа ялкăштарса юрлаттăмăр. Халĕ те юрлас килет. Анчах «На Волге широкой, на стрелке далекой...» юрă

аякка-аякка илсе каять — ку хĕр юрлани мар, хамăр çамрăк чух юрлани аса илтерет иртнĕ пурнăçа. Çапла çав, питĕ инçете юлчĕ пирĕн çавăн пек ташласа-юрласа тăран çамрăклăх. Ун вырăнне халĕ акă...

Конферансье ăс çитерчĕ курăнать — чарчĕ. Лăштах кайрĕ чун. Пĕр самант шăп. Хытса çитнĕ ал-ура та çемçелчĕ. Ман çеç мар пуль çемçелчĕ? Унччен те пулмарĕ — ташлама пуçларĕç. Ташлас та килет çав тепĕр чух, мĕн тăвăн? Илтереççĕ кăна. Микрофонпа вара çав вăхăтра Атăл çыранĕнче темле «Чебоксарская баня» пулни çинчен пĕлтерет конферансье текенни, тĕллесе кăтартать. ГЭС пĕви урлă каçнă чух Атăл миçе метр чакать-ши тет. Миçине пĕлсен пылесос пама пулать. Ку пушшех астарса ярать. Телевизор та паратăп тет тĕп-тĕрĕс каласан. Халăх, ара, ямăт япалана камăн ярса илес килмест пултăр, пĕр авăк шăпланать, шухăша путать. Ара, кам мурĕ пĕлет ăна? Атăла миçе метр çӳле хăпартатпăр тетчĕç-ха — 10—15 метртан кая марччĕ пулас. Çавна кĕтсех шыв илекен вырăнсене мĕнпур япаларан йăлт тасатрĕç, хуласемпе ялсене шыв айне юлаççĕ тесе ватрĕç. Палăртнă пек хăпартас-тăвасси пулмарĕ, пĕр 5—6 метрпах çырлахрĕç. Атăл тăрăхĕнчи пысăк лаптăк шыв айне пулать тет-и кирлĕ пек пĕвелесе хурсан? Мур пĕлет, тупса пĕтер ĕнтĕ халь: те 10 метр, те 110... Шлюза кĕрсе тăратпăр. Атăла алтăрпа айтараймăн тенĕ чăваш. Алтăрпа çук пулĕ те... кунта вара тем тума та пулать. Сисмерĕмĕр те епле каçса кайнине, çӳл енчен, шыв айĕнчен, хĕп-хĕрлĕ пĕве сиксе тухрĕ. Шлюзран шыв юхса тухса кайрĕ. Питĕ хăвăрт антарчĕç Атăла, эпир те унпа пĕрлех аялах анса кайрăмăр. Аннăçемĕн, мĕн тăвас тетĕн, пылесос терĕç те, шутласа пыратпăр. Бетон стена яп-яка, темле курăкпа йăлмакланнă. Темле шутласан та вĕçне тухаймăн, те 10 метр, те 8 — никам та пĕлмест. Пĕрех кашниййĕ хăй шутланине тĕрĕс тет: телевизорĕ мар пулсан та, пылесосĕ ман пулать тет. Шлюзран тухрăмăр кăна, халăх тата хытăрах савăнса кайрĕ. Юрă-ташă юхса тăрать. Хăйсем ни юрлама, ни ташлама, тĕрĕссипе каласан, пĕлмеççĕ. Сăмахĕсене те маннă, кĕввине те пăсаççĕ.

Ертсе пыраканĕ каллех çав паçăрхи ыйтăва парса аптратма тытăнчĕ. Пĕри 7 тет, тепри 8... 12 текенсем те пур. Эх, çĕмĕреççĕ пуçĕсене, айвансем, нимле пылесос та, нимле телевизор та çуккине чухламаççĕ-ши вара? Атăл тĕпнех анса хăпараççĕ. Акă пĕр пĕчĕк хĕрача те тĕрĕс каларĕ, те выляса ывăнчĕç, мала тухрĕ. Ăна пĕр пĕчĕк хĕрлĕ тĕслĕ крокодил тыттарса ячĕç. Ку та савăнăç!

Каялла çаврăнтăмăр та каллех кĕтĕмĕр. Хапхине хыççăнах хупрĕç. Шлюз тĕпĕнчен таçтан шыв тапма пуçларĕ. Пире çӳлерен те çӳле Атăл çинех çĕклерĕ. Каллех паçăрхи пекех миçе метр юлчĕ-ха тесе шутласа пыратпăр. Халĕ ĕнтĕ темле хаклă япала паратпăр тесе те астармаççĕ, халĕ хамăрăн çĕкленес килет, çак

шуйттан шăтăкĕнчен тухса Атăл çӳллĕшне çĕкленес тетпĕр, çӳлеллех туртăнатпăр. Çавăнпа шутлатпăр та... 7-5-2-1... Çӳл енчи хĕрлĕ пĕве шыв айне путрĕ. Семафор пĕр-икĕ хутчен хĕрлĕ çутăпа хĕмленсе илчĕ те симĕссĕн ялкăшма пуçларĕ. Карап тапранчĕ. Унпа пĕрле паçăрхи шăв-шав та... Атăл тĕпĕнчен хăтăлса тухнăшăн савăнса ĕнтĕ пурте каллех юрлама-ташлама пуçларĕç. Ертсе пыраканĕ Атăл çинчен кашни миçе юрă пĕлнине тĕрĕслет. Пĕр-иккĕн тупăнчĕç пулас пĕр-икĕ юрă юрлакансем. Унтан хайхи Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисем хăçан тĕпленсе ларнине пĕлесшĕн пулчĕ — никам та астумасть, кирлĕ те мар. Тата такам, пĕр питĕ паллă çын, хăйĕн çырăвĕнче асăннă пулать пирĕн Шупашкара — çав кам пулнине те никам та чухлаймарĕ курăнать. Никама та палламаççĕ кунта, нимĕн те пĕлмеççĕ — ташлаççĕ те юрлаççĕ кăна, тата каçăхса кайса кулаççĕ. Карап çинчисем хăйсем кам пулнине те, ăçтан тухнине те, ăçталла кайнине те пĕлмеççĕ, кирлĕ те мар вĕсене çав япаласене пĕлме.

Тĕттĕмленсех çитрĕ. Хуралса çитнĕ вĕтĕ хумлă тĕкĕр çийĕн карап хăвăртраххăн та темле вăрттăнтараххăн шăвăнса пырать пек. Аякри çутăсем çула пĕр пӳлсе, пĕр уçса тăраççĕ. Юшкăн ларса тулнă çĕртен хĕрлĕ бакен пуçне тайса пăхса тăрса юлать. Çыран хĕрринчи шыв çинех пек чĕртнĕ кăвайт та чуна темле тунсăхлăн пĕçертсе илет. Ун çути шыв çине ӳкнĕ. Карап патнех. Çул хывнă. Сик те утса кай. Анчах юрамасть. Сик кăна — пулатăн та вилетĕн Атăл авăрĕнче! Вăн епле тарăн вăл. Пĕвеленĕ те — тата тарăнланса кайнă. Сана кăна мар, такама та путарĕ. Шыв варрине тăрса юлнă йывăçа та, чиркĕве те, кив хулана та... Кĕлĕ те каласа ĕлкĕреймĕн. Чăн та, кĕлĕ каласа тăрасси пулмарĕ. Карап çыран хĕрнелле çул тытрĕ, юлашкинчен тенĕ пек, кĕлĕ вырăнне пулчĕ пулĕ, ертсе пыраканĕ хăй те чăтаймарĕ — юрласа ячĕ.

Мĕн вара, мĕн вара,
Юрламалла мар-и-ха?
Ачи каять, ачи каять,
Последний сын тюрьма каять.
Шейк! Шейк!.. —

янăрарĕ хура Атăл çийĕн чăвашла-вырăсла темле «Шейк» ятлă юрă. Каçăхса кайса кулчĕ халăх. Каçăхса кайса кулчĕ вăл та! Атăл кăна паçăрхи пек шăп выртрĕ. Кантăк пек хытрĕ, таврара мĕн пулса иртнине хальхинче тĕп-тĕрĕс, пĕр пăсмасăр кăтартрĕ. Шывăн якалса çитнĕ питĕнче тарăху та, савăнăç та пулмарĕ. «Шейк! Шейк, шейк! Мĕн вара, мĕн вара... Едем, едем в Канаши!» — ахăрчĕ те пĕр сас, Атăл шарламарĕ.

# ТĂМ ЧĔЛХЕ

Пĕр вĕçĕмсĕр халтăртатса пыракан автобуса вăл хăçан тата ăçта кĕрсе ларнине никам та асăрхамарĕ. Сахал-им кунта ун пеккисем, ялти пек тăхăннисем? Кĕреççĕ те тухаççĕ, каллех кĕреççĕ... каллех тухаççĕ...

Хăйне хăюсăртарах тыткалакан каччă çакна тепĕр самантранах ăнланчĕ пулас. Пур-çук укçине ухтаркаласа касса патнелле утрĕ. Чиперех пыратчĕ вăл пушă салонпа, касса умĕнче кĕпĕрленсе тăракан çынсем патне çитсен вара тăпах чарăнчĕ. Кĕсйисене тата хытăрах ухтарма тытăнчĕ. Вак укçа тем пек шырасан та тупăнмарĕ.

Касса умĕнчисем хĕрсех тем пайларĕç, пĕр-пĕринчен санăн миçе тенкĕ пур тесе ыйтса хăшкăлчĕç. Сантăр та ыйтасшăнччĕ — тем пулчĕ, ахаль чухне чиперех çаврăнкалакан чĕлхе хускалмарĕ те. Сывлăш çитмен пек кĕскен-кĕскен кăна сывларĕ каччă. Калас сăмахĕ карланкине ларчĕ -ши? Чăнах та акă вăл пĕр аллине кăкăрĕ çине хучĕ, тепринче темле хутаçчĕ — пичĕ-куçĕ темрен вăтаннă чухнехи пек хĕремесленсе-кăвакарса кайрĕ. Çакна юнашарах мăнкăмăллăн пăхса ларса пыракансем те асăрхарĕç-и тен — пичĕсенче кулă çиçрĕ.

Сывлăш çулĕ çапла питĕрĕнни Сантăра хăйне те тĕлĕнтерсе ячĕ. Ялта мĕн чухлĕ пурăнса та кун пеккине нихăçан та асăрхаман вăл. Халĕ вара? Чĕре сикет, пуç анкă-минкĕ. Çын умĕнче çапла тăма епле намăс тата? Акă ĕнтĕ ал-ура вĕри шыва чикнĕ чухнехи пек вĕриленчĕ, питçăмарти çунсах тухать.

«Сирĕн вак укçа пур-и?» — тесе çех ыйтмаллаччĕ вĕт-ха унăн. Ытти çынсем пекех ыйтмаллаччĕ. Пĕтĕм хусканăвĕпе эпĕ ялтан килтĕм тесе тăмалла марччĕ! Вара, тен, карланка та çапла пăвса пăрахмастчĕ.

Кĕтмен çĕртен пырса çапнă шалкăм чирĕ, тен, иртсе те каятчĕ — кам пĕлет. Анчах ун пек пулмарĕ. Ача чăтса тăраймарĕ, укçа пайлакан ушкăнран уйрăлчĕ те алăк çумĕнчи кĕтесе кайса тăчĕ. Автобус халтăртатни кунта тăнă чух тата хытăрах илтĕнет, хушăран пуçа маччана лектерес пекех сиктеркелесе илет. Пăрăнчăксенче сулăнтарсах ярать, шукăль тумланнăран тата чипер курăнакан хĕрарăмсем çумне пырса перĕнес мар тесен мĕнрен те пулин тытса кăна ĕлкĕр. Унсăрăн? Унсăрăн мĕн килсе тухассине пĕлместчĕ-ха вăл. Пĕр билетшăнах вакки çук пирки пысăк укçа яма хатĕрленсе тăратчĕ. Автобус кĕтмен çĕртен тăп чарăнсан, пыршă-пакартă-мĕнĕпех туйса илчĕ хăйĕн айванлăхне, алăкран çӳлерех çапнă хăлăпран вăхăтра тытайман пирки умра тăракан майра çумне хытах пырса çапăнчĕ. Лешĕ — теприн çине. Усал çил хускалчĕ тейĕн. Çынсем ура айĕнчи курăк пек

пĕр харăс тайăлса илчĕç. Хăш-пĕрисем йăвансах кайрĕç. Чарăнса тăнă автобус тапранса кайма та ĕлкĕреймерĕ. Çынсем пĕрпĕрин çине халь-халь сиксе ӳкес пек пăхса илчĕç те усал сăмахсем каласах вăрçма тытăнчĕç. Илемлĕ тăхăннă майра та вĕсенчен юлмарĕ. «Ходят тут всякие, — шăл витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ вăл сăмахĕсене, — сидели бы в своей деревне».

«Эпĕ мар, шофер айăплă», — тесшĕнччĕ Сантăр, ĕлкĕреймерĕ. Хĕрарăм ун çине тата йĕрĕнерех пăхса илчĕ те: «Лапотник», — тесе хушса хучĕ. «Хăвăр вара кам, хăвăр та ялтан тухнă», — çапла каласшăнччĕ айăпа кĕнĕ пек туякан ача. Пулмарĕ. Таçтан такам ун карланкине паçăрхи пекех хытăран та хытăрах пăвма пуçларĕ. Калассисем вырăнне Сантăр темле пачах урăхла сăмахсем персе ячĕ. Майра хăлхине пырса кĕчĕç те йӳçĕхтерсех ячĕç пулмалла вĕсем. «Иçвините, не путту», — йĕкĕлтешрĕ вăл. Чĕрре кĕнĕçем татах Сантăр ăнланман темле сăмахсем хушса хучĕ. «Чувак», «иностранец», «Василь Ваныч» тенисем пуçа анратсах пăрахрĕç. Вĕсен пĕлтерĕшне ял ачи ниепле те тавçăрса илеймерĕ. Начар сăмахсем, паллах. Вĕсене каланă чух майра тути темле кукăр-макăр. Айăпа кĕнĕ ача çавна чиперех асăрхарĕ.

Пăчă, тусанлă салонра Сантăр хăйне шывран кăларса пăрахнă пулă пекех туйрĕ. Сывлăшĕ те, шывĕ те, сăмахĕ те... пĕртте ялти пек мар. Пурте урлă-пирлĕ, айăн-çийĕн. Автобусне тытамак тытнă. Чипер пынă çĕртех тăрук чарăна-чарăна илет, алăкне уçнă-уçман тусан палкаса кĕрет, шалта тем хăлтăртатать, çапăнать... Шоферĕ пĕр вĕçĕмсĕр: «Выход через перетний дверь. Са песплатный проес штраф», — тет.

Микрофонсем витĕр вăйланса тухнă сасă Сантăр чĕрине хĕскĕч пек чĕпĕте-чĕпĕте илет. Ахаль те шăрăх пулнипе-и, тен, çамка çине кашнинчех тар тапса тухать. Кĕсье тĕпне çыпăçсах ларнă юлашки укçине йĕпе аллипе пĕрре кăна мар хыпашласа пăхрĕ-ха вăл. Укçа вырăнтах! Штраф-мĕн парсан тӳлемелĕх пур. Илмелле те-ха билетне. Тем чарса тăрать? Вакласа пама ыйтас, камран ыйтмаллине пĕлместĕн, кĕрен-тухакансем пурте «мелочь не бросайте» теççĕ те билетлă пулаççĕ. Ун вара мĕн каламалла?

Аптранă енне ача ун-кун пăхкаларĕ, автобусран халь-халь тухса тарас пек, пĕр çĕрте тапăртатса илчĕ. Анса юлĕччĕ — вырăнсем паллă мар. Ыйтас, çăварлăхланă тейĕн. Темле «агрегатный» урам тенĕччĕ килтен тухса кайнă чухне ăна ашшĕ. Тен, çакăнтах? Хупхура тĕтĕм кăларакан трубасем ăна асамлă кăкшăмсем пекех туйăнса кайрĕç, леш «Старик Хоттабыч» кĕнекери пек. Асамçă джин сиксе тухĕ те акă...Пăхрĕ-пăхрĕ, джин вырăнне ача куçне темле аçтаха курăнса кайрĕ. Тем вăрăмăш хăй! Хӳри хула çинех тăсăлса кайнă. Пусмăрласа вĕлерет вĕт ку! Мĕншĕн хирĕç тăмаççĕ? Автобусри ача самантлăха Сарри паттăр пулса тăчĕ. Хĕçне туртса кăларчĕ, пĕрре сулса ячĕ, тепре... чыхăнса кайрĕ.

Кăххăм-кăххăм! Кăххăм-кăххăм! Салонра ларса пыракансем каçса кайсах ÿсĕреççĕ. Аллисемпе хăйсем пурте карланкисенчен ярса тытнă. «Акрекатный», — илтĕнчĕ çав вăхăтра ыттисемпе пĕрле чыхăнакан репродуктортан. Яри уçăлса кайнă алăкран тусан палкаса кĕчĕ. Якăлт çеç сиксе юлчĕ Сантăр. Ачапа пĕрле хăпса тухнă халăх трубасем патнелле васкарĕ. Сасартăк паçăрхи аçтаха аса килчĕ. «Çук, çапăçма мар, пачах урăхла, ун патне ĕçлеме каяççĕ вĕсем, — тавçăрса илчĕ Сантăр. — Вăрçа тесен, хĕçпăшаллă пулмалла».

Темле ала витĕр тухнăн тăр-пĕччен тăрса юлчĕ Сантăр. Ăçта каймаллине те пĕлмест, камран ыйтмаллине те курмасть. Умра — темле площадь. Шăп. Аптранипе çывăхри тенкел çине сĕвенчĕ. Лăштах кайрĕç ывăнса çитнĕ урасем. Ӳт-пӳ канлĕн туртăнса илчĕ. Кил аса килчĕ. Эх, епле аван пулĕ халĕ Мучаркассинче? Уçă çил пырса çапать те, пӳрт çумĕнчи тирексем пĕр кассăн хускалса илеççĕ, чăхсем кăтиклеççĕ...

Самант — шатăр-шатăрр! йăтăнса анчĕ тĕнче. Сантăр таврă чăхсем мар, мотоциклсем явăнаççĕ иккен. Хура сăран тумлă «юланутçăсем» темĕн ахăраççĕ, ăнланма çук. Тусанлă пичĕсемпе куçлăхлă куçĕсем тата шап-шурă шăлĕсем кăна курăнаççĕ. Юн шăршине риснĕ пăвансем пек явăнаççĕ ача тавра. Ку хурçă ункăран тухса тарас тесен те тухса тараймăн. Шак хытса кăна тăма тивет. Çапла турĕ те Сантăр. Те çапла туни пулăшрĕ, те йăлăхтарчĕ лешсене — тăруках шăпланчĕç. Пĕри, асли пулчĕ пуль, хытса кайнă ача патне çывхарса пычĕ те: «Деньги есть? Дай на пиво», — терĕ. «Çук!» — тесшĕнччĕ Сантăр, алли хăех туртăнчĕ, кĕсье тĕпĕнчи укçана хыпаласа тупрĕ. Халĕ ĕнтĕ пытараймăн, çук тесе те калаймăн. Çĕлен куçĕ пăвнă пекех туйрĕ хăйне ача. Алли вара... алли укçине тăсса пачĕ. «Лады», — хăрăлтатрĕ çĕлен, çăварне уçрĕ, укçа, шапа пек, кĕсйине сикрĕ. Шатăрр! турĕ тавралăх. Мотоциклсем, пăвансем пек, пĕр кана пăнлатса илчĕç те таçта кайса çухалчĕç, номерĕсене те астуса юлаймарĕ анкă-минкĕленсе кайнă каччă. Савăнчĕ. «Хăтăлтăм», — терĕ пулас. Тенкел çине тепĕр хут ларас терĕ — лараймарĕ. Ăнланчĕ. Кунта ытла пит çывăрса ларма юрамасть. Тем килсе тухĕ тата?..

Ача ун-кун пăхкаласа илчĕ те халăх ăçталла — çавăнталла утрĕ. Утнăçемĕн çуртсем çине çырса хунисене вуласа пычĕ. Хăй ăçтине ăнланса илме тăрăшрĕ. «Улица Октября», «Продукты», «Универсам», «Ателье» — тата ытти темле ятсем мĕлтлетрĕç куç умĕнче. Иртен-çӳренсем кашни çурта тенĕ пекех кĕре-кĕре тухаççĕ. Илни-мĕнĕ курăнмасть, пĕр-пĕринпе тем мăкăртатса илеççĕ те малалла талпăнаççĕ. Сантăр та вĕсенчен юлас темерĕ. Çĕлен тирĕ тĕрĕллĕ чăлха тăхăннă пĕр майра хыççăн ерсе кайрĕ. Ун пек тăп-тăп кĕлеткеллĕ, тулли ураллă хĕрарăма вăл ку таранччен нихăçан та курманччĕ. Ялтисем, кунпа танлаштарсан,

туя пек. Тен, çавӑнпа та тумне те, илемне те асӑрхасах кайман. Ку вара пĕрре пӑхнипех куçа шартса ярать. Кĕпине хыçалтан купарча таранах касса янӑ та... Сантӑр чĕрине ура ярса пусмассерен тем савӑклӑн чике-чике илет. Шак-шак-шак! тӑвать пушмакĕ. Те чĕре тапать, те хӑлхара кӑна илтĕнет. Сисмерĕ те каччӑ — кунччен нихçан та курман тĕлĕке кĕрсе ӳкрĕ. Унӑн хытса куштӑркаса кайнӑ алли çав хĕрарӑмӑн чи çавракa та чи çемçе вырӑнĕсене сĕртĕнет пек. Чĕри сиксе тухас пек тапать, паçӑрхинчен те савӑкрах тапать... Шак-шак! турĕ те малтанхи кĕвĕ тӑрукак чарӑнса ларчĕ. Сантӑр ĕлкĕреймерĕ, чӑрр! пӑхакан куçсем çинех пырса тӑрӑнчĕ. Хаяррӑн та кӑшт куларах пӑхаççĕ вĕсем. Куна кĕтмен каччӑ ирĕксĕрех каялла сиксе ӳкрĕ. Пĕр утӑм турĕ каялла, иккĕ. Çук, тарса каймарĕ вӑл. Çав çул çинчех тӑрса юлчĕ. Тем калас терĕ — калаймарĕ. Тути çеç хӑлха илтмелле мар тем мӑкӑлтатрĕ. Питçӑмартисене шалтан тухакан вĕри пырса çапрĕ.

Çакна курса тӑнипех пуль вӑрçма тесе чӑмӑртаннӑ майра тути тутлӑ çырла пекех ирĕлсе кайрĕ. Кӑлтӑрр! кусса кайрĕ кулли хура асфальт тӑрӑх пушмак сасси хыççӑн. Кусса кайрĕ те çухалчĕ. Куçĕпе майра Сантӑра ура тупанĕнчен пуçласа пуç тӳпи таранах хыпашласа тухрĕ. Паллах, пиçĕ пиртен çĕленĕ пушмакне те, клеш янӑ тахçантанпах якатман шӑлаварне те, çитсӑ кĕпине те — пурне те, пурне те асӑрхарĕ. Унтан тӑрукках:

— Щеки-то у тебя какие, и брови прямые, — тесе хучĕ. — Ищешь кого?

— Родной пиччене ищу.

Сӑмахĕсем ӑнланмалла мар вырӑсла-чӑвашла хутӑш тухни Сантӑра тĕлĕнтерсех пӑрахрĕ. «Тӑван пичче пурӑнакан çурта шыратӑп», — тесе каласшӑнччĕ вĕт-ха вӑл. Мĕн пулчĕ вара тутана-карланка? Киремет тытмарĕ пулĕ те?

— А нашел сестрицу, — каллех кӑлтӑрр! кулса ячĕ майра. — Ну, не бойся, рассказывай.

— Ленина, том тринадцать нато.

— Ленин урамĕ, вунвиççĕмĕш çурт те.

— Эсир чӑваш-и? — савӑнса кайрĕ Сантӑр. — Эп кунта, Шупашкарта, пурте вырӑссем тесе.

— Пурте мар, тӑванӑм. Сан пек шухӑшлакансем вара, чӑнах та, çук мар. Пусарса лартаççĕ те чунĕсене куçĕсене тартаççĕ — пуçлаççĕ вара вырӑсла калаçма. Чӑваш пулнине, страус хӑйĕн пуçне пытарма хӑтланнӑ пек, пытарма пӑхаççĕ. Чӑвашлӑхĕ вара пĕрре пӑхсах çур çухрӑмранах курӑнать. Эсĕ те пулин, ял ячи, мĕне пĕлсе вырӑсла пĕли-пĕлми пакӑлтататӑн-ха?

— Эп хам та ӑнкарса илеймерĕм-ха ӑна. Тем усал вӑй кĕрет, кансĕрлет тейĕн. Тĕрĕс калама тӑнӑ сӑмах ӑнланмалла мар улшӑнса, хуçӑлса тухать. Кулӑшла, — сӑмахĕсемпе пĕрле кулам

пекки турӗ Сантӑр. «Каҫарӑр ӗнтӗ мана куншӑн»,— тени пулчӗ ӗнтӗ ку.

Шукӑль тумланнӑ майра чӗнмерӗ. Унтан тӑруках чарӑнса тӑчӗ те: «Акӑ кур, эпӗ ҫак ҫуртра пурӑнатӑп, ав ҫав симӗс балкон, куратӑн-и, унта ман хваттер. Мӗн май килсен-килмесен те кӗрсе тух, калаҫӑпӑр. Эс шыракан ҫурт вара ҫул вӗҫӗнче пулать. Ҫитсен хӑвах курӑн».

Майра ҫӑтмахри пирӗшти пек илӗртӳллӗн пӑхса илчӗ те иртен-ҫӳренпе хутшӑнса утса кайрӗ, ҫаврӑнса пӑхрӗ, алӑ сулчӗ. Куҫ илмесӗр пӑхса тӑракан ача умӗнчен самантрах ҫухалчӗ.

Сантӑр та малалла утса кайрӗ. Пиччӗшӗн килне часрах ҫитес килчӗ унӑн. Унта анчах канлӗ пулассӑн туйӑнчӗ. Ҫук, унта та ӑнӑҫлӑ килсе тухмарӗ. Шаккарӗ-шаккарӗ — уҫакан пулмарӗ. Сантӑр кӗтме шутларӗ. Пусма картлашки ҫине ларчӗ те сисмесӗрех ыйха путрӗ. Аякри ҫул, мӗн калӑн, ӗшентерет...

Тӗлӗк куракан марччӗ вӑл. Курсан та, ҫывӑрса тӑнӑ-тӑман манса каяканччӗ. Хальхинче вара астусах пычӗ. Хӑрушӑ... Вӑл темле палламан вырӑнта пек. Малта та, хыҫалта та ҫеҫенхир. Пуҫ тӳпинче пӗлӗт, ура айӗнче кӑлкан. Вӑл хӗвелтухӑҫнелле пӑхса пӗр хускалмасӑр тӑрать. Юпа тейӗн. Сантӑр утма тесе урине ҫӗклесшӗн. Ӑҫта унта? Ун урисем, аллисем, пӗтӗм кӗлетки ҫӗрпе пӗрлешсе кайнӑ. Чуллансах ларнӑ. Тӗлӗнсе тӑнлать хӑйне хӑй Сантӑр. Тин ҫеҫ ҫил пек вӗҫтерсе ҫӳретчӗ вӗт-ха вӑл ҫеҫенхир тӑрӑх. Тӑшман хӑрамалӑх кӑшкӑратчӗ, чун канмалӑх юрлатчӗ, тӑван юратмалӑх калаҫатчӗ... Мӗн пулса тӑчӗ унпа халӗ? Ни юрлама, ни калаҫма, ни хускалма, ни... Кам чуллатса хӑварнӑ ӑна? Миҫе ҫӗр ҫул тӑрать вӑл ҫапла? Миҫе хутчен килсе хупламарӗ пулӗ хӗллехи ҫил-тӑман, миҫе хутчен аслатиллӗ ҫумӑр айне пулман? Тем те пулнӑ, тем те курнӑ. Ахальтен-им чул тум тӗлтӗл ҫуркаланса пӗтнӗ? Вӑхӑт иртет, чул та ҫӗтӗлет. Тен, Сантӑр та хӑтӑлса тухӗ-ха? Урана кӑна ҫӗклесчӗ. Шухӑшларӗ кӑна — шӑнкӑрт! турӗ, типсе ҫитнӗ пылчӑк пӗр татӑк хӑпӑнса ӳкрӗ. «Аха!— савӑнса кайрӗ Сантӑр.

— Хускалма май ҫук тӑк, шухӑшла! Нумай та хӑвӑрт шухӑшласан — хӑтӑлатӑнах! Эх, чупса тухасчӗ халӗ Мучаркасси хӗррине! Ҫитсе курасчӗ Шупашкар хулине...

Ӳкрӗҫ те ӳкрӗҫ ура айне тӑмлӑ чул катӑкӗсем. Ҫӑмӑллансах пычӗ. Унччен те пулмарӗ — ҫеҫенхир темле хӑрушӑ сасӑсемпе тулса ларчӗ. Сантӑр малтан чул кӗлетке ҫапла ишӗлет тесе. Ҫук иккен. Ун тавра — камсем пулӗ тетӗр? — паҫӑрхи мотоциклистсем хура ҫӑхансем евӗр ҫаврӑнма тытӑнчӗҫ. Шатӑр та шатӑр тӑватьавралӑх. Темле хӑрушӑ сасӑсемпе усал сӑмахсем илтӗнеҫҫӗ. Ахӑрсамана ҫитрӗ тейӗн. «Чул чӑваш, чул чӑваш, тухаймастӑн, тухаймастӑн...» — шӑл йӗреҫҫӗ хура ҫӑхансем. Унччен те пулмарӗ — чулпа пеме тытӑнчӗҫ. Тӗлӗнмелле! Ӳт, чуллӑ пул-

сан та, ыратать-мĕн. Тăнн! пырса çапрĕ тăнлавран чышкă пысăкăш чул татăкĕ. Чăтса тăраймарĕ Сантăр, пĕчĕк ача пек кăшкăрса ячĕ. Тем пулчĕ тĕнчене — вăл пĕрре кисренсе илчĕ, тепре... Ун тавра ахăракан мотоциклистсем самантрах таçта кайса çухалчĕç. Шапăр шуса анчĕ çĕтĕлсе пĕтнĕпе пĕрех чул тумтир. Çăмăллăн сывласа ячĕ кăкăр. Ал-ура ирĕклĕхе туйса хăй тĕллĕнех хускалса илчĕ. «Утăр-я-я!» — кăшкăрса ячĕ Сантăр.

— Мĕн пулчĕ, шăллăм? Кампа çапăçатăн эсĕ? Тĕлĕк курмастăн пулĕ те? — хăлхана пырса кĕчĕç пиччĕшĕ каланă сăмахсем. Сантăр вăранса кайрĕ. Вăл çавăнтах, подъезд алăкĕ çумĕнчех, ларать-мĕн. Умĕнче йăл-йăл кулкаласа пиччĕшĕпе инкĕшĕ тăраççĕ.

Пиччĕшĕ ун типшĕм, пысăках мар. Халĕ вара çӳлтен аялалла пăхнăран мăнă курăнать. Арăмĕ — сарлака питлĕ. Куçĕ кăнкăвак. Чăваш тесе те калаймăн. Йĕри-тавра хĕвелçаврăнăш пек пăхкалать.

— Эпĕ çывăрсах кайнă-мĕн, сисмен те, — аван мар туйрĕ Сантăр. Сиксе тăма пăхрĕ — пулмарĕ. Пĕтĕм шăмми-шакки хытса ларнă. Бетон урайĕнче выртса-тăма юрать-и вара? «Вăт тăмпуç!» — вăрçса илчĕ Сантăр. Ашшĕпе амăшĕ тахçан асăрхаттарса каланисем аса килчĕç. «Чирлесе ӳкмесен юрĕ», — ăшра кăна пăшăрханчĕ Сантăр. Çапла выртни намăс пек пулчĕ. Вĕриленсех кайрĕ. Таçтан вăй тупăнчĕ, якăлтах сиксе тăчĕ. Хутаçне те хăвармарĕ.

Пиччĕшĕпе инкĕшĕ çаплах кулкаласа пăхса тăчĕç-ха. Сăмах хушмарĕç. «Ăçтан шуйттан шăтăкĕнчен сиксе тухрĕ ку?» — теççĕ пулинех Сантăр çине темле шанмасăртарах пăхса. Унăн шалпар шăлаварĕпе тусанланса пĕтнĕ пушмакне кураççех, паллах. Карттусĕ те ун, хутаçĕ те... Ыйткалакан евĕр туйса илчĕ хăйне хăй ача. Çĕр тĕпне тепĕр хут анса каясси кăна юлчĕ. Анса кайĕччĕ те — бетон ямасть. Сантăр кулса илчĕ. Кăлтăр-кăлтăр кăна, ăшра кăна. Килте пулнă пулсан халĕ...

— Анне мĕнле унта? — ыйтрĕ пиччĕшĕ. Кулли тути çинчен каймарĕ.

— Сире салам калама хушрĕ, — асли пекех тыткалма тăрăшрĕ Сантăр. Анчах тути чалăш кайрĕ. Сăмахĕ те темле йĕкĕлтенĕ пек. Ара, чăнах та, пĕр виçĕ çул та иртрĕ пулĕ пырса курнăранпа. Унтанпа Сантăр акă вăтам шкул та пĕтерчĕ.

— Ну, атя кĕр, — кăмăлсăррăн чĕнчĕ пиччĕшĕ.

Яри уçăлса кайнă алăкран, — темле килсе тухрĕ, — Сантăрăн чăн малтан кĕме тиврĕ. Хăна хаклăрах терĕç пуль. Вăт сана, кĕнĕ-кĕменех пуçпа таçта пырса çапăнма тиврĕ. Шалта тĕттĕм: утма мар, пĕр утăм тума та хăрушă. Унччен те пулмарĕ — пӳлĕм тăрăх тем чанкăртаттарса кусса кайрĕ. Çав вăхăтрах куçа шартарса лампочка çутăлса сӳнчĕ. Ку питĕ хăвăрт пулса иртрĕ пулин те, хăй темле вăрăм коридорта тăнине тата ун вĕçĕнче темле

шап-шурă çÿçлĕ карчăк çурма уçă алăкран пуçне кăларса пăхнине ача уççăнах курчĕ. «Ну, хисеплерĕç тĕк хисеплерĕç, пĕлмен çĕре мĕн тума малтан кĕртсе ямалла пулчĕ-ха вĕсен?» — тарăхса шухăшларĕ хăна каллех тĕттĕм коридор стенине хыпашлама тытăнса.

— Ан хăра, — кулса ячĕ пиччĕшĕ. — Это старуха проверяет, соседка. Она сама боится.

— Испугаешь ее! И кто только сделал так, уму непостижимо. Я бы этому электрику глаза повыцарапала, если...

Инкĕшĕ мĕн калас тенине каласа пĕтереймерĕ, çăвара кăна мар, куçа та алăпа хуплама тиврĕ. Куç хăнăхса çитсен ку тĕпсĕр шăтăк пек туртса кĕрсе кайнă коридора Сантăр тепĕр хут пăхса çаврăнчĕ. Чăн та, вăл вăрăмран та вăрăм-мĕн. Çутă пускăчĕ, мăшкăлласах лартнă пуль, чи вĕçĕнче. Ун патне çитме çăмăл мар. Çул çинче ача коляски, темле калушсем, стена çумнех йĕлтĕрсем тăратса тухнă. Мĕнле пырса çапăнмăн? Карчăкĕ тата кам? Вăл çак алăкран курăнчĕ мар-и? Тачă хупман алăк хальхаль тепĕр хут уçălса каяссăн туйăнчĕ Сантăра. Уçăлса кайĕ те — унтан каллех леш шап-шарă çÿçлĕ карчăк сиксе тухĕ...

— Мĕн хытса тăран? Хыв пушмакусене, ялта мар вĕт!

Инкĕшĕн сăмахĕсем темле кÿренÿллĕн янăрарĕç. Ялта сыснасем пек пурăнаççĕ теççĕ-ши? Ялта, тепĕр тесен, хуларинчен те таса. Кунти пек хăсса, шăрса пĕтермен...

Сантăра виççĕмĕш хута хăпарнă чух сăмсана çурасла капланнă шăршă кăна мар, паçăр асфальтпа утнă чухнехи тасамарсем аса килчĕç, кăмăла пăтратсах ячĕç. Кам çав териех варалаҫа тухнă-ши вĕсене, çав тротуарсене, çак шукăль тумлă майрасемпе арçынсемех-ши? Кам пултăр урăх, кам уттăр хула урамĕ тăрăх?

— Атя хывмасан та юрĕ, кĕр, — коридора тухакан пĕр алăка уçнă-уçман чĕнчĕ пиччĕшĕ.

— Мĕнле кĕр, мĕнле кĕмелле пултăр? Юхха карчăк хыççăн пуçтарса пурăнни çитмест, халь шăллу хыççăн пуçтармалла-и?

Сантăр аванмарланса кайрĕ. Чăн та, ун хыççăн пуçтарса çÿреме, мĕн, инкĕшĕ айăпа кĕнĕ-им? Пушмакĕ те пылчăклăччĕ ун, чăлхи те тасах марччĕ. Çул çинче юрать тесе тăхăнасса та вăл начартарах тăхăннăччĕ. Çавна аса илчĕ те ача ÿкĕнме тытăнчĕ. Мĕн тума кансĕрлесе çÿремеллеччĕ, каймаллаччĕ общежитие... Çук терĕç те! Ăт халь урусене пытаркаласа лар...

Ни чĕнме, ни хирĕç тăма пĕлмерĕ. Хулара ÿссе çитĕннĕ пулсан çавăрса хуратчĕ пулĕ те-ха. Кунта, ют çĕрте, хăюсăрланчĕ. Пÿлĕмри кивĕ сервантпа темле çавра сĕтел çине ним ăнланмасăр пăхрĕ те пăхрĕ, кухньăра пиччĕшĕпе инкĕшĕ тем тавлашни — ун пиркиех пуль — пуçа кĕмерĕ. Хăйне вăл пĕчĕккĕ пек туйрĕ, килте пек. Ир-ирпе çапла, кĕр енне кайсан, ăшăнма тесе хĕвел çине

тухса ларатчӗ вӑл. Урисене те ҫапла хутлататчӗ. Ӑшӑччӗ, лӑпкӑччӗ...

Ҫав вӑхӑт мӗн-ма аса килчӗ-ха? Мӗнле хӳтлӗх шыраса пырса тухрӗ ӑстӑн ҫав тӗле? Сурӑх карти ҫумӗнчеччӗ ҫав вырӑн. Ҫав тӗлтех ҫуркуннепе тумла чӑн малтан юхма тытӑнатчӗ. Мӗн чухлӗ ӗммен пуль ҫав пӑрлака, карланкӑ шӑнса пӑсӑласса та пӗлмен вӗт. Халь вара тем пулчӗ, ларнӑ ҫӗртех ача карланкинчен яра-яра илчӗ. Ҫӑварне карса пӑрахсах сывларӗ те сывларӗ кӑкӑр тулли. Паҫӑрах асӑрхарӗ-ха вӑл, хулана пырса кӗрсенех асапланма тытӑнчӗ ҫав темле ӑнланмалла мар чирпе, те чӑнласах сывлӑшӗ начар пулчӗ, те вырӑсла лайӑх пӗлменни пӗтерчӗ — калас тенине калаймарӗ. Тем кӑтӑклантарчӗ карланка, тем чарчӗ... Чӗнмерӗ ача. Чӗнсен ҫӗр сӑмах терӗ-ши? Хутаҫӗнчи кӗнекесене кӑларчӗ, уҫкаласа пӑхкаларӗ. Теоремӑсем, фигурӑсем, формулӑсем... куҫа хупса курса тӑрать вӗсене Сантӑр. Пӗрре кӑна мар вуланӑ, шутланӑ... Лайӑх вӗренетчӗ вӑл. Пӗрре кӑна пӑхса илетчӗ теорема тӗрӗс пулнине ӗнентерекен формулӑсем ҫине, пӗр сӑмах каламасӑрах ӑнланатчӗ. Задачӑсене те ҫапла шутлатчӗ вӑл — шутне тӳрех калатчӗ. Мӗнле шутларӑн тесе ыйтсан кайран ниепле те ӑнлантарса параймастчӗ. Халӗ те пӗлет ку ӗҫ мӗнпе вӗҫленессине, питӗ лайӑх пӗлет. Анчах тем тытса тӑрать, тем чарать ӑна таткӑклӑ утӑм тума. Тен, тӑванӗсене кӳрентересрен хӑрать? Аслисем хушнинчен тухма тӑхтать тен? Ларчӗ те ларчӗ вӑл ура хутлатса, тем ҫинчен те шухӑшларӗ, кунта выртса-тӑма пӗр кравать ларнине те асӑрхарӗ. Тата пӗчӗккине те, — вӑл ача садӗнче пулас, — вырнаҫтармалла.

— Сантӑр, апат ҫиме кил, — чӗнчӗ пиччӗшӗ.

«Ҫук, выҫман», — тесшӗнччӗ Сантӑр, каламарӗ. Сӗтел хушшине пӗр сӑмах чӗнмесӗр, алӑ ҫумасӑр кӗрсе ларчӗ. Алӑ ҫума чӗнессе, шурӑ питшӑлли парасса кӗтрӗ, памарӗҫ. Пӗртте кӑмӑллӑ мар хура алӑпа апат ҫиме. Мӗн кӑна тытман пуль унпа ҫул ҫинче. Автобусри тыткӑчи, алюминирен тунӑскер, ал лаппине механизаторӑнни пек туса хӑварнӑ. Чӗрне хушшисем те тасах мар. Уншӑн та намӑсланса ларчӗ. Пиччӗшӗпе инкӗшӗ сӑмах вакламарӗҫ, ывӑнса килнӗ ӗнтӗ, мӗн калӑн, лӗрӗплеттереҫҫӗ кӑна. Яшкине ӗнерех пӗҫернӗ пулас, темле йӳҫӗ вӑл, ҫӑвар патне илсе пынӑ кашӑкне Сантӑр тепре сыпса илчӗ те — каялла хучӗ. Сӗтел хушшинче ларакансем мар иккен, вӑл хӑй лӗрӗплеттерет. Ара, килте ҫапла ҫиме хӑнӑхнӑ мар-и? Хӑй тирпейсӗрлӗхне асӑрханӑ ачан пичӗ хӗрелчӗ, ҫамки ҫине сивӗ тар тапса тухрӗ, ал-ура шӑнӑрӗсем те хытрӗҫ. Ҫиме те халӗ!.. Май ҫук! Пиччӗшӗпе инкӗшӗ Сантӑр ҫапла асапланса ларнине сисмерӗҫ. Кӑшт лӑпланнӑ хыҫҫӑн асӑрханулӑн, сывламасӑр сыпрӗ Сантӑр турилккене ярса панӑ яшкана. Хӑй мӗн хӑтланнине хӑлха тӑратса кӑна мар, айккинчен пӑхса тӑрса тенӗ пек сӑнарӗ, ыттисем

курманнине те курчĕ. Апат çинĕ вăхăтра коридортан такам, пащăр курнă карчăках пулас, темиçе хутчен те пуçне чике-чике пăхрĕ. Кашнинчех, асăрхамассерен, сивĕнсе-сивĕнсе кайрĕ Сантăр. Ара, вĕсем апат çисе ларнине мĕн-ма сăнать-ха вăл? Тен, ун хырăмĕ выçнă? Çÿçĕ-пуçĕ те ун паçăрхи пекех сапаланчăк, шурă-шурă... Куçĕ тем шырать, шырать, шырать...

Темле асăрханса çирĕ пулсан та Сантăр хăйне хурса пană апата чи малтан çисе ячĕ. Хăвăрт çиме хăнăхнă çав. Килте пур ĕçе те васкавлă тунă, апатне те кăп-кап хыпкаланă та тухса вĕçнĕ. Халĕ те çапла килсе тухрĕ.

— Тавах, тăрантăм! — сĕтел хушшинчен тăчĕ Сантăр.

— Татах ярса парас мар-и? Çул çинче хырăм выçакан, — тараватлă пулма тăрăшрĕ инкĕшĕ, пиччĕшĕ чĕнмерĕ.

— Эх, халĕ, апат çинĕ хыççăн, йăванса каясчĕ, — тинех сас пачĕ пиччĕшĕ, — начар улпут та çур сехет выртса каннă теççĕ. Атя!

Паçăрхи йĕлмевĕс карчăк коридорта курăнмарĕ. «Çакăнта кĕрсе тарнă пуль?» — шухăшларĕ Сантăр хупăни-хупăнми çакăнса тăракан алăк çумĕпе иртсе пынă чух. Вăл çавăнтах, алăк кутĕнчех, тепĕр енчен итлесе тăрассăн туйăнчĕ. Халь-халь тухса пăхать пулĕ тесе темиçе хутчен те çаврăнса пăхрĕ — курăнмарĕ. Пурах, çавăнтах вăл — иккĕленмерĕ шыравçă, пур япалана та тĕпчеме хăнăхнăскер. Ара, ял пурнăçĕ вăл хăех вĕрентет. Хăш чухне çывăрса каяс умĕн шăрчăка кăна мар, хĕртсурт кăмака хыçĕнче мĕн шăкăртаттарнине те тăнлатăн. Карчăксем юмах яма тапратсан вара хăлха кăна мар, çÿç-пуç та вирелле тăрать. «Çав юмахри юхха карчăк пулмарĕ-и ку?» — пĕр сÿнсе, пĕр хыпса илчĕ шухăш ача пуçĕнче. Мĕлтлетсе илчĕ те çухалчĕ. Иккĕшĕ те пÿлĕме кĕчĕç, диван çине ларчĕç. Ларсах пĕтерейммерĕç çав. Сантăр кутне тĕкрĕ кăна — ÿкесрен хăранă пек сиксе тăчĕ. Диванĕ ку тĕлте шăтăк-мĕн! Пиччĕшĕ чăтаймарĕ, кулса ячĕ. Çапла кула-кулах калаçса ларчĕç. Сантăр ял хыпарĕсене каласа пачĕ, хăй университета вĕренме кĕме килнине пĕлтерчĕ.

— Аван, аван! — текелерĕ пиччĕшĕ. — Эсĕ мĕн, мĕне вĕренесшĕн вара?

— Эпĕ кĕнеке вулама юрататăп.

— Вулани мĕн вăл? Уншăн укçа памаççĕ. Укçаллăрах çĕре кĕме тăрăшас пулать. Ну, калăпăр, техникăпа мĕн те пулсан. Пирĕн республикăра акă электропромышленность вăйлă аталаннă, университетра роботсем тума, вĕсемпе ĕçлеме вĕрентеççĕ, кĕр çавăнта. Специалистсем пит нумай кирлĕ пулаççĕ. Вĕсен малашлăхĕ пысăк. Тин кăна аталанма пуçланă.

— Интереслĕ ку!Эпĕ «Я — робот» калав вуласаччĕ. Питĕ килĕшрĕ. Вĕсем те çынсем пекех хăтланма пултараççĕ-мĕн.

— Ну вăт! Тавай! Документсене ыранах кайса пар. Тата общежити ыйтма ан ман.

Кухньăра çав вăхăтра тем ӳкерни, вăрçни илтĕнсе кайрĕ.

Пиччĕшĕ пӳлĕмрен çĕмрен пек тухса вĕçрĕ.

Кухньăра тем кăшкăрашрĕç, пăшăлтатрĕç, ихĕлтетрĕç...

Сантăр кĕтрĕ, кĕтрĕ — шухăша кайрĕ. Ара, май килмест пулсан мĕн туса ларать-ха вăл кунта? Мĕн кансĕрлесе çӳрет? Тĕнче хĕсĕр-им? Ырă çын сахал-и? Паçăр тĕл пулнă майра аса килчĕ. Епле хитре вăл!

«Чирлĕ, тен, мĕнпе те пулин, пĕл ăна!» — илтĕнчĕ çав вăхăтра коридор вĕçĕнче. Кăртах сикрĕ Сантăр чĕри. Карланкă пăвăнсах ларчĕ.

«Кунта «нимуй» пулса лариччен тухас та тарас!» — капланса килчĕ шухăш. Тек кĕтсе тăмарĕ. Шăрчăк пек çăтăртатакан диван çинчен асăрханса тăчĕ те коридор тăрăх кушак пек çăмăллăн утса кайрĕ. Паçăрхи карчăкпа пуçа пуç çапăнас пек иртрĕ. Хальхинче хăрамарĕ. Яриех уçса ячĕ алăка. Унтан пĕр самант тăхтаса тăчĕ. Урата урлă хăвăрт пусса каçрĕ. Алăкĕ, пружинлăскер, çавна çеç кĕтнĕ тейĕн — шалт хупăнчĕ.

## МĔЛКЕ

Епле ватăлса кайнă манăн анне! Пичĕ тырă вырса илсенех сухаласа пăрахнă уй пек, хутламлă-хутламлă, пĕркеленчĕк çине пĕркеленчĕк. Пурнăç сухаçă-мĕн, хăçан акса-вырса илмеллине пит лайăх пĕлет...

Аллăмра аннен пысăклаттарнă сăнӳкерчĕкĕ. Сĕтел çинче — уçса вуламан çырăвĕ.

...Тутăрне хыçалалла çавăрса çыхнă. Чăваш тумĕпе. А-а-а, ман арăм вара!... Ăна кашни сезона çĕнни, ансамбль текенни, кирлĕ. Пирĕн аннесем унашкаллисене хăнăхман. Укçа тесен, укçи те çук мар та-ха вĕсен...

Кăкăра тем хĕстернĕрен пулĕ хашш сывласа илетĕп. Сăнӳкерчĕке сăрнă кантăк та тĕтреленсех каять, аннене те, хама та, мĕлке пек палăраканскере, кăтартми пулать. Кăштахран каллех çуталса-тасалса çитет те, эпĕ каллех кантăк çине ӳкнĕ хайхи мĕлкене сăнама пуçлатăп. Çӳллĕ çамкаллă, кăтрарах çӳçне каялла тураса якатнă, шĕвĕр сăмсаллă, кăштах вĕçкĕнрех сăнлă арçын куç умне тухса тăрать. Сăнĕ шухăшлă хайĕн.

...Ялти хыпарсене çырса яман-ши анне?

Конверта васкамасăр уçатăп.

«Сывă-и, ывăлăм? — пуçлатăп вулама. — Эпир майĕпен çӳретпĕр-ха. Алтатти аппу вара, икĕ кил урлă пурăнать, астăватăн-и, чирлесех кайрĕ пулмалла. Вырăнпах выртать. Тек тăрай-

мастăп пуль тет. Эпир, кӳршĕ карчăкĕсем, пăхкаласа тăратпăр та, самаях. Уртем Петĕрĕ авланасшăн тет-и тата? Хĕрĕ — Микулай Нинукĕ. Лавккара ĕçлет. Ĕнер Хветле килсе ларчĕ те, чылай калаçса лартăмăр. Сана валли çăм чăлха çыхса пĕтертĕм. Çитес эрнере çын урлă парса ярăп. Хăв килсен пит аванччĕ те... Темле çав? Çук пуль. Çын пит çӳрет тет-и? Билет илме те йывăр тет. Хветле çапла калать. Çынсен ачисем илеççĕ пулĕ те-ха. Ай тур, мансах кайнă. Сан юлташу Ваçук яла таврăннă вĕт. Ялтах пурăнатăп тет. Пĕринче сана та аса илнĕччĕ».

«Аса илнĕччĕ», — янăрать пуçра. Çыру вара хăй тĕллĕнех алăран кăштăрт сĕтел çине тухса ӳкрĕ. Шурă хутпа юнашар сăнӳкерчĕк уççăн, паçăрхинчен те уççăнрах курăнса каять. Кантăк çинчи мĕлке вара — йăвашрах.

Ваçук-и? Ваçук таврăнтăрах. Ĕçлетĕр. Эпир те килте кĕрĕк арки йăваласа лармастпăр. Пăх-ха эс ăна! Кулать мар-и çав?!

Кантăк çинчи мĕлке тайăлса илет, сăнӳкерчĕкри аннене тем калать те калать... Тути чее. Хам эпĕ тӳрех ларатăп-иç?! Тута та тăп. Ку вара аннепе пĕр каварлă мар пулĕ те?..

Пĕлетĕп эпĕ аннене. Унăн шухăшĕпе, манăн хулана пăрахса яла таврăнмалла. Арăмпа ачам-пăчам вара? Хулари пурнăç тем каласан та ялтинчен ямăт. Ялта унта çитмĕл çичĕ тĕслĕ ĕç. Ирхине ирех ĕне сумалла, кĕтӳ хăваламалла. Çав вăхăтрах апатне те пĕçерме ан ман. Çук, ман майра каяс çук яла пурăнма, унта культура та çук тет. Вăт хула хĕрне качча илсе лар. Арăм тени çăпата мар, халь тин хывса переймĕн. Ялти хĕре, сăпайлине, типтерлине, ал ĕçĕ тума пĕлекеннине илесчĕ хăть. Çук вĕт. Пуррине пĕтерес, çуккине çитерес тенĕ. Мĕн тетĕн-и? Тăван килтен писрĕн тетĕни? Ватрас Ванькки тесе чĕнетчĕç-и-ха сана ялта? Кутемĕн кунашкал ята манса та кайрĕç пуль...

«Арăмĕ тата, Ваçук арăмĕ, ара, Натуш ятлăскер, Кирук йăхĕнченччĕ-ха вăл. Ай тур, пит правур! Ташласа çеç тăрать. Пĕрле вĕреннĕ марччи-и-ха эсир?»

Вĕренмесĕр! Ваçук, Натуш, Çеркей тата эпĕ — шкула тăваттăн çӳреттĕмĕр. Шкул тени вара ялтан ытла та аякраччĕ. Ирхине ултă сехетрех тăрса çула тухаттăмăр, кунĕпех выçлăтутлă çӳреттĕмĕр, пурпĕрех лайăх вĕренеттĕмĕр. Кайма-килме çул вăрман урлăччĕ. Астăватăр-и, епле илемлĕччĕ çурхи çăра вăрман! Çеçкене тин çеç ларнă йӳçĕ паранкă чечекĕсем талккăшĕпех унта. Кăшт çеç палăракан, çавăнпа та тата ытларах асра юлакан тутлă шăршă сăмса-çăвара халĕ те кăтăклать пек. Ĕ мĕрлĕх телей пек. Эй, туссем, чунри çăлтăрсем, ăçта эсир?...

Куçа хупатăп та аннене те, сăнӳкерчĕк çине ӳкекен мĕлкене те курми пулатăп. Чылайччен ларнă-и çапла, астумастăп, çав хушăра алăкран шаккани вăратрĕ. Аннен çырăвĕпе сăнӳкерчĕкне йăпăрйăпăр пуçтарса хуратăп та хирĕç сиксе тухатăп. Ахальтен мар,

ахальтен мар эп çапла хăтланатăп. Алăкран арăм кĕчĕ. Аллинче — тулли хутаç. Ăна хăвăрт çеç ярса илетĕп те кухньăна чăматăп.

Пурте йĕркеллех пулас. Зоя Ильинична чĕнмест. Урамра та, шкулта та ăна Зоя Ильинична теççĕ. Педагог. Пĕр-ик минут тăхтаса тăрать те ак вĕрентме тытăнать. Сысна çăварĕнчи ылтăн çĕрĕ темерĕн!

— Каллех кĕнеке вуласа ларатăн пулĕ-ха, слесарь-мессер, — тĕлех пуçларĕ хайхи. Зоя Ильинична эпĕ рабочи пулнине тата унран ытларах пĕлнине пит юратмасть.

— Тин çитрĕм-ха, — тӳрре тухма тăрăшатăп эпĕ.

— Кавире пылесоспа тасат, стенкăна та тусантан сăтăрса тух.

Хирĕç чĕнме çук. Айăпа кĕнĕ ача пек пĕр сăмахсăрах, сӳрĕккĕн тума пуçлатăп мĕн хушнине. Ĕç йывăр мар та... Пурнăçра эпĕ урăххине килĕштеретĕп. Кăмака чăххи пулас килмест манăн. Эх, тетĕп, лаборатори тăвасчĕ килте тетĕп. Вара магнитлă материалсенчен тĕрлĕ йышши аппаратсем ăсталăттăм. Пур-ха пуçра пĕр шухăш. Çапла, ĕмĕтпе йăпанма çеç пуçланăччĕ, унччен те пулмарĕ, тепĕр ĕç хушрĕç. Магазина кайса килмеллемĕн. Кăна тума эпĕ яланах хапăл, чупсах кайса килетĕп. Çав чупнă чух хамăн шухăша тăсма пит лайăх. Киле çитсенех хут çине ӳкеркелесе, кĕнеке вулакаласа пăхатăп ак.

Кун хыççăн кун иртет çапла тĕлсĕр-палсăр, ăнланмалла мар хăвăрт. Ачасем тата тем ютшăннă пек. Ашшĕ çук тăк, аслашшĕпе асламăшĕ те çук. Пĕтĕм несĕл пĕтет. Тăван çĕршыв та тĕтреленет... Чухăн ӳсеççĕ ман ачасем ашшĕ пур çинчех. Ни юрлама, ни ташлама, ни тăван чĕлхепе калаçма пĕлмеççĕ. Йывăр! Халĕ анне патĕнче ялта каникулта вĕсем. Кăшт пурăнччăр...

Алăри кĕнекене, хам та кĕтмен, вăшт ывăтса яратăп. Кĕнеке кăпшанки! Пурнăçран тарса пытаннă та ăспа пăсланса ларатăн! Тупнă вырăн. Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер пур-мĕн ун...Чун тулашнипе сиксе тăратăп та алăкăн-тĕпелĕн утма тытăнатăп. Кăшт лăплансан сентре çумĕнчи тĕкĕр патне пырса тăратăп. Тĕттĕмрех пӳлĕмре ман мĕлке таçта шалта-а курăнать. Тата эпĕ темле чĕрĕпленсе, хутламланса кайнă пек. Ха, Ватрас Ванькkине кунашкаллине курманччĕ-ха. Ухмаха тухмастăп пулĕ? Ара, пуçа пĕрмай шухăшпа ватсан, тем те курăнма пуçлĕ. Хăвна та паллайми пулăн е темиçене пайланса кайăн. Ăстăн тени чее япала, пурнăçри хĕрӳ хирĕçӳ-пăтрашăва мĕнлерех майлаштармаллине шыраса тупать-тупатех. Акă тĕкĕрти çын та иккĕллĕ-виççĕллĕ курăнать... Йăлтах аптраса ӳкнĕскер хăвăрттăн аяккалла пăрăнатăп. Сăхсăхса илмелле мар-ши? Тĕкĕр тĕпĕнче, таçта шалта, тăван кил умĕнче анне чĕп-чĕррĕн пăхса тăра парать. Тем каласшăн хăй, тутипе мăкăл-мăкăл тăвать.

Çав вăхăтрах эпĕ пуç чăтма çук ыратса кайнипе тăна çухатнă пулмалла, урăх нимĕн те астумастăп. Больницăна илсе кайман

мана, тухтăра киле чĕнсе илнĕ. Хамăн вырăн çинчех тăна кĕтĕм. Выртатăп пăхкаласа, алă-ура тĕрĕс-тĕкел, пуç та ыратмасть, чун та кăшкăрмасть. Пĕр тепĕр эрнерен эпĕ, телейлĕрен те телейлĕскер, ĕçе тухрăм. Бригадăри юлташсем малтанланса тĕлĕнерех пĕр-икĕ сăмах хушрĕç, сывлăх пирки ыйтса пĕлем пекки турĕç, ман тавра çаврăнкаларĕç-çаврăнкаларĕç те хăпрĕç.

Çанна тавăратăп та пĕр тĕпĕртетмесĕр, хавхаланса ĕçе кӳлĕнетĕп. Лайăх. Лăпкă. Çав юнашарти Ивановпа Петровран, пĕр тытăнсан, темиçе хут хăвăртрах та тĕплĕнрех ĕçлеме пултаратăп. Шатăртаттаратăп çеç. Деталь хыççăн деталь ăсталатăп. Алăри инструмент выляса кăна тăрать. Хăвăртрах, хăвăртрах, хăвăртрах та хăвăртрах ĕçлес килет. Акă вăл телей! Шухăш-и? Пĕри те çук. Таçта çухалчĕç. Çук, пĕри пур. «Киле çитетĕп те хваттере тирпейлеме тытăнатăп, унтан, унтан телевизора яратăп. Акă пулчĕ те...»

Чăнах та, чирленĕ хыççăн эпĕ юлташсемпе калаçма пăрахрăм. Мĕн тума кирлĕ вĕсем телевизор пур чухне?! Паян та акă ĕç хыççăнах килелле чавтартăм. Унта пылесос кĕтет. Магазина каймалла. Тата кĕçĕр леш мушкетерĕсем çинчен кино пулать. Ăт лайăх!..

Хваттерте вăр-вар çаврăнкалатăп. Пурне те пуçтарса тухсан сунтăхсене ухтарма тытăнатăп. Ай тур, темтепĕр чиксе тултарнă. Темле магнитсем, паяльник, детальсем, аннен сăнӳкерчĕкĕ тата çырусем пĕр купа. Пĕтĕмпех хутăшса кайнă. Арăмăн алли ăçта пулнă-ши? Япаласене тарăхуллăн мăкăртатса пуçтаратăп та пурне те çӳп-çап витрине кайса пăрахатăп. Хăямата! Кунашкал ăпăр-тапăр килте ан пултăр. Çакăн хыççăн, пысăк ĕç тунă пек, чĕре тата телейлĕн тапма тытăнчĕ. Ара, халĕ тата тирпейлĕрех, тата тасарах пурăнма пуçлатпăр-çке! Ман хваттер халь вĕр-çĕнĕ тетте пек. Йăлтăртатса кăна тăрать... Ак магазина кайса килетĕп те апат пĕçерме лартса яратăп... Зоя Ильинична килнĕ çĕре хатĕр пулать. Ывăнса килет вĕт. Шкулта ачасен ĕçпе кану лагерĕ пур тет-и? Эй, çавсем мĕн тума кирлĕ вĕсем, шкултисем, хăш чухне хамăрăн та аптратсах çитереççĕ те.

Чирленĕ хыççăн ĕçлеме пуçлани уйăх иртрĕ. Пĕрре çапла арăм ачасене ялтан кайса илмелле мар-и тесе сăмах хускатрĕ. Маншăн пулсан — пурăнччăрах! Килеççĕ те ак таса хваттере вараласа ман чуна тарăхтарма тытăнаççĕ. Юлччăр анне патĕнче! Çапла та, анчах Зоя Ильинична илсе килмеллех тет. Воспитани памалла тет.

Калаçу хыççăн вăхăт нумай та иртмерĕ, август уйăхĕн вĕçĕнче пуçтарăнтăмăр та яла тухса кайрăмăр. Пирĕн ял хуларан аякра мар. Сехет çурăран тахçан çарран чупнă, тахçан çеремлĕ пулнă урама пырса та кĕтĕмĕр. Майĕпен утса пыратпăр. Акă шăплăха хускатса тăван кил хапхи уçăлса хупăнать. Эпир картишне кĕрсе

тăратпăр. Шăв-шава илтсе пӳртрен аннепе ачасем тата... тата эпĕ таçта курнă, питĕ çывăх пĕлнĕ арçын чупса тухаççĕ. Ара ку, ку эпĕ вĕт! Хама хам унчченхи пекех, тĕкĕр çинчи пекех куратăп мар-и? Пуç çаврăнсах каять. Мана асăрхамаççĕ те! Зоя Ильинична ачасене ыталаса илнĕ, аннепе леш, тепĕр Ватрас Ванькки, вĕсем тавра чупкаласа çӳреççĕ. Эпĕ кăна тăр-пĕччен. Акă вĕсем шăкăл-шăкăл калаçса пӳрте кĕрсе каяççĕ. Эпĕ вара? Мĕн, тем мана курмарĕç-ши вара кусем? Тен, эпĕ хам курăнмастăп? Чун сӳлетсех каять. Хама хам хыпашласа пăхатăп. Ах, турăçăм! Ман алă Ватрас Ванькки вырăнне сывлăша чăмăртать. Пуш-пушă ман кĕлетке... Аллисем те çук! Çуккă эпĕ!

## «НУ, ТĂХТА!»

— Атя хăвăртрах, Петĕр. Чуп ман хыççăн. 13-мĕш килет.

— Макçăм, тен, троллейбуспа кайăпăр?

Икĕ ача хаваслăн калаçса пыракан ушкăнран уйрăлчĕç те тин çеç çитсе чарăннă автобуса кĕрсе ларчĕç. Петĕр троллейбусах кĕтесшĕнччĕ. Унта ăшă, сутă. Анчах та тĕттĕм урамра пĕччен тăма ăна кичем пек туйăнчĕ. Шиклĕ те. Çавăнпа тусĕнчен юлас темерĕ.

Кĕрсе ларнă-ларман Петĕр шăнса кайнă кантăка пӳрнипе пуса-пуса ирĕлтере пуçларĕ. Пăрĕ хулăн. Пилĕк тенкĕлĕх укçа пек ирĕлтернĕ çĕре пӳрни ним пĕлми пулчĕ. Вăт халь аван курнать. Чапаев палăкĕ, Николаев урамĕ вĕлтлетсе юлчĕç. Палланă çулпа кайни ăна лăплантарчĕ. Вăл пас тытнă кантăка сăнама тытăнчĕ. Унта темле юмахла вăрман, сăрт-ту... Тин çеç курнă «Ну, тăхта!» мультфильм аса килчĕ. Маттур пулчĕ куян. Ухмах кашкăра миçе хутчен чике тăршшĕ лартмарĕ пулĕ вăл. Пĕтĕм зал ахăрчĕ. Халĕ те пурте куç умĕнчех.

...Акă пас тытнă йывăç хыçĕнчен пĕрре пăхрĕ куян, иккĕ... тухрĕ те вăрман уçланкинче якăлт-якăлт сиккелеме пуçларĕ... Петĕр паçăрхи кинори пекех каллех хăраса ӳкрĕ. Кашкăр килсе тухрĕ тĕк?

Автобусĕ çав вăхăтра кăрт-карт турткаланса илчĕ. Унтан тăпах чарăнчĕ. Петĕр пăр карса илнĕ кантăк çумне çыпçăнарах ларчĕ. Темле палламан вырăн. Юр вĕçтеркелет. Тĕттĕмре тем мĕкĕлтетет пек. Пĕр çын автобуса ĕлкĕресшĕн пулмалла та питĕ вăйлă чупса килет. Юр куписем урлă сике-сике каçать. Хăй темле çăмламас курăнать. «Кашкăр! — вĕçсе иртрĕ пуçра. — Анчах мĕншĕн-ха вăл?..» Ача шухăшласа ĕлкĕреймерĕ. Тапранса кайма пуçланă автобуса шăпах алăк хупăнас умĕн пĕр арçын хĕсĕнсе кĕрсе тăчĕ. Çăмламас çĕлĕк тăхăннă хăй, кĕрĕкне йӳле янă.

«Кашкăр!» — каллех çиçсе илчĕ пуçра паçăрхи шухăш. Çăлăнăç шыраса ун-кун пăхкаларĕ Петĕр. Юлташĕ çумра пулни те лăплантармарĕ ăна. Макçăм çывăрса кайнă.

Автобусра вара темле шăплăх хуçаланма пуçларĕ.

«Кашкăр» вырăн шыраса салон тăрăх тĕрткелешсе пычĕ. Кашнин умĕнче чарăна-чарăна тăчĕ, тискеррĕн пăха-пăха илчĕ. Çавна кура икĕ ватă çын, тин çеç шăкăл-шăкăл калаçса ларакансkерсем, шăпах пулчĕç. Пĕр-пĕрин çине юратуллăн пăхакан каччăпа хĕр, темле усал вăй хушша кĕчĕ тейĕн, уйрăларах ларчĕç. Салонра тăракансене савăл пек хирсе пычĕ «кашкăр». Хирĕçлекен пулмарĕ. Кăмăлсăррисем мăкăртаткаланипех ирттерсе ячĕç.

«Кашкăр» ачасем çывăхнерех пырса тăчĕ. Петĕр сехĕрленсе ӳкрĕ. Ахаль те шăпрах çӳреме хăнăхнăскерĕн халь кресло айнех пытанса ларас килчĕ. «Макçăма вăратмалла пуль, вăл нимрен те хăрамасть. Иккĕн иккĕнех», — шухăшларĕ хăйне темшĕн куян пек туйса илнĕ ача.

Петĕр, чăнах та, пăхма пысăках мар. Ытла шурă ӳтлĕ пулнăран имшерккерех курăнать. Кăмăлĕпе йăваш. Çавăнпа та пулĕ çирĕпрех курăнакан юлташĕ çумне тĕршĕнме юратать. «Иккĕн иккĕнех!» — шутлать вăл. Юлташĕ вара хăнк та тумасть. Çывăрнă та кайнă. Вăратма та халĕ темле меллĕ мар пек. Хăюлланма тăрăшса-ши, Петĕр сасартăк кресло çинче яртах тӳрленсе ларчĕ. «Кашкăр» çине хăйса-хăйса пăхрĕ.

Ача вăй илсе ларнă вăхăтра вара салонра тепĕр пăтăрмах сиксе тухрĕ. Пĕр çын, билет илме укçине тахçанах панă пулас та, «билет ăçта?» тесе кăшкăрма пуçларĕ. Билетне çав «кашкăр» хăйĕн кĕсйине пĕтĕрсе чикнĕ пекех туйăнчĕ.

Билетсăрри вара урăм-сурăм вăрçма тытăнчĕ. «Мĕнле çынсем, мĕнле халăх», — тет. Йăлт намăслантарса пĕтерчĕ. Пассажирсем те пĕр-пĕрин çине шанмасăртарах пăхрĕç.

Унччен те пулмарĕ — пĕр хĕрарăм шари çухăрса ячĕ. «Кашкăр» ун ури çине самаях хытă пуснă пулмалла. Кӳрентернĕ çынран каçару ыйтас вырăнне «кашкăр» хăй сиксе ӳкрĕ. «Мĕн саркаланса тăран кунта. Килте мар вĕт», — тет.

Петĕр чунĕ каллех вĕчĕрхенсе килчĕ. «Ку, путсĕр, таптани çитмест, тата вăрçса хăратать. Чипер тăракан пĕр айăпсăр çынна ма тĕкĕнмелле пулчĕ-ши? Эх, хам Макçăм пек вăйлă пулнă пулсан-и?» Ача каллех лăпкăн тĕлĕрекен юлташĕ çине пăхса илчĕ.

Макçăм вара шăй-шай пуçлансанах вăраннă пулнă. Куç хӳрипе пăхса пынă. Автобусра мĕн пулса иртнине вăл самантрах ăнланчĕ. Салонра хулиган иртĕхет. Чаракан çук. Макçăм спортпа пиçĕхнĕ мускулĕсене хытарса пăхрĕ. «Хута кĕме пулать, паллах. Анчах пĕр палламан çынсене хӳтĕлени мĕн тума кирлĕ? Вăт ман юлташа, Петĕре, тапăннă пулсан, ку темле выльăх тĕслĕ çынна эпĕ пĕрре тапсах сиктернĕ пулăттăм. Хĕрарăмĕ тата мĕнле

çухăрать. Фу, кусемпе çыхланса пулмасть-ха. Чĕрре кĕрсе кайсан тем туса хурĕç», — шухăшларĕ çывăрам пекки туса пыракан Максăм. Хăйне вăл ытти çынсенчен çӳлерех тăракан паттăр пек туйрĕ. Айкашăрах терĕ пуль.

Петĕр вара çаплах пуçне çĕмĕрчĕ: «Енчен те кам çумне те пулин пырса çулăхас-тăвас пулсан, мĕн тăвăттăм-ши?» — шухăшларĕ вăл. «Кашкăр» кĕттермерĕ. Чиперех ларакан Максăма хулĕнчен икĕ аллипе ярса илчĕ те кресло çинчен туртса антарчĕ.

— Мĕн çывăрса ларан, йĕпе сăмса! Аслисене вырăн парас пулать! — янăратрĕ вăл шăпланнă салонра.

Максăм аптраса ӳкрĕ. Тин çеç паттăрла туякан ача хăраса ӳкрĕ-ши вара? Çапла пуль. Пĕчĕккисем умĕнче хастар курăнма хăнăхнăскер пысăкраххипе вара çыхланса ӳкме хăрарĕ, ним те чĕнмерĕ. Çакна курса ларакан Петĕр тек тӳсеймерĕ, «кашкăра» хăй çумĕнчен пĕтĕм вăйĕпе тĕртсе ывтăнтарса ячĕ.

— Мĕнле хăятăн, сысна!— кăшкăрса ячĕ Петĕр. Сасси ăçтан тухрĕ-ши? Кăкăрĕ ӳпкене йăлтах хĕстерсе лартнăччĕ вĕт-ха. Халĕ вара? Куçĕ — çиçĕм. Тути тăп. Куç харшисем халь-халь вĕçсе каяс кайăк пек.

— Мĕн мăшкăллаттаратăр хăвăртан. Тытăр та кăларса перĕр! — татах та татах хăюланчĕ ача.

Салонти халăх çакна кăна кĕтнĕ тейĕн, пухури пек шавласа кайрĕ!

— Кăларса пăрахăр ăна!

— Намăссăр!

— Тĕрткелешсе çӳрет тата!..

— Автобуса чарăр!

Çине-çинех янăрарĕç тĕрлĕ сасăсем. Унччен те пулмарĕ — автобус чарăнчĕ. Алăкĕсем икĕ енчен яри уçăлчĕç. «Кашкăр» хирĕç ним калама та, ним тума та пĕлмерĕ. Çирĕп алăсем ăна алăк патнелле тĕртрĕç.

Кĕптĕрт çеç кăларса пăрахрĕç автобусран çав аскăнчăка. Шакăлт хупăнчĕ алăк. Хупăнчĕ те кĕрĕк аркине хĕстерсе илчĕ.

Петĕр каллех кантăк çумне тĕршĕнчĕ, урамалла пăхрĕ.

...Тулта темле палламан вырăн. Юр вĕçтеркелет. Тапранса кайнă автобуспа юнашар «кашкăр» чупать. Алăк хушшине хĕсĕнсе ларнă «хӳрине» кăларасшăн тăрмашать. Туртать-туртать — кăлараймасть. Автобусĕ вара вăйлăран та вăйлăрах кайма тытăнчĕ. «Кашкăр» ĕлкĕреймест. Юлма пуçларĕ. Акă вăл пĕрикĕ хутчен çӳлелле сиккелесе илчĕ те «хӳрине» татсах тем кăшкăрса таçта тĕттĕмелле сирпĕнсе юлчĕ. «Ну, куян, тăхта!» — тенĕ пекех илтĕнсе кайрĕ ун сасси. Петĕре çак самантра пас тытнă вăрмантан куян сиксе тухнăн туйăнса кайрĕ. Малти урисене çупа-çупа ташлать пек.

# ХУРА КАЛУШ

Урай варринче тăракан Оля пĕрре калушĕ, тепре асламăшĕ çине пăхса илчĕ те чăтайман енне каллех пăлтăр-пăлтăр çаврăнса ташлама тытăнчĕ. Ташламалăх кĕввине те янă-ха вăл. Пластинка кивĕ, пĕрех чĕрене пĕрре те чăрмаламасть, савăнтарать анчах. Асламăшĕ вара питĕ асăрханса, питĕ шăппăн пăхса савăнса ларать. Ара, пĕчĕккĕ те-ха, ытлашши пит сиккеленĕ чухне тем килсе ан тухтăр тет пуль çав.

— Тавах, асанне! Халĕ ĕнтĕ шкула çÿреме манăн та калуш пур. Унсăрăн пирĕн тĕлтен ниепле те ашса тухма çукчĕ-ха. Халĕ ĕнтĕ кунпа маншăн пылчăк та пылчăк мар. Тавах сана! — пырса ыталарĕ асламăшне Оля.

Ватă асламăшĕ вăрттăн кăна кулса илчĕ. Çÿçĕ ун кăвакарнă, пичĕ пĕркеленнĕ, анчах сарă çÿçлĕ ача ăна-кăна асăрхамасть. Асламăшĕ те хăй пекех тесе шутлать пулас та, ташлама чĕнет.

— Эс ан турт-ха мана. Манăн ташлассисем тахçанах иртсе кайнă. Калушне ĕнтĕ ăна юлашки пенси укçинчен илсе парас терĕм. Ачан аттун урама тухса кĕме пушмак çук, — ашшĕпе амăшне тĕртсе калам пекки турĕ ватă çын.

Килтисем вăл мĕн калас тенине питĕ лайăх ăнланчĕç. Çапах та чĕнмерĕç. Ачапа ватă çын савăнăçне татас мар терĕç. Ашшĕ картишне выльăх пуçтарма тухрĕ, амăшĕ кăмака умĕнче кăштăртаткалама пуçларĕ. Оля кăна лăпланмарĕ-ха, калушĕ епле йăлтăртатнине пăхкаласа паçăрхи пекех ташлам пекки турĕ, тем юрлакаларĕ, унтан хăй çине никамах та пăхманнине кура, артистка пек, тĕкĕр умĕнче тепĕр хут пăлтăрр! çаврăнса илчĕ те сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Унăн та ĕç пур: урока лайăх хатĕрленсе каяс та «пиллĕк» паллă илес тата çавăнтах шкулта калушпа мухтанас кăмăл та хускалчĕ. Тен, халех чупса кайса пĕлтерĕччĕ те-и — каç пулса килни тата тем урăххи, ун пек мухтанни лайăх мар пулни тытса чарчĕ хĕрачана.

Асламăшĕ те сĕтел хушшине лăпланса ларнă мăнукне курсан çĕм чăлха çыха пуçларĕ. Мĕн чухлĕ çыхнă пуль, халь акă мăнукĕ валли те... «Калушĕ çĕтĕлсе пĕттĕр, пуçĕ сывă юлтăр! — хăй тĕллĕн кăна мăкăртаткаласа илчĕ вăл йĕпписене вылятнăçемĕн. — Турă сыхлатăр ăна!»

Кĕрхи каç вăрăм. Апат ларса çирĕç, телевизор пăхкаларĕç. Унтан кăшт калаçкаласа ларнă хыççăн çывăрма выртас терĕç. Хура калушне Оля çывăрнă чухне те вĕçертес темерĕ пулас, кравачĕ çумнех лартса хучĕ. Ку япалапа манăн та выляса пăхас тенĕн, урипе тĕрткелесе пăхакан кушака та хăваласа ячĕ. «Тупнă вылямалли!» — вăрçам пекки тукаларĕ вăл. Унтан куçне хупнăхупман тенĕ пек çывăрса кайрĕ. Тĕлĕк курчĕ.

... Оля ялта мар пек. Вăл таçта питĕ çӳлте. Учитель каласа панă Самар тăвĕ çинче пек. Акă вăл аллисене малалла тăсрĕ те хăй тĕллĕнех мамăк евĕр çăмăллăн çĕкленсе илчĕ. Питĕ лайăх пулса кайрĕ ăна. Пĕрех сулчĕ аллипе, кайăкăн вĕçсе хăпарчĕ. Тепре сулчĕ те тăван ялĕ çинех вĕçсе çитрĕ. Карттă çине ӳкернĕ пек ял урамĕсене, çӳлтен пăхса нихăçан та курман пулсан та тӳрех палласа илчĕ... Çăмăллăн ярăнса вĕçсе пыракан Оля сасартăк çапла шутласа илчĕ çеç, хăй те сисмерĕ, питĕ хăвăрт аялалла ӳкме пуçларĕ. Çĕр çумне çапăнса вилес пекех туйăнчĕ. Хăранипе вăранса кайрĕ. Хăй темле Самар тăвĕ çинче маррине, кравать çинче выртнине тин ăнланса илчĕ.

— Асанне, асанне, теп! — чĕнчĕ вăл асламăшне. Вăранса каяс-тăвас пулсан пĕрмаях çапла чĕнекенччĕ вăл ăна. Лешĕ вара, çывăрман та тейĕн, çывăр, çывăр, ан шавла тесе илекенччĕ. Паян çав сас пулмарĕ. Пĕр тапхăр вăл сывланине илтес тесе хăй те сывламасăр выртрĕ, нимле сас-чĕв те илтĕнмерĕ. Халĕ ĕнтĕ Оля чăннипех те хăраса ӳкрĕ.

— Анне! — кăшкăрса ячĕ вăл пĕтĕм пӳрт илтмелле.

— Мĕн пулчĕ, хĕрĕм? — самантрах сас пачĕ амăшĕ.

— Асаннене тем пулчĕ пек. Сывламасть.

— Ан калаç-ха эс тем кирлĕ мара, — мăкăртаткаласа тăрса ларчĕ ашшĕ. Унтан: «Вată çынпа тем те пулма пултарать», — текелесе амăшĕ мĕнле çывăрнине пырса пăхрĕ. Пĕр самант чĕнмесĕр тăнă хыççăн: «Чăн та» — терĕ. Хирĕç калакан тупăнмарĕ.

Тепĕр кунне Оля шкула каймарĕ. Пӳрте ир-ирех ватă çынсем, тăванĕсем килсе тулчĕç. Вĕсем асламăшĕ мĕнле выртнине пыра-пыра пăхаççĕ, тем калаçаççĕ. Оля ăнланмарĕ. Хĕрача пуçĕнчен шăлкаласа илнĕ чухне вара куçĕнчен кашнинчех темшĕн куççуль пăчăртана-пăчăртана тухрĕ. Анчах та йĕме хăрарĕ вăл, пурте çапла çурма шăппăн калаçнă чухне епле йĕрсе ярăн-ха, чăн та. Асламăшĕ вилсе кайнине хăйĕн пĕчĕк ăсĕпе ăнланчĕ-ха вăл, анчах чунĕпе çавна пурпĕрех йышăнмарĕ. Хальхаль тăрса ларас пек выртакан асламăшĕ мĕн те пулин каласснах туйăнчĕ ăна... Тепĕр кунне çумăр çума пуçларĕ. Тата тепĕр кунне асламăшне пытарма тесе пӳртрен илсе тухрĕç. Халăхпа пĕрле Оля та урама тухрĕ, анчах та питĕ пылчăк пулнипе ăна масар çине каймасан та юрать терĕç. «Ман асанне тăхăнтарнă калуш пур, мана пылчăк ним те мар», — тесшĕнччĕ хĕрача, темрен вăтанчĕ, хапха умĕнче ним чĕнмесĕр пăхса тăрса юлчĕ.

Асламăшне пытарса килсенех каçпа шăнтса пăрахрĕ. Юр вĕçкелерĕ, хĕл ларчĕ. Ун пек чухне Оля питĕ савăнаканччĕ. Пĕрремĕш юр çине тухса мулкач пек сиксе йĕр тăваканччĕ. Хальхинче вара ун пек тума кăмăл тупăнмарĕ. Ашшĕпе амăшĕ те килте çурма сасăпа кăна калаçкаласа çӳрерĕç, хĕрĕ мĕнле те

пулин айӑпа кӗрес-тӑвас пулсан та ӑна пӗр сӑмах каласа та вӑрҫмарӗҫ. Ҫапла кун хыҫҫӑн кун иртрӗ. Ҫӗнӗ ҫул та ҫитрӗ. Ҫӗнӗ ҫул умӗн каллех ӑшӑтса пӑрахрӗ. Ҫумӑр ҫума пуҫларӗ те, сивӗпе хытса ҫитнӗ ял урамӗсем кӗркуннехи пекех пылчӑкланса кайрӗҫ. Елкӑна кайма тухнӑ хӗрача пӗрре пускаласа пӑхрӗ, тепре — унтан кун пек май килменнине кура каялла кӗчӗ. Ҫенӗке кӗрсенех асламӑшӗ тӑхӑнтарса хӑварнӑ хура калуша курах кайрӗ. Нумай шухӑшласа тӑмарӗ, пушмакӗ ҫинех ҫав калуша тӑхӑнчӗ те шкула чупрӗ. Паян вӗсен, кӗҫӗн класра вӗренекенсен, елкӑра юрласа-ташласа кӑтартмалла пулать. «Ку калушпа вара, — аса илчӗ хӗрача, — ташлама та питӗ меллӗ».

Шкулта ача тӑп-тулли. Елкӑна чи пысӑк класа лартнӑ. Патша хӗрӗ пек хитрен йӑлтӑртатса ларать вӑл. Хитре пулмасӑр. Оля касса кӑларнӑ вут кайӑк та пур ун ҫинче. Кашни ача мӗн те пулин туса ҫакнӑ, ҫавӑнпа хитре. Ольӑн ташлас килет. Ташлама-юрлама та вӑхӑт ҫитрӗ ӗнтӗ. Анчах шкул директорӗ ирӗк паман енне пӗчӗк хӗрсем чӳрече ҫумне кайса кӗпӗрленсе тӑчӗҫ. Ҫапла тӗрткелешсе тӗхӗлтеткелерӗҫ-ха вӗсем. Ара, мӗнле ӗнтӗ савӑнмӑн, мӗн чухлӗ юрӑ, ташӑ, сӑвӑ — ҫавӑн чухлӗ канфет сана. Канфет тесен вара Оля таҫта кайса кӗме те хатӗр. Ҫуртасем лартса тухнӑ елка пекех капӑр вӑл халь хӑй те.

Ялтӑрр! хыпса илчӗ ҫав вӑхӑтра елка йӗри-тавра темӗскер. Кашӑрр!! сиксе тӑчӗ курма килнӗ халӑх. Шари! ҫухӑрса ячӗҫ чӳрече умӗнче тӑракан хӗрачасем. Тӗпӗр-тӗпӗр! тухса тарчӗҫ алӑк кутӗнчерех тӑракан арҫын ачасем. Хӗрачасем те ҫавӑнталла ыткӑнчӗҫ, анчах унта халӑх кӗпӗрленсе тӑнӑ та, пырса та кӗрейместӗн. Вӑл ҫеҫ те мар, ытла питӗ хӗстернипе ҫав алӑкран никам та тухаймасть пулмалла. Пур ҫӗрте те кӑшкӑрашу, тарӑху, йӗни...

— Чӳречесене ан уҫӑр! Пушар вӑйланать! — ҫухӑрать пӗтӗм вӑйран директор. Кантӑка уҫма тӑнӑ пысӑкрах арҫын ачасене хӑваласа антарать. Анчах тӗтӗмпе антӑхса кайнӑ халӑх ӗнтӗ тек ӑна итлемест. Итлеме те май ҫук. Класри сӗтел-пукансем шӑтӑртатса ҫунма пуҫларӗҫ. Ун ҫулӑмӗ айне лекнӗ ачасем ҫинҫе сасӑпа пӗтӗм тӗнче илтӗнмелле амӑшӗсене чӗнсе ҫухӑраҫҫӗ. Унччен те пулмарӗ, ниҫта кайса кӗреймен халӑх чӳречесене ҫӗмӗрме пуҫларӗ. Пушара ҫавӑ ҫеҫ кирлӗ пулнӑ тейӗн, тӗтӗм айне пулса сӳнме пуҫланӑскер, тепӗр хут вӑйланса ялкӑшса илчӗ те пур ачасене те ҫулӑхма тытӑнчӗ. Акӑ вӑл Оля кӗпинчен те ярса илчӗ, нимпе тек хупламан питҫӑмартинчен, ҫара аллинчен чӗпӗтсе ҫунтарчӗ. Ниҫта кайса кӗреймен енне хӗрача вут пек пӗҫерекен питне аллипе хупларӗ — усси пулмарӗ. Хыпса илнӗ кӗпине пӗр-ик хут ҫапа-ҫапа сӳнтерчӗ-ха вӑл. Ҫапах та кунта тӑнипех ҫӑлӑнса юлаймассине пӗчӗк пулсан та питӗ хӑвӑрт ӑнланса илчӗ. Пӗртенпӗр ҫӑлӑнӑҫ — чӳрече! Ҫавӑнта сикеҫҫӗ алӑк патне пырайманнисем. Оля та сикрӗ. Анчах епле сиксе ҫитӗн-ха унта? Кантӑка питӗ

çӳле касса лартнӑ. Ольӑн пӳ çитмест. Те вут пӗçертсе илнипе, те вӑй çитменнипе хӑй те сисмерӗ, питӗ хытӑ çухӑрса ячӗ. Сасси илтӗнмерӗ те. Тепре сикрӗ вӑл. Ванчӑк чӳрече хӑлӑпӗнчен чутах ярса илетчӗ. Май килмерӗ. Каллех вут çинех ӳкрӗ. Юнашар тӑракан хӗрачасем ӗнтӗ ниçта кайса кӗреймен енне урайне ӳксе йӑваланма тытӑнчӗç. Вӗсем çине пӑхса илнӗ хӗрачан куççулӗ ним тӑвайманнипе хӑй тӗллӗнех юхса анчӗ. Куççульне никам та ан куртӑр терӗ-ши е пытарма хӑнӑхнӑ йӗркепе хӑех пуçне çапла пӗкрӗ, асламӑш тӑхӑнтарнӑ калушне курах кайрӗ. Асламӑшӗ: «Калушу çӗтӗлтӗр, пуçу юлтӑр! — тени аса килчӗ. Акӑ вӑл халь те хӑй кравачӗ çинчех ларать пек. Ташлакан Оля çине питӗ вӑрттӑн сӑнаса пӑхать. Пӑхать, пӑхать, тем калас пекех пӑхать. Тен, тем калать те — илтӗнмест, тути хускални кӑна курӑнать. Якӑлт! сикрӗ тепӗр хут Оля, таçтан вӑй тупӑнчӗ, рама хӑлӑпӗнчен чылай çӳлте пулсан та кап! кӑна ярса илчӗ. Урипе стенаран тапса ярса чӳрече янаххи çине хӑпарса кайрӗ. Хӑпарса кайрӗ те ванчӑк кантӑк хушшинчен урама тухса ӳкрӗ, тӑнне çухатрӗ. Хӑйне епле çӗклесе илнине те, хыпса илнӗ кӗпине çапа-çапа сӳнтерннине те туймарӗ...

Чӑн пулнине çакна мана пӗр хӗрарӑм, пушарта хӑй пулнӑскер, каласа пачӗ. Мӗнле çӑлӑнса тухнине вӑл халӗ те ӑнлансах пӗтерейместь-ха, ара, унта мӗн чухлӗ ача пӗтнӗ те, ун та ӗнтӗ, ытти сенчен нимпе те уйрӑлса тӑманскерӗн, пӗтмеллех пулнӑ. Çук çав, ӑна асламӑшӗ илсе панӑ хура калушах пӗтме паман пулӗ çав. Тӗрӗсрех каласан вара, паллӑ, ӗç калушра та мар, пӗтӗм пулӑшӑвӗ те асламӑшӗн кӑмӑлӗнчен, вӑл пиллесе каланӑ сӑмахсенчен тухса тӑнӑ. Пилсӗр пурнӑç ӑнмасть теççӗ. Телейлӗ те тулӑх пурӑнас тесен ватӑсен пилне ӑша илмелле тет. Çавна асра тытса, ырӑ сунса пурӑннӑ ватӑ çын, курӑр-ха, мӑнукне инкекрен çӑлма та, йӗркеллӗ тулӑх пурнӑç та вӑй пама пултарнӑ. Çӑлӑнса юлнӑ çав хӗрарӑм калать: çынна яланах ырӑ сунса пурӑнатӑп тет. Апла ун асламӑшӗн ыркӑмӑллӑхӗпе вӑйӗ упранса юлнӑ, апла вӑл кама та пулин ку пурнӑçра йӑнӑш тӑвасран, усалтан е инкекрен çӑлатех. Эпир те асра тытар çак чӑн пулнине, кам вуласа тухнӑ, çав ырӑпа юнашар тӑтӑр; кам хӑй тӑванне пулӑшса курнӑ, çав турӑ патнех çывхартӑр... Урӑхла пулма та пултараймасть. Мӗншӗн тесен ку çырса кӑтартни, пурнӑçра чӑн-чӑн кӗтретпе тӗл пулни... Ун пекки вара вӑл час пулмасть, пулсан та ырӑ çынпа кӑна.



# ЮМАХСЕМ

## ТИНĔС ЛЕШ ЕНЧИ ТЕЛЕЙ

Мускавра чăх сунă чухнех пулнă тет ку. Чăваш ун чухне питĕ ăслă та тирпейлĕ çын пулнă. Пурте пулнă унăн: йытти те, кушакки те, чăххи те, вăрманĕ-çаранĕ те... Тем тума та пĕлнĕ вăл. Çипуçне те хăех тĕртсе-çĕлесе тăхăннă, урапи-çуни те çул тăрăх çил кăларса вĕçтерсе çӳренĕ, кил-çурчĕ те кермен пекех ларнă. Пурте пулнă ун, пĕр телей кăна пулман. Телей вара, пĕлетĕр, çитмĕл те çичĕ тинĕс леш енче. Унта çитсе килме çăмăл мар. Тата унта тинĕс урлă, çав телей çĕршывне, ют чĕлхе пĕлекенсене тата хăй кам пулнине пĕлмен çынсене кăна каçарнă. Хăш-пĕр телейлĕ чăвашсем темле майпа улталаса çав çĕршыва кайса килнĕ пулать те тăванĕсене каласа кăтартса астарнă. Лешсем вара, хамăртан пулмасан та, ачасем хăть кайса курччăр тесе, ют чĕлхене тата суйма, улталама вĕрентме тытăннă. Ара, унсăрăн карап çине лартмаççĕ те-ха: Тӳрех: «Ты кто?» — теççĕ. Ку ыйту вăл ун чухне пароль вырăнĕнче çӳренĕ. Кам хăйне чăваш тесе каланă, çыран хĕрринчех тăрса юлнă. Карап çинчисем çав халăха темшĕн пит юратсах та кайман тет. Ытти халăх çыннисене лартнă, кусене вара лартман. Аптранă енне телейсĕр тăрса юлнă пирĕн аваллхи несĕлсем хайхи ют чĕлхене вĕрентме шкул лартса пама ыйтаççĕ. «Ах, — теççĕ, — ют пурнăçа вĕренĕпĕр те, хамăр кам пулнине манса кайăпăр та телейлĕ пулăпăр. Карап çине ларса тинĕс урлă леш енне каçăпăр, унта çын пек пурăнăпăр...» Унта çав вăхăтра, чăн та, сĕтлĕ кӳлĕсем юхса выртнă тет, кĕсел çыраҫсем чӳхенсе ларнă тет. Ĕçлемесĕрех ĕçсе çиме, савăнса, юрласа-ташласа пурăнма май пулнă. Чăвашра вара ун чухне ĕçлемесĕр никама та çитермен тет. Ара, камăн ним тумасăр, ĕçлемесĕр пурăнас килмест пултăр? Вĕренес те çав чĕлхене кайса пурăнас тенĕ кăштах шĕвĕрккерехисем. Хамăр камне кăна манасчĕ! Çав анчах. Çаплине çапла та, çапах та ху кам пулнине манса кайма та çăмăл мар пуль çав. Пурăнаççĕ çапла. Пурăнаççĕ-пурăнаççĕ те чĕнсе илеççĕ хайхисем пĕр апăса, пысăк укçа хурса мĕн кирлине вĕрентме ыйтаççĕ. Вĕренме меллĕрех пултăр тесе халăхран пухса шкул лартаççĕ. Апăсĕ ку пĕр ăçтиçук çеç пулнă пулмалла. Пуçлать кусене ăс пама: «Эсир халь мĕн туса пурăнни никама та кирлĕ мар, вăл сирĕн кивелнĕ, халĕ çĕнĕлле пурăнма пĕлмелле,

— тет. — Улăх-çарансене, вăрманăрсене пăхма пăрахăр та сурса хурăр тăванăрсем çине. Вĕсем ĕнтĕ тек сире кирлĕ пулмаççĕ. Унта, телей çĕршывĕнче, пурте пĕр тан, нимле тăван та çук, тата унта ним те тумалла мар, унта пурте хатĕр. Ниме туса аппаланмалла мар. Унта çăкăр та хăй тĕллĕнех пиçет, сăри те иксĕлми юхать...» Тырпул акса тарăхса çитнĕ чăваш пит савăнса каять. Ара, ĕçле-ха кунĕн-çĕрĕн пĕр татăк çăкăршăн, хăвах пăрахса каян. Хăвах сисмесĕрех таçта пач урăхла телей пур пуль тесе шутлама тытăнан. Çапла килсе тухнă та. Чăвашсем ялĕсене пăрахсах шкул вĕренме тухса пынă. Унта вĕсене ырра вĕрентетпĕр тесе усал сăмах калама, суйма, вăрлама, тӳпелешме вĕрентнĕ. Сисмен те кусем хăйсем кам пулса тăнине. Карап çине ларнă чух вара хăйсене панă ыйтăва хирĕç: «Сам себя не снайски!» — тесе хуравланă. Тĕрĕсех каланă пуль çав, çавăн пек калакансене пурне те карап çине лартнă, калама пĕлменнисене лартман, вĕсен хăйсен çĕршывĕнчех юлма тивнĕ. Халĕ те пурăнаççĕ тет-ха вĕсем акасуха туса. Çав телей пире пӳрмерĕ тесе питĕ хурлăхлăн юрлаççĕ тет. Вăт çапла...

А ыттисем, телей шырама кайнисем, ăçта вара тесе ыйтма пултаратăр эсир. Ют çĕре тухса кайнисем темшĕн пĕри те каялла таврăнайман, йĕрри-паллисĕр çухалнă. Те питĕ телейлĕ пулнипе тăван çĕршывне те, ашшĕ-амăшне те манса кайнă ĕнтĕ, калама та хĕн. А тен, вĕсем ăçтине эсир пĕлетĕр?

## ТĔПСĔР КӲЛĔ

Кашни ял çумĕнчех, кирек ăçта вырнаçнă пултăр вăл, пĕр-икĕ тĕпсĕр кӳлĕ пурах. Чи шăрăх кунсенче те типмеççĕ вĕсем. Юнашарах юхса выртакан шыв чăх-чĕп пусса каçмалăх юлать пулсан та пĕр шит те чакмасть. Халăхра каланă пек, чăн та, тинĕспех çыхăнса тăраççĕ пулĕ çав кӳлĕсем. Кашни ялта тенĕ пекех вĕсене вĕрен çыха-çыха ярса тарăнăшне виçсе пăхнă. Тем чухлĕ ярсан та тĕпне çитеймен тет. Шывĕ вара, тен, çавăнпа та питĕ тăрă, нихçан та пăтранмасть. Ăна ĕçсен чун лăштăрах каять, вăй кĕрет. Сивĕ вара хăй, таçтан çĕр айĕнчен тапса тухать те-ха, шăла çĕмĕрет. Пĕр çĕрте ăна мерчен, тепĕр çĕрте чĕрĕлĕх шывĕ, сăваплă шыв теççĕ. Ахальтен мар пуль. Çав шыва ĕçсе пурăнакан халăх, темле ахăрсамана килсе çапсан та, яланах сывă тăрать: чунпа та, ӳтпе те... тата çав тĕпсĕр кӳлĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăнăран пуль хамăра хамăр, кирек ăçта кайса пурăнсан та, тăвансем пек туятпăр. Ара, пире авалхи шыв çулĕ çыхăнтарса тăрать те-ха. Леш тĕнчери Стикс е Ахрат çырминчи шыв мар-ши вăл? Турă

тĕнчене тунă чухне малтан шыв кăна пулнă тет, кайран çĕрне те тунă, анчах çав шыв вăл ниçта та кайса кĕмен ĕнтĕ, çĕр айнех юлнă. Çав авалхи шывпа çыхăнса тăмаççĕ-ши чăваш ялĕсем çумĕнчи тĕпсĕр кӳлĕсем? Турă шывне ĕçсе пурăннă мар-ши пирĕн авалхи мăн асаттесем?

Эпир авалхи чăваш çулне манса кайса çав тĕпсĕр кӳлĕсенчен хăрама та пуçланă пулас. Халь ĕнтĕ эпир унта шыва та кĕместпĕр, ĕçместпĕр те, тата тĕрлĕ химикатсем ярса варалатпăр... Юн та вара вараланать. Халь ĕнтĕ таса мар шыв ĕçсе пурăннă хыççăн чăваш юнĕ улшăнчĕ те пуль çав. Пĕрех улшăнсах пĕтмен-ха! Тĕпсĕр кӳлĕсенчен юхса тухакан турă шывĕ пире малашне те вăй-хал, сывлăх парса тăрĕ. Мерчен шыв ĕçсе пурăнакан халăх пĕр юнлă, пĕр чунлă, уйрăлми тăванлă.

## КĂВАК ЮМАН

Шахçанах, чăвашсем çĕр кăвапине шыраса çӳренĕ чухнех, пулнă ку. Халăх вырăнтан вырăна куçса пынă, турă каласа кăтартса панă сăваплă çĕре шыранă. Çав çĕр кăвапинчен калама çук питĕ пысăк, пĕлĕтех перĕнекен кăвак юман ӳснĕ-мĕн. Ун кутĕнче ӳксе пуççапсан, ырлăх-сывлăх ыйтса кĕлтусан халăх мĕн ыйтнине турă йăлт пама пулнă. Вырăнне çеç шыраса тупмалла, шыраса тупмалла та тавра карта тытса: «Ку çĕр кăвапи!» — тесе кăшкăрмалла.

Çав кăвак юман çĕрпе пĕлĕте пĕрлештерсе тăнă тет, ун тăрăх турă хăй те çĕр çине çынсем мĕнле пурăннине курма аннă тет, вилнĕ çын чунĕ вара, таса пулсан, çав йывăç çулĕпе çӳле-çӳле, çӳлти патшалăхах, кайнă тет. Çав йывăç пĕтĕм тĕнчене, пĕтĕм пурнăçа йĕркелесе тытса тăнă пулать. Çавăнпа та ăна тĕнче е пурнăç йывăççи тенĕ. Ахальтен-им ун тунипе турачĕсем пирĕн патшалăх гербĕпе ялавĕ çине ӳкерĕнсе юлнă. Апла вăл пирĕн пурнăçа тытса тăма, патшалăха йĕркелеме халĕ те пулăшса тăрать.

Вăт çав йывăçа шыранă та чăваш тĕнче касса çӳренĕ чухне. Аслă Шумертан Алтая çитнĕ, унта та тупайман енне хунсемпе пĕрле Хĕвеланăç Европăна пырса кĕнĕ. Çук, унта та ӳсмен иккен çав кăвак юман. Вăл питĕ ирĕклĕ, таса вырăнта кăна ӳсме пултарнă. Вара ăна тупакан халăхăн та чи таси пулса тăмалла пулнă. Çавăнпа та йывăçне кăна мар, ирĕклĕхĕпе чун тасалăхне те шыранă чăваш. Анчах ăçта пырса кĕнĕ, çавăнта ăна чуралăх, вилĕм кĕтнĕ. Пĕтсе çитмех пуçланă халăх. Кăвак юман кăна çăлса хăварма пултарнă ăна.

Çапла пиншер çулсем аташса çӳресен-çӳресен хайхи чăвашсем Атăл хĕррине килсе тухаççĕ. Вăл вăхăтра, çакă хăй те пĕр пин çул каялла пулнă, ку вырăнта сĕм вăрман кашласаларнă. Çĕр ирĕклĕ те таса пулнă. Çак аслă вăрманта та пулмасан урăх ăçта пулма пултартăр кăвак юман тесе шутланă чăвашсем. Чăн та, нумай-нумай кайсан пĕр çӳллĕ вырăнта вĕсем пĕр питĕ пысăк юман тĕлне килсе тухнă. Вуллипе вăл пĕлĕте перĕнсе тăнă, тымарĕпе çĕр варринех çитнĕ. Çулçисем вара ун ахаль юманăнни пек симĕс мар, кăвак пулнă. «Кăвак юман! — савăнса кайнă халăх. — Акă вăл пирĕн çăлăнăç, ирĕклĕ пурăнăç! Акă вăл турă хăй каласа кăтартса панă таса вырăн, çĕр кăвапи! Киремет!»

Халăх ӳксе пуççапнă, турăран ырлăхпа сывлăх ыйтса кĕлтунă. Турă вĕсен кĕллине йышăннă. Чи аслă çыннине хăй патне чĕннĕ. Чăваш мăчавăрĕ хăраса тăман, кăвак юман тăрнех хăпарса кайнă. «Çӳлтен йĕри-тавралла пăхсан куç виççе илмелĕх мĕн чухлĕ çĕр пур, çавă пĕтĕмпех чăваш халăхĕн пулĕ», — тенĕ турă. Вара пирĕн мăн асаттесем вăрман хăртма, çĕр сухаласа тырпул акса илме тытăннă. Ку вырăнтан урăх ниçта та каймастпăр тесе тупа тунă. Кăвак юман айĕнче турра парне пултăр тесе шур вăкăра пусса чӳк ирттернĕ. Халăх панă парнене турă йышăннă. Çавăн хыççăн чăвашăн пурнăçĕ питĕ лайăх йĕркеленсе кайнă. Ăна турă хăй сыхланă.

Нумай вăхăт иртнĕ-и çапла, сахал-и, пĕлместпĕр, анчах та лайăх пурнăçпа мăнтăрланса пĕтнĕ чăвашсем те тупăннă. Вĕсем хăйсене турăран та аслăрах тыткалама пуçланă, ку ырлăха паракан турă мар тенĕ. Çавăнпа та кăвак юмана пуççапма пăрахнă. Ăна касса янă...

Çав усал ĕç хыççăн чăваш тек ырлăх курайман тет вара. Тĕнче йывăççине, пурнăç паракан юмана, пуççапма тесе чупса пынă тет, анчах таса вырăнта тунката анчах тăрса юлнă тет. Ним тума пĕлмен енне чăвашсем çав тункатана пуççапма тытăннă тет. Турра пăрахнисем: «Ку чăвашсем, тункатасем!» — тесе питĕ кулнă тет...

## УРАЛАННĂ ЮМАН

Пĕринче эпĕ Санкт-Петербургра çӳренĕ чухне Чебоксарски тăкăрлăкне пырса тухрăм. Пĕр виç-тăватă çынран мĕншĕн çапла ят хунă тесе ыйтсан тин çав хутлăхра ĕлĕк чăваш лашманĕсем пурăннине пĕлтĕм. Петĕр патша Нева хĕрринче хула хывма чăваш юманне турттарни çинчен илтнĕ пулĕ эсир те. Ах тур, епле турттарнă-ши? Мĕнле вăрăм çул! Тем те курнă, тем те тӳснĕ пулĕ

çав çул çинче мăнтарăн чăвашĕ. Мĕн калаçнă, мĕн юрланă-ши тата?...

Нева шывĕ хĕрринче хула лартма çăмăл пулман, паллах. Шурлăхлă вырăнта никĕсе мĕн хунă, йăлт путнă. Шурлăх та-ха! Петĕр патша хăйĕн чи чаплă керменне тунă чухне вара аптрасах ӳкет. Хăпартса лартнă çурт хăй тĕллĕнех пĕтĕм пурлăхĕ-мĕнĕпе шурлăх тĕпне анса каять. Патша хайхи ним тума аптранă енне хăйĕн чи çывăх та ăслă енералĕсене пуçтарать. Лешсем те ним калама пĕлмеççĕ. Пĕри çех Чăвашра сăвай çапма питĕ меллĕ пысăк юмансем ӳснине аса илтерет, хула никĕсне çавăнтан турттарма сĕнет. Ку сĕнӳпе пурте килĕшеççĕ. Анчах Чăваш çĕршывĕ çав Нева хĕрринчи пулас хуларан питĕ аякра вĕт-ха вăл, унтан мĕнле турттарса килмелле пулать-ха, мĕнле çулпа, тата камсем ĕçлĕç çав ĕçре? Ку ыйтăва та татса параççĕ. Чăвашран Питĕре çитиччен çул хываççĕ. Çулне халĕ те Лашман çулĕ теççĕ. Ĕçлекенĕсене — лашмансем. Питĕ усал çынсем пулнă тет вĕсем, çав лашмансем. Ара, хăвăрах шутласа пăхăр-ха, Питĕр пек пысăк хула тума мĕн чухлĕ юман кирлĕ пулнă пуль. Йывăçне касаканĕ, турттараканĕ вара кам пулнă тетĕр? Паллă ĕнтĕ, чăваш хресченĕ. Вăт çавсене хĕсĕрленĕ те патша тӳрисем. Ĕçлесе панисĕр пуçне вĕсен çав лавçă-лашмансене те тăрантмалла пулнă. Хăрушă, асаплă ĕç пулнă вăл, лашман ĕçĕ. Юман йывăçа касса йăвантармалла пулнă та лав çине тиесе Питĕре çити турттарма тивнĕ. Машинăсăр-мĕнсĕрех! Пĕр-тепĕр йывăçĕ питĕ пысăк, улт-çичĕ çын алă сарса-хăлаçланса та çавăрса илеймен. Ун пеккисене йăвантарас тесен вара çав йывăç тăрринех хăпармалла пулнă. Çынни вара, çав йывăç вуллине суллантарса лараканскер, час-часах йывăçĕпе пĕрле ӳксе вилнĕ. Пин çул ӳснĕ юмана, хăвăрах шутласа илĕр, йăвантарма çăмăл мар пуль ĕнтĕ. Вăл Улăп пек ларнă. Ун тăррине хăпарса пăхсан тĕнче хĕрри те курăннă тет. Çав тĕнче хĕррине пĕртен-пĕр çул, Лашман çулĕ, явкаланса чупса илсе кайнă. Ун тăршшĕпех лавсем, чăваш юманне тиенĕ лавсем, шунă. Каясса кайнă та, анчах нумайăшĕ каялла таврăнайман пулĕ çав, çул çинче е Питĕртех выртса юлнă. Чи паттăр та вăйлă ывăлĕ-хĕрĕсене çухатнă пулать çав вăхăтра чăваш халăхĕ.

Пĕринче çапла хальхи Етĕрне районне кĕрекен вăрманта ӳссе çитĕннĕ пĕр питĕ пысăк юмана утмăл лаша кӳлсе те хускатайман тет. Вара тӳресем, вĕсене Петĕр патша ятарласа хăй янă тет, ним тăвайман енне çав юмана хĕнеме тытăнаççĕ. Кун пек мăшкăла тӳсеймен улăп юман вара сиксе тăнă та çул тăрăх хăй тĕллĕнех утса кайнă пулать. Лашмансем ун хыççăн ут утланса пынă. Питĕре çитиччен çапла хăех утса çитнĕ тет çав чăваш юманĕ. Улăп йывăçа çурт никĕсне хывсан тин вара Питĕр хули те шурлăха путма пăрахнă тет.

Халĕ чип-чиперех ларать çав чăваш юманне хăй никĕсне хывнă Питĕр хули. Халĕ те астăвать лашман ĕçне. Пĕр тăкăрлăкне Чебоксарски тет. Халапри юманĕ çапла утса кайни ĕнтĕ вăл вăхăтри халăх епле хăватлă пулнине, çапла инçе çула çавăн пек кĕрешсем турттарса килме пĕлнине кăтартса парать. Тата унсăр пуçне Питĕр хули тунă чухне мĕн чухлĕ чăваш пĕтнине хурланса аса илтерет. Ним те çухалмасть халăх асĕнче.

## ЧĂВАШ ЮРЛАМА ВĔРЕННИ

«Чăвашсем мĕншĕн хурлăхлă юрлаççĕ?» — теççĕ хăш-пĕр халăх çыннисем чăваш юрланине илтсен. Çĕр пин юрă хушшинче савăнăçлисем те çуккă мар-ха ĕнтĕ, çапах та ытти халăхсеннипе танлаштарсан сахалрах. Вĕсем те, савăнăçлисем, юлашки вăхăтра çуралнисем анчах пулĕ тетĕп. Чăваш вăл тутă та тăнăçлă пурнăçпа нумай та пурăнман вĕт. Ĕмрипех ун вăрçăпа выçлăх асапне, тăшман пусмăрне тÿсме тивнĕ. Хурланса, куççуль тăкса пурăннă вăл, çав куççуль витĕр вара юрлама та вĕреннĕ. Акă епле пулнă вăл.

Чăвашсем ун чухне Атăл тăрăхĕнче анатра пурăннă тет. Мĕн авалтан пыракан йăлапа выльăх-чĕрлĕх пăхнă, сунара çÿренĕ, тырпул акса туса илнĕ. Йĕри-тавра сĕм вăрман кашланă. Кил-çурт лартмалăх пĕлĕте перĕнекен яхтăсем ÿснĕ. Ан ÿркен кăна. Кассан турпас пулать тенĕ пек, нумай та вăхăт иртмен, вăрман варринче ялхуласем ÿссе ларнă. Çынна пит курăнса, асса-кăшкăрашса пурăнман тет вăл, ĕлĕкхи чăваш. Чĕмсĕртерех çÿренĕ. Ара, унта, сĕм вăрманта, мĕн кăшкăрашса çÿремелли пултăр, хула мар вĕт. Унта шăппăн каласан та илтĕнет. Васкамасăр, çапла никама кансĕрлемесĕр пурăннă теççĕ пирĕн мăн асаттесем.

Ял-хуласем ун чухне пурте шыв хĕррине вырнаçнă пулнă, çавăнпа та каснă пĕр турпас çумăр е çурхи шывпа çырма тăрăх анаталла юхсах тăнă ĕнтĕ. Анатра пурăнакан халăхсем шывпа турпас юхса аннине кураççĕ те хăйсенчен çÿлерех тепĕр урăх халăх пурăннине ăнланса илеççĕ. Вĕсен хăйсен ял-хула тавраш, чаплă кермен-çурт пулман, вĕсем вырăнтан вырăна куçса пырса ыттисене çаратса пурăннă тет. Вăт çав халăхсен патши вара çаратма тесе çар ярать. Хайхисем çав çункăç-турпас юхакан шыв тăрăх хăпарса пăхаççĕ те унта чаплăран та чаплă ялсемпе хуласем ларнине курах каяççĕ. Хурахăн ĕнтĕ ун мĕн, ун хăйĕн ĕçне тумалла. Нихçан курман мул курнăскерсен куçĕ-пуçĕсем алчăрасах кайнă. Салтак алли хăех хĕç шырама пуçланă. Ара, мĕн пуррине йăлт туртса илмелле те-ха ун.

Çапла тăваççĕ те. Салтаксем малтан чи хитре хĕрсене ярса илеççĕ. Унтан мĕнпур туприне тăпăлтарса илеççĕ те лашисем çине ларса вĕçтере параççĕ. Чăвашсем хирĕç тăрайман енне, чăтайманнипе ĕнтĕ, йĕрсе яраççĕ. Ун чухне те хăйсене çаратакансене хирĕç тăма пĕлсех кайман пулĕ çав вĕсем.

Питĕ пысăк мулпа таврăнаççĕ çав усал патша тарçисем. Патша ыйтать: «Мĕнле вара унта чăвашсем?» — тет. Салтакĕсем: «Йĕреççĕ!» — теççĕ. «Йĕреççĕ пулсан, туприи татах пур. Пĕр йĕр юлмиччен пĕтерĕр вĕсене!» — тет ку патша.

Нумай та вăхăт иртмест, мĕн çаратса-тустарса килнĕ мулне çисе-ĕçсе янă вăрă-хурах çав турпаслă-шывлă çулпах тепĕр çаратăва тухать. Ара, çулĕ халь паллă та-ха...

Чăваш хăйне ним юлмиччен çаратса кайнă хыççăн ытла пит хуйхăрса пăхса ларман пулмалла, хăй пурнăçĕнче мĕн тумаллине каллех никам хушмасăрах тытса тунă. Çурт лартнă, выльăхчĕрлĕх ĕрчетнĕ, тырпул акса ӳстернĕ. Тăшманран хӳтĕленме вара ниепле те вĕренсе çитеймен. Кусем мĕн пуррине пуçтарса кайнипех çырлахнă пуль-ха тенĕ. Вăрă-хурах вара вăл нихçан та тăранмасть, ун пĕр хăнăхнă ĕçне тумаллах.

Çапла вара, чăн та, нумай та вăхăт иртмест, тăшман каллех персе çитет. Хальхинче туприне кăна мар туртса илет, пĕтĕм ял-хулине те çунтарса ярать. Çĕр çинче чăнласах пĕр йĕр юлмиччен тустарать. Кашни салтак хăйне валли хĕр суйласа илет, ыттисене кĕлетсене хупса çунтарса яраççĕ, ваттисемпе вĕттисене шыва пăрахса путараççĕ, вăйпиттисене вĕлереççĕ е тыткăна илеççĕ.

Тарса хăтăлнисем вара урăх çĕре куçса каяс теççĕ. Урăх çĕре куçса кайнă чухне вара питĕ хурланса йĕнĕ тет вĕсем. Ĕмĕр-ĕмĕр чĕмсĕрленсе шăппăн пурăннăскерсем куççуль витĕр юрласа янă. Усал патша салтакĕсем ку хутĕнче тата пысăк мул пухса килнĕ.

«Ну, мĕнле унта чăвашсем?» — ыйтнă патша.

Лешсем: «Юрлаççĕ чăвашсем, юрă юрлаççĕ!» — тенĕ.

Усал патша вара питĕ савăнса кайнă.

«Юрлаччăр-ха, юрлаççĕ пулсан апла вĕсен урăх нимĕн те çук», — тенĕ.

Вăт çапларах вăлтса калани пур чăваш сăмахлăхĕнче. Вăл, çак халап, темле питĕ ăслă шухăш, пирĕн историри темле пысăк вăрттăнлăх упрать пек. Ăнланса илме те çук. Мĕншĕн çапла хăйне çаратсан-çаратсан нумай вăхăт хушши йĕртсен анчах юрласа ямалла пулнă тет-ха чăвашăн. Мĕне систерсе, вĕрентсе калать ку. Тăруках, чăн та, ăнланса илме те çук. Ан хуйхăрăр, пурнăçра тем сиксе тухсан та юрласа ирттерсе ярăр тет-и. Кирек мĕнле пулсан та ку халапра эпир хамăр халăхăн пĕр пурнăçне куратпăр. Çавă вĕрентет пире пурăнма та, юрлама та...

# ЮЛАШКИ ПАТША

Шăнкăр-шăнкăр юхса выртакан Эль кӳлли хĕрринче Эльтер ĕнтĕ пĕрремĕш хут мар. Ахальтен мар суйласа илчĕ вăл çак таса та хăтлă вырăна. Çакăнтан пуçласа ярĕ вăл тепĕр хут хăйĕн патшалăхне. Эль кӳлли шывĕ епле шăнкăртатса юхать, çапла малтанхи пекех сарăлса ейӳ илсе кайĕ халăх. Эль шывĕ, кăна кашни чăваш пĕлет, малтан Кĕтнене, унтан Сĕвепе Атăла, вара аслă тинĕсе юхса тухать. Çав шыв çыранĕ пулчĕ чăваш халăхĕн çулĕ...

Епле тарăн тата вăл. Славаш мăчавăр ăна тĕпсĕр кӳлĕ тет. Ватăсем ятарласа вĕрен ярса виçсе пăхрĕç. Вуникĕ вĕрен ярсан та тĕпĕ тупăнмарĕ. Тен, çуккă та пулĕ! Кӳллине ăна ахальтен мар пуль тепĕр пилĕк кӳлĕпе çыхăнса тăрать теççĕ. Лешсем вара аслă тинĕспе пĕр шыв пулса тăраççĕ пулать. Аслă Купрат хан карапĕсем те тепĕр чух çав кӳлĕренех ишсе тухаççĕ тет. Славаш мăчавăр ванчăкĕсене те тупса кăтартнăччĕ. Çавăнпа та кунта килсе ларсанах Эль кӳлли çумĕнчех хăпартрĕ хăйĕн çуртне Эльтер. Киремет вырăнĕ те çакăнтах пултăр терĕç. Халĕ кашни çул аслă чӳк ирттереççĕ. Тырпул çитĕнтерме, сывлăхлă пулма, тутар çарĕнчен сыхлама турă пулăшасса кĕлтуса кĕтеççĕ. Халлĕхе турă пăрахмарĕ-ха. Пăлхар, Пӳлер, Сăвар хулисем ĕнтĕ йăлт кĕл айĕнче, халăх та йăлт тарса пĕтрĕ. Унпа пĕрле тарса килнисем те вĕт-шакăрсемпе хĕрарăмсем анчах. Вăйпиттисем вăрçă хирĕнче выртса юлчĕç. Турă сыхлатăр вĕсен таса чунĕсене! Тăван халăхшăн çапăçса вилнĕ çын сăваплă, ун сывлăшĕ çухалмасть, çак тĕнчерех пире пăхса вĕçсе çӳрет, пирĕн юна та апла сывламассерен кĕрет. Çавăнпа вăйлă, çавăнпа халĕ те тытăнса тăрать халăх... Эльтер сывлăша сасартăк çухатнă пек тарăннăн сывласа илчĕ...

Çапах та йĕрсене çухатаймарăмăр пулас. Тушкил тĕлĕнче пирĕн çынсем тутарсен йĕрлевçисемпе тĕл пулнă. Ахальтен мар явкаланса çӳреççĕ вĕсем Кĕтне тăрăхĕнче. Эль шывĕ тăрăх хăпарма ăс çитерĕç те, нумай та вăхăт иртмĕ, Эльпуçне çĕмĕрсе те кĕрĕç. Хирĕç тăма май çук. Халлĕхе вăй пухиччен пытансах пурăнмалла пулать. Вăй пухма вара çăмăл мар. Çанталăкĕ те ку чухне питĕ шăрăх тăрать, пĕтĕм тавралăхра выçлăх хуçаланать. Типĕ тăнă пирки Атăл тăрăхĕнче тырă та пулман теççĕ. Вăрăхурахсем алхасаççĕ. Камăн мĕн пур, йăлт туртса илеççĕ. «Эх, Пăлхара хӳтĕленĕ чухнехи çар пулнă пулсан-и, никамран та хăрамĕччĕ вăл, никама та пăхăнмĕччĕ».

Çапла шухăшласа илчĕ те Эльтер килне çывăрма кĕрсе выртрĕ. Ялĕ, ун тăванĕсем тахçанах тарăн ыйхăра. Вăрман хӳттинче теççĕ пулĕ çав, хăрамаççĕ, хурал та тăратман. Ту айĕпе пытанса килекен вăрă-хурах ушкăнне те курмаççĕ, тĕлĕкре те

тĕлленмеççĕ хăйсен вилĕмĕ килсе çитнине. Шăппăн тăпăртатса утаççĕ тутар учĕсем. Шăнкăртатса юхать Эль шывĕ. Тутлă тĕлĕк курать Эльтер. Вăл халь каллех вăй илнĕ пулать те Пăлхар патшалăхне Хура тинĕс таранах сарса пысăклатнă. Пуринпе те мирлĕ пурăнать вăл, суту-илў тăвать. Пуянлăхĕ ун кунсерен ўснĕçем ўссе пырать. Таврари пĕтĕм халăх сума сăвать чăваш патшине, пурте унпа мирлĕ пурăнма тăрăшаççĕ. Ара, вăйлă таха вăл! Ун çар пур!..

Ялтăрр! çуталса илчĕ çав вăхăтра кермен чўречи. «Хурах!» — кăшкăрса ячĕç ял çыннисем. Яла вут тĕртнĕ-мĕн. Çуртсенчен чупса тухакан çынсене хĕçсемпе каса-каса пăрахаççĕ. Хирĕç тăма пĕлекен те, тарса ўкме пултараканни те çук пулас.

«Тарса ўкме пулăшасчĕ хăть!» — çиçĕм пек хăвăрт шутласа илчĕ Эльтер. Унтан пĕр тăхтаса тăмасăр хăйĕн юлашки çар çыннисемпе çапăçăва кĕчĕ. Анчах хирĕç тăма вăй çитмерĕ... Тĕкĕрçĕ сăнни чĕреренех пырса тиврĕ те, чăвашăн юлашки патши çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ.

...Ир енне Эльпуçĕнчен кĕл купи кăна тăрса юлчĕ. Выльăхчĕрлĕхне те, ывăл-хĕрĕсене те — мĕн пур, пĕтĕмпех тенĕ пек, вăрăхурахсем хăйсемпе пĕрле хăваласа кайрĕç. Çапах та тарса пытанма ĕлкĕрнисем те тупăнчĕç. Вĕсем халь ишĕлчĕк çуртсем çумĕнче юлашки кĕл куписене сăвăрса ахлатса çўреççĕ, хăйсен тăванĕсемшĕн хурланса, питне-куçне чаваласа йĕреççĕ, вилесене авалхи чăваш йăли-йĕркипе чысласа пытарма хатĕрленеççĕ. Славаш мăчавăр та вĕсемпе пĕрле. Апла ял пуçĕсĕр мар-ха вĕсем. Ăслă пуçлă ертсе пыракан пулсан, тен, пурнăçне те тепĕр хут йĕркелесе яма май тупĕç... Тен, турă та пулăшĕ!... Чăваш пуçĕ çинчи инкеке сирсе яма ыйтса апла аслă чўк тумалла пуль тесе шутларĕç ял çыннисем. Эль кўлли хĕрне пуçтарăнчĕç. Кĕлĕ кĕтўçи хăй сăмахне пуçларĕ.

«Е пĕсмелле, турă, çырлах. Кўлли-чўкки каçартăр, вилличĕрри çырлахтăр. Кунĕ те килĕштĕр, çынни те килĕштĕр, каланă чĕлхем кал-кал пултăр, вĕрни-сурни çак пултăр. Ип пултăр, сип пултăр, тек вĕрмелле ан пултăр. Эп вĕрместĕп, эп сурмастăп — çеçенхирте сĕм вăрман варринче Эль кўлли, çав кўлĕре ылтăн çўçлĕ, кĕмĕл шăллă Ашапатман карчăк пур, çав вĕрет, çав сурать. Тухсан — тух, тухмасан — килет, касать, чикет, кăларать...

Вăрă хаяр, тум хаяр, чикен хаяр, хĕн хаяр, ăншăрт хаяр, киремет хаяр, тĕтĕм епле саланса тухса каять, çавăн пек саланса тухса кайтăр пирĕн çинчен.

Çурхи шыв пек шавласа, кĕрхи шыв пек кĕрлесе тухса кайччăр çак ял çине юлнă усал-тĕселсем. Ырă вутама, вĕрсе кăлар! Ырă вутама, вĕрсе кăлар! Ырă вутама, вĕрсе кăлар!..

Уйăх таврăнать — таврăнтăр, кун таврăнать — таврăнтăр,

çĕр çаврăнать — çаврăнтăр... Çавраçил пек çаврăнса тухса кайччăр усал-тĕселсем çак Эль кӳллинчен, тăшман пуçне тарса ӳкиччен çиччĕр!..

Тăрă шыв пек тасалса, ылтăн пек ялтăрса, кĕмĕл пек çуталса юлтăр пирĕн тăван çĕршыв. Аминь!

...Лăпкăн кăна çуталса выртакан Эль кӳлли çак сăмахсемпе пĕрле, темле хăват кĕчĕ тейĕн, темле пăтранса, шуралса-хуралса кайрĕ. Ун çийĕн хура çавраçилсем çаврăнма тытăнчĕç. Акă вĕсем пĕр пысăк çавраçиле пухăнчĕç те çӳлерен те çӳле çĕкленме тытăнчĕç. Тавралăха темле ахăрсамана çитнĕ чухнехи пек хăрушшăн илтĕнекен сас хупласа хучĕ. Шак хытса ларнă халăх куçĕ умĕнче тенĕ пек, пĕтĕм Эль кӳлли шывĕ пĕлĕте таçта çити çĕкленчĕ те хĕвелтухăçнелле ярăмăн-ярăмăн, шуррăн-шуррăн юхма тытăнчĕ. Аслати кĕрлерĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, шарлаттарса çумăр çума пуçларĕ. Витререн тăкнă пек тăкрĕ вăл çырма тăрăх кайнăçемĕн. Лупашкасемпе пĕчĕк çырмасем самантрах шывпа тулса ларчĕç. Тепĕр сехет иртрĕ-и, Эль шывĕ те тинĕс пек хăпарма тытăнчĕ. Акă ĕнтĕ вăл çул çинче мĕн пур — çавна йăлт йăвантарса юхтарса пырать. Йывăр чулсем те пĕр вырăнта выртса юлаймаççĕ. Кăлтăр-кăлтăр кусса пыраççĕ шыв юххи май. Хăвăртран та хăвăрт куçса пырать халь çак шывăн пĕлĕте çити çĕклемĕ. Çав аякка та кайса ĕлкĕреймен вăрăхурахсен пуçĕ çине тӳрех йăтăнса анать... «Хурах!» — кăшкăрать вăрă-хурах ушкăнĕ...

Çапла пултăр тесе кĕлтунă та Славаш мăчавăр пур халăхпа пĕрле. Çапла килсе тухрĕ те... Акă вĕсем халĕ те çумăр çунине пăхмасăрах чĕркуçленсе ларнă та аллисене çӳлелле çĕклесе тăшман пуçĕ çине те инкек йăтăнса антăр тесе кĕлтăваççĕ. Вĕсем янă ылхан çитрĕ курăнать. Аслатиллĕ çумăр чăваш пурлăхне çаратса таракан çар çыннисене хупласа хучĕ. Айăн-çийĕн çавăрттарчĕ çавраçилĕ. Унччен те пулмарĕ — çурхи шыв пек кĕрлесе Эль шывĕ килсе çапрĕ, хурахсене хăйĕнпе пĕрле юхтарса кайрĕ...

Нумай та вăхăт иртмерĕ, хĕвел пăхма пуçларĕ. Сывлăш каллех таса. Çырма тĕпĕнче йăваланса выртакан армак-чармаксем кăна кунта темле ырăпа усал хушшинче пулса иртнĕ кĕрешĕве аса илтереççĕ.

## ХĔВЕЛЕ ХĂПАРТНИ

Тахçанах пулнă тет ку. Ун чухне тӳпере уйăхпа çăлтăрсем те, хĕвел те пулман тет. Пĕтĕм тĕнчене хура пĕлĕт хупласа тăнă. Çулла пĕр вĕçĕмсĕр çумăр, хĕлле юр çунă. Çĕр çинче вăл вăхăтра

нимĕн те ӳсмен, çынсем ялан тенĕ пекех выçă çӳренĕ, туpă хушнăран мĕн панă — çавăнпа тăранса пурăннă, тăхăнмалли те пулман вĕсен.

Хайхи çапла халăх йăлт аптраса çитсен, пĕр хăюллăрах пулнă чăваш турăран çĕре çутатмалăх тӳпене хĕвел ярса пама ыйтать. Питĕ шăнса кӳтнĕ пулнă ĕнтĕ вăл, мăнтарăн. Турă вара ăна хĕрхенет те хĕвел ăçта выртнине каласа çул кăтартса ярать. Хĕвел икĕ юханшыв хушшинче шурлăхра выртнă-мĕн. Çĕрле тахçанах пĕрре çапла канма тесе айлăма анса выртнă пулнă та вăл, сисмен те, çывăрнă та кайнă. Хĕвел çук чухне, паллă ĕнтĕ, тăруках сивĕтсе пăрахнă, çил тухнă та таçтан хура пĕлĕтсем хăваласа килнĕ, çумăр çунă, айлăм самантрах шурлăхланса ларнă. Хĕвел вара çав шурлăхран вăрансан та хăпса тухайман. Пысăк пулнă тата вăл. Йĕтем пысăкăш пулнă теççĕ. Пылчăк ăшĕнче выртнă пулсан та хĕвел тутлă пăтă пек вĕресе кулса тăнă, ун патне çывăха ниепле те пыма май килмен, пĕçертнĕ...

Халăхăн, малтан Урарту çинче пурăннăскерĕн, айлăмра çӳреме çул та пулман. Ун чухне çĕре шыв илнĕ те, пур çĕрте те шурлăх тăнă. Хĕвеле вара епле пулсан та çав шурлăхран çăлса туртса кăлармаллах пулнă. Анчах пур çĕрте те шурлăх пулсан мĕнле пырăн-ха? Малтан кусем аптраса ӳкеççĕ. Ним тума пĕлмесĕр пăхкаласа тăраççĕ. Унтан каллех пĕр ăслă чăваш тупăнать те çав шурлăха канавсем чавса шывне тинĕсе юхтарса яма сĕнет, тип çĕрпе вара хĕвел патне те пыма пулĕ тет. Ку шухăш килĕшет. Анчах та вăл вăхăтра çынсен нимĕнле ĕç хатĕрĕ те пулман. Чавма вара кĕреçе кирлĕ. Турă çынсем ним тума пĕлмесĕр асапланса тăнине курать те кашнин аллине кĕреçе тыттарать. Халĕ ĕнтĕ пĕрле ĕçлесе вăй хуни кăна кирлĕ. Ун пек ниме тума та халăх ăс çитерет. Пуçлаççĕ хайхи чавма...

Пĕр вунă çултан çав шурлăха типĕтсе те пăрахаççĕ. Хĕвелĕ те пулăшать, шыв чакнăçем хытăран та хытăрах хĕртет. Çĕр йăлт типсе çитсен çынсем хĕвеле час çĕклетпĕр тесе ун патне чупса пыраççĕ. Ăçта унта, вăл вĕт питĕ хытă пĕçертет. Патне пынăраххисем йăлт çунса каяççĕ, хăрасарах пăхса тăнисен ӳчĕ хăмпăланса тухать. Ара, ку таранччен хĕвел мĕнне пĕлмен те-ха, çавăнпа та сыхланма ăс çитереймен курăнать. Çапах та хĕвел патнерех пыракансем те тупăнаççĕ. Канав чавнă чухне кам нумайрах ĕçленĕ пулнă, çавăн ӳчĕ хăй сисмесĕрех хĕвел çинче пиçĕхнĕ, хăшпĕр тĕлте, пичĕ-куçĕ ĕнтĕ, хуралсах ларнă. Малтан чăвашсем пурте шурă ӳтлĕ пулнă тет. Кайран вара, çĕр ĕçĕпе аппаланма пуçласан, пĕрмай хĕвел çинче çӳренĕрен хуралсах кайнă. Ну, унччен вĕсен хĕвеле хăпартмалла пулнă-ха. Хĕвелĕ вара, каларăмăр, шурлăхра выртнă. Çĕре шывран типĕтнĕ пулсан та ун патне çывăха пыма май пулман. Хĕвел çунтарнă кăна. Вара

хĕвелтен епле те пулин сыхланас тесе çынсем тумтир туса тăхăнма пуçлаççĕ. Ара, çав шыв юхса выртнă вырăнта хăй тĕллĕнех, турă панипе ĕнтĕ, тĕрлĕ ӳсентăран ӳссе çитĕнме тытăннă, çав шутрах кантăрпа йĕтĕн те талккăшпех кашласа ларнă. Турă кусене каллех ăс панă. Чăваш вара, ăна мĕн тумаллине кăтартса çеç пар вĕт, вилсе кайса ĕçлеме тытăнать. Çав кантăра татса хутса, тӳсе, арласа, кĕпе-тумтир тĕртсе-çĕлесе тăхăнать. Халĕ ĕнтĕ хĕвел патне пыма та пулать, çын умне тухма та намăс мар. Савăнса кайнă çынсем хĕвеле тӳпене час тĕртсе хăпартатпăр тесе харăссăн пырса тытаççĕ. Анчах та май çук иккен. Хĕвел питĕ пысăк пулнă, йĕтем пысăкăш тет. Тĕртеççĕ, тĕртеççĕ хайхи, çук, май килмест, вăй çитмест. Халăх йышĕ те ун чухне пысăках пулман пуль çав. Тата чăвашĕ те вăл ĕлĕкех кун пек пысăк çын пулман тет. Ара, ура айĕнче мĕн ӳснĕ, çав апатпа кăна тăранса пурăннă та-ха, ăçтан ĕнтĕ унта. Тырпул туса илме, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме пĕлмен, çавăнпа та хĕвеле те çĕклеймен. Турă çакна курать те: «Ку мĕскĕн чăваш кун пек тек пурăнаймасть вĕт», — тет. Турă чăваша, калас пулать, питĕ юратнă, вăл тунă халăхсенчен пĕрремĕшĕ пулнă вăл, çавăнпа та чăваш мĕнле пурăннине куç илмесĕр сăнаса пăхса тăнă, асапне курсан хĕрхеннĕ те... Çапла вара халăхăн вăй çитменнине курать те кусене тырпул акса ӳстерме, çав вăхăтрах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме вĕрентет. Аш-пăшпа çăкăр çисе вăйлăрах пулчăр тет. Апат лайăх çиме пуçласанах, чăн та, чăваш питĕ вăйланса каять. Халĕ ĕнтĕ хĕвеле хăпартмалăх хал та тупăнать. Пыраççĕ, харăссăн тытаççĕ, анчах пĕлĕте тĕртсе яма вăй çитереймеççĕ. Хĕвел питĕ йывăр-мĕн. Каллех ним тума пĕлмесĕр пуça усса тăраççĕ пирĕн мăн асаттесем. Ара ĕнтĕ, чăн та, мĕнле çĕклен-ха çав хĕвеле, хĕвел вĕт вăл чул муклашки мар. Тата ăна тыткаланă чухне питĕ таса чунлă, таса алăллă пулмалла пулнă тет. Мĕнпе те пулин çылăха кĕнĕ е ӳт-пĕве мунча кĕрсе çуса тасатман, таса кĕпе-йĕм тăхăнман пулсан, вăл хăй те вараланма пултарнă. Вараланнă хĕвел мĕнле хĕвел вара вăл? Ун пек хуралса пĕтсен вăл çутатма та пăрахĕ?.. Çавăнпа та халăх хĕвеле питĕ асăрхануллăн, ырă сăмах каласа тыткаланă, таса чунпа, таса алăпа кăна... Çапах та хăпартайман. Турă кусем епле асапланнине курнă та каллех пулăшма шут тытнă. Мĕн тăвăн, хăвăн халăху вĕт, турă халăхĕ. Туррăн ĕçĕ чăвашăн ĕçĕ ăнса пынинчен те килнĕ. Çавăнпа та вăл чăваша тепĕр ăс парать. Халĕ ĕнтĕ йĕри-тавра ӳсекен йывăççенчен, чулсенчен питĕ пысăк çурт лартма хушать. Каланă — тунă. Часах пирамида майлă питĕ пысăк çурт ӳссе ларать. Хĕвеле çав çурт тăррине кӳсексемпе хире-хире хăпартаççĕ те хайхи, çĕклесе илеççĕ те тӳпене персе яраççĕ. Çурчĕ вăл Вавилон башни пек питĕ çӳллĕ пулнă, тата ун каллех таса та шурă пӳрт пек пулмалла пулнă. Акă мĕншĕн иккен чăваш хăйĕн пӳрт ăшчиккине пит таса

тытнă, хĕвел чӳречерен кĕрсен, вăл вараланасран хăранă. Кӳсе-кĕсене те вĕсем хĕвеле çав çӳллĕ çурт тăррине хайăрса хăпартнă чухне шурă пирпе чĕркенĕ пулать. Хĕвел вара, хăй те çĕр çинче выртса ывăннă пуль çав, тӳпе тăрăх ярăнса кусса кайнă. Шурлăхра выртнă чухне хĕвел питĕ хурлăхлă пулнă тет. Хăй çапла хавшак пулнăшăн уй-хирсем, тусем çине пăхма та вăтаннă тет. Çакна пĕле тăркача пуль чăвашсем хăйсен ачисене хĕвел ярăнса тухмасăр урама тухма кăна мар, кантăкран пăхма та хушман тет ĕлĕк. Çавăнпа та пирĕн халăх халĕ те хĕвелпе пĕрле ĕçлеме тăрать, хĕвелпе пĕрле çывăрма выртать. Анасса та хĕвел питĕ хăвăрт анать, ăна ниепле те тытса чарма çук. Çавăнпа та вăл çĕр çумне çапăнса ванса кайма пултарать тет. Çавăнпа та ăна хĕрхенсе чăваш арăмĕсем хĕвеле тĕрленĕ, хĕвел час анминччĕ тенĕ. Ара, яра кунĕпе ĕç нумай пулнă та-ха! Арçынĕсем вара хĕвеле пĕр çĕре тăрса пуçĕсем çине антарнă, унтан аллисемпе тытса, асамлă алшăлли çине хурса çĕр çине антарсах хунă. Асăрханă пуль эсир, хĕвел ирпе такам тĕртсе янă пек якăлт кăна сиксе тухать кӳршĕри пӳрт тăрринчен. Каçпа тесен, темле шуçăмланса, темле асамлă алшăлли çине тейĕн, лăпкăн кăна анса ларать.

Çапла хăпартнă пулать чăвашсем хĕвеле. Хĕвеле хăпартакан халăх начар халăх мар ĕнтĕ вăл. Хĕвел пекех вĕри чунлă та таса. Ахальтен мар пуль вăл хăй пурнăçне хĕвелпе виçет, хĕвелпе тупа тăвать, хĕвелпе тăрать, ĕçлет, яланах кăмăллă та хĕвел питлĕ çӳрет. Çавăнпа та чăвашсем: «Хĕвеле хирĕç нимĕнле сăмах та калама юрамасть, хĕвел эпир мĕн тунине пĕтĕмпех курать, мĕн каланине пурне те илтет, унран нимĕн те пытарма çук», — теççĕ. Кирек мĕн килсе тухсан та! Çавăнпа та хĕвелпе пĕр чĕлхе тупма тăрăшаççĕ, хĕвеле атте теççĕ.

## АСАМЛĂ ПУРТĂ

Тахçан чăваш вăйлă та никама пăхăнман халăх пулнă тет. Йĕри-тавра ун чухне сĕм вăрман кашланă, çутă уçланкăсенче кăкăр таран курăк ӳснĕ, Атăлта тем тĕрлĕ пулă выляна тет. Турă чăваша пурăнмалăх мĕн кирлĕ, йăлтах панă. Ху кăна ан ӳркен: тырпулне ак, пуллине тыт, вăрман кас... Вăрман тенĕрен, касматума чăвашăн пĕр питĕ пысăк, ахаль çын çĕклейми пуртă пулнă тет. Атăл ик енĕпе те ун чухне пиншер çул ӳснĕ кĕреш юмансемпе хырсем ларнă. Пĕчĕк пуртăпа касса ӳкерме май килмен ун пек йывăççене. Асамлă, пысăк пуртă кирлĕ пулнă. Çав пуртă пулăшнипех ĕнтĕ вĕсем вăрманне те каснă, çуртне те кермен пек

хăпартса лартнă, çĕр ĕçлесе тăраннă... мулне те пухнă. Ара, ал ăстисем пулнă та-ха!

Çав мула хапсăнса килнĕ те ĕнтĕ пĕринче Атăл тăрăх вăрă-хурах ушкăнĕ. Карап тулли хĕçпăшал тиенĕ те пирĕн ял-хуласене вут айне тума шутланă. Анчах та пирĕн мăн асаттесем те ухмах пулман çав. Ушкуйниксем тапăнса килнине курсанах, тăшман карапĕсем ан иртчĕр тесе, Атăла пĕвелесе хураççĕ. Майне те тупаççĕ вĕт-ха вĕсем! Пĕр машинăсăр-мĕнсĕр. Чи пысăк хыр тымарĕсене касса илеççĕ те çыха-çыха Атăл урлă карăнтараççĕ. Хайхи вăрă-хурах карапĕсем чипер пынă çĕртех шыв варринчех чарăна-чарăна лараççĕ. Малалла та, каялла та каяймаççĕ. Аптранă енне кусем çырана çапăçма тесе тухаççĕ. Кунта та чăнкă çыранран тухнă-тухманах пĕр кĕтмен çĕртен кĕреш пĕренесем кусса анаççĕ. Шыв хĕрринчен хăпарма пултарнă вăрă-хураха вара Иступай паттăр темĕн пысăкăш çав вăрман касмалли асамлă пуртăпа каса-каса пăрахнă. Ним тăвайман енне ушкуйниксем каялла хăйсен карапĕсем çине тарса кĕреççĕ. Сылтăм çырана тухайман пирки Йăлăма каçса тустарма тытăнаççĕ. Анчах унта та вĕсене Вăрмантей паттăр кĕтсе илет. Çав пуртăпах! Ăна Атăл урлă Иступай паттăр ывăтса панă-мĕн. Атăл леш енче те май килмен енне вăрă-хурах урăхла шут тытать. Ылтăн-кĕмĕлпе илĕртсе пĕр чăваш тухатмăшне чĕнсе илет. Леш, ухмах, хăйне халăх пуçлăхне лартманшăн питĕ çилленнĕ тет те тавăрма шутланă. Тухатмăшĕ вăл хăй питĕ вăйлă пулнă тет. Анчах та усалне кура халăх кăмăлне килеймен пулать. Чăваш патши пулас тенĕскер, вăл çав асамлă пуртта туртса илме пулăшма килĕшнĕ тет. Уншăн ăна тăшмансем, чăваш халăхне çĕмĕрсе тăксан ĕнтĕ, патшана лартма пулаççĕ...

Чăнах та çапла тепĕртакран, канса вăй пухнă хыççăн, каллех çапăçу пуçланса каять. Пĕр енне тапăнса пăхаççĕ тăшмансем, тепĕр енне — пĕрех май килмест. Иступайпа Вăрмантей паттăрсем кашнинчех пĕр-пĕрне Атăл урлă асамлă пуртă ывăтаывăта параççĕ, хăйсенчен нимле вăрă-хураха та ирттермеççĕ. Аптранă енне ушкуйниксем пулăшма пулнă тухатмăша ярса илеççĕ. Вĕлерессипе хăратаççĕ. Леш мĕн, усал чун, ылхан чĕлхине каласа вĕрсе-сурса ларнă пулнă. Анчах та тепĕр ырă юмăç та çав вăхăтрах тимĕр чĕлхи каланă: «77 хĕрелсе тухакан хĕвел. Çав хĕвеле хăçан та хăçан пуртăпа кассан юн тухĕ, çавăн чухне тин юн тухтăр. Пĕрре сурса пăх та, çат юсантăр. Турăран ырлăх, этемрен сиплĕх!» — тенĕ. Тухатмăш ку ырă сăмаха ниепле те çĕнеймен. Ара, хĕвеле вĕт ăна пуртăпа касаймăн. Çапах та тĕнчере усал вăйсем те пур çав, хĕвеле касма тухатмăша шуйттан вĕрентет. Эс хĕвеле тĕрленĕ алшăллине ил те сак çине хурса кас тет. Чăн та, çав чăваш хĕрарăмĕ тĕрленĕ алшăлли çинчи тĕрĕ чĕр хĕвел пек çутатса тăнă. Пите шăлăнсан çутă сăн кĕртнĕ, сывлăх

панă, усал-тĕселтен сыхланă. Тухатмăш аллинче вара вăл кассан хăй хăватне çухатнă.

Çапăçу питĕ хĕрсе çитнĕ вăхăтра пулса иртнĕ ку ирсĕр ĕç. Малтанхи пекех, паттăрсем пĕр-пĕрне пуртă ывăтса панă, малтанхи пекех тăшмансем ним те тăвайман... Анчах тухатмăш хĕвеле кассанах çав асамлă пуртă Атăл варрине ӳкнĕ те шыва путнă. Çавă çеç кирлĕ пулнă тапăнса килекен вăрă-хурахсене. Вĕсем пĕр хĕрхенмесĕр пĕтĕм халăха касса-вакласа пĕтернĕ. Асамлă пуртăсăр тăрса юлнă халăх хирĕç тăрайман, пĕтнĕ. Чĕрĕ юлнисем сĕм вăрмана тарса кĕнĕ, унта хăраса пурăнса хăйсем те чĕрчунсем пек чĕлхесĕрленсе кайнă. Вилнисем вара чарлан пулса вĕçсе çӳреççĕ тет халĕ те Атăл çийĕн. Асăрханă пулĕ, чарлан хурлăхлăн кăшкăрса шыва чăмса пăхать, тен, çав асамлă пуртă ăçта выртнине пĕлесшĕн пулса çапла тăвать вăл.

## КĂВАК ХУППИ

Кăвак хуппи уçăлать тенине эсир пĕрре кăна мар илтнĕ ĕнтĕ. Çын пурнăçĕнче вăл, халăх калана тăрăх, виçĕ хутчен уçăлса хупăнать. Çавă вăхăтра вара мĕн ыйтса ĕлкĕретĕн, çавна турă йăлт паратъ тет.

Парасса паратъ те, анчах турă мĕн панине те ăнланса илме пĕлмелле-мĕн. Тахçанах пулнă тет ку. Тен, нумаях та пулмасть? Пурăннă тет çапла çĕр ĕçлесе пĕр Якур ятлă чăваш. Ытла пит чухăн та, ытла пит пуян та пулман тет вăл. Ĕçленĕ чух ĕçленĕ, уявра пĕтĕм тăванĕ-пĕтенĕпе пĕрле юрланă-ташланă, ĕçнĕ-çинĕ... Халăхран, пĕр сăмахпа каласан, юлман, мала та кайман.

Пĕринче çав, тем çăмăлпа ĕнтĕ, сӳсмен йăтнăскер, картишĕнче тата мĕн тумалла-ха тесе тăпăртатса пăхкаласа тăнă пулнă. Çав вăхăтра хĕвел сиксе тухнă. Вăл кăн-кăвак та тем пысăкăш курăннă. Пĕтĕм тавралăх куçа шартаракан кăн-кăвак çутăпа ялкăшнă. Тĕлĕнмелле илемлĕ, тĕлĕнмелле телейлĕ туйса илнĕ хăйне хăй чăваш. «Кăвак хуппи! — аса килнĕ аслашшĕ ярса панă халап. — Мĕн те пулин ыйтса ĕлкĕрмелле!»

Пĕтĕм ĕç сасартăк та питĕ хăвăрт пулса иртнĕ, çавăнпа та ку ним каласа ыйтма аптраса тăнă. Аллинче ун сӳсмен кăна пулнă. Вăл вара аптранă енне: «Сӳсмен пар!» — тесе кăшкăрса янă. Кăвак хуппи çав самантрах çухалнă. Картишĕнче пĕр Якур анчах тăрса юлнă. Хĕвелĕ те яланхи пекех çутатнă, тавралăхĕ те, малтанхи куçа кăна курăннă тейĕн, ним чухлĕ те улшăнман... Якур вара: «Мĕн пулчĕ ку? Чăнах та кăвак хуппи-ши?» — текелесе ĕнсе хыçса тăнă. Вăл çапла анраса тăнине турăсăр пуçне

урăх никам та курман. Никам та курман япала вăл пулман пекех. Якур та ним пулман пек лаша кӳлме тытăннă. Ара, кун кĕтмест вĕт, вăл апла-капла шухăшласа тăнă ҫĕре хĕвел те чылай ҫӳле кайнă-мĕн... Ĕҫе кӳлĕнмелле! Кӳршĕсем акă унран та маларах ĕлкĕрнĕ, юрла-юрла ака тăваҫҫĕ. Якур та ҫынран юлас темен, лашине хăваланă та хăваланă... Лаши ун, калас пулать, турта хушшинче ташласа кăна тăнă, ҫĕрĕ вара кăшт хытăрах пулнă-ши, каҫ енне ҫав чаплă лаша та ывăнса ҫитнĕ. Ана шуратасси, ман пек, шур хута хуратса ларасси мар ҫав вăл! Якур вара ҫавна тĕппипех ăнланса илеймен-и е выҫкăнланнă ытла, халь калама хĕн, кирек мĕнле пулсан та пĕр пуҫланă ĕҫе вĕҫлес тенĕ пуль, ҫав анчах. Чăваш вăл, асăрханă пуль, пĕр ĕҫлеме пуҫласан йăванса кайса ӳкиччен тăрăшать вĕт. Вăт кунпа та ҫавăн пек килсе тухнă. Вăл, мăнтарăн, хăйне те, лашине те хĕрхенмен. Каҫ пуличчен ку анана сухаласа пĕтерес тесе лашине хăваланă та хăваланă, чĕнрен явнă чăпăркки алран кайман... Ун пеккине епле чăтăн. Лаши йăваннă та кайнă, тек тăрайман та! Вăт сана кăвак хуппи! Вăт сана телей! Мул ыйтса тăнă ҫĕртех Якур лашасăрмĕнсĕр, сӳсменпе кăна тăрса юлнă. Халь ĕнтĕ мĕн тăвăн, хуйхăрнă-хуйхăрнă та чăваш, ака тумалла вĕт, сӳсменне лаша вырăнне хăй тăхăннă. Аран-аран ҫапла аппаланкаласа сухаласа-акса пĕтернĕ. Лашасăр-мĕнсĕр кил хуҫалăхĕнче май ҫук-тăр ҫав. Вăхăт нумай та иртмест, Якур пасартан пĕр ăратлă лаша туянса килет. Сӳсменĕ-мĕнĕпех! Анчах усси пулмасть. Тепĕр виҫтăватă кунранах лаша витерех выртса вилет. Сӳсменĕ вара юлать. Ҫичĕ хутчен лаша туянса лашаллă пулса пăхать Якур, май килмест. Кашнинчех мĕн те пулин сиксе тухать: е вилет, е вăрласа каяҫҫĕ, е урасăр тăрса юлать... Киленче ун ҫичĕ сӳсмене ҫитет. Пуҫа ҫĕклемесĕр лаша вырăнĕнче тенĕ пек ĕҫлет Якур, пурнăҫĕ вара пĕр шит мала каймасть. Кăвак хуппирен мĕнле ыйтнă, йăлт ҫавăн пек пулса пырать, «Эх, — тет Якур, — Кăвак хуппи ҫын пурнăҫĕнче виҫĕ хутчен курăнать тет. Тепре курăнастăвас пулсан-и?» Ҫав вăхăтра, каҫ енне, чăн та, кăвак хуппи тепре уҫăлса каять. Турă хăй те хĕрхеннĕ пуль ҫав мĕскĕне, хăйĕн телейне туптăр тенĕ. Акă хайхи хĕвел каллех кăн-кăваккăн ялтăрать. Тавралăх такама та телей кӳмелле илемлĕ. Пирĕн хресчен те, ҫакна курнăскер, савăннипе: «Акмасăр-тумасăр, авăртмасăрпĕҫермесĕр ҫăкăр ҫитер! » — тет. Ҫапла калать кăна, турă ăна пĕр хулана магазинри пĕр вăрăм-вăрăм черете пыртарать те тăратать. Ҫăкăр черечĕ-мĕн! Ҫынни! Пурте авăртмасăр-тумасăр, акмасăр-вырмасăр ҫăкăр ҫиесшĕн. Пурте аллисене тăснă, пурте кăшкăрашаҫҫĕ. Ах, савăнса каять Якур. Тин ак ямăт ҫăкăр ҫиетĕп тет. Мĕн унта ялта лаша пек ĕҫлесе супса пурăнмалла пултăр. Хăйне вăл халь чи чее ҫын пек туять, турра тав тăвать. Ялта унта ĕҫлеччĕрех тет. Пĕлмест те, чухламасть те — ял лашасăр тăрса

юлнине! Лашисене темле мур йӑлт пĕтернĕ — сӳсменĕсем вара юлнӑ. Ял халӑхĕ халь лаша выраннеçав сӳсменсене тӑхӑнса хӑй суха тунӑ. Çавӑнпа савӑннӑ та ĕнтĕ Якур, эпĕ чеерех пултӑм тенĕ. Хулара вара пурӑнма май пулнӑ. Анчах ку черечĕ питĕ вӑрӑм пулнӑ-и е çынсем черетсĕрех питĕ нумайййӑн кĕре-кĕре илнĕ-и, çапла тӑрсан-тӑрсан Якур валли пĕр хытса кайнӑ çӑкӑр татӑкĕ кӑна юлнӑ. Акмасӑр-тумасӑр çӑкӑр çиес тесен кунта, хулара, чӑн малтан черетсĕр-мĕнсĕр пырса кĕме вĕренмелле-мĕн, унсӑрӑн... унсӑрӑн мĕнле пурӑнасси паллӑ. Анчах ялта килпетлĕ пурӑнма вĕреннĕ Якур, паллӑ, ун пек чӑрсӑрла хӑтланма пултарайман. Намӑс-симĕсне йӑлт çухатса пĕтермен, çавӑнпа та çынсем илсе пĕтериччен сӑпайлӑн кӑна сӑнаса пӑхса тӑнӑ. Çапла çав хыт çӑкӑр таткипе пурӑнкаланӑ-ха вӑл, анчах нумай та вӑхӑт иртмен, черет питĕ вӑрӑмланса кайнӑ, çӑкӑрĕ те çитми пулнӑ. Тата пит хакланса кайнӑ. Ара, ялта сӳсменсем кӑна выртса юлнӑ та-ха, çыннисем, лашасӑр тӑрса юлнӑскерсем, хулана тарса пĕтнĕ. Çӑкӑрсӑр, лашасӑр тӑрса юлнӑ халӑх вара тавлашӑва кĕрсе кайнӑ. Айӑплисене шыранӑ. Пурте кӑвак хуппи уçӑласса кĕтнĕ. Мĕн ыйтĕç-ши вĕсем кӑвак хуппи виççĕмĕш хут уçӑлсан? Мĕн ыйтĕ-ши Якур? Вӑл ыйтни темшĕн пĕтĕм халӑха пырса тивет те, питĕ асӑрханса, питĕ пĕлсе ыйтас пулать ĕнтĕ ун. Чӑвашшӑн çав кӑвак хуппи юлашки хут уçӑлать пулать! Хальхинче те вĕçертсен вара çав телее, чӑн та, ӑраскалсӑр тӑрса юлма пултаратпӑр вĕт...

## АТТИЛА ТУПӐКĔ

Хунсем тахçан Атӑл тӑрӑхĕнче те пурӑннӑ пулмалла. Алтай енчен хӑваласа янӑскерсем майĕпен хĕвеланăçнелле куçса пырса Атӑл хĕрринех килсе тухнӑ. Унта вӑл вӑхӑтра калама çук хӑтлӑ çанталӑк тӑнӑ. Çеçенхирсем ешернĕ, таса шыв шӑнкӑртатса юхса выртнӑ. Выльӑх-чĕрлĕх ĕрчетме питĕ меллĕ пулнӑ. Çавӑнта вӑй илнĕ те ĕнтĕ Аттила халӑхĕ. Вӑй илнĕ те пĕтĕм тĕнчене пӑхӑнтарма тытӑннӑ. Рим империне хускатнӑ, унти чурасене ирĕке тухма пулӑшнӑ. Хĕвеланӑç Европӑна пырса кĕнĕ те готсемпе франксене çĕмĕрсе тӑкнӑ. Нимĕç патшисене те Аттила ирĕк панипе çеç лартнӑ тет ун чухне. Ун тĕп çарĕ хальхи Венгри çĕр-шывĕ вырӑнĕнче тӑнӑ. Ирĕклĕ пурӑннӑ пирĕн мӑн асаттесем. Ӑçта каяс тенĕ, çавӑнта кайнӑ. Мĕн тӑвас тенĕ, çавна тунӑ. Вӑйлӑ та харсӑр хунсен çав вӑхӑтрах çутçанталӑксӑр пуçне урӑх нимĕнле пурлӑх та пулман. Çав çутçанталӑка пуççапса пурӑннӑ та вĕсем. Анчах ун чухнех вӑрçӑ вӑрçнӑ çав. Хунсен те çав вӑрçа

кĕме, хăйсен тăван çĕршывне хӳтĕлеме тивнĕ. Чăвашсем хăйсен патшине халăха ертсе пыма пĕлнĕшĕн ĕнтĕ атте тенĕ. Пĕрре çеç мар çĕнтерне вăл ертсе пынипе тăшмана чăваш халăхĕ. Анчах та пĕринче юлашки çапăçура Аттилăна, чи малта пыраканскерне, тăшман пур енчен те хупăрласа илет. Вăл шурă лаша утланса çӳренĕ пулнă. Питĕ вăйлă лаша пулнă тет. Çапла вара вăл тăшмансен ретне çĕмĕрсе кĕнĕ те пурне те хăйĕн хĕçĕпе хирме тытăннă. Анчах та лаша ури аманать те, Аттила çуран тăрса юлать. Тăшмансем ун çине ухă йĕпписене çумăр çунă пек çутарнă. Çарпуçĕн щичĕ çине тăрăннă вĕсем пурте. Вăл йывăрланса çитсен, ăна улăштарнă. Ухă йĕппиллĕ щита патша тарçисем çиччĕн аран-аран çĕкленĕ. Вăл, ухă йĕпписемпе тулса ларнăскер, çав тери йывăр пулнă. Пĕринче, сыхланса ĕлкĕреймен пуль çав, çав щита улăштарма тăнă чухне, тăшман тĕкĕрçи ăна чĕреренех персе лектерет. Вилес умĕн Аттила хăйне тăван çĕршывĕнче, Атăл çинче, тирпейлесе пытарма ыйтать. Вара тăванĕсем ăна ылтăн тупăка хураççĕ те пĕтĕм тĕнче урлă алă вĕççĕн йăтса тухаççĕ. Атăл хĕрне çитеççĕ те хăйсен юратнă, мухтавлă та чаплă патшине Атăла пăрахса пытарма шут тытаççĕ. Юханшывне çавăн хыççăн вара тин Атăл теме тытăнаççĕ. Унччен вăл урăх ятлă пулнă. Ахальтен мар пуль чăвашсем Атăла атте тесе чĕнеççĕ. Аттилăн ылтăн тупăкĕ вара халĕ те Атăл тĕпĕнче выртать тет. Вăл хăçан та хăçан çиеле ишсе тухать, çавăн чухне халăх тин хăйĕн вăйхăватне кăтартать тет.

## МĂЧАВĂР КĔПИ

Çиччĕмĕш çул ĕнтĕ пĕр вĕçĕмсĕр тапăнса тăрать тăшман Пăлхар патшалăхĕ çине. Темле питĕ пысăк çарпа пырса çапать пулсан та халлĕхе хирĕç тăмалăх вăй пур-ха чăваш-пăлхарсен. Халăхĕ те ĕнтĕ пĕр çын пек кар тăрать, хĕçтимĕр туптать, çĕмĕрĕлнĕ е çунса кайнă кармансене çĕнĕрен çĕклет, çеçенхирте утлă çар ан каçайтăр тесе çĕр чавса купалать, канавĕпе шыв юхтарать. Çĕр алтнă вырăнсем хăш-пĕр тĕлте виççĕр çухрăма та тăсăлаççĕ ĕнтĕ. Çапах та унпах ĕнтĕ епле тытса чарăн, епле хуралласа ĕлкĕрĕн. Тепĕр пĕр-икĕ çултан акă, кун пек тапăнса тăрсан, ку вăрă-хурахсене никам та тытса чараймĕ, пĕтĕм тĕнчене ярса илĕç. Мĕн чухлĕ ялхула пĕтрĕ пулĕ халĕ те, мĕн чухлĕ çын, мĕн чухлĕ пуянлăх... Пуянлăх... Атлас мăчавăр сĕтел çинче выртакан кĕнекене алла илчĕ.

Акă вăл чăн пуянлăх, чăваш истори кĕнеки. Ăна епле çăлса хăвармалла-ши? Тăшмансем çĕнтерсе килсен ăна та çунтарса

ярĕҫ. Вара халăх каллех ҫырулăхсăр тăрса юлĕ, хăй кам пулнине те, ăҫтан килнине те манса кайĕ. Йывăр шухăшсем ҫаврăнчĕҫ мăчавăр пуҫĕнче. Мĕнле те пулин мел шутласа кăлармаллах пулать. Тăшман хаяр та чее, чăн малтан вăл ҫын ăстăнне пĕтересшĕн, унтан хирĕҫ тăрайми пулсан тарҫă туса хурасшăн. Кăна Атлас мăчавăр питĕ лайăх ăнланать. Ахальтен-им ҫырчĕ вăл ҫак кĕнекене. Истори кĕнекине ҫырни вăл, ăна патша та ăнланать, патшалăх тунипе пĕрех. Туниех мар пулсан та тытса тăма пулăшать ĕнтĕ. Халĕ вара акă патшалăхĕ те вилĕм умĕнче тăрать. Ăна та ҫăлма май ҫук пуль. Вырăссемпе пĕрле хирĕҫ тăратпăр тесе килĕшӳ тунăччĕ, пулăшмарĕҫ. Тăшмансем патне элчĕсем ятăмăр, йышăнмарĕҫ. «Тем тумалла ĕнтĕ, тем тумалла?» — пăшăлтатрĕ ватă ҫын тути. Алли тĕлли-паллисĕр тенĕ пек, кĕнеке страницисене уҫкаларĕ, пӳрне вĕҫĕпе кашни саспаллине ачашласа, сăтăркаласа пăхрĕ. «Тĕрĕ пекех, — пырса кĕчĕ пуҫне пĕр кĕтмен шухăш. — Ара, ку кĕнекене вĕт, тĕрĕ пекех, кĕпе ҫине куҫарса ҫырма пулать, акă мĕн!»

Шутланă — тунă. Атлас мăчавăр хушнипе чи ăста ҫичĕ хĕр кунĕн-ҫĕрĕн чăваш кĕнекине мăчавăр кĕпи ҫине куҫарса тĕрĕлеме тытăнаççĕ. Ҫапла туса пĕтерсен ватă ҫын кĕпи те питĕ капăрланса, чаплăланса каять. Атлас халь хăй те патша пекех курăнать. Ку пĕрре савăнтарать те, тепре кĕвĕҫтерет те патша ҫумĕнче тăракан ҫынсене. Ара, халĕ мăчавăр ҫапла тăхăннă хыççăн патшаран та аслăрах курăнать. Турă тейĕн. Ун тумĕнчи кашни саспалли турă ҫапнă пичет пекех. Ҫав вăй парать пулĕ ăна. Тăшман айне ан юлтăр тесе киреметне те куҫарасшăн вăл, кашни чăваша ҫырullă кĕпе тăхăнтарас тесе тĕрĕҫсем нумайрах уйăрса пама ыйтать...

Анчах ăҫтан ĕнтĕ пурне те туса ĕлкĕрĕн. Тăшман пур ҫĕртен те ҫĕмĕрсе кĕрет. Ăна тытса чаракан вăй та ҫук ĕнтĕ, ҫичĕ ҫул вăрҫса патшалăх йăлтах хавшанă.

Ҫук, туса ĕлкĕреймест ватă мăчавăр хăй ĕҫне. 1236-мĕш ҫулта тутар-монголсем пĕтĕм вăйне пухса Пăлхар патшалăхне тапăнса кĕреççĕ те мĕнпур хуласемпе ялсене, пурĕ икĕ пине яхăн, ҫунтарса яраççĕ. Тахҫан пурнăҫ вĕресе тăнă ҫĕрте кĕл купи кăна мăкăрланса выртса юлать.

Атлас мăчавăр та тараймасть. Пăлхар хулине тăшман пур енчен те хупăрласа илет те унта пурăнакан мĕнпур халăха пухса ҫунтарса ярать. Вĕсен хушшинче Атлас мăчавăр та хăйĕн ҫырullă кĕпипе тăнă пулнă. Вилес умĕн вăл ҫырullă кĕпесем сахал ҫĕлеттернĕшĕн тата вĕсене кирлĕ таран тĕрлесе ĕлкĕреймен шĕн питĕ кулянна тет. Чăваш кĕнекине, хăйĕн кĕпи ҫине тĕрлениne, хĕрлĕ ĕне ҫинĕ чухне турăран чăваш ҫырулăхĕ ан пĕттĕр тесе кĕлтуса пулăшу ыйтнă. Кĕпи ҫине тĕрленĕ саспаллисене ҫулăм хыпса илнĕ пулать те, ҫавăн чухне вутлă саспаллисем

çӳлех вĕçсе кайнă. Пĕтĕм патшалăхĕпех ӳкнĕ пулать çав вăхăтра çав çулăмлă саспаллисем вăрман хутлăхне тарса кĕнĕ çынсен кĕписемпе пуçĕсем çине. Ахальтен мар пуль çав чăваш хĕрĕсем халь те тĕрĕ тĕрлеме ларсан, хăйсем сисмесĕрех пулĕ, кĕпи-тутăрĕсем çине чăвашăн тахçанхи çырулăхри саспаллисене хĕрлĕ çиппе тĕрĕ çине кăларма тăрăшаççĕ. Ĕлĕкхи тата хальхи кĕпесене тытса пăхсан... авалхи ăсчахсем мĕн çырса хăварнине та вуласа илме пулать теççĕ.

Çук çав, вулама пĕлменни тата чунсем хупă пулни кансĕрлет пуль. Çапах та кашни çын çак халап майлă шухăша чунĕнчех тытать, тĕлĕнсе те ахлатса илсе пăхкалать вара аллине чăваш тĕрриллĕ кĕпе лексен. Сисет чун чăваш вăрттăнлăхне, аса илет пулмалла та, çапла илемлĕх тата ăслăлăх çухалнăшăн хурланса илет. Кăмăл килсен вара çав саспаллисене тăмха вырăнне хăйĕн япали çине тĕрĕ тĕрлесе е эреш касса хурать. Нумай чухне вăл ят е йăх палли пулса çӳрет. Çук, çухалмасть чăваш çырулăхĕ, вăл, турпалли пек, телей кӳмелĕх пирĕн çипуça илемлетсе хăй тĕллĕнех тенĕ пекех тухса тăрать! Ăна пĕтерме юрамасть теççĕ, çав турпаллине!

## «АЙ-АРА, АЯРА»

Чăн малтан мана чăваш шăпи интереслентерет. Унăн чунне тем, вупăр пек усал, пусса тăрать пек. Ниепле те сирсе ывăтса яраймасть вăл ăна, халĕ те çĕкленеймест. Хăйĕнчен хăй хăрать пек вăл. Пурнăç чăнлăхне чухласа илсенех вара хăй те темле урăх çын пулса каяссăн туйăнать. Акă çак шухăш çиппине сӳтсе пынă майăн пĕр халап ярса парас мар-и сире?

Ĕлĕк-авал пулнă ĕнтĕ ку. Турă кашни халăх валли телей çырнă чухнех. Чăваша та тем пысăкăш кĕнеке — «Телей кĕнеки» тенĕ ăна — алранах тыттарнă. Çав вăхăтрах ăна вулама та çав чĕлхепе каласма та вĕрентнĕ. Чăваш хăй тĕнчине тутăр тенĕ ĕнтĕ, телейлĕ пултăр тенĕ. Чăнах та, чăваш та, ытти халăх çыннисем пекех, çав кĕнекери пек пуплеме вĕренсе çитнĕ, кĕнекине те кашни кун уça-уça вуланă. Сăпайлă та тăрăшуллăскер часах ыттисенчен ăспа та, ĕçпе те иртсе кайнă. Çакă, паллă ĕнтĕ, усалсене килĕшмен. Вĕсем чăваш пурнăçне пăсма шутлаççĕ, майне те тупаççĕ. Чăваш, айван, турă кĕнекине мĕнле вуланă, çаплипех уçă хăварнă иккен. Шуйттан пырать те чăваш пурнăçне, турă мĕн çырнине, вулать. Турă, калас пулать, чăваша ĕçченшĕн питĕ юратнă пулать те, йăлт телей анчах çырса хăварнă пулнă. Шуйттан вара çав пурнăçа пăсма тытăнать.

«Тăвансемпе пĕрле пурăнăр, пĕр-пĕрне пулăшăр», — тенĕ вырăна вуласа илет те: «Аха, — тет, — кусене тăванĕсемпе тӳпелештерсе ярас», — тет. Тытать те пурнăçлать шухăшне. Чăваш хăйĕнпе мĕн пулса иртнине те ăнланса илеймест, тăванне кĕвĕçме, сăтăр тума, ура хума пуçлать. Питĕ чаплă юррисене, чат тăванлăх çинчен каланисене, шуйттан йăлт мантарать. Тăван, пичче, шăллăм, тете, аппа, атте, анне сăмахсем вырăнне пачах урăхла е усал сăмахсем калама вĕрентет. Ак хайхи, çынсем сисмеççĕ те, сăмах урлă тенĕ пек усал сăмах пеме тытăнаççĕ. Ку темех мар-ха. Пĕр-пĕрне пулăшма пăрахсан та пурăнать чăваш, ăна ĕçченлĕх хăтарать. Ĕçлет вăл, пуçа çĕклемесĕр ĕçлет. Ир тăрать те каç выртать. Ара, турă кĕнекинче: «Ĕçле, ĕçле çи», — тесе çырнă пулнă та-ха. Чăваш вара ăна питĕ тăрăшса вуланă, ăсран калама вĕреннĕ, анчах каллех, айван, кĕнекине хупмасăрах хăварнă. Хăй çывăрма выртнă, шуйттанĕ вара пырса вуланă та: «Аха»! — тенĕ, чăваша пăлахая кăларма пуçланă. Кашни кун ун хăлхинчен пырса çапла пăшăлтатнă: «Эй, айван, чăваш, пур ăслă çын та çак тĕнчере ĕçлемесĕрех çисе пурăнать. Эс анчах, айван, ниме пăхмасăр ĕçлетĕн. Пăрах, ан култар çынсене, мĕн тума кирлĕ сана ыттисене тăрантса пурăнни. Хăвăн ав тăранмалăх та çук, пур-çуккине те ырă пулас тесе кахалсене парса тăратăн. Пăрах çурлуна, тыт çĕçĕ, кирлĕ пулсан пуçлăхсем пек турт та ил! Ухмах ан пул!»

Анраса кайнă чăваш пĕр кун итлет шуйттанăн наркăмăшлă пăшăлтатăвне, икĕ кун. Пуçне çĕклесе пăхать те тĕлĕнсех каfive. Пĕтĕм ытти халăх чăнах та ним ĕçлемесĕрех пурăнать-мĕн. Пурте савăнăçлă тата хăйсем, тутă. Чаплă хупахсенче хитре хĕрарăмсемпе пĕрле ĕçсе çиеççĕ, темле кут-пуç юррисене авкаланса ташласа юрлаççĕ. Ай лайăх! Ай хитре! Хайхи, çав чăваш, тăрать-тăрать те пăхса — намăсланса каять. Ун, мăнтарăнăн, аллинче те хăрăк çурла, те кĕреçе, çийĕнче çĕтĕк-çатăк тумтир... Лешсен вара аллисенче черккесем, ылтăн-кĕмĕл çакса тултарнă çипуçĕсем йăлтăр та йăлтăр туса çеç тăраççĕ. Чăтайман тет вара çав чăваш, çурлине çĕре çавăрса çапнă та ташша яра панă. «Айара, аяра, тата тепĕр черкке пар!» — тесе юрлама тытăннă. Шуйттанĕ те, ĕçĕ ăннă та, унпа пĕрлех ташланă, астарнăçем астарса пынă ăна. Хайхи ку кунĕн-çĕрĕн ĕçет, çиет, ним те ĕçлемест. Пурăнсан-пурăнсан, паллă ĕнтĕ, мĕн ĕçлесе тунине йăлт пĕтерет. Юхăнсах каять. Пĕринче çапла ирпе мухмăрла вăранать те: «Айай, пуç ыратать!» — текелесе мĕн те пулин ĕçмелли е çыртмалли шырама пуçлать. Ним те тупаймасть, çук та-ха. Мĕн тумалла? Чăваш куç умĕнче выртакан турă кĕнекине курах каять. Çав çеç юлнă пулнă пӳртре. Уçса пăхать, вулать. «Кирек мĕн çухатсан та чĕлхӳне ан çухат, вăл сан чуну, ăна пăрахсан выльăха тухатăн!» — тенĕ пулнă-мĕн унта. Пурăнап-ха тет чăваш, выçăллă-

тутăллă, çĕтĕк-çурăк тумлă, çăпаталлă пулсан та чăвашах-ха эп тет, çынах... Савăнать. Анчах савăнăçĕ нумаях пымасть çав. Шуйттанĕ те кунтах: «Аха, — тет, кăна йăлт пĕтерес, — тет. — Выльăха кăларас! Чĕлхесĕр-мĕнсĕр тăрса юлтăр та хăй чăваш пулнине те мантăр». Ĕçĕ те пĕтнĕ. Каланă — тунă. Шуйттан çынран вăйлăрах пулнă пуль çав вăл ĕлĕк. Тата вĕт вăл питĕ вăрттăн тунă хăйĕн усал ĕçне. Чăваш каллех сиссе те юлайман — чĕлхине çухатнă та. Чип-чипер калаçас вырăнне тем мăклаттарма тытăннă. Хăйне паттăр та хăюллă туйнă. Ара, чĕлхине çухатнă çын вăл хăй камне те пĕлмест те-ха. Çиет, çăкăр çĕртет — çав анчах.

Çапла пурăннă-пурăннă та ку йăлт пĕтсе çитсен сасартăк турă пуррине аса илнĕ. Кĕнеке вулама тесе аллине тăснă. Анчах шуйттан та ухмах пулман. Хуçасăр тăрса юлнă турă кĕнекине вутта пăрахса çунтарса янă та ун вырăнне сĕтел çине секс кĕнекисем кăларса хунă. Турă мĕн çырнине тек вулайман тет вара вăл, пурнăç чăнлăхне пĕлеймесĕрех юлнă. Çавăнпа та çав шуйттан ăсĕнчен сыхланса юлнă чăн чăвашсем кĕнекесене çывăрас умĕн уçă хăварма хушмаççĕ. «Шуйттан вулать», — теççĕ. Турă кĕнеки пирки вара: «Хĕрлĕ ĕне çинĕ», — теççĕ. Таçта вутра çунса кайнине пĕлтерет ĕнтĕ ку. Çапла халап пырса кĕчĕ ман пуçа. Те тĕрĕс ĕнтĕ вăл, те тĕрĕс мар — ним калама та пĕлместĕп. А тен, шухăша кайса лармалла та мар! Пурте пĕрле çав «Ая-ра-ра!» текен юрра юрласа ярар мар-и? Начарах та мар пуль вăл. Аяра тени, тĕрĕссипе каласан, ман савнă тусăм тенине пĕлтерет тет. Ăсчах-тĕпчевçĕсем çапла калаççĕ. Турă панă япалах апла вăл. Çав сăмахсен пĕлтерĕшне манса кайнă та...

## ЧĂВАШСЕМ ЧУЛ ÇИНИ

Юмах ятăм юптартăм, пĕр сăмах та суймарăм тет халăх. Чăнах та, кашни халап-юмахрах чăн пулни, халăх пурнăçĕнчи пĕр-пĕр пысăк пулăма хăйне майлă ăнланса каласа пани пур. Çавăнпа та юмахра суяççĕ тени тĕрĕсех те мар. Вăлтса вара, чăн та, калаççĕ. Акă хăвăрах шухăшласа пăхăр-ха, мĕн çинчен-ши çак халап.

Ман анне кăвакал чĕппи пулнă чухнех пулса иртнĕ ĕнтĕ ку ĕç, чăваш хăй çăкăрне çĕр ĕçĕпе ĕçлесе тупнă чухнех. Пурнăçĕ те вăл вăхăтра, мĕн каламалли пултăр ĕнтĕ, лайăх пулнă. Атăл тулли пулă юхнă, вăрманта тискер кайăк чупса çӳренĕ, улăх-çаранра ĕне выльăх шучĕ те пулман. Тутлăхра та, ĕçре те пурăннă чăваш. Шывне-вăрманне те кил-çуртне пуççапнă, турăран ырлăх

кӗтнӗ. Ара, турӑ ӑна вӗт хӑйне пурӑнмалӑх мӗн чухлӗ кирлӗ, ҫавӑн чухлӗ ҫеҫ илме вӗрентнӗ. Ҫутҫанталӑка, турӑ ялалине, кирлинчен ытла илме, унпа иртӗхме юраман. Ҫавӑнпа та йӗри-тавраri ҫутҫанталӑк иксӗлми йӑтӑнса тӑнӑ. Атӑл тулли пулӑ юхнӑ, вӑрманта тискер кайӑк ӳхӗрсе ҫӳренӗ, улӑх-ҫаранра выльӑх-чӗрлӗхӗн шучӗ те пулман...

Ҫапла пурӑннӑ чӑваш халӑхӗ. Вӑл епле пурӑннине кӳршӗри халӑх ӑмсанса та кӗвӗҫсе пӑхса тӑнӑ. Суту-илӳ тума та пӗлмен пулать пирӗн мӑн асаттесем ҫав вӑхӑтра. Илекен-тӑвакан мӗн хак ыйтнӑ, ҫавӑнпах парса янӑ. Ара, ҫын тунӑ пулсан та туррӑн та-ха вӑл, унпа епле суту-илӳ тӑвӑн. Хаксӑр япала ӗнтӗ вӑл, ҫутҫанталӑк япали, чӑн та. Унпа сут тума юрамасть, хӑна тума кӑна юрать. Ҫапла тунӑ та чӑваш. Ҫавӑнпа тупраллӑ пулнӑ та...

Тӑшмансене ҫакӑ питӗ килӗшмен пулас. Вӗсем чӑвашсене пӗрре кӑна мар тапӑнса пӑхнӑ, анчах турӑ чӑвашсене пӑрахман, хӑй халӑхне тапӑнса килекенсене вут-ҫумӑр айне тунӑ, лешсем вара ҫарӗ-мӗнӗпех ҫунса кайнӑ пулать. Чӑвашӑн тупри вара тулсах пынӑ.

Ним тӑвайман енне тӑшмансем, чӑвашсене хӑйсене пӗтерме май ҫуккине кура туррине пӗтерме шут тытаҫҫӗ. «Сирӗн, чӑвашсен, турӑ ҫук, эсир турӑсӑр халӑх, — теҫҫӗ вӗсем. — Сирӗн урӑх турра, пирӗннине, пуҫҫапма пуҫламалла. Хӑвӑрӑнне пӑрахӑр, вӑл суя турӑ. Вӑл ҫак тӗнчене туса янӑ чӗрчунсене те, ҫутҫанталӑка упрама та кирлӗ мар. Вӗсене мӗн чухлӗ пӗтеретӗр, ҫавӑн чухлӗ лайӑхрах. Пуллине те, пакшине те мӗн чухлӗ тытас килет, ҫавӑн чухлӗ тытӑр, хаклӑрах хак хурса сутӑр, вара эсир тата пуянрах пулӑр. Пирӗн турӑ ун пек тума чармасть. Никама та ан хӗрхенӗр. Хӑвӑрӑн вӑрманӑрсене, шыв-шурсене хисеплеме пӑрахӑр, вӗсем туррӑн мар, вӗсем сире пурӑнса ирттермелӗх япаласем кӑна...»

Ҫапла каласан-каласан хайхи чӑвашра та тата пуянрах пурӑнас текенсем тупӑнаҫҫӗ-тупӑнаҫҫех. Кулӑшла мар-и-ха вӑл, чӑн та, чӑваш хӑйӗн мӗнпур тыррине хаклашмасӑр-тумасӑр, мӗн чухлӗ укҫа панипех килӗшсе сутса яни. Кулӑшла вӗт! Кулӑшла-а... Ҫапла тума вӗрентекен турри те апла суя. Ӑна ӗненме, вӑл вӗрентнине пӗлме апла, чӑн та, кирлӗ те мар! Ҫапларах шутлама тытӑнаҫҫӗ те чӑвашсем, хӑйсен туррине пӑрахса урӑх тӗне кӗме пуҫлаҫҫӗ. Ара, ун чухне эс, тӑшмансем калашле, вӑйлӑрах та, пуянрах та пурӑнса каятӑн та-ха... Епле чӑтса тӑрӑн? Эх, пуҫлаҫҫӗ те пуҫҫапма! Анчах хӑйсене тӑрантса пурӑнакан турӑ панӑ ҫутҫанталӑка мар, пачах урӑх япалана, урӑх ҫӗршывран илсе килнӗ ют патша сӑнне пуҫҫапаҫҫӗ. Лешсене ҫав ҫеҫ кирлӗ пулнӑ. Нумай та вӑхӑт иртмест — Чӑваш ҫӗршывне ҫӗмӗрсе те кӗреҫҫӗ. Хальхинче турӑ тӑшман ҫарне вут-ҫумӑр айне тумасть, чӑвашсене сыхламасть. Ара, вӗсем ӑна укҫашӑн сутнӑ та-ха. Камӑн

хӳтӗлес килтӗр ун пек ҫынсене. Лешсем те, тӑшмансем, ухмах пулман, малтан каланӑ пек ылтӑн парса тавар туянас темен. Укҫасӑр ҫавӑрса илме май пур чухне мӗн пӑхса тӑмалли пултӑр тепӗр тесен. Кӳршӗсем те пулӑшман пулмалла, ун пек ухмаха ҫав кирлӗ тесе тӑнӑ. Чӑваш вара тӑшман умӗнче тӑр-пӗччен тӑрса юлнӑ, тата турӑсӑр-мӗнсӗр... Ҫапах та парӑнас темен-ха вӑл. Малтан, паллах, ют турра пуҫҫапса, кӗлтусҫ пӑхнӑ. Турӑ пулӑшман. Ара, ма пулӑшмалла тет вара ун, ун хӑйӗн халӑхӗ пур, мӗн тума кирлӗ пултӑр ӑна сутӑнчӑк халӑх! Аптранӑ енне чӑваш хӗҫпӑшал алла илес тенӗ, вӑл вара ҫапӑҫӑва тухмалӑх та пулман. Ара, чӑваш вӑл ют ҫӗре тапӑнса кӗрсе, ҫын пурлӑхне туртса илсе ҫылӑха кӗмен те-ха, мӗн тума кирлӗ пулнӑ пултӑр ӑна хӗҫпӑшал? Вӑл ҫӗр ӗҫлесе, суту-илӳ туса пурӑннӑ. Ял-хула ҫӗкленӗ... Хирӗҫ тӑрайман пирки вӑл хӑйӗн пӗр питӗ пысӑк хулине, Хулату текенскерне, тарса кӗрет. Ун йӗри-тавра шыв янӑ виҫӗ тарӑн ҫырмасемпе валсем пулнӑ — никам та пырса кӗреймен. Хули хӑй ҫӳллӗ-ҫӳллӗ ту ҫинче ларнӑ. Тӑшмансем те ҫакна курсан аптраса ӳкеҫҫӗ. Ку хулана, калас пулать, ют тӗне кӗмен халӑх пухӑннӑ. Ыттисене е вӗлернӗ, е пӑхӑнтарнӑ пулнӑ. Хулара пуҫлӑхсенчен хӑй халӑхне пулӑшма пултаракансенчен пӗри — ватӑ Сатыш юмӑҫ кӑна юлнӑ. Вӑл вӗрентнипе, вӑл пулӑшнипе кӑна тытӑнса тӑнӑ ҫынсем...

Ҫапах та вӑхӑт иртнӗҫемӗн кусен ҫӑкӑр пӗтсе ҫитет. Тӑшмансем те ҫавна кӑна кӗтнӗ. Акӑ ҫӑкӑрӗ пӗтӗ те хӑйсемех парӑнӗҫ тесе тӑнӑ, хулана йӗри-тавра ҫавӑрса илнӗ. Хӗҫпе мар тӑк, выҫӑпа пӗтерӗпӗр тенӗ ӗнтӗ. Анчах та Сатыш юмӑҫ та питӗ ӑслӑ пулнӑ. Сӗм-ҫӗрле хула йӗри-тавра вӗт чул пӑрахса тухма хушнӑ. Ирпе вара ҫынсем ҫав чул татӑкӗсене михпех туха-туха пуҫтарнӑ. Тӑшмансем ҫакна курнӑ та тӗлӗнсе кайнипе пӗҫҫисене шарт! ҫапнӑ. «Чӑвашсем чула та ҫиеҫҫӗ, вӗсене выҫӑпа вӗлереймӗн!» — тенӗ. Ҫавӑнтан пуҫланса кайнӑ та вара чӑваш хырӑмӗнче чул та ҫӗрет тени.

Тӑнӑ-тӑнӑ та ҫапла Хулату тавра тӑшман ҫарӗ ҫӗнтерейме пирки пӑрахса каям пекки тунӑ. Чӑвашсене вара ҫапла каланӑ: «Сирӗн турӑ вӑйлӑрах, ҫавӑнпа та эпир сире ҫӗнтереймерӗмӗр. Халь каятпӑр. Эсир вара хуларан тухӑр та хӑвӑр вӑрманӑрсене кайса таса катара турра пуҫҫапӑр. Эпир сире кансӗрлемӗпӗр...»

Ҫапла каланӑ та, чӑнах та, каям пекки тунӑ. Ҫӳллӗ тусем хушшине пытанса тӑнӑ.

Чӑваш вӑл вӑхӑтра суйма та, вӑрлама та пӗлмен. Тӑшман мӗн каланине, айван, йӑлт ӗненсе лартнӑ. Эх, савӑннӑ! Сатыш юмӑҫ ертсе пынипе таса киремете турӑ вырӑнне тухса пӗр ҫын пек пулса аслӑ кӗлӗ пуҫланӑ. Хурал та тӑратман. Ҫавӑ кирлӗ пулнӑ та чее тӑшмана. Пӗр хӳтлӗхсӗр тӑрса юлнӑ халӑха кӗлӗ вӗҫленес умӗн пырса ҫапнӑ та йӑлт вӗлерсе пӗтернӗ. Хӗрарӑмсе-

не кăна хăварнă. Вĕсен тăшман çарĕ валли салтаксем çуратмалла пулнă. Çакна курса тăнă турă хăйĕн йăлт пĕтнĕ халăхне, хăйне сутнă пулсан та, питĕ хĕрхенсе кайнă. «Мана сутрĕç те — чул çисе пурăнчĕç, мана сутрĕç те — чунсăрланчĕç, — тенĕ. — Хĕрарăмĕсене акă вăйпах усал ĕç тума ача çураттараççĕ. Тăшманран çуралнă ача хура юнлă пулать. Вара тĕнче йăлт пĕтет. Пулăшас кусене», — тенĕ те чăваш хĕрарăмĕсенчен чул юпа туса хунă. Çапла вара чул çисе пурăннăскерсем чул юпа пулса тăнă. Çеçенхирте, курнă пуль, темĕн чухлех вĕсем, чул хĕрарăмсем. Эпир вара вĕсене темшĕн чул палăксем тетпĕр.

Пĕр чăваш хĕрарăмĕ çех çăлăнса юлнă пулать. Хăйĕн пĕчĕк ачипе Атăлăн сылтăм енне каçнă та чăваш халăхне тепĕр хут пуçласа янă.

## АНКĂ-МИНКĔ

Эсир, хисеплĕ вулаканăм, çак пурнăçра çапла савăнса пурăннăшăн кама тав тумаллине те пĕлместĕр пулĕ-ха. Эпĕ пĕлетĕп. Сирĕн те пĕлес килет пулсан, каласа пама та пултаратăп...

Ку ĕç вăл тахçанах, тĕнче пĕтнĕ чухнех пулса иртнĕ. Вăт çавăн чухне пурăннă та çĕр çинче пĕр çын. Ялта ăна темшĕн, те ĕçлеме пĕлменшĕн, анкă-минкĕ, тенĕ. Пăхма та вăл, чăн та, ниме тăман çын пек курăннă. Ялта, пĕлетпĕр ĕнтĕ, çын тени пит чаплă тăхăнмасть. Юрать мана тет те хăй ĕçĕпе тухса утать. Ĕçрен килсен те çавах, йĕркеллĕн çапла апат ларса çини пулнă-ши ун тесе те шутлатăн вара аптраса. Ну, ĕç унта мар. Вăл вăхăтри пурнăç йăлтах усал аллинче пулнă. Турри вара, те кӳреннĕ пулнă хăй халăхне, хута кĕмен. Ара, мĕнле хута кĕрĕн тет-ха? Кашни хăй талай, кашни ăслă, Турăран та аслă. Ун пек çын патне, паллă, нимле ыр шухăшпа та пырса кĕреймĕн. Каласан-тусан та, вăрçсан та, хушсан та усси çук. Вăл хăйĕннех тăвать. Вăт çав чăваш хăй патша тенĕ чух пулса иртнĕ те ку ĕç.

Усал ун чухне питĕ иртĕхсе кайнă пулнă. Тĕнче ман алăра, манран вăйли никам та çук, кирлĕ пулсан ак ку тĕнчене те çĕрĕк çатана тĕртсе йăвантарса янă пек аркататăп тенĕ. Каланă — тунă. Çынсене вăл укçапа та эрехпе астарса янă. Тăвана хирĕç тăратнă. Чĕлхине те пăрахтарнă. Тем те тунă. Усал тăрăшнипех пĕрисем вăрра тухнă, теприсем пăлахая персе вýртнă. Çĕршыв юхăнсах кайнă. Тĕнче халь ĕнтĕ, чăн та, пӳрнепе тĕртĕннипех йăванса каяссăн курăннă. Каппайланса кайнă усал, кусемпе выляса çитет тесе пĕринче тытать те тĕртет. Тĕнче вара, тĕлĕнмел-

ле те, тайкаланасса тайкаланать-ха ёнтӗ, йӑванма вара шутламасть те. Ак тамаша текелесе ку татах тӗртет. Ҫук, тӑрри йывӑҫӑнни пек силленет пулсан та, тӗпӗ вырӑнтан та тапранмасть. Мӗн вара унта, мӗн тытать тесе усал ҫӗр ҫине, тӗпнелле пӑхать те унта ҫав анкӑ-минкӗ чӑваша курах каять. Леш мунча кӗрсе тухнӑ пулас та тӗнче йывӑҫҫи кутӗнче ним пулман пек сӑра ӗҫсе ларать. Ларать-ларать те юрлам пекки туса илет, унтан каллех сӑра ярса ӗҫет. Хӑй вара чаплӑ тумланман пулсан та пит яка курӑнать. Сӑваплӑ тесен сӑваплӑ мар, ахаль ҫынах. Усал ҫавна курнипех чӗтресе ӳкет. Ара, чӗтрене те ерӗн ун пек чух. Пӗтӗм тӗнче арканнӑ пек тӑрать, ку вара хӑнк та тумасть. Усал тарӑхсах каять. Ку чӑваша тет мана хирӗҫ тӑнӑшӑн йалт пӗтеретӗп тет.

Вӑхӑт иртнӗҫемӗн чӑваш укҫине туртса илет те кӳршине парса пуйтарса ярать. Мӗн тӑвать-ха ку, курӑпӑр тет. Анчах мӗн тӑвать тетӗр, чӑваш кӗвӗҫессе кӗвӗҫет-ха, анчах кӳршине хӑй йӑлтах пӗтсе ҫитет пулсан та пӳрнипе те пырса тӗкӗнмест, пуҫ касма тухмасть, вут тӗртмест, вӑрҫмасть. Вӑл ҫеҫ те мар, ал ылмаш текелесе пырса ӗҫлекелесе парать. Ҫимелли ҫӑкӑр юлман енне чӑвашӑн арӑмӗ те пӗр пуян ҫынпа тухса тарать. Мӗн тума кирлӗ эс, кун пек мӗскӗн чӑваш, укҫу та ҫук сан тет. Юлашкинчен тата хӗрарӑмпа та пурӑнма пӗлместӗн эс тесе лаплаттарса каласа хӑварать. Ачисем те, ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ те килтен тухса каяҫҫӗ, каяҫҫӗ те тек килмеҫҫӗ. Ашшӗ вӗсене шыраттарса та пӑхать, усси ҫук, пӗри те сас памасть. Вӑт сана пӗр юн, пӗр ӳт, тӑван тесе тӑр вара ун пек чухне. Тӗнче пӗтнӗ чух пурнӑҫ хӑй ҫапла пулӗ вӑл...

Нумай иртет-и вӑхӑт, сахал-и, пӗлместӗп, хайхи усал, халь пулчӗ тесе, тӗнчене тепре тӗксе пӑхать. Тӗнче каллех, паҫӑрхи пекех, ун-кун сулланса илет те хӑй вырӑннех лӑп анса кӗрсе ларать. Ҫилленсе кайнӑ усал урипе тӑрсс! тапса ҫӗр ҫине вӑрҫӑхаяр кӑларса ярать. Эх, пӗтереҫҫӗ те ҫынсем пӗрне-пӗри! Сӑлтавне те тупнӑ. Пӗрин-мӗн куҫӗ чалӑш, теприн ӳчӗ хура... Пурте айӑплӑ, пурте чыссӑр, ҫавӑнпа та кирек кама та тапӑнма, ун пурлӑхне те туртса илме юрать. Усал ҫавна курса савӑнса ҫеҫ ларать. Турри, турри вара темшӗн пӗрре те хута кӗмест. Лешсем те пӗтӗм вӑрӑ-хурахла ӗҫне турӑ ячӗпе витӗнсе тӑваҫҫӗ те, мӗнле хута кӗрӗн ӗнтӗ. Пурте Турра ӗненетпӗр теҫҫӗ, чиркӗве кӗрсе, ҫурта лартса кӗлтӑваҫҫӗ те вӑрлама, ҫаратма, ҫын вӗлерме тухса каяҫҫӗ. Ун пек чухне ҫынна мӗн каласа ӑса кӗртмеллине Турӑ та пӗлмест пуль ҫав.

Ҫапла чылай ҫунтарсан-ҫунтарсан хайхи, ну, мӗн тӑвассине турӑм, халь ӗнтӗ ку тӗнче йалт пӗтрӗ, пӳрнепе тӗксенех йӑванса кайӗ тесе усал пӳрнине кӑнтать. Кӑнтасса кӑнтать-ха, тӗртсе те пӑхать, тӗнче вара паҫӑрхи пекех хӑнк та тумасть. Пӑхать усал, хайхи леш анкӑ-минкӗ чӑваш тӗнче йывӑҫҫи айӗнче вырта па-

рать. Вилĕ. Ха, савăнса каять усал. Тинех пĕтертĕм кăна, халь ĕнтĕ ку тĕнче те йăванать тет. Хытăрах тĕртем-ха тет. Тĕртеттĕртет, авăнать-авăнать тĕнче йывăççи, тем пек авăнсан та йăванса каймасть. Тем тытать тĕпĕнчен. Хытă тытать. Пăхать, унтамĕн чăваша çав йывăç кутне пытараççĕ. Таçтан тем çăвинчен ачисем те килнĕ, арăмĕ те пур, ял-йышĕ те тавра тăрса тухнă. Пурăнмалли япалисене, куркине те, малтан сăра ĕçсе ларнине, тупăка хунă. Леш тĕнчере те пулин пурăнтăр теççĕ ĕнтĕ. Пĕлмеççĕ, айвансем, унта ним те çуккине, ĕмĕтленеççĕ...

Акă тупăка хупрĕç те анкă-минкĕне пытарчĕç. Лăштах пулчĕ усал. Ял халăхĕ салансанах хальхинче пĕтертĕмех тесе тăрсс! тапать. Тапасса тапать те, урине чутах хуçса пăрахмасть. Тĕнче вара хускалмасть те.

Усал çавăн хыççăн чылай уксахласа çӳренĕ тет. Тĕнчене пĕтерес шухăша та пăрахнă пулас. Ара, пĕтĕм чăваш çав тĕнче йывăççи тавра выртса тухнă та, ăçтан пĕтерĕн ĕнтĕ ăна.

## ЧĂВАШ ПĔТСЕН ТĔНЧЕ ПĔТЕТ

Пĕр патшан ĕлĕк тарçăсем пит нумай пулнă тет. Тата ахаль çынсем те мар пулнă тет вĕсем: пĕрисене Африкăранах илсе килнĕ пулать, теприсене Японирен... Тĕнчере мĕнле халăх пур, çавсен ывăл-хĕрĕсем пурте çав патша аллинче пулнă. Тарçисем ахаль çынсем пулман терĕмĕр, кашни мĕнле те пулин ĕç тума пĕлнĕ. Тыră вырнă, çăкăр пĕçернĕ, выльăх пăхнă, çурт лартнă, юрă юрлакан, сăвă çыракан та пулнă. Тĕрлĕ халăх çыннисем, калас пулать, тĕрлĕ ĕç тунă. Негрсем, яланхи пекех, хуçа çумĕнче кĕрентухакансем валли алăксене уçкаласа тăнă, яппунсем фокус-покус кăтартса савăнтарнă, чикансем пĕр вĕçĕмсĕр юрланă-ташланă... Нумай-нумай çын çапла патша çумĕнче ăшă вырăн тупнă. Хура ĕçсене кăна никамăнах та тăвас килмен пулмалла та вара патша хăй патне чăваша чĕнсе илет. Чăваш нимле ĕçрен те хăраманни çинчен таçтан илтнĕ ĕнтĕ вăл, акă кирлĕ пулчĕç те ун ăста аллисем. Чăваш малтан никамах та кирлĕ пулман тет вăл. Пурăннă хăй тĕллĕн хăй çĕршывĕнче ака-суха туса, никам та илтмен тет ун çинчен. Çапла пурăнсан-пурăнсан хайхи, патшан ĕçĕ-хĕлĕ те ытла пит ăнсах пыман пуль çав, чăваш пуррине аса илеççĕ те ăна вăйпах сĕтĕрсе илсе килеççĕ. Лешĕн ĕнтĕ, мĕн тăвас тен, ниçта кайса кĕме те çук, «юрать» текелесех килме тивнĕ. Пĕр килсен вара чăнласах ĕçлеме пикеннĕ. Кĕске вăхăтрах патшан пурнăçĕ лайăхланса кайнă. Малтан çăкăр-тăварлă пулкалана хыççăн хайхи пылпа çу çинче ярăнса пурăнма тытăнать.

Малтан та куштанрах пулнăскер, халь вара тата иртĕхсе каять. Ара, вăй пур та-ха! Çĕршыв хыççăн çĕршыва туртса илет, хăйне кирлĕ халăх çыннисене тыткăнлать, хăйне кирлĕ пек пурăнать, пĕр сăмахпа каласан. Тарçисем те хуçине кура пăсăлсах каяççĕ ун. Ара, ырă хуçа çумĕнче тарçи те ырă, усалли çумĕнче, ăçта кайса кĕрен, ху та усала куçан. Çапла вара ун çывăх çыннисем хушшинче те вăйлă кĕрешӳ пуçланса каять. Пĕр-пĕрне элеклесе парасси, ура хурасси çынна пĕтерме хăнăхнăскерсемшĕн ним те мар пулнă ĕнтĕ вăл. Мăнтăрсем çавсем чăваша та тапăнаççĕ, патшана «вăл ним те тумасть» тесе элеклесе параççĕ. Чăвашĕ те ĕнтĕ, пĕтĕм ĕçне йĕркелесе çитернĕскер, хăш чухне çапла хăй пахчинче ним тумасăр тенĕ пек кĕлтуса киленсе ларма юратнă. Пĕрре пырса пăхаççĕ, тепре — чăваш пăлахая персе выртнă пекех туйăнса кайнă пуль, вăрçма тытăнаççĕ. Вăл-мĕн наян, айван, мĕскĕн, ухмах... Кутран тапма, ăс пама тытăнаççĕ хайхине. Лешĕ ним тума аптранипе вĕсем каланипе килĕшет пулмалла та пахчана тухса кĕлтума пăрахать. Пĕлетĕр-и-ха эсир вăл мĕн каласа кĕлтунине? Пĕлместĕр, патша та, ун тарçисем те пĕлмен çав, тен пĕлнĕ пулсан чарман та пулĕччĕç. Чăваш кашни ир йывăç айне тăрса, хĕвеле кĕтсе çапла кĕлтунă пулать: «Эй, Турăçăм, мана хисеп тăвакан çын хиселлĕ çын пулинччĕ çав çын. Эй, турăçăм, мана ырă тăвакан çын ырă çын пулинччĕ çав çын. Эй, турăçăм, мана сума сăвакан çын сăваплă çын пулинччĕ çав çын».

Çапла сăмах каланă та вăл хăй ĕçне тума тытăннă. Каларăмăр ĕнтĕ, хура ĕç тума кăна шанса панă. Çĕр чавма унта, тырă акма, вырьăх пăхма... Питĕ тĕплĕ те, питĕ юратса туса пынă пулнă вăл хăйĕн ĕçне, никампа та тупăшман, никампа та хирĕçмен, хăйĕн ĕçне кам çине те пулин йăвантарас тесе те тăрăшман. Çапла таса пулнă тет вăл. Çавă килĕшмен-ши е урăххи, çапла ĕçлени, мăнтăрсем хăйсем чăваш çăкăрне çинине манса кайсах ăна тапăнса пĕтерме шут тытаççĕ. Сăлтавне те вĕт-ха, шутласа пăхăр-ха, мĕнлине шыраса тупаççĕ. Чăваш-мĕн чыссăр, ĕçлеме те пĕлмест. Ăна кунтан хăваласа ярас пулать. Вăл патша çăкăрне çĕртсе пурăнать, çав анчах. Хăйсене ытларах лекет тенĕ-ши çав харам пыр патша çăкăрĕ, халь калама та хĕн, кирек мĕнле пулсан та çапла тытаççĕ те чăваша пĕтерме тытăнаççĕ.

Чăвашĕ те ухмахах пулман пулĕ çав, кусем усал тунине кура калать: «Чăваш пĕтсен, — астăвăр тет, — тĕнче те пĕтет».

Лешсем кăна илтсен тата пушшех те ахăрса каяççĕ. Тем тĕрлĕ мăшкăлласа пĕтерсе чăваша хăваласа яраççĕ. Юрать вĕлерменха. Вĕлернĕ пулсан эпир халь ку халапа та вулас çукчĕ. Патша элекçĕсен сăмахне хăлхине чикнĕ пуль çав, чăваша хăйĕн патшалăхĕнчен хăваласа ярать. Ăна вара çавă кăна кирлĕ пулнă. Каять хăй çĕршывне, ĕç ĕçлесе, питĕ лайăх пурăнма тытăнать. Патшан пурнăçĕ вара кунран-кун япăхланма пуçлать.

Малтан, ёҫе чăваш питĕ лайăх йĕркелесе янă пулнă та, палăрсах та кайман пулнă патшалăхри япăх япаласем. Пуръннăҫем пур япала та япăхать те, вăхăт ҫитсен, пăхса тăракан ҫуккипе ёнтĕ, патшалăх салансах каять. Ăҫта тет халь ҫав патшалăх? Ҫуккă вăл. Чăваш вара халь те пур. Юрла-юрла тăвать пулать хăйĕн хура ёҫне. Ахальтен мар вăл хăйне те хура халăх тет. Хура халăх тĕнчере пĕрре кăна, чăваш ҫеҫ. Пĕр-пĕр патша каллех ҫапла, тахҫан пулса иртнĕ чухнехи пек, аллине пăхăнтарма тесе тăссан, астутарсах тăрать. «Чăваш пĕтсен, — астăвăр, — тĕнче пĕтет», — тет.

Вăт ҫапла халап. Тĕнчене кам тытса тăнине халь ăнлантăр-и?

# ТУПМАЛЛИ

## ПОВЕҪСЕМ

Ҫула тухнӑ кун
4

Турилкке ҫинчи чӗре
49

## КАЛАВСЕМ

Аҫа ҫапнӑ чун
88

Ҫӑтмах
95

Джоконда
101

Юншӑх
107

Тухатмӑш
112

Кукша пуҫ
124

Мӗлке ташши
127

Ухмаххисен карапӗ
134

Тӑм чӗлхе
137

Мĕлке
146
«Ну, тăхта!»
150
Хура калуш
153

ЮМАХСЕМ

Тинĕс леш енчи телей
158
Тĕпсĕр кӳлĕ
159
Кăвак юман
160
Ураланнă юман
161
Чăваш юрлама вĕренни
163
Юлашки патша
165
Хĕвеле хăпартни
167
Асамлă пуртă
170
Кăвак хуппи
172
Аттила тупăкĕ
174
Мăчавăр кĕпи
175
«Ай-ара, аяра»
177
Чăвашсем чул ҫини
179
Анкă-минкĕ
182
Чăваш пĕтсен тĕнче пĕтет
184

**Михаил Павлович Желтов**
**(Сунтал)**

# АҪА ҪАПНĂ ЧУН

# ПОРАЖЕННЫЙ ГРОМОМ

Повести, рассказы и сказки

На чувашском языке

Редакторы
*Г. Г. Чаржов, Н. К. Кушманов*
Художник *И. В. Алексеев*
Художественный редактор
*Г. А. Игнатьев*
Технический редактор *Л. Н. Кондрашкина*
Корректор *Н. П. Печникова*
ИБ 2886
ОКДП 2211202

Сдано в набор 12.02.97. Подписано к печати 28.10.97. Формат 84x108/32. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 10,08. Усл. кр.-отт. 10,29. Учетно-изд. л. 10,93. Тираж. 1500 экз. Заказ № К-899. Изд. № 35. Цена «С» 40.
Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография издательства «Чувашия» Чувашской Республики, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

**Сунтал М. П.**

С 89 Аҫа ҫапнӑ чун: Повеҫсемпе калавсем тата юмахсем. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1997. — 187 с.

**Пӗр-пӗрне ӑнланса пӗтерейменни пурнӑҫра тӗрлӗ пӑтӑрмахсем ҫуратать, вӗсенчен юратсан кӑна хӑтӑлса тухма пулать. Кашни ҫын хӑйне шырать, тупсан вара, ҫакна чунпа тарӑннӑн туйса илсен — телейлӗ вӑл. Ҫыншӑн чи хакли ҫавӑ пулӗ тесе вулакана ырӑ сунса ҫырнӑ ку кӗнекене писатель.**

**ББК 84 Чув. 7-4**

**С $\frac{4803710201 - 40}{М\ 136\ (03) - 97}$ 35 — 97**

**ХАКЛӐ ВУЛАКАНСЕМ!**

Юлашки вӑхӑтра Чӑваш кӗнеке издательстви ҫакӑн пек кӗнекесем пичетлесе кӑларчӗ:

*Павлов С. Л.* Сӗлкӗш. Повесть. 112 стр.

*Яковлев И. Я.* Утӑра. Калавсем. 24 стр.

*Ыдарай (Васильев) Н. В.* Азбуки — ӑс пуххи. Сӑвӑсемпе калавсем. 160 стр.

*Коллектив.* Драмӑсемпе комедисем. 318 стр. Кӗнекене А. Чебанов, Н. Оболенцев, И. Вутлан, А. Максимов произведенийӗсене кӗртнӗ. 318 стр.

*Луч Г. В.* Кулас килет. Кулӑшла калавсемпе шӳтсем, хаваслӑ юрӑсем. 160 стр.

*Синичкин В. В.* Хӗвел ури. Роман. 240 стр.

*Хусанкай П. П.* Ҫырнисен пуххи. Пӗрремӗш том. 544 стр.

*Ефимов Г. А.* Астӑватӑн-и? Калавсем. Повеҫсем. Асаилӳсем.

*Шемекеев В. Д.* Ҫурхи юр. Сӑвӑсем. Поэмӑсем. 224 стр.

Ҫак кӗнекесене Чӑваш кӗнеке издательствин лавккинче туянма пулать.
Унӑн адресӗ:
Шупашкар хули, Ленин проспекчӗ, 4-мӗш ҫурт.

7.000=



Михаил Ҫунтал

ҪА
ҪАПНĂ
ЧУН

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ